**Шупашкар — 2012**



**Михаил СЕНИЭЛЬ**

**Çырнисен пуххи**

**Пĕрремĕш том**

# ТАСА ÇУТĂ

***Поэзи, проза***
***1949—1957***

**Шупашкар — 2012**

УДК 821.512.111
ББК 84(2 Рос-Чув)-5
С 31

**Михаил СЕНИЭЛЬ**
**Çырнисен пуххи. Пĕрремĕш том. Таса çутă.** Поэзи, проза. 1949—1957. — Шупашкар, 2012. — 468 с., портрет.

Пĕрремĕш тома шкул çулĕсенче çырнă суйласа илнĕ сăвăсемпе поэмăсем, калавсемпе повесть кĕнĕ. Кĕнеке «Чăнах-ши вăл, ача чухне...», «Шкул вальсĕ», «Хĕр уйăрни» тата «Саврăшпуçĕн, ай-хай, савăк тĕнчи» текен пайсенчен тăрать.

Ум сăмахне çыраканĕ Иван Егоров.

ISBN 5—87677—046—9

© М. Сениэль, 2012
© И. Егоров, 2012

# ИР ПАЛĂРНĂ ТАЛАНТ

Вăл шкул çулĕсенчех чăвашла та, вырăсла та çыратчĕ. Чăвашла, паллах, ытларах çырнă — тăван чĕлхене хисепленĕ, юратнă.

Михаил Сениэль шкулта вĕреннĕ чухнех пысăк поэт пулнă, унăн таланчĕ ир вăраннă. Çакна халĕ çирĕплетсех калама май пур: çырнăранпа çур ĕмĕре яхăн иртнĕ пулин те, унăн сăввисемпе поэмисем, ытти хайлавĕсем кивелмеççĕ, паян çырнă пек хĕрӳн те уççăн янăраççĕ.

Михаил Сениэль Тутарстанри Аксу районне кĕрекен Саврăшпуçĕнче 1940 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче кун çути курнă, 1947—1954 çулсенче ялти çичĕ теслă шкулта, 1954—1957 çулсенче райцентрти вăтам шкулта вĕреннĕ.

Çак тапхăр пирки поэт хăй акă мĕнлерех аса илет: «Вулама мана анне пиллĕкрех хаçат татăк-кĕсĕкĕ тăрăх вĕрентрĕ, — тесе çырать вăл «Хыпар» хаçатăн 2001 çулхи пĕрремĕш номерĕнче пичетленнĕ «Кун-çул тӳпемĕ» статьяра. — Сăвă çырма эпĕ пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухне çичĕ-сакăр çултах пуçланă. Малтанхи поэмăсене 1952 çулта сăрмакланă. Малтанхи калава 1953 çулти çĕртме уйăхĕнче çырма хĕрринче хур кĕтĕвĕ кĕтнĕ чух çыртăм. Малтанхи повеçе вара 1953 çулхи кĕркунне пуçласа 1957 çулхи çуркунне çырса пĕтертĕм. Çав çулах çулла пĕрремĕш очерка та çыртăм. Кĕскен каласан, çыравçă ĕçĕ, пултарулăх ĕçĕ эппин, ман хам шкулта вĕреннĕ тапхăртах кал-кал пулса пыма пуçларĕ. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă тĕле эпĕ пысăк ал çыру çырса хатĕрлерĕм, ăна «Таса çутă» тесе ят патăм. Ал çыру «Чăнах-ши вăл, ача чухне...», «Шкул вальсĕ», «Хĕр уйăрни», «Юные грёзы» тата «Саврăшпуçĕн, ай-хай, савăк тĕнчи» текен пайсенчен тăрать. Малтанхи

икĕ пайне 250 ытла сăвă, виççĕмĕшне 4 поэма, тăваттăмĕшне вăтăра яхăн вырăсла сăвă, пиллĕкмĕшне «Ял ачисем» повеçпе новеллăсем, очеркпа калав кĕреççĕ. Паянхи кун тĕлне ал çырăва машинкăпа çапса çырнисен пуххин пĕрремĕш томне кĕртме тесе редакцилесе, страницăласа хунă — 14 автор листи, 450 страница ытла (1949—1957 çулсем)...»

Ку чăнах та çапла: ырми-канми ĕçлетчĕ Мишша! Çав хушăрах вĕренӳ çинчен те манса каймастчĕ. Вунтăвату автор листи, тăватçĕр аллă страница вăл вунулт çулхи шкул ачишĕн ытла нумай. Ку ĕнтĕ упранса юлайнисем çавăн чухлĕ-ха, çухалса пĕтнисем вара тата мĕн чухлĕ пулнă-ши? Тĕлĕнмелле вăй-хăват тапса тăнă çамрăк сăвăçра!

Çак «Таса çутă» кĕнекере ал çырăвăн 4 пайĕ тухать: «Саврăшпуçĕн, ай-хай, савăк тĕнчи», «Чăнах-ши вăл, ача чухне...», «Шкул вальсĕ» тата «Хĕр уйăрни» пайсем. Унччен хайлавсем тĕрлĕ хаçатсемпе журналсенче, «Малтанхи юр», «Шкул вальсĕ», «Ытарайми», «Савăнăç куççулĕ», «Çĕр чунĕ», «Ирхи юрă» кĕнекесенче, антологисенче тухнă, вĕсенчен чылайăшне вырăсла куçарса Мускавра та кăларнă. Хăшне-пĕрне Григорий Хирпӳ, Александр Васильев, Геннадий Маркиянов тата Филипп Лукин композиторсем юрра хывнă.

Михаил Сениэль шкул çулĕсенче çырнă сăвăсем Чăваш кĕнеке издательстви 1978 çулта кăларнă «Юрату юрри» сборникра  уйрăмах нумайччĕ, анчах та çамрăк талантăн хăвачĕ çĕрĕк чунлă кĕвĕç «тусĕсене» питĕ те канăç памарĕ пулмалла: тухнă кĕнекене магазина сутма ăсатас вырăнне çунтарса ямалла тутарчĕç. КПСС Чăваш обкомĕнчи идеологи секретарĕ А.П. Петров хушнипе Михаил Сениэль тирне малтан чăваш çыравçисен Союзĕн правлени пухăвĕнче, тепĕр кунне издательствăра сӳрĕç, сӳсех илчĕç темелле —

«Юрату юрри» кĕнекене, халăхшăн сиенлĕ тесе, пĕтермелле турĕç. Çапла майпа вара Михаил Сениэль хăй сакăр-тăхăр çулта чухнех «халăха хирĕçле» сăвăсем çырни, вăл «халăх тăшманĕ» пулни палăрчĕ, ун хыçĕнчен КГБ çынни уççăнах йĕрлесе çӳрерĕ, Михаил Сениэле «тĕрĕс çул» çине тăма тимлерĕ, тĕрĕс çул çине тухмасан мĕн пулассипе хăратрĕ: «Психушка е тĕрме», — терĕ вăл кĕскен çеç.

Тирне сӳнĕ вăхăтра пухусен протоколне Мишша хăй те çырса пынă, çав материалран тепĕр куннех «Тир сĕвӳ протоколĕ» ятлă пьеса пекки хайланă. Çав хайлав 1998 çулхи «Çамрăксен хаçачĕн» 43—44 номерĕсенче кун çути курчĕ. Пьесăра вылякансем пурнăçри чăн ячĕсемпех шăкăрин çапăнса тухнă çавăнта: А. Емельянов, В. Захаров, Ю. Айташ, Г. Ефимов, А. Кăлкан, Г. Орлов, Ю. Семенов, А. Галкин, В. Ахун, Р. Сарпи, Ип. Иванов, Н. Иванов, А. Артемьев, Р. Тарасова, В. Энтип, А. Соколова, П. Эйзин, Г. Чаржов, Д. Гордеев, Н. Терентьев, Н. Дедушкин... Çирĕмĕн ытла!

«Тир сĕвӳ протоколĕ» вăл икĕ пайлă салху камит. Ун умĕн авторĕ çапла калани пур: «Протоколне, ăна, хăйсем КПСС Чăваш обкомĕ валли çырса пынине, мана тыттарса та пăхтармарĕç. Ку — вĕсем мĕн павранине хам çыркаласа ĕлкĕрни. Вулама кичем ан пултăр тата калаçнă чух кам мĕн хăтланкалани уççăн курăнса тăтăр тесе, ĕç пулса иртнĕ хыççăнах протокола эпĕ пьеса пек туса çырса тухрăм. Вара, чăнах та, çав путсĕр ĕçе хутшăннă этемсем куç умне ытла та чĕррĕн тухса тăчĕç. Унтанпа çирĕм çул иртрĕ ĕнтĕ, апла пулин те халь те çав çынсем ман тире çĕçĕсĕр-мĕнсĕр сĕвеççĕ пек...

Вырăнтан кăларнă хыççăн А.П. Петрова пичетре те, ахаль те чылай тиркесе хăтланчĕç. Эпĕ вара тиркеместĕп, ăна питĕ йĕркеллĕ, кăмăллă çын тесе

хисеплесе пурăнатăп. «Пьесăри» çав çирĕм ытла çынран эпĕ халь пĕрне те çилленсе çӳреместĕп, анчах та «вылякансен» шутне кĕмесĕр пытанса юлнă пĕр йĕксĕке нихăçан та каçарас çук. Пытанса юлма юратакан çав этемме пула каярахпа Иван Егоров, манăн тăван шăллăм, вун икĕ çул писательсен Союзне лекеймесĕр çӳрерĕ, тем тĕрлĕ мăшкăл та тӳсрĕ...»

Пысăк чунлă çын çав пирĕн Мишша: хăйне хур тунă, чĕр мăшкăл кăтартнă этемсене те каçарма пултарать, çилĕ пытарса çӳремест, ăнланма пĕлет — чисти Иисус Христос ĕнтĕ! «Пытанса юлма юратаканни» вăл, çав пирĕн тус, — Порфирий Афанасьев. Ăна та тахçанах каçарнă ĕнтĕ Михаил Сениэль. Урăхла пулма та пултараймасть — Михаил Сениэль вăл Михаил Сениэль...

Иисус Христоса эпĕ ахальтен асăнмарăм. Вăл ыйтнипе çӳлти Турă пĕтĕм ĕçе-пуçа çивĕч куçпа хытă сăнаса тăнă иккен: Мишшана шар кăтартса хур тунă кантурсене вăл часах тĕп турĕ, элес-мелес этеммисене салатса ячĕ.

Михаил Сениэль (Егоров) манăн тăван пичче. Манран кăшт çеç аслă пулнăран эпир унпа йĕкĕрешсем пек ӳсрĕмĕр, çавăнпа та мĕн пĕчĕкрен тете тесе мар, ятран, Мишша тесе, чĕнеттĕм. Анчах та литературăра ăна эпĕ яланах аслă пичче вырăнне хунă, ĕмĕрех хурăп та, мĕншĕн тесен вăл мана литературăна кĕме питĕ те нумай пулăшрĕ, çыравçăн йывăр ĕçĕнче халĕ те пулăшса пырать, хăйĕн творчествăри ăсталăхне ырмиканми ӳстерсе пынă май, мана та сăнасах тăрать, çĕнĕрен-çĕнĕ утăм тума хавхалантарать, вĕрентет...

**Иван ЕГОРОВ**.

*2002 çулхи утă уйăхĕ.*

*Чăнах-ши вăл,*
*аҫа ҫухне...*



## ПĔЧЧЕН ХУРĂН

Вăйлă сивĕ çилсем.
Çап-çамрăк хурăнăн,
çĕр çумнех пĕшкĕнсен,
чунĕ пит хурлăхлă.

Ман тăван хурăнăм,
тек пĕччен эс пулмăн.
Ав лартаççĕ çынсем
сан пекех хурăнсем.

Юмансем те лартаç
ĕçченсем çак сăрта.
Çитĕнĕç йывăçсем
сыхлама тырăсем.

Эсĕ те çитĕнĕн,
ӳсĕн те сарăлăн,
хунавсем кăларăн,
ӳсĕн те савăнăн.

*1950*

## ТАНТĂШСЕМ

Пĕр çулта çуралнă эпĕр,
ачаран — татуллă,
вĕренме, шкула кайма та
питĕ хапăл тунă.

Тахçанах юлташлă, çывăх,
лайăх курăнатпăр,
урокра та, тăвайккинче те
тек пĕрле пулатпăр.

Эпĕр, çамрăк икĕ тантăш,
хăвăрт çитĕнетпĕр,
паян камăн мĕнле шухăш
пит аван пĕлетпĕр.

Ирхине шкула каятпăр,
каçпа таврăнатпăр.
Халь кашнин пĕр евĕр паллă —
пиллĕк те тăваттă.

Эпĕр, Мишша тата Павăл,
инçех мар пурнатпăр:
ӳлĕмрен ăçта пулсан та,
юлташлах пулатпăр.

*1949*

## КАЧАКА

Пирĕн качака хушка.
Хушăка вăл хĕсĕннĕ.
Ме-ке-кек! тет качака.
Э-эх! теп, выльăх мĕскĕнĕ!

Ун патне эп пытăм та
ăна туртса кăлартăм,
унтан вăрçма тытăнтăм,
çапла сăмах каларăм:

«Урăх капла юрамасть
купăста пуç кăшлама,
пахча картине хуçма,
çимĕçе сиен тума».

Унтанпа усал хушка
улттă сикрĕ пахчама
пахча картине хуçса
купăста пуç кăшлама.

*1949*

## ÇЫРМА

*Çырма юхать кӗрлесе*
*аслă ялăн çумӗпе...*
К.В. Иванов.

Пирӗн ялăн çумӗпе
çутăлса юхать çырма.
Çырман ик çыранӗпе —
çӳçе, çирӗк, хурама.

Çырмана шăрăхсенче
ыткăнатпăр савăнса,
пулă пекех темӗнччен
эх чăматпăр ăмăртса.

Çу иртсен, сив хӗл пулсан,
çырма çийӗ çап-çутах.
Эпӗр, конькkисем сырса,
ярăнатпăр савăнсах.

*1950*

## КАÇ ПУЛЧĔ

Хĕрелсе хĕвел ансассăн,
уйăх тухрĕ тӳпене.
Пĕлĕт çăлтăр сапрĕ ячĕ.
Пĕлме çук шутне-йĕрне.

Апат çинĕ. Урок хатĕр.
Тахçанах çывăрмалла.
Салтăн, шăллăм, салтăн хăвăрт, —
ирхине ир тăмалла.

Вĕренме те вĕренетпĕр,
ĕлкĕретпĕр канма та.
Эпирех ӳссе çитетпĕр
чи телейлĕ вăхăта.

*1950—1951*

## ХЫТӐ ЧИРЛЕСЕН

Кӗркунне те акӑ ҫитрӗ.
Хурӑн пӗтрӗ ҫаралса.
Ҫывӑхри раща ҫаралчӗ,
ҫулҫӑ пӗтрӗ тӑкӑнса.

Эп вилсен, мана пытарӗҫ
варӑн сулахай енне,
пуҫ вӗҫне лартса хӑварӗҫ
шурӑ хурӑн хӗресне.

Пытарсанах туссем манӗҫ,
аса илмӗҫ ман ҫинчен.
Аттепе анне ҫеҫ йӗрӗҫ,
йӗрӗҫ куҫҫуль пӗтиччен.

Эп хам вилӗп, ятӑм юлӗ,
усал, ырӑ тунисем.
Ман ҫак ҫырнӑ сӑвӑ юлӗ,
эп ҫырнӑ саспаллисем.

*1950—1951*

## ХĔЛЛЕ

Килчĕ çитрĕ, ак, хĕлле
хăйĕн кĕске кунĕпе.
Юрĕ ун тĕлĕнмелле —
хăйĕн шурă тĕсĕпе.

Выльăхсем —
ăш витене.
Ачасем —
çырма хĕрне.

Пăрпа витĕннĕ çырма
куçкĕски пек ялтăрать.
Хĕлле аван уçăлма,
вылямашкăн та кулма;
ярăнмашкăн та юрать.

Конькқисем —
çут пăр çине.
Йĕлтĕрсем —
тăвайккине...

*1950—1951*

## ЮР ÇУСАН

Лапка-лапка юр çусассăн,
пĕтĕм тавра шап-шурах.
Ачасем, упа тусассăн,
пĕр кулаççĕ ах-ха-хах!

Итлĕр-ха эсир, туссем,
вĕренме те манар мар.
Урамран киле çитсен,
урок тума тытăнар.

*1950*

## ИР ПУЛСАН

Хĕвелтухăç хĕрелет.
Часах хĕвел те тухать:
уйăх çутиййĕ пĕтет,
хĕвел çути сарăлать.

Çапла ĕнтĕ ир пулать.
Унта-кунта çын утать:
ачапча — шкула чупать,
ĕçлекен — ĕçеваскать.

Лере шăвать пĕр çуна.
Вăл вăрманалла каять,
унта вутăшăн çунать,
каçпа килне таврăнать.

*1950*

# ШĂЛЛĂМА

Шăллăм, сыр-ха эс конькки,
эп илем-ха йĕлтĕрне.
Тунсăх маншăн тăвайкки,
пар-ха, шăллăм, йĕлмӳне.

Кайрăмăр-и çухрашмашкăн
тарăн юрлă çырмана.
Эсĕ юлăн ярăнмашкăн
яка пăрлă вырăна.

*1950*

## ТĂВАЙККИНЕ!

Сырнă эпĕр йĕлтĕрсем.
Ярăнатпăрах паян.
Пит савăк хĕл кунĕсем.
Кам ярăнмасть — вăл наян.

Ав тăвайкки... ачасем...
Пĕри ярăнса анать.
Ачамккă, ах, ан ӳксем, —
çĕмĕретĕн сăмсуна.

*1950*

## МУЛКАЧ

Мулкач хура кĕркунне
улăштарать кĕрĕкне.
Хир-хир урлă кун каçа
ĕрĕхтерсе вăл каçать.

Курсанах йытта-мĕне,
тăрататъ ик хăлхине,
çил пекех унтан вара
вăрманалла чавтарать.

Хырăм тени хыт выçать,
урлă-пирлĕ чуптарать.
Мулкач сада та пырать,
йывăçсене йалт кăшлать.

Куншăн мучи тарăхать,
сăтăрça вăрçать, юнать,
йĕр çине капкăн лартать.
Сыхла, мулкач, уруна!

*1950*

## ÇУРКУННЕ

Кунсерен хĕвел хĕртет,
сивĕсене çемçетет,
кĕртсене ирĕлтерет.
Ăш çил — вĕрсе типĕтет.

Хура кураксем килеççĕ.
Часах шăнкăрчсем çитеççĕ.
Вĕсене Санюк кĕтет,
лайăх çуртсем хатĕрлет.

*1951*

## ШЫВАРМАНЬ

Килчĕ çитрĕ çуркунне
сăртсем тăрне хуратса,
вара атьсем çак кунне
ывăнчĕç арман туса.

Пирĕн умра çуйхашать
пĕр ушкăн ача-пăча.
Пурте, пурте сиккелет.
Хăшĕ-пĕри çапăçать.

Вĕсем тунă шывармань
кăлтăртатса çаврăнать.
Епле хӳхĕм вăл аврать! —
чĕререн савăнтарать.

*1951*

## ÇУРКУННЕ ÇИТРĔ

Çӳлте тăри тăрлатать,
хăй юррине шăратса.
Çывăхрах шăнкăрч юрлать,
ачасене мухтаса.

Ачасен каникул çитрĕ.
Кайрĕç выльăх çӳретме.
Çеремре, ав, курăк тухрĕ —
выльăха çитет çиме.

*1951*

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Аслă-çке пирĕн çĕршыв.
Мĕн чуль унта пуянлăх.
Нумай унта сарлака шыв,
нумай унта юманлăх.

Шкулĕ те, фабрикĕ те...
Мĕн чуль унта завочĕ.
Уй-хирĕ те, вăрманĕ те.
Мĕн пек çӳллĕ ту-сăрчĕ.

*1951*

## ЭП ВИЛСЕН

Манăн тус Эрхип кулянĕ,
асăнĕ мĕн виличчен,
ман тăпра çине вăл пырĕ,
сăмах тухĕ чĕринчен.

Ахăрса сĕм тăвăл килĕ,
улĕ çумăр çăвиччен,
çапса çумăрĕ те çăвĕ
варта шывĕ кĕрличчен.

Е хăш чух лăпкă ир пулĕ.
Шăпчăк юрлĕ ирпеле,
варти хурăн çине ларĕ,
юрлĕ вăл куççульпеле.

Пĕтрĕнсе çурхи шыв-шурĕ
юхса выртĕ тахçанччен,
юхнă майăн вăл та йĕрĕ
хăçан шывĕ пĕтиччен.

Хĕлле çил ачийĕ улĕ,
юрлĕ юрă ман çинчен.
Юлташсенĕн такăр çулĕ
питрĕнĕ ир пуличчен.

*1951*

## ÇУЛЛА

Çаран çинче курăк ӳсет,
тĕрлĕ тĕслĕ чечекĕ.
Таçтан юрă сасси килет.
Лере юрлать кайăкĕ.

Ыраш халь шăркара ларать,
часах акă саралĕ,
саралсан, комбайн тухать,
вырса та час пĕтерĕ.

Кунран-кунах хĕвел хĕртет.
Çырма шывĕ кăшт чакĕ.
Пĕлĕт килет, ав, çурçĕртен,
кĕçех çумăр та çăвĕ.

Вăрман сип-симĕссĕн курнать,
кĕр енне вăл саралĕ.
Мăй таран курăк пуç таять,
ак часах ним те юлмĕ.

*1951*

* * *

Эп калатăп çаплалла...
Аслă çын пулма
пысăк шухăш тытмалла,
пĕлмелле нумай.

* * *

«Поэт» тенĕ сăмах
манра çуралчĕ.
Çунатăп, çунатăп
çавăнпах.
Вилĕмсĕр «Нарспи»
çунатлантарчĕ.
Шухăшпа вĕçсе эп кайрăм
çунатпах...

*1951—1952*

## ИРХИНЕ

Кайăксем юрлаççĕ
сулхăн ирхине,
савăнăç кӳреççĕ
йывăç пахчине.

Çавăнпа пуль манăн та
кулă сăн-питре...
Эп те кайăк пулăттăм,
юрлăттăм хитре.

*1952*

## ÇĂЛКУÇĔ

Çĕр айĕнчен тапса тăрать
тăрна куç пек çăлкуçĕ.
Çусассăн, ыррăн уçăлать
çак шывпала пит-куçăм.

Асамлă шыв... Унта вăй-хал
вĕрет пĕр иксĕлмесĕр.
Ун умĕнче тăратăп халь
ывăннине пĕлмесĕр.

*1952*

## ТУЛЯПА ÇИНА

Хĕвел аннă, тĕттĕм пулнă,
шурă тĕтре явăнать.
Именет Туля, çапах та
хăй савнине чуптăвать.

Вĕсем сак çинче лараççĕ,
калаçаççĕ те кулаççĕ.
Хĕр чĕриййĕ савăнать.
Каччăн та хавасланать.

Шурă тĕтре, уçă сывлăш
ял çийĕпе ярăнать.
Хĕпĕртеççĕ икĕ тантăш.
Тем çинчен Çини калать.

Акă иккĕш те тăраççĕ.
Каччă хĕре ăсатать.
Вĕсем хуллен çеç утаççĕ.
Тули татах чуптăвать.

Çутăлать. Тĕтре сайралнă.
Каччă килне таврăнать.
Ĕнтĕ ращара саркайăк
юрă шăратма пуçлать.

*1952*

## ĂСАТУ

Пирĕн ял та пирĕн ял.
Асилетĕп эп ялан.
Тополлĕ, йăмраллă ял.
Астăватăп эп аван.

Пурăнатчĕ пит хавас.
Ял пуянччĕ, мĕн калас.
Ĕçчен ĕнтĕ, мĕн тăвас.
Çампа пуянччĕ пулас.

Ак пĕр шăрăх кунхине
хăруш хыпар сарăлчĕ:
Тăван çĕршывăм çине
усал тăшман тапăнчĕ —
аçтахха пек талпăнчĕ.

Ял йĕрет те ял ӳлет —
ăсатать арçынсене.
Ирсĕр фашист йыттине
йăлт çапса çĕмĕрмелле.

Ирхине. Йăмра хурланнăн
пуç таять кăшт çеç, хуллен.
Хура пĕлĕтсем хуплană
ялăма анăç енчен.

Икĕ савăк хĕрпе каччă
паянхи кун уйрăлаç:
«Савнă каччă, ырă кайччĕ...»
Иккĕш те хыт хурланаç.

«Çĕнтеретпĕр, — терĕ харсăр, —
пурпĕрех çĕнтермелле.
Эсĕр те кунта ан манăр —
сирĕн халь ĕçлемелле...»
*1952*

## УЙРĂЛУ

Ял хĕрри. Çул такăр, тӳрĕ.
Каччăн каймалла инçе:
«Савнă тусăмçăм, ан макăр», —
тет хĕре вăл чунĕнчен.

Хĕр салхуллă. Шăлне çыртрĕ.
Каччă умĕнче тăрать.
Ыталанчĕç те чуптурĕç.
Куççуль, куççуль сăрхăнать.

Вăштăр-вăштăр вĕрчĕ çилĕ.
Пике аллипе сулать.
Кайрĕ çав... Куçран çухалчĕ...
Хĕр чĕри çулăмланать.

*1952*

## УЧИТЕЛЬ

Ирех тăтăм эп, тумлантăм.
Тумланиччен пите çурăм.
Хыпкаларăм та уттартăм,
шкулалла ĕнтĕ чуптартăм.

Алăка учитель уçрĕ.
Йăлтăртатать кăвак куçĕ.
Сăнĕ лăпкă, пит кăмăллă.
Хăçан вăрçнă вăл, кăшкăрнă?
Итлеме халаллă, уçă.

Курман эп ун йышшине,
ун пек ыр кăмăллине.
Курнă эпĕ çынсене,
курман кун пеккисене.

*1952*

## МАНӐН ЁМĔТ

Тулта çил-çапкаланчăк кас-кассăн
кантăк хуппине пырса силлет.
Пушкина каç-каç вуланăçемĕн
сăвă çырас,
сăвă çырас килет.

Эпĕ халĕ çамрăк ача çеç-ха.
Ӳссе çитĕп, пулăп ăслă çын.
Хăшĕсем: ученăй, текелеççĕ.
Итлеместĕп эпĕ. Калĕçин.

Тулта çил-çапкаланчăк кас-кассăн
кантăк хуппине пырса силлет.
Пушкина каç-каç вуланăçемĕн
поэт пулас,
поэт пулас килет.

*1952*

## ТĂРĂШСА ВĔРЕН

Тăрăшса вĕрен, юлташăм.
Ĕç çынни — мир вахтинче.
Çакă сулăмлă сăмахшăн
тĕлĕнмĕ пĕр-пĕр пичче.

Харкашу тăшман пуçласшăн,
çĕкленсе пирĕн çине,
юнлă тăвăлпа хупласшăн
çак чечеклĕ çĕр питне.

Вĕренетпĕр, шухăшлатпăр
мир тесе куçкĕретех.
Пур тĕнче пĕрле калатпăр:
мир вăрçа çĕнтеретех!

Тăрăшса вĕрен, юлташăм.
Пур тĕнче — мир вахтинче.
Эп каланă çак сăмахшăн
тĕлĕнмĕ нимле пичче...

*1952*

## УЙĂХ ПЫТАННĂ...

Шур юр çăвать. Пăхмашкăн савăк
вăл шăппăн çеç тăкăннине.
Эпир — атьсем — таçта васканăн
хăпаратпăр ту çине.

Ялçум çырман çыранĕ чăнкă.
Уйăх тухсассăн каçхине —
сахал ӳкетĕн. Тухмасассăн —
чикеленетĕн пуçхĕрлех.

Тăман çăвать. Пытанчĕ уйăх
шур мамăк пĕлĕчĕ хыçне.
Эпир те килелле васкатпăр
юмахçă асанне патне.

*1952*

## ПИРĔН АСАННЕ

Ларать сак ҫинче. Пичĕ ун пĕркеленнĕ.
Пире суйма ялан хавас.
Эпир ăна ялан итленĕ —
хăй ҫапларахчĕ, мĕн тăвас:

«Ĕлĕк начарччĕ, кун пек марччĕ,
хут-кĕнеке тавраш пулман.
Ҫыру та ҫырмалла пулатчĕ —
ялта ҫыракан тупăнман.

Йĕтĕн те кантăр — ҫитса таварччĕ.
Праҫникре те — пушăт ҫăпата.
Сарă пушмак, ҫут калуш тăхăнатчĕ
пуянăн хĕрĕ ҫеҫ тупата.

Лампа та ҫукчĕ. Хамăр арланă
тĕксĕм хăйчикки умĕнче.
Ҫапла ҫĕрĕпех эпир ларнă —
тĕтĕм явнатчĕ пӳрт ăшĕнче.

Халь — мĕн? Эсир пурте хаваслă —
вĕренетĕр ҫутă шкулта.
Лайăх вĕренĕр, шкулĕ аслă.
Халь ҫук пупĕ те, кулак та...»

Ларать сак ҫинче. Пичĕ ун пĕркеленнĕ.
Юмах ҫапма ялан хавас.
Эпир ăна ялан итленĕ.
Аван сĕретчĕ, мĕн калас...

*1952*

## КАШКĂРСЕМ ТАПĂННИ

Тап-такăр çул. Вăрман варрийĕ.
Тӳпере уйăх çутатать.
Çывăхах мар вăрман хĕррийĕ.
Кĕсре пит хăвăрттăн юртать.

Çуни çинче — ыйхăллă çынĕ.
Çуна хыççăн йытти чупать.
Юнашарах — пăшалĕ чинлăн.
Лавçа ялан вăл пулăшать.

Тепĕр юлташĕ, пысăк йытă,
çуна çумпех, ак, халь пырать.
Ак уласа ярать вăл хытă —
теме сисет-çке, хыпарлать.

Çын пăхкалать, ак вĕсен хыççăн
кашкăр ушкăнĕ курăнать.
Шурă кĕсре хартлатрĕ хыттăн.
Лавçă пăшалне авăрлать.

Тĕллет. Перет. Ӳкеççĕ иккĕн.
Лавçă татах, татах перет.
Пур кашкăртан юлаççĕ виççĕн —
пĕри çуна çинех сикет.

Лавçă чакмасть, парать вăл хыттăн
кӳпчекпеле шăп çамкаран.
Унтах асав шăлĕсем йыттăн
ярса илеç карланкаран...

*1952, раштавăн 9-мĕшĕ.*

## ÇĔРЛЕ

Лавçи чармарĕ. Йытă сикрĕ
хыçран чупаканни çине.
Хăрушă кĕрешӳ пуçланчĕ.
Кампур татать тукмак пырне.

Çуна вĕçет, лаши тарланă...
Çатма пек такăр çулпала
çич çухрăма канмасăр тухнă.
Ак час вăрман хĕрри пулать.

Уйăх пăхать. Тем чухлĕ çăлтăр.
Хура вăрман хыçра юлать.
Авă умра, çут хунар евĕр,
пĕр хăйçути хитрен кулать.

*1952*

## ВĔÇЛЕНЕТ...

Вĕренӳ çулĕ вĕçленет.
Çулла та çитĕ.
Пиртен учитель тĕлĕнет:
«Маттур, — тет, — питĕ».

Вĕренӳ çулĕ вĕçленет,
вĕренӳ çулĕ.
Каллех уй-хир, вăрман чĕнет,
çырма — ял çумĕ.

Пионерлагерь те кĕтет,
часах пыратпăр.
Вĕренӳ çулĕ вĕçленет...
Ӳсетпĕр. Кăмăл çĕкленет.

*1953*

## ÇУ КУНĔСЕМ

Çу кунĕсем... Пионерлагерь
курнать вăрман кĕтессинче.
Чупса çӳре, выля, шыва кĕр, —
ытла та ырă-çке тĕнче!
Çăкалăхра çап-çут çăлкуçĕ
шăнкăртатса юхса выртать.
Ирпе питех те сывлăш уçă.
Мĕн чухлĕ савнăç кăкăрта!
Вĕçет шур лĕпĕш. Хускатаççĕ
пире кайма вăрманалла.
Умра — поход. Çумри хутаçăм
енчен-енне сулланкалать.

*1953*

## АВĂР

Тĕттĕм авăр тĕпĕнче
çăткăн çăрттансем çӳреççĕ.
Çӳллĕ çирĕк умĕнче
çӳçесем çӳçне чӳхеççĕ.

Çирĕк, çĕмĕрт, хурама
авăра йăлт хупăрланă.
Хурăн темшĕн хурланать,
пĕр-пĕччен сăрта хăпарнă.

Ватă лапсăркка çăка
пĕлĕте çити кармашнă.
Ун пекки кунта çуках —
кăнтăрлах çултан аташнă.

Шăллăма калап: «Итле,
авăрта тем чул тухатмăш.
Ун патне ан кай çĕрле —
вутăш ачисем тухаççĕ.

*1953*

## ÇУМĂР ÇĂВАТЬ

Чăштăр-чăштăр çумăр çăвать,
çумăр çăвать тупата!
Улми ташлать, çулçи çупать —
сада тухас-ха, сада.

Чăштăр çумăр, сиплĕ çумăр,
çумăрсăр епле ӳсен?
Килĕр пурте. Çунă-çунă
çутăрах пĕр сехетсем.

Садри сукмак — чăпăр-чăпăр!
Ма хăрас çак ăшăра,
тухăр та хăюллăн чупăр,
тухăр, тухăр çаруран.

Çумăр çурĕ, çурĕ, çурĕ.
Тав туса пуç тай ăна.
Кĕр-кĕрлет васан шыв-шурĕ,
çуркунне пек туйăнать.

*1953*

## ТУЛЛИ УЙĂХ

Савкка йăмри çине пăхатăп.
Ун хыçĕнчен, хĕп-хĕрлĕ, çавракa,
тем пысăккăш пӳске тухать ав.
Элле кайса тытар-ши Çумккапа?

Шет, ытама та кĕмĕ, шутсăр мăнă.
Кĕрсессĕн — пĕçертмест-ши алсене?
Çумкка та асăрханă, тухнă тăнă.
Çук, чухлайман илмешкĕн алсине.

Чупса çитсе вăр-вар! çеç хăпаратпăр.
Йăмри те йăмра мар, ытла аял.
Турачĕ ярăнать, алла тăсма хăратпăр.
Пӳски вара, пӳски... çӳлтен-çӳле каять.

*1953*

## ПЛЯЖ

Халь ĕлĕкхи мар,
хаклă юлташ,
ял çырми те тетте çырма —
пляж.

Сылтăм енче — хăйăр,
курăк — сулахайра.
Кам шӳтлемешкĕн хăйĕ —
сайра.

Кӳршĕсем авă килнĕ
çемйипех.
Кăкшăмпа чей те илнĕ
хулари пек.

Эпĕр те виççĕн хĕретпĕр:
эп, асатте, асанне.
Ĕнтĕ пĕрре хĕлле те
килмелле-ши элле?

*1953*

## ЧЕЕ ЫРАШПĂТРИ

Ырашпăтри тытаççĕ
Аркашпа Мĕтри.
Атьсем — чее.
Чее — ырашпăтри.

Пулла хыт улталасшăн
шыври ик-виç вăлта:
вăлтасшăн, пит вăлтасшăн.
Ырашпăтри — вăлтать.

Хывать те ăманне,
хыпмасть çав вăлтине.
Килни те ахалех-мĕн
măн Çарăмсан çине.

Шыв çийĕн хĕвелте
çара вăлта — йăл-ял!
Кӳлленчĕк мар иккен вăл
çак Çарăмсан, ай-яй.

Шӳпке тытасчĕ сирĕн,
Аркашпала Мĕтри.
Çăрттан, çăрттан тытасчĕ:
мĕскер — ырашпăтри!

*1953*

## КУШАК АÇИ

— Тытăр-ха çав шуйттана —
çинĕ янă шăрттана!
Тытăр-ха! — тесе анне
шырать кушак аçине.
Кушак аçи тăмпуç мар,
тăмпуç пулма тивĕç мар:
«Тытăр, тытăр!» — тенĕрен
тухрĕ тарчĕ тĕнĕрен.

Эп юратап «шуйттана».
Çапла суйрăм аннене:
— Кушак тивмен шăрттана,
тытсассăн та ан хĕне.
— Кушак мар-тăк татăка
хăвах çисе янă эс!
Юри тартрăн кушака,
апла халь сана хĕнес!

Анне çапла тенĕрен
тухрăм тартăм тĕнĕрен.

*1953*

## ПАТТĂР

«Пăрăн!» — терĕ.
Епле паттăр, айторох!
«Çĕмĕреп!» — тет,
ах, чăнах та, çĕмĕрет.
«Халь мар», — терĕ,
тепринче тет. Кайтăрах.
Тепринче те: «Халь мар», — терĕ...
Чĕмере.

*1953*

## ÇАВРА ÇИЛ

Чимĕр! Çил хускалчĕ,
тусана тустарчĕ,
ак чупса пырса çĕклет
ват хуралçă çĕлĕкне.

Тăкăрлăкри вĕренешĕн
ун çилли пулмарĕ темшĕн.
Калитке умне çитсен,
çапрĕ-çке ташша сиксех...

Çил хире тухса кайсассăн,
ял шăпланчĕ.
Пĕтрĕ сасă.

*1953*

## КУККУК САССИЛЛĚ ВĂХĂТСЕМ

Асту-ха, тусăм, иккĕн марччĕ,
асту та урăх ан тавлаш,
çӳреттĕмĕр эпир виç тантăш.
Куккук  тăваттăмĕш юлташ.

Чăн юлташах ĕнтĕ, мĕн калăн.
Шутлаттăмăр эпир çула.
Тата мĕн чухлĕ чăмнă, сикнĕ
таса та кăн-кăвак шыва!

Асту-ха, тусăм, туслăха
сутса кам пăрăнчĕ пиртен?
Вут пек чĕремçĕм,  юнăмçăм,
мĕн курмăн эсĕ ĕмĕрте.

*1953*

## ХУРĂН

Яштак пӳ-силлĕ те çинçе —
Мĕтри пиччен Ленукĕ пек —
апрелĕн савăк ирĕнче
тайăлкалан çил вĕрнипе.

Май кунĕ пирĕн урама
кӳрсен ем-ешĕл улшăну,
татах та ырă курăнать
хавасла та ачаш сăну.

*1954*

## ПĔЛĔТСЕМ

Шур пĕлĕт куписем юхаççĕ
тархасласа та чарăнми.
Вăхăчĕпе çитсе тухаççĕ
кăвак тӳпе те палăрми.

Вĕсен çулне йĕрлетĕп эпĕ
куç йăмăхса ыратиччен,
хаваслăх, пурăнăç тĕрекĕ
пĕр çухалса таврăниччен.

Ачалăхра ача пулмасăр
ӳсни килмест-ши йывăра?
Халех çапла салху кулсассăн,
кайран мĕн курăп-ши вара?

Уйран тин кайрĕ-ха акаçă,
тин тĕвĕленчĕ панулми...
Шур пĕлĕт куписем тухаççĕ
кăвак тӳпе те палăрми.

Тахçан-и-ха вăрман ем-ешĕл
тум тăхăнчĕ, туйса ăшша.
Ытах ан хуйхăр çул иртнишĕн,
пĕртен-пĕр тусăм Кĕришша.
Çук, вĕренер-ха тăрăшса.

*1954*

## ÇУРХИ КАÇ ВĂРМАНТА

Вăрман уçланки...
Çутă уйăх вĕçĕ-хĕррисĕр кăн-кăвак
океана шуса тухнă.
Унăн пайăркисем çурхи çĕнĕ тумлă вăрманăн
уçланкине янк çутатаççĕ.
Шурă çĕмĕрт каçхине те кĕмĕл
тĕслех курăнса ларать.
Сывлăш уçă.
Уçланкă чечекĕсем çинче пĕрчĕн-пĕрчĕн
сывлăм тумламĕсем йăлтăртатаççĕ.
Вăрманăн ырă юрăçи çемçе, тӳлек
юррине шăратать.
Вăл — саркайăк.
Çакна тăнласа е пăхса тăракан
кашнинчех ăшшăн йăл кулĕ.
Ырă кăмăл, ырă ĕмĕт пулĕ унăн.
Чĕринче йывăр, хурланчăк шухăшсем
капланса тăнă пулсан, çурхи
вăрманăн ырăлăхĕпе тӳлеклĕхĕ вăл
шухăшсене сирсе ярĕç.
Нумай вăхăта пулмин те, пĕр вăхăта...

*1954, январь*

## КАҪХИНЕ

Вăштăр вĕрчĕ ҫурхи ҫилĕ
уйăх тухнă чух.
Вăштăр вĕрчĕ те лăпланчĕ,
таҫта кайрĕ — ҫук...

Улăхра хĕрсем тăсаҫҫĕ
ик хитре саспа
ҫуркунне ҫинчен ыр юрă
тулли кăмăлпа.

Йывăҫсем тăраҫҫĕ шăппăн —
чĕмсĕр мĕлкесем.
Сывлăм шăрҫисем ялтраҫҫĕ —
ахах пĕрчисем.

Ҫĕмĕртсем ҫеҫкине ҫурнă,
ҫĕмĕртсем — лаштра.
Вĕсене те курчĕ уйăх,
курчĕ аякран.

*1954, январь*

## ШУХĂШЛАСА КĂЛАРНĂ ТИНĔС

Шурă-шурă чарлансем анаççĕ,
явăнаççĕ тинĕс çийĕпе.
Хумсем темĕн каласа чупаççĕ.
Тинĕс тулнă ырă кĕвĕпе.

Аслă  тинĕс хумĕсем умрах-çке!
Ярăнаççĕ уç çил вĕрнипе.
Пĕртен-пĕр йăпанăвăм та çак-çке:
сăвăлатăп тинĕс кĕввипе.

*1954, январь*

* * *

Кӳлĕ хĕрринче хăвалăх,
инçех мар раща.
Тепĕр енче пысăк улăх
выртать сарăлса.

Симĕс раща та, ав, тулнă
юрă-кĕвĕпе.
Мĕнпур чĕрĕ чун вăраннă
ырă ĕмĕтпе.

Сарă кайăкĕ юрларĕ
çĕн çурхи мелпе.
Çуркунне çинчен шăратрĕ
çепĕç сассипе.

Çурхи каç хулленех иртрĕ
шавлă хаваспа.
Тӳпене çутатрĕ уйăх
кĕмĕл çутăпа.

Уйăха курса, нумаййăн
çутă çăлтăрсем
пĕрне-пĕри куç хĕсеççĕ.
Савнăçлă вĕсем.

Тен, çĕр çинелле пăхсассăн,
курĕç вăрмана.
Вăрманĕ тӳлек те аслă.
Куç хĕсĕç вара!

*1954*

## ЮРАТУ ЮРРИ

Епле ырă, тӳлек те хаваслă
çакă çут тĕнчере пурăнма.
Юрату юрри хĕрӳ, хăватлă,
пуçласассăн йывăр чарăнма.

Çунакан чĕре çинчен юрлатăн,
савăнăçпа тулнă çамрăклăх çинчен,
иртсе кайнисене асăнатăн,
пуласси пирки хыпса çунатăн,
шухăшлатăн куççуль тухиччен...

*1954, январь*

* * *

*Шавлать, кашлать сӗм вӑрман...*

Ан шавла, вӑрман, мӗн-ма шавлатӑн?
Шухӑшлакана ан чӑрмантар.
Çук, шавлатӑн эсӗ, чарӑнмастӑн.
Вӑрманта тискер, вӑрман варри хаяр.

Ах, шавлах эппин, хускал, хӑрат эс,
шухӑшлакана чӑрмантарах.
Пӗр хумхан, чун тинӗсӗ, хӑватлӑн.
Ма чарас, кӗрлетӗр тӑвӑл хытӑрах...

*1954, январь*

## ТĂВĂЛ

Мария! Нумай ан мухтанăр,
пысăка ан хурăр хăвăра ялан,
йӳҫ сăмахпа мана ан хурлантарăр.
Нимех те мар... Манпа халь — Немо капитан.

Тӳпере ҫумăр пĕлĕчĕсем чупаҫҫĕ.
Ялтра ҫиҫĕм ҫĕр ҫурса каять.
Улăп-йывăҫсем ҫĕр ҫумне тайăлаҫҫĕ.
Урса кайнă тăвăл ахăрать.

Тинĕс, тинĕс... хăруш та хăватлă.
Хумсене халь ним те чараймасть.
Тинĕс тăхлан пек, тинĕс усал чунлă,
ҫапах Немо тăвăла парăнмасть.

Хурлану вăрман кĕрлевĕ пек капланчĕ,
хупăрларĕ аҫтахха-тинĕс пек.
Мана Немо капитан лăплантарчĕ.
Хурланмастăп ĕнтĕ эпĕ тек!

*1954, январь*

## ПИРĔН ÇĔРШЫВРА

Мĕнле ырă, хаваслă та лайăх —
ирĕк те илемлĕ çул пулсан умра.
Çĕнĕ пурнăç стройкисем нумайăн
ӳссе ларчĕç пирĕн çĕршывра.

Уйсенче хир карапсем шавлаççĕ,
шĕкĕлчеççĕ тырă-пулăсем.
Заводран кашни кунах тухаççĕ
ялхуçалăх валли машинсем.

Çеçенхирĕн хăр çилсем пулаççĕ,
типĕтеççĕ ӳсентăрана,
çавăнпа вăрман пирĕн лартаççĕ —
çилсенчен сыхлама тырпула.

Пушхирте хăйăрсем çеç выртатчĕç,
нимĕн те пушхирте ӳсеймен.
Халĕ пысăк каналсем чаваççĕ,
шăвараççĕ халь тип çĕрсене.

Атăл тăрăх сулăсем ишеççĕ —
турттараççĕ тайга йывăçне,
çирĕп йывăç йышлă кирлĕ, теççĕ,
тунă чух çĕршыв йывăр ĕçне.

Çĕршывра пульница та тăваççĕ,
уçăлаççĕ аслă шкулсем,
çĕр çинчех çăлтăрсем йăл! çунаççĕ,
ырă кун часрах çиттĕр тесе.

*1954, февраль*

## КАÇХИ ПУÇТАХСЕМ

Миттюк Ваççи хăйĕн ятне
пăсăласран чарса тăмарĕ:
уллахлă пӳртĕн алăкне
урисемпе тапса лăкарĕ.

Паттăрланаççĕ тусĕсем —
Тенис Кули, Крылов Аркаçĕ.
Шăнса чĕтреççĕ-çке хăйсем,
сăмсисене нăшик! туртаççĕ.

Çĕмреççĕ алăк хайхисем,
вăйпа уçса пӳрте кĕреççĕ.
Ваççан ӳсеççĕ çунатсем.
Пăх-ха, епле вăл çулъертевçĕ.

Ун пысăк-ха шухăшĕсем:
хитре хĕре савать çунса.
Ай, курăр, курăр, ачасем,
ун пуçĕ кайнă çаврăнса.

Килте, лăсканчăк сумккăра,
Ваççан канса выртать дневникĕ.
Айван хуçийĕ — уллахра.
Дневникĕнче миçе-ши «иккĕ»?

Крылов Аркаçĕ, кахалскер,
ĕçе тухма пачах пăрахрĕ.
Аркаçшăн ĕç тени мĕскер?
Аван — картла çапма вăраххăн.

Тенис Кули, каппайчăкскер,
тĕтреллĕ, хĕрĕнкĕ оратор,
янратрĕ намăс сăмахсем.
Кĕске Куля чамасăр паттăр.

*1954, март*

* * *

Эс камччĕ çак, эс — юрăсти?
Элле поэт-и пĕр енчен?
Мухтавлă, чаплă пуринчен?
Е эс пит ирсĕр йăпăлти?

Веç йăнăш ку! тесе ан тулхăр,
мухтан юхха савнисемпе.
Çĕмреп! Хĕнеп! тесе ан çухăр
патрак та ирсĕр чĕлхӳпе.

Мĕн ĕмĕр сан шăршу упраннă.
Нихçан пĕтмеççĕ ирсĕрсем.
Эс çеç ал çĕклеме пултарнă
талант çине... пăспа хĕрсе.

*1954, март*

* * *

Мана макăртма шухăшларăн
юрату çиçнĕ вăхăтра.
Кала, кала-ха, мĕн паврарăн? —
хуть сассăм янрĕ сăвăра.

Ку — мăшкăл. Ку йĕрсем час каймĕç.
Ытла та хурлăхлă вĕсем.
Хаяр кулăллă çав йĕрсем
тĕтре пек сирĕлсе саланмĕç.

*1954, март*

* * *

Эсӗ вӗҫӗмсӗр хурлӑхраччӗ.
Ҫилӗллӗн усаттӑн эс пуҫна.
Ун чухне кӑмӑлу аванрахчӗ, —
темӗн те шанаттӑнччӗ мана.

Вӑл вӑхӑт ӗнтӗ халь инҫе,
халь хурлӑх тӑвӗ — ман ҫинче.

Анчах та ҫав таса тӑва
хура пылчӑкпала варлаймӑн,
тискер элек айне тӑваймӑн,
хуплаймӑн ман юратӑва!

*1954, март*

## ЭКЗАМЕНСЕМ

Çурхи кунсемпе килсе çитрĕç
экзамен тытмалли кунсем.
Никам хăраса хумханмарĕ.
Пурте — çирĕп пĕлӳллĕскерсем.

Ăнлантарнă чух тăнлăн итленĕ,
дисциплинăллă пулнă вĕсем,
хăйсемех кружоксем йĕркеленĕ,
унта тунă ялан сăнавсем.

Çирĕп сывлăх вĕренмешкĕн кирлĕ.
Чупнă, сикнĕ... пачах ӳркенмен, —
пул хастарлă, хăюллă, кĕрнеклĕ,
хурçă пекех пиçсе тĕреклен.

Çут хĕвел хытăрах ăшăтать ав,
тăрăшать çĕн вăйпа йăл кулма,
хастар чĕрене вăй хушать вăл,
вăй хушать вăл экзамен тытма.

*1954*

## ЭТЮД

Сывлăм тăрăх çарран
эп тухатăп çула.
Уйăх çутинче хыçăмран
курăк çине йĕр юлать.

Шăппăн анатăп çулпа
аната, çырмана.
Ĕнтĕ, ак, каçмапа чупап
çаплипех, çарранах.

Варрине çитеспе чарăнса,
йĕм пĕççи тавăрма пĕшкĕнетĕп.
Урана каçмаран усса,
лĕп шыва пăлхатап, сирпĕтетĕп.

Шыв сирпĕнет — ахах, мерчен.
Уйăх çути — чалтăркка.
Ларăттăм çапла ирччен,
вĕçĕттĕм шухăшпа аякка.

*1954*

## ПĔЧЧЕН ЙĂМРА

Ах, йăмра... шыв çине
эс пăхан кунĕн-çĕрĕн.
Кам ӳкерчĕ ĕнер каçхине
шыв тĕпне кĕмĕл çĕрĕ?

Кĕмĕл çĕрĕ унта
нумайччен йăлтăртатрĕ.
Эп шырарăм чунтан.
Ĕмĕте юшкăн татрĕ.

Юшкăн татрĕ умри ĕмĕте.
Шăплăхра темле сас ахăлтатрĕ...
Хĕрринчех çакăн чул йĕпетет,
шаларах — тĕпсĕр-тĕр, сакăлта-тăр.

Эп кĕместĕп хура авăра,
сиккипе вĕçтереп ялалла.
Эс каймастăн килне, эс юлан,
ват йăмра...

*1954*

## ĔНЕ ÇИТЕРМЕ

Каç пулттипе, Кĕркури,
айта ĕне çитерме.
Пырăп терĕ Кĕтерне.
Пытăр эппин. Пытăр-и?

Ытти хĕрачасем пек,
пирĕнтен вăл ютшăнмасть.
Хамăрла вăл пĕтĕмпех —
курнăçланмасть, аптратмасть.

Ашшĕпе те мухтанмасть,
амăшпе те мухтанмасть,
юлашки чĕл çăкăрне
çурмалла тума хавас.

Айта ĕне çитерме,
кĕл улмийĕ пĕçерме,
савăк юрă итлеме.
Эх, юрлать те Кĕтерне!

*1954*

## ТĔТРЕ

Пĕве çинчи çăра тĕтре
нихçан та сирĕлмĕ тетре:
чупса анмастăр вăштăр-ваштăр —
пӳртрен пуçа та кăлармастăр.

Шухăшăмра сире чĕнсе,
пĕччен тăрап çыран çинче.
Ирхи тĕтре çаплах çăра.
Хампа эп хам — калаçура.

Сăвăласа эп калаçатăп.
Чупса килменшĕн вăштăр-ваштăр,
пӳртрен пуçа та кăларманшăн
сире, туссем, эп каçаратăп.

Тен, тĕлĕнетĕр ятлаçса?
Çук, чарăнăр, çитет кулса.
Чĕрешĕн тунсăх сехетре
элле тĕтре хĕвел тетре?

*1954*

## ХУР ЧĔППИ

Шимп-шимп чухнех хуса çӳреттĕм
сире ялан çырма хĕрне.
Утатăр сывă, ретĕн-ретĕн, —
анчах мĕн пулчĕ-ха пĕрне?
Сасси çинçе, çуначĕ усăк,
ларать вăл пахчара пĕччен.
Çисем, ак çăкăр, шыв ĕç, тусăм,
тен, ешĕл курăк астивен?
Апап тесе калан йăвашшăн —
апап пуль çав, апап пуль çав.
Мĕскер тăвам-ши сыватасшăн? —
пĕлменлĕх кăмăла хуçать.

*1954*

## ИКĔ СЕЛĔП

Икĕ селĕп — ик шăхличĕ —
тупнă тем савăнмалли.
Пусмапа пĕри хăпарнă,
хăвăл ăшĕнче алли.

Эх, пуплеççĕ икĕ тус:
— Михаха, теп, Михаха,
çеçи чĕппи иçе па-ха-ха.
— Çеçи чĕппи çаха-ха...

*1954*

## ЙĂМĂК

Вĕр-çĕнĕ тумĕ йăмăх ун,
çипуçĕ тап-таса.
Çӳрет ман пĕчĕк йăмăкăм
тăваттăмĕш класа.

Паян çут кулă, савăнăç
ача сăн-питĕнче:
паян шкула хыт савнăшăн
ырларĕç класĕнче.

Чăнах та, тăрăшуллă çав
ĕçре, вĕренӳре.
Маттур та ăслă пулнăшăн
çĕршыв ырлать пире.

Вĕр-çĕнĕ тумĕ йăмăх ун,
çипуçĕ тап-таса.
Çӳрет ман пĕчĕк йăмăкăм
тăваттăмĕш класа.

*1954*

## КАҪХИ МАРШ

Ать-ва, ать-ва...
Итлĕр пурте Ваççука.
Пухăнар пĕрле каçпа.
Эй, Куля, эй, Качака!
Ать-ва!

Тăкăрлăк вĕçне çитсен,
пахчара пĕтер çĕтсе.
Пихампар, сыхла пуçма.
Ать-ва!

Малтанхи тĕллев — хăяр.
Хапхи çук туртса уçма.
Карти — çӳл, йăтти — хаяр.
Ать-ва! Чш-ш... ать-ва...

Манăр тĕпĕпе çăлма,
манăр авăрне хуçма,
татăр çимĕçне кăна.
Ать-ва...

*1954*

## ШИКЛИ

Шиклĕ пултăн мĕн тума
çамрăклах эс, Шиккин?
Санăн вĕт — хапу кăна,
харсăрлăх — пĕчиккĕ.

Тусусем пуçтарăнаççĕ
инçетри Якут çĕрне,
çул ӳкнишĕн савăнаççĕ.
Эсĕ — нăйкăшса çӳрен:

«Сĕт çырми юхмасть унта та,
çук кĕсел çыранĕ те.
Вырăн ялăмрах тупатăп,
РОНОра асли — тете».

*1954*

## ĔНЕСЕМ

Ĕнесем тухаççĕ, авă,
кĕтӳпе уй хапхинчен.
Пăрахут сассин янравĕ
илтĕнет мĕкĕрнинче.

Çур пине те яхăн пур-тăр.
Сахал мар ку халлĕхе.
Пăлан пек патвар, çап-çутă,
хӳрисем — çĕре лекет.

Курăнаççĕ пит маттуррăн
аслă улăх хăнисем.
Çиллисем таса та шурă —
çуллă сĕт хутаççисем.

Куç тулли нумай ĕнешĕн
чунăм хытă савăнать.
Эх, пĕлесчĕ, хăшсене-ши
Кĕтерук аппа сăвать?

*1954*

## ЙĔТЕМ ÇИНЧЕ

Зернопульт — йĕтем фонтанĕ —
вĕççĕр «çумăр çутарать».
Ылтăн! Ылтăн! тетĕп эпĕ
сарăлса выртан тырра.

Транспортер-кĕпер пит хăвăрт
ăсатать машшинсене.
Тасатан-типĕтекенĕн
васкама текех тивет.

Йăлтăр-ялтăр электрица
хуса ячĕ тĕттĕме.
Нимле çумăр йĕпетеймĕ
шифер витнĕ йĕтеме.

Эй, юлташ, ĕçлер-ха харсăр,
пулăшма хастарлăх пур.
Пултаратпăр, тăрăшатпăр...
Савăнса кулать аппу.

*1954*

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

Моторта вăрманăн
сасси илтĕнет.
Мотоцикл ларнă
Кĕркури çине.

Кĕркурийĕ çĕнĕ,
çил пек ыткăнать.
Мотоцикл темĕн
чăл-чал пăхкалать.

Куçĕсем, ак, тухрĕç
пĕр кĕпер умне.
Кĕркури пуç ухрĕ
тур лаша енне.

Тилхепийĕ тытнă
Сăрнай Ванине.
Сăрнай Вани хыттăн
текех кĕçенет.

*1954*

## ÇУЛ ÇИНЧЕН

Кĕрхи хум-хумлă тӳпере
хĕвел кулать вĕт çумăр витĕр.
Чуста пек пылчăка, пĕрех,
çăрса утап, хам ырнă питĕ.

Çич çухрăм юлчĕ хыçала.
Чипер юл, станци, «Шуçчуманĕ».
Çитсе пыратăп ялалла.
Умма кĕç тухрĕ çил арманĕ.

Тем чухлĕн шурă хурĕсем
ял вĕçĕнчи кӳлле иленнĕ.
Чуспа пĕркеннĕ çĕн пӳртсем
шуса тухаççĕ пит илемлĕн.

Килте — мунча пăс кăларать,
хăна чĕнме сĕтел те витнĕ,
тăван килйыш кĕтсе тăрать,
анне кулать куççулĕ витĕр.

*1954*

## АСЛӐ ЯЛӐН, ПИРӖН САВРӐШПУҪӖН

Аслӑ ялӑн, пирӗн Саврӑшпуҫӗн
ӗлӗкрен юрланӑ юрӑ пур, —
вӑласнуй ҫыхланнӑ мӗскӗн пуҫӑн,
яш никрутӑн, хурлӑх кӗвви пур.

Ӗмӗрне вӑл салтакра ирттернӗ:
ҫирӗм пилӗк ҫул тӑват ҫул мар.
Ашшӗ-амӑш куҫҫульпе ӳленӗ:
«Турӑҫӑм, ҫӑлсамччӗ ачама».

Хӑтарман ҫав, илтмӗш пулнӑ пӳлӗх,
чухӑнсемшӗн хӳтлӗх тупӑнман:
тур патне ҫитме ытла та ҫӳллӗ,
«ыр патша» патне кӗме пулман.

Саврӑшпуҫӗн, пирӗн Саврӑшпуҫӗн
авалхи салтак юррийӗ  пур.
Ҫав юрра юрлаканнин, каюҫӑн,
чун панчи савни те юлнӑ пуль.

Чун савни... Халь те юлать савнийӗ,
призывникӑн тус-пики юлать.
Ӑш ҫунни. Пулать те ӑш ҫуннийӗ,
ҫутӑ тунсӑхли те вӑл пулать.

Ирӗклӗх хуралӗ — ҫамрӑк каччӑ.
Вӑл кайни ыр шанчӑк хӑварать.
Аслӑ парти пусмӑртан хӑтарчӗ,
ҫӗршыва пиллерӗ хамӑра...

Саврăшпуçĕн, пирĕн Саврăшпуçĕн
çĕнĕлле юрлан кив кĕвĕ пур.
Военком чĕнтернĕ шакла пуçăн,
призывникăн, савнăç юрри пур.

Ăсату тени çапах та хурлă.
«Салтака» тивет те юрлама,
юрринче сăмахĕсем йăлт урăх,
киввинчен юлман-тăр çур сăмах.

*1954*

## АННЕ ЮРРИ

Чĕнтĕрленĕ кĕпер айĕнче
чĕнтĕрлĕ тутăрсем çурăмăр...
Çĕнĕ саманара çуралтăмăр,
çавăнпа телейлĕ пултăмăр.

Пĕчĕккĕех тутăр, шур тутăр,
юратнăран ялан çыхатăп.
Айхаях, ачамсем, çунатăмсем,
савăнăçа пула юрлатăп.

Вăштăр кăна вăштăр çил вĕрсен,
ма кашлать-ши хура вăрманĕ?
Пирĕн пуçăмăра çăмăл килсен,
ма урать-ши усал тăшманĕ?

*1954*

## МАЛТАНХИ ЮР

Ир-ирех юр çурĕ, çурĕ,
таврана шап-шурă турĕ.
Чарăнман-ха халĕ те.
Каççăр чарăнмасть те пулĕ.

Кăмăл юр пекех çуталчĕ.
Юр чĕнет, юр илĕртет.
Паянах тухса чупасчĕ
йăлтăр-ялтăр йĕлтĕрпе.

Йĕрĕм ӳкĕ тӳрĕ-тӳрĕ.
Уй сăн-пичĕ шурă-шурă.
Йĕр хупланĕ юр айне,
хуплансан та кăмăл тулĕ.

Пурçăн тетчĕ ял урамĕ
ешĕл хурăн кăтрине, —
хĕлĕпех асра упранĕ,
юр хуплаймĕ асрине.

*1954*

## ХАВАСЛĂ ПЕРЕМЕНА

Епле кăна урокĕ пĕтрĕ, —
шăлт-шалт! та кĕррĕс! турĕ алăк,
кисренчĕ мĕскĕн, чĕриклетрĕ.
Унтан-и, куртăмăр мĕн акă:

тăр-тăр! чĕтрет умри шыв бакĕ;
лере тата мĕскер амакĕ?
Коридорта пуш витресем
лараççĕ хытă силленсе.

Федотов, манăн çывăх тусăм,
çĕн йышши бокс вĕрентет,
ĕнсе чиккинчен лектерет,
хĕсет чӳрече çумне пусăм:
Трофимов хыттăн ахлатать,
чĕлхине тăснă, сывлаймасть.

Шкулти хаваслă перемена!
Аннеçĕм шкул, каçар пире.
Ывăлусем çине кӳренмĕн,
чунтан ыйтатпăр: ан кӳрен.

Пуçтахланни те пулчĕ пулĕ,
юлхавланни те пулчĕ пуль.
Кăçал юлашки çул, ял шкулĕ,
эпир кунта, юлашки çул...

*1955, апрель*

* * *

Колхоза чипер хӗр килчӗ хуларан,
фермӑна пырать ялан.
Тӗл пулсассӑн, ӑшшӑн пӑхрӗ куҫӑмран,
ларчӗ манпала.

Анӑҫ мар-ҫке ҫутрӗ ҫӑлтӑрне каҫран
тӗксӗм тӳпере.
Хӗр сӑнарӗ ялкӑшрӗ юратнӑран
манӑн чӗрере.

Ах, сикет чӗреҫӗм, ах, сикет
ҫав хӗре курсассӑнах.
Час командировки те пӗтет пикен,
ӑсанать... туймасӑрах.

*1955*

## АШКĂНЧĂКСЕН ЮРРИ

Эс каçар пире, директор,
хаклă Елисей Мурзич,
ир-çке касакра çӳретпĕр,
кĕнĕ мар-и хĕр шăрши.

Эс каçар татах, директор,
пултарсассăн каçарма,
çăпата ахаль çĕтетпĕр —
вĕренетпĕр уçă мар.

Ан ятла пире, директор,
пирĕнсĕр шкулта кичем.
Шкул сăнне илем кӳретпĕр
эпĕр — савăк ачасем.

*1955*

## ÇУРХИ ФАНТАЗИ

Ман умран вĕçсе иртеççĕ
шурă-шурă акăшсем,
питĕме тивсе лăпкаççĕ
çунатпа варкăшнисем.

Аллăма тăсатăп эпĕ:
парăрсам пĕр тĕкĕре.
Тăкăнать тĕнче илемĕ —
сарă уйăх — тӳперен.

Акăшсем вĕçсе иртеççĕ,
пăрахмаççĕ шур тĕкне.
Кăмăлăм çаплах туймасть-ха
акăшпа юр пĕрехне.

Эс каларăн: «Çилĕ ăшă,
çӳçенетĕп эп çапах».
Эпĕ хирĕç йăл кулатăп,
йăпшăнатăп çумнарах.

*1955*

## КАÇХИ КĔВĔ

Сассупа эс — Иоланта,
Сольвейг — сăнупа.
Эс кайран ăçта пулсан та,
эп сана тупап.

Аслăрах эс, эс çӳретĕн
вуннăмĕш класа.
Саншăн эп вута кĕретĕп,
маншăн йăл кулсан.

Вальссенче сана сăпайлăн
кăларать ташша
çĕн костюмлă, сар сухаллă
Яковлев Мишша.

Кашнинчех ăна хĕнетĕп
чунăм каниччен,
мĕншĕн иккенне пĕлетĕп
эпĕ çеç, пĕччен.

*1955*

## КАЧЧĂСЕМ

Кулать, макрать, сывлать тĕнче!
Сасартăк мăкăртатрĕç, ак,
хаваслă ăшă çил çинче
темле сассем. Мĕнле амак
çур каçĕн тĕттĕмлĕхĕнче?

Палларăм: Коля — çырă çӳç;
Лява; вăл купăсçă, илемлĕ.
Унтах пулас тата Çеруш —
аван ача, маттур, тирпейлĕ.
Пурте пĕрле — «çап-çамрăк пуç».

Çӳреççĕ мар-и каççерен
çурхи урам тăрăх иртсе
чунра тӳлеклĕх çĕтнĕрен.
Ĕнтĕркесе те йĕпенсе
çӳреççĕ мар-и каççерен.

Курсан сăмах хушатчĕç-ха,
шкулта-мĕнре асăрхасан.
Халь хăпартланнă. Юрĕ. Халь
ан хушчăр. Кăшт тунсăхласан,
пурĕпĕрех юмахлĕç-ха.

*1955, апрель*

## ÇУР КАÇĔН ЫР ТĔТТĔМЛĔХĔ

Çур каçĕн ыр тĕттĕмлĕхĕ
тăрать ĕнтĕ нумайранпа.
Çын сасси çук, тавра шăпах.
Хуллен, пăртакçă, хăратать
çур каçĕн ыр тĕттĕмлĕхĕ.

Лутра кăна çатан карта...
Лява сиксе каçать вĕлт! çеç.
Хура куççем йăл-ял! çиçеç.
Тата карта курнать малта —
Лява сиксе каçать вĕлт! çеç.

Эпир — тăваттăн-пиллĕкĕн.
Епле хӳхĕм çамрăк пуççем!
Çатан карти — Тамуççасен.
Хастарлăхпа тулнă çынсем —
эпир тăваттăн-пиллĕкĕн.

— Ĕнтĕркетĕн-им çĕрĕпе?
Тепĕр тесессĕн, мĕн ĕç пур.
Çурхи илемĕн кĕввипе
юрату чĕртĕр...
— Эсĕр ма
ĕнтĕркеместĕр çĕрĕпе?

*1955, апрель*

## УРАМРА

Каç. Ирĕк çил улать, улать
çуртсем çийĕпеле иртсе.
Пĕр шăхăрса та пĕр йĕрсе,
у-у, каш-кашшăн! кашласа,
алхаснă çил улать, улать.

Шывпа кӳлленнĕ урамра
тăраççĕ иккĕн типĕре —
пăлханакан тĕттĕмлĕхре.
Епле хитре иккен тăма
шывпа кӳлленнĕ урамра!

Çӳçпуç чарусăр варкăшать.
Сисетĕп: каччă чун-чĕри
нихçанхинчен паян вĕри.
Çур каçĕн чăрсăр çилĕпе
çӳç хĕрачин те варкăшать.

*1955, апрель*

## АН ВАСКА

1.

Йăлтах куратăп: çиллентерĕ
çыру. Пуçларăм, ак, çырма.
Халь эп пĕлетĕп: санăн ирĕк —
мана темтепĕр калама.

Шăпам çинчен шутлас килмерĕ,
нумай лармарăм шутласа,
тултартăм пĕр листа çырса,
васкарăм, чарăна пĕлмерĕм.

Лăпланнă, чарăннă пулсассăн,
санра кăшт шанчăк та туйсассăн,
вăтанăç-именĕвĕме
пултараймастăнччĕ пĕлме.

Венера — юрату турри —
йĕмешкĕн пуçласассăнах,
хăватлă юрату юрри
тапрантăр хытă-хытăрах.

Эс çăмăлах ăнланаканччĕ
ахаль чĕнмен сăмахсене,
çĕкленнĕ чунăн çулăмне
сумлаттăнччĕ. Епле аванччĕ.

Çыратăп та чĕрсе тăкатăп,
пуш-пушă сăмах çеç тесе;
листа хыççăн листа çуратăп,
чипер çырайманне пĕлсе.

Ачалăх, яшлăх çыхăнтарчĕ.
Мĕн усалли çак туслăхра?
Сана çак сăвă тарăхтарчĕ,
мана лăпкарĕ шăплăхра.

Юрату вутлă хĕç пек çиçĕм,
юрату вутлă ураган.
Мана унран пĕр хура вилĕм
пултарĕ уйăрма, ăнлан.

2.

Чăнах калатăп, тусăм Маша,
сана курсан, чунри хăват
сăвăлама хушать. Эс маншăн
чипер те ырă çывăх ят.

Мишша пуçтах, Мишша хатарлă
тесе те шутлĕ хăшпĕри.
Чăн та ухмах-ши? Мĕн аташнă?
Анчах — мĕн тăвăн? Юн вĕри!

Çулăмланса çунса çыратăп
юлташ тесе эп сан пата,
хавхаланса сывлăх сунатăп,
хĕрӳн яратăп салам та.

Эп пуррине ялан туйса тăр,
халех вилместĕп-ха, ваçка.
Хурав çырма, епле пулсан та,
тăрăшса пăх та, ан васка.

*1955, апрель*

## АСĂНМАЛĂХ

Епле асран тухми хаваслăх
кĕске те ырă вăхăтра...
Каять, шуса иртет ачалăх.
Çĕн палламан кунсем умра.

Илемсĕр сăввăмшăн каçарăр,
текех ан хăрăр та манран.
Эпир ытла та çамрăкран
ку пулчĕ пуль? Çук, тек ан хăрăр.

Пĕр пăлханмасăр тытса вулăр
ыр кăмăллă çын пулнăран.
Асăнмалли пекки çак юлтăр
пĕрле вĕреннĕ юлташран.

*1955, апрель*

## ЭСĔ ПУР ЧУХ

Эсĕ пур чух, ăш çунтармăш савниçĕм,
купăс-баянăм ачашшăн юрлать.
Эс пуртанах эп ĕçре те вут-çиçĕм,
эс юратни çутатать кунçула.

Кăмăл аван пĕрмаях, ăсăм урă,
уçă чунпа калаçап çынсемпе.
Çак сăввăма та эп саншăнах çутрăм
яш чĕрере амаланнă хĕмпе.

*1955*

## МАЛ ЕНЧЕ

Мал енне пăхрăм-пăхрăм та —
ик кĕлетке... çумлах иккен.
Йăмра хыçне пытантăм та,
кĕтетĕп эп. Чăнах иккĕн,
лайăхрах пăхрăм-пăхрăм та.

Ак — кӳл. Чарăнчĕç çакăнта.
Хамăн çывăх тус-юлташпа
класри хĕрех. Тĕксĕм шыв та
çуталчĕ шурă уйăхпа.
Ак — кӳл. Чарăнчĕç çакăнта.

Кӳлĕ хĕрнех сукмак анать,
çемçе курăклă пĕр сукмак.
Марье пырать, чечек татать,
вара сирень çеçки хуçать.
Сукмак кӳлĕ хĕрнех анать.

Каллĕ-маллĕ, сукмак тăрăх
кайрĕç темиçе хут иртсе.
Пĕр уйăх, уйăх çеç тăлăх,
унтан — эпĕ. Кайрĕç иртсе
каллĕ-маллĕ, сукмак тăрăх.

Шыв çийĕн уйăх çутатать.
Пăхса тăратăп эп нумай.
Саркайăк юрă шăрататать.
Çӳл тӳперен пĕрмай-пĕрмай
шыв çийĕн уйăх çутатать...

*1955, апрель*

## САВНĂ ТУС

Ассăн сывлать вăл, хуйхăрать.
Пĕр йĕркине пуçлать те кăшт
кĕç чарăнать, çĕнрен пуçлать.
Çӳçне вăшт! ывăтать те, хăш!
сывлать каллех вăл, хуйхăрать:

«Ĕлĕксенче нумай сăнанă,
аванччĕ сирĕн кăмăлăр.
Халь ма çиллентĕр-ши? Хурланă
телейсĕр çын эп... Çăмăллăн
хама калаймăп «пуç ан ус».

Мана пăрахнă савнă тус,
урăххине юратнă вăл, —
çапла шутлать ман шухă пуç.
Телейлĕ пул та, ятлă пул,
тусна пăрахнă савнă тус...»

*1955, апрель*

## КУÇСЕМ

Ун чух çапса çăватчĕ çумăр...
Агитбригада хашкаса
вăрман пӳртне кĕрсе пытанчĕ.
Çилсем йĕреççĕ уласа.

Ăçта эп? Мĕн çине пăхатăп?
Ăçта çӳретĕр шухăшсем?
Ах, турăçăм, мĕскер куратăп:
тăп-тăрă, тап-таса куçсем...

Паянхи кун та манаймастăп
çав аслатиллĕ çумăра,
ялан сире, куçсем, куратăп,
илтетĕп çутă сассăра.

Эсир ун чух кăшт хӳтлĕх ыйтрăр
алхаснă тăвăл аллинче.
Телей пулса кĕрлерĕр хыттăн
çап-çамрăк сăвăç чĕринче.

Эсир ун чух кăшт ыйтрăр хӳтлĕх
хура вăрман уçланкинче.
Чăнах-ши, ним асăрхаймарăр
вут хыпнă сăвăç сăнĕнче?

*1955*

## ВĂРТТĂН ÇЫРУ

*Тамарăна*

Хĕвел ирпе савса пăхатчĕ.
Хавасчĕ, ирĕкчĕ тĕнче.
Малти куна кĕтсе юхатчĕ
ыр кĕвĕ сăвăç чĕринче.

Ик-виçĕ çамрăк çарапуçăн
пырать йăтса гитарине.
Октябĕре кĕтсе тăруçăн,
спектакль лартрĕç каçхине.

Ăна-кăна епле астумăн
шăпах вунпиллĕк тултарса.
Пĕрремĕш çамрăк юрату ман
çут кĕмĕл шыв пекех таса.

Нумай киревсĕрлĕх çуратнă
суя çын ултавне шанни.
Элек тени пуçа çухатнă,
вĕчĕрхенсе элеклени.

Ултав сăмахсене ан шанăр.
Ултавçă шелсĕр те хаяр.
Ултав-суя тымарĕ шантăр —
тĕпрен кăклар та ывăтар!

Сăвва, тен, вăрăм тăсса кайрăм?
Вăхăт та мар-ши вĕçлеме?
Малтан, ак, эп çырма пуçларăм,
сиртен ыйтап ответлеме...

*1955*

## ÇЫВĂР, ШĂЛЛĂМ

Çывăр, шăллăм, паппа ту.
Эпĕр çиччĕн пĕртăван,
çичĕ ывăл, çич тăван.
Çывăр, шăллăм, паппа ту.

Кунĕпех ĕçлет анне:
уй-хире те ĕлкĕрет,
кил-çурта та ĕлкĕрет.
Кун каçа ырать анне.

Вăл пире пит юрататъ.
Алăра миçе пӳрне,
юрататъ — çырт хуть хăшне.
Эс — качи, хыт «ыратан».

Çывăр, шăллăм, çывăрсам.
Ĕнтĕ тĕлĕрет анне,
тĕлĕкпе кулать анне.
Çывăр, шăллăм, çывăрсам.

Çырма леш енчи хирте
хускатса, ав, шăплăха,
çĕрĕпе тăвать суха
тимĕр лашипе атте.

Вăл та хытă юрататъ
хăйĕн çичĕ ывăлне.
Сана, шăллăм, Кĕçтукне,
хытăрах вăл юрататъ,
шăпăртрах пулма хушать,
кантăр, тет, аньни кăштах...

Шăллăм, пысăк уйăх та
сана çывăрма хушать.

*1955*

## ТӐВӐЛСЕМ

Шторм? Тен, тамӑк кӗрлесе тӑрать?
Шторм. Хумсем ҫӳл палуба таран.
Тӑхӑр баллӑ тӑвӑл ҫӗкленсен,
карапсем тӑмаҫҫӗ бухтӑра,
карапсем тухаҫҫӗ тинӗсе.

Ҫӑлнӑҫ — ирӗк уҫлӑхра кӑна:
ҫапӑнмастӑн чул сӑртсем ҫумне,
хӑрамастӑн вилӗмрен, кулан,
парӑнмастӑн эс ӑна, ҫӗнен.

Шторм... Анчах та вӑйлӑ тӑвӑлсем
тинӗсре кӑна-и ҫут тӗнчен?!
Пур таҫта та, тӗрлӗ йышшисем.
Этемсен хаяр чӗрисенче
капланаҫҫӗ вутлӑ тӑвӑлсем.
Вутлисем хӑрушӑ пуринчен.

Ӗҫҫынни! Хӑрушлӑх ҫук чухнех
эсӗ пӗл ӑна ҫӗнессине.
Унсӑрӑн — ватаймӑн тӑшмана.
Пурӑнӑҫ — кӗрешӳре кӑна.

Тӗп пулать — кам хӳтлӗхе тарать.
Ахаль мар пуль, тӑвӑл кӗрлесен,
карапсем тӑмаҫҫӗ бухтӑра,
карапсем тухаҫҫӗ... тинӗсе.

*1955*

# ВĔÇЕВÇĔ ГОЛЛАНДЕЦ

*Баллада*

Эп — Вĕçевçĕ Голландец, хаяр капитан;
хум касать, урнă пек ыткăнать манăн бриг;
варкăшать анлă плащ, хăлхара — çил юрри;
нихăçан пусăрăнми хуйхă — яш кăкăрта.

Тухатланă мана. Эп пин çул тинĕсре.
Çырансем, бухтăсем, гаваньсем маншăн мар.
Тухнă эп пăчăхма, выçăхма та шăнма;
вилĕмçуклăх салхун палăрать сăн-питре.

Эп çитсе чарăнатăп — çанталăк йĕрет,
шăхăрать те улать, кисренет те чĕтрет.
Эп кĕретĕп — хăпать пĕтĕм çыннăн сехре.
Эп усал-тĕселтен хăрушрах пур çĕрте.

Ăнланми вăрттăнлăх бриг çинчи матроссен.
Çурăлас пек хивре карăннă парăссем.
Эй, ылханлă шăпа, вĕçĕмсĕр тинĕссем!
Эй, унта путса пĕтнĕ карап мĕлкисем!

...Шултăрканă. Кивелнĕ. Мĕскер вăл шырать?
Мĕншĕн халь те карапăм путмасть?
Ту пекех çӳллĕ хумлă тăварлă шывра
хама хам путармашкăн епле май тупас?

*1956*

## ШУХ ÇИЛ УЛАТЬ

Шух çил улать, шилет, макрать.
Яш çеç ача çулпа пырать.

Çилсем усал çав çур килсен.
Чуна касать сасси çилсен.

Улатăр çил. Инçе-ха кил.
Кĕскелтĕр çул, юрлар эппин.

Хаваслине, мухтавлине,
салхуллине, хуйхăллине:

«Шăпамçăм ман, çут çăлтăр ман,
мĕн-ма хальччен эс ăнăçман?»

Кулса ярать... Çил çеç улать...
Çав яш ача вăл эп пулать.

«Çĕршыв илемлĕ, сарлака.
Хăçан-ши кайăп салтака?»

Шух çил улать, йĕрет, макрать.
Яш çеç ача юрлать, юрлать...

*1956, март*

## КЕРИЯ

Каяп тетчĕ, кайрĕ ĕнтĕ
пăхса курăнми çĕре,
мана тăратса хăварчĕ
вутăн çулăмĕ çине.

Керия, ĕккерия, кăммая.
Керия, ĕккерия, кăммая.
Кери кăмма, ĕккĕр кăмма,
керия, ĕккерия.

Шурă туфли, капрон чăлха
пулмасан та аптраман.
Савни çук, пулмин, ан пултăр,
савнисĕр те начар мар.

Кала, кала купăсна,
килтĕн-и-мĕн çывăрма?
Çӳçне савни пек туратăн,
çунтаратăн чунăма.

Ан çиллен, сана пиллетпĕр —
пурсăмăр та бойккă —
ӳсрĕлсен выртса çывăрма
пружиналлă койккă.

Леш касра кермен ларать.
Вăл, Хĕветĕр, сан валли.
Çийĕнчен тата сĕнетпĕр
хĕр вăрлама самолет.

Шурă çăмха, шурă çăмха,
кăвака пĕветер-и?
Юрăсене-ташăсене
çакăнпа пĕтерер-и?

Керия, ĕккерия, кăммая.
Керия, ĕккерия, кăммая.
Кери кăмма, ĕккĕр кăмма,
керия, ĕккерия!

*1956*

## ПУЛĂÇ

Ĕнер мар, виçĕмкун
экзаменĕ çăмăл ун
пулнă.
Тепри те çăмăлран
вăл тытать çырмара
пулă.
Халиччен çӳресе
пĕрехмай шапасем
лекнĕ.
Пулли вĕтĕрех,
атми çĕтĕкрех,
тет-мĕн.

*1956*

## ЫРАШ ПУССИ

Хум хӑвалать ыраш пусси.
Вӗҫӗ-хӗррисӗр симӗс тинӗс
тӑрасшӑн мар ирпе те тикӗс.
Тӑпах тӑрсан мӗскер пур-ши?

Ыраш ларасшӑн шӑркана.
Тен, ҫавӑнпа вӑл пӑлханать-тӗр.
Хумсем куҫа та, хӑлхана та
хуплаҫҫӗ тунсӑхпа кӑна.

Ҫак пӗтӗм тинӗс — тунсӑх, тунсӑх.
Анчах ҫав тунсӑх мӗскертен?
Ма юлтӑм эпӗ лӑпкӑ кунсӑр
вунпиллӗкри яш ӗмӗрте?

Инҫет йӑсӑрланать кӑваккӑн.
Кӗреп сукмак ҫине кӗҫех.
Сукмакӗ ансӑр, кукӑр-макӑр,
кашни кукрийӗ — шур чечек.

Пӗр ывӑҫ туллиех татам-и,
ҫумне хушам утмӑлтурат.
Класра ыр хӗрача пур — Таня, —
ҫитсессӗнех чечек парап.

*1956*

## ÇУМĂР

Çăвать ăш çумăр тĕттĕмре.
Тăратăп пÿрт кĕтессинче.
Тавралăх лăпкăн тĕлĕрет
чăштăртату асамĕнче.

Такам ларать пекех лере
шухăшласа, анасласа.
Мансан-мансан, темре пĕрре,
илет пек ассăн сывласа.

Ку — кÿршĕ пахчара çÿçенчĕк
шур хурăн лăстăр! силленет.
Ман çÿç те, çурăм та йĕпенчĕ.
Чармасть-ха август çумăрне.

Ытла та шăпăрт ял урамĕ...
Туятăп пĕтĕм ÿт-пÿпе —
гитарăн ăнсăртран вăраннă
аккорчĕсем янраççĕ пек.

Урамăн шăплăхне вулатăп
тăвата, пилĕк, улт сехет.
Чун каннипе лăштах пулатăп.
Çăвать ăш çумăр çĕрĕпех.

*1956*

## ТАМАРА

Тамара вунултта çеç кайнă.
Тамара ырă та чипер.
Ăна курсан, атьсем аптранăн
тăраççĕ — унăн куллипе.
Тата куçĕсенчен хăраççĕ.
Çут çăлтăр унăн куçĕсем.
Усал çынсем элек сараççĕ
Тамарăн чыслăх çук тесе.

Пĕрре, хирпе утса пыруçăн,
çулла, каникулра чухне,
кĕтмен çĕртен чĕри яр-уççăн
каларĕ хăйĕн сисĕмне.
Çунать хĕр. Пĕлтерес темест.
Ĕçре те, вăйăра та ун
ытла та сăнĕ халь салху.
Хуйхăллăскер пĕр ним чĕнмест.

Тамара, эс кама-ха саврăн,
эс камшăн çав тери çунан?
Ялан-çке шухăш шухăшлатăн,
йăлтах çухатрăн куллуна?

*1956, сентябрь*

## ХĔР ТАШĂÇ

Аксу Уланови, сан ташшуна,
сан грацине мухтав юрри юрлатăп.
Ма вĕренме каймастăн, ма пурнатăн
çак Аксура? Мĕн ашкăнан?

Хальччен хăв талантна туйса илмен-и,
е урăххи пӳлет сан ĕмĕтне?
Ăçтан эс çакăн пек искусствăна вĕреннĕ?
Ăçта пăхса ӳстернĕ пӳ-сине?

Кашни хусканăвнах хĕрӳллĕн юрататăп.
Курса тăранаймастăп чăрсăр илемне.
Яту калаçура та, юрăра та
пĕр пек маттур, хăюллă илтĕнет.

*1956*

## ЮМОРЕСКА

Чӗнтерчӗҫӗ хӑлхасӑра правленине.
Калаҫҫӗ: «Ма, Петров, чармастӑн ӗнӳне?»
Шалт тӗлӗнет Петров тени:
— Мӗн йӗннине? Мӗскер йӗнни?
— «Йӗннине» мар, ӗне, ӗне!
Петров пушшех те кӳренет:
— Ҫук, ҫук, ав ыйтӑр хӗрӗмрен,
ухмах-и арӑм хӗнеме.

*1956*

## БРИГАДИР

Эрех мĕнне пĕлетни эсĕ,
çавна ыйтасшăн эп санран.
Вăл пыл-и? Çу-и? Ма чĕнместĕн?
Сиплет-и йывăр сурантан?

Эрех тени сана пит савнă,
ху та юратнă эс ăна.
Сана мĕн чухлĕ вăл «хăтарнă»
тырпул пухас хĕрӳ кунран.

Хирте колхозниксем кĕтеççĕ:
«Ăçта-ши пирĕн бригадир?»
Эс пур йăваннă та пĕлместĕн:
те каç çут тĕнчере, те ир.

*1956, сентябрь*

## БРИГАДИР КАЛАÇĂВĔ

Помошнĕк манăн сар ачаччĕ,
çитетчĕ кирлĕ çĕрсене,
ĕçе тухман çĕртех çыратчĕ
арăмăма вăл ĕçкунне.

Ачи ачахчĕ. Виç çул ларнă
пĕр саккăрмĕш класра анчах.
Юлашкинчен шкултан та тарнă,
вĕренĕве савман пачах.

Чăн мăнтăр пируссем ĕметчĕ.
Татман ăна эп укçаран.
Эрех ĕçме манран вĕренчĕ,
çаратăва — каллех манран.

Ăн пурччĕ çав ачан. Сиссессĕн
ăна-кăна, сăмах сарман,
тулли лава киле кĕртсессĕн —
пăтран ытла нихçан ыйтман.

*1956, сентябрь*

## ЭХ, ЭНТРИ, СУХАÇĂ...

Эх, Энтри, сухаçă, намăс мар-и? —
трактăру каллех хуçасăр çĕрĕпех.
Чирлĕрен-и? Ӳсĕртен каймарăн
хаклă вăхăта ниме хумасăр. Эх...

Сакăр ял пĕрлешнĕ — мăн хуçалăх,
анлăран та анлă уйĕ-хирĕсем.
Машшинсем çине шанать халь халăх,
вăл тăрать сана та ĕненсе.

Ир çерçийĕ – тутă, ваттисем каларăш.
Пукравччен кăна кĕрхи çĕртме паха.
«Анкала» ачи, инкек кăлармăш,
эс мĕнле питпе ялйыш çине пăхан?

*1956*

## ÇĔРЛЕХИ ХИРТЕ

Çӳлте кĕрлерĕ аслати.
Хаяррăн пĕлĕтсем шăвать.
Асса çӳрерĕ çил ачи,
пушшех вăйлатрĕ шăв-шава.

Хум-хумăн пĕлĕтсем иртсен,
вăтанчăк çăлтăрсем курнать.
Хирпе пыратăп вĕçтерсе.
Малта пĕр хăйçути çунать.

*1956, сентябрь*

## ЧИРЛĔСКЕР

Куçне уçать кăна Çтаппан,
ярса тытать тулли стакан.
Пелкет хăй: «Чирлĕ, гриплӑ эпĕ,
спиртпа анчах ăна сиплетĕп».

Çимесĕр-мĕнсĕр ĕçнĕрен
Çтаппанăн пуç хытах хĕрет.
Тăсса ярать хуткупăсне:
«Савни, манаймăп сан тĕсне!»

Пуçлать кулма та шавлашма.
Сăмси çунать — писев кăшман.
Ĕçет, выртать, тăрса ларать,
каллех ĕçет, татах выртать.

Тăранчĕ? Çук! Каçпа каллех
сĕтел çапсах ыйтать эрех.
Йĕрте-йĕрте чĕлĕхсене
тухса сĕнккет лавкка енне.

Пелкет хăй: «Чирлĕ, гриплӑ эп,
спиртпа кăна мура сиплеп».
Сысна вăл, тет кашни çынах.
Çапла. Çтаппан — сысна. Чăнах!

*1956*

## НАÇТАПА НАТТЯ

Наçта тĕл пулчĕ Наттяна,
хăртса пĕтерчĕ йăлт ăна:
— Кĕççепит, путсĕр, якăлти,
карма çăвар, пăлтти-палтти,
тĕнче кахалĕ, йытă чунĕ.
Ванюк ман, имĕш, унăн кумĕ.
Тата ĕçтер, ĕçтер, сăйла,
калаç, суйлан, пĕлтер яла,
Наçта хĕнет, те, Ванюка
чăкăлташса пура-çука!

Хăртать Наçта, хăртать кăна,
питрен сурать вăл Наттяна.
Наття, калас пулать, сурмарĕ.
Наття вăл лăпкăрах хĕрарăм.
Куçран тĕллерĕ Наçтана.
Наçта сасартăк чарăнать,
чĕнме ниçтан сăмах тупмасть.
Татса хурать Наття-кума:
— Эх, çын эс... Ав аран-аран
Ванюку тухрĕ лавккаран.
Кăшт путлĕрех пулсассăн ху,
тумлам ĕçес çук упăшку.

*1956*

## АВЛАНАС ТЕСЕ ÇӐРЕТ

Авланас тесе çӳрет Санькка,
хӗр шырать, ялтан яла танккать.
Авланмашкӑн çӑмӑл теççӗ те,
йывӑр-çке Санькկашӑн питӗ те.

Ак дояркӑна вӑл ал сӗнет.
— Эс, Санькка, услап, — хӗр хирӗçлет, —
путек пек кӑтра пулсассӑн та,
юратма май çук сана чунтан.

Пӗр кахал та мӑнтӑркка пике
чуптуманшӑн Санькկана тиркет.
Куç хывать вӗреннӗ хӗр çине:
«Авланатӑп пулӗ халь, тинех».

Леш вара учительре ӗçлет.
— Вӑхӑт çук качча тухмашкӑн, — тет.
Авланас тесе супса çӳрет Санькка,
хӗр шырать, ялтан яла танккать.

Тавраштех пӗлеççӗ лӳппере.
Нихӑш ял парасшӑн мар хӗре.
Ӑнланса илсенччӗ вӑл çакна:
кам хӗр патӑр ӗнтӗ наяна.

*1956*

## ВĂРМАНТА

Пит селĕмскер, тыткалама ункайлă,
йĕлме рычак, каятăп, сывă пул.
Юлашки кун тытать ман алă
сана паян, юлашки кун.

Эп йăтрăм ĕхлетсе, ансат çĕнесшĕн,
хăлаç çитми кӳпшек пĕренене.
Тумарĕ лӳ! те, мур илесшĕ,
сурса çеç хучĕ вăй çине.

Эс çавăн чух мана айăкăмран тĕртейрĕн,
тара шăла-шăла канма ларсан.
Çĕкленчĕ пĕрене, мĕн тейĕн,
çĕн тусăмпа харăсласан.

Сыв пул, рычак. Сентябрь вĕренме чĕнет, ав.
Рычак, класа кĕртмеççĕ çав сана,
сайра-хутра кăна сĕнеççĕ,
шкулта ĕçсем пулсан кăна.

Эп кайнипе пĕртте кулянмăн, тетĕп.
Шарт! хуçăлсан рычак Мĕтри пиччен,
паллах, эс Мĕтрипе тĕртетĕн.
Мĕн тутăр-ха Мĕтри пĕччен?

*1956*

## АКСУ ШКУЛНЕ

Çак шкул хавассăн пĕрлештерчĕ
пире пĕр туслă çемьене,
ыр сунчĕ, уçрĕ алăкне —
пĕлменнине нумай пĕлтерчĕ.
Виç çул, ак, иртрĕ сисĕнмесĕр
çак пĕртăван пек ушкăнра
хĕрсе вĕреннĕ вăхăтра,
кая тăрса юлас темесĕр.
Нумай та тĕрлĕ çын пур ман
çулсем иртсессĕн асăнма.
Кам чăтĕ-ха асне илмесĕр
Кирилловнан таса сăнне:
хаваслă ырă куллине
умран пĕртте ярас килмест вĕт.
Иван Степанч та — пирĕнте.
Пуçран вăл тухмĕ ĕмĕрте.
Никам манмашкăн шутламасть-тĕр
Рыжковăн янкăс сассине,
вăл икс, игрек тенине.
Ăçтан çав камите çын мантăр.
Чунпа кунтах юлатпăр эпĕр,
кайсан та урăх енсене.
Вутпа вĕрен чĕресене
эпир тăван çĕре пиллетпĕр!

*1956, сентябрь*

## КИНОРА

Хавасланса кино куратпăр
епле Макаренко пичче
вăрра этем туни çинчен,
куратпăр та... мансах пыратпăр.
Итле-ха, тусăмçăм Самарин,
тен, эсĕ ырă вăрă мар-и,
тен, эс те путлĕ этемех?
Эппин калам-ха тӳррĕнех:
Хохлов сан çывăх тус пулас —
ухмаххăн шăл йĕрсе кулать.
Кулать-и? Култăр. Мĕскертен?
Манран кулать, эп «хĕрлĕрен»:
ухмахсем хĕрлĕ юратаççĕ,
курсассăнах кулса яраççĕ.
Çынна пĕрре тытса хĕнетĕн,
тепре... хуть виç хутчен хĕне,
анчах чĕркуçлентерейместĕн.
Хăвна час тавăрать, ĕнен...

*1956, сентябрь*

## ВĂЛ ÇЕÇ...

Клубра концерт курать,
чышса тултарнăн, халăх.
Таптать ура çине ура,
харкашнă сасă янăрать,
çитместĕ сывлăш сывламалăх.
Малта, чĕркуççисем çинче,
ача-пăча концерт пăхать.
Атьсен ĕречĕ хыçĕнче
тарланă халăх тарăхать.
Чаршав хыçне кĕрен тĕлте
пальтоллă, çĕлĕклĕ этем —
хăватлă саслă, çивĕч куçлă
хăй сăмсинчен те пысăк пуçлăх.
Кайра темле Куля кулсан,
ун сехрине илет урса:
— Сана мĕскер? Уллах-и ку?
Карма çăвар, шăплан, асту!
Çисе ярас пекех тинкерчĕ
теприн çине вут куçĕпе:
— Мĕн çухăран, пиçмен икерчĕ? —
шăлне çыртать вăл çилĕпе.
Пĕри — апла, тепри — капла,
тата тепри — шăплан-хуплан.
Ялта ăсли пĕртен-пĕр тейĕн,
вăл çеç, çак унтер Пришибеев...

*1956, октябрь*

## ИСТОРИН ПӖР ТАТӐКӖ
## (1956 çулхи октябрь)

Каллех, ак, тухрӗ вӑрçӑ шавӗ.
Лере, хӗвеллӗ кӑнтӑрта,
çунать Египет. Ун мухтавӗ
çут Нил аманнӑ кӑкӑртан.
Нил вутлӑ тӗтӗмпе хупланчӗ.
Нил çийӗн пин мотор кӗрлет.
Суэцшӑн акӑлчан тапранчӗ
француз-агрессорпа пӗрле.
Суэцшӑн харкашу пуçларӗç.
Суэц пит тутлӑ курӑнать.
Француз та çумлӑнах чуптарчӗ —
хӗвеллӗ çӗршӗн талпӑнать.
Агрессорсем каллех шутлаççӗ:
Египет пултӑр, теç, чура,
сар ылтӑн çутине кураççӗ
хаяр вутра, юхан юнра!
Анчах та!
Пулмӗ египтян
чура та лӑпкӑ мӗскӗн чун —
çӗнме çитет хӑвачӗ ун.
Ӗç тухмӗ, сӗмсӗр акӑлчан!
Египет ирӗке юратрӗ.
Египет юншӑн хирӗнмест.
Египет пурнӑçшӑн тӑрать вӑл.
Пит йывӑр пурнӑçа çӗнме.
Памасть Египет çӗрсене,
вутчуль вӑл хапсӑнан тӑшманшӑн.

Унпа пӗрле Мире сыхласшӑн
тӗнче мильярдлӑн ҫӗкленет.
Египет паттӑр ачисем
хӑватлӑ гвардие пӗрлешрӗҫ.
Мухтавлӑ юрӑсем кӗрлерӗҫ
вут-тӑвӑл вилӗме ҫӗнсе!

*1956*

## ШУХĂШ

*Асап килсен, хĕн килсен,*
*шухăшласа ларатăп...*

Пĕлĕт уйăха хупларĕ,
çил пуçларĕ выляма.
Тем сасартăк тыткăнларĕ
йывăр шухăш пуçăма:

«Ма ытла та ир ылханчĕ
пурнăç, — тетĕп, — аннене?
Ма халех чир-чĕр çыхланчĕ?
Тен, халех çĕре кĕртме?»

Тĕттĕмре пĕччен тăруçăн,
сасă-чĕвĕ çук пирки,
пуçăма çурать чарусăр
тĕксĕм шухăшсен тĕрки.

*1956, октябрь*

## НИ УНТА, НИ КУНТА

Вĕренес килмест юлхавăн, —
икĕ уйăх вĕренсе
миçе «иккĕ» илчĕ авă,
йăлăхтарчĕ шкул тесе.

Янтă çăкăр урăх çимĕ,
намăс, тет, ăна çиме.
Ĕç патне туртать чун имĕш —
тухрĕ кайрĕ ĕçлеме.

Амăшне те пăхăнмарĕ,
пăхмĕ шкул енне ача,
хĕрттерсех ĕçле пуçларĕ,
хуйхă çук халь ун пачах.

Миçе кун ĕçе çӳрерĕ —
пĕлме çук. Пуçне усать
çак «ĕçчен». «Ĕç95 тармĕ, — терĕ, —
вĕренмешкĕн чун туртать».

*1956, октябрь*

## ПУДИХИН ПЕТĔР

Хитре сăн-питлĕ,
яштака пӳ-силлĕ,
юратмалла этем, кăшт вĕçкĕнрех,
сăвва — тăшман,
юрра — юрлать каç-ирĕн,
çунать хĕрсемшĕн витĕрех.

*1956, октябрь*

## ШУРККАНА

Ĕçе çын майлă ăнланмастăн,
пĕретĕн анлă çамкуна.
Кăвак, хаяр ху, кăшкăратăн,
йĕркешĕн темĕн пит çунан.

Йăпăлтатас йăлу пур санăн.
Юлташ юлхавшăн тарăхан.
Ху пек «тĕп-тĕрĕс» каласассăн,
эс ху та маччана суран.

*1956, октябрь*

## ЛЕНА

Çынна хисеплемест, ачаш.
Ун кăмăлĕ çавтер начар,
киревсĕр. Мăн кăмăллă тек,
вăл — хăмпă, супăнь хăмпи пек.
Шуралă. Ĕçлемен нихçан.
Тумлам пĕлмест вăл пурнăça.

*1956, октябрь*

## АЛЬФИЯ́

Альфия́ эс, çамрăк Аля,
чип-чипер тутар пики,
каласамччĕ, мĕншĕн халĕ
урăхлантăн, мĕн пирки?

Сăвăç тенипе... мĕн эсĕ...
Ма йăлтах ыйтса пĕлен:
«Начар паллăсем илмест-и?
Вырăс чĕлхипе мĕнле?»

Мĕншĕн çав тери сăнатăн?
Ма сăнатăн ман сăна?
Эпĕ куртăм... эп ăнлантăм...
Куçусем вутла çунаç.

*1956*

## ЯШ ВĂХĂТРА

Çĕтсе кайсассăн, шурлăха та
хăш чух пырса лекен ансат.
Тен, эпĕ йăнăшсем тăватăп
нихçан тепре йăнăшмасса.

Пĕлеп: çĕршыв хăвачĕ — халăх.
Пуласлăха васканă май,
эп çамрăклах, йăлтах тасалăп
кăлтăксенчен, хал çитĕ ман.

Вăй парĕ çирĕплĕх. Ăна эп
тӳрех шанманччĕ пули те,
тутантăм та, пыл пек, ăнлантăм:
чĕнет малашлăх, илĕртет.

Эп талпăнăп унта çитесшĕн,
эп çунăп ĕçшĕн çеç унта.
Вил чунлă пушă этемсемшĕн
мана салху та, намăс та.

*1956*

## ЮЛХАВÇĂ

Физик «лайăх», «ырă» пирĕн.
Ун урокĕнче пит ирĕк
пурăнмашкăн ĕмĕрех.
Çутă пуç чее. Чухлать вăл...
Юмахлать. Кулать те авă.
Вăхăт çăмăл ирттерет.
Палкама пуçлать те вĕççĕр,
пĕлейместĕн: хăшĕ вĕçĕ,
хăшĕ пуçĕ.
Ку — мĕскер?
Ответ уçă та кĕске:
вĕрентмест... ыйтмасть этем
нимĕскер те халь пиртен.

*1956, октябрь*

## САХАР ТА ХЁЛИП

Сахар — саккăр, арăмĕ — тăххăр,
ачи-пăчи — вуниккĕ.
Çăттăр-çаттăр, ăххăм-кăххăм,
Сахарĕ вут-хĕм иккен,
арăмĕ вĕлтрен иккен.
Арăмь çăкăр кăларать,
Сахарĕ сарайĕнче,
хĕвел тухса сарăличчен,
çичĕ карта пăх хырать.
Ачисем пит çăваççĕ,
тутлă кукăль ыйтаççĕ.

Хирĕç Хĕлип хĕлĕпе
ӳсĕр çӳрет кунĕпе.
Урлă хăлха, чукун пуç,
бронза хырăм, тăхлан куç,
ухват ура, çирĕк шăл,
çӳçĕ-пуçĕ тем тăршшĕ.
Çарапакка ачисем,
хăрăм кăна пичĕсем.
Арăмь сыв мар, суя мар,
тухса кайнă Заряна.

*1956*

## МАЯКОВСКИЕ АСĂНСА

Ун чапĕ-мухтавĕ ĕмĕртен ĕмĕре
кĕрлет-янăрать пур тĕнченĕн.
Перо та штыкпа пĕр танах çĕмĕрет
хурçă чĕреллĕ улăп этемĕн.

Кам путсĕр, суя, харампыр пĕтĕмпех,
кам пысăк сиен çĕн çамрăк ăрушăн,
çавсемшĕн тискер — Маяковский, хăрушă,
çавсемшĕн поэт шеллеми вилĕм пек.

Маяковский халь те аслати сассипе
чĕтретет буржуя, лăскаса пăчăртать,
тӳсми хĕмпеле çунтарать, тĕп тăвать
кăварлă хаяр сăвăсен вучĕпе.

Поэзийĕ унăн — хăватлă маяк
кашни таса чунлă-чĕреллĕ этемшĕн,
социализмшăн, миршĕн тăма пĕрмаях
кăтартать çутатса тĕрĕс çул — пур тĕнчешĕн.

Хăватлă поэзи... Хыпса унпала,
çĕнтересшĕн çунать кашнин чунĕ;
çуллен-çул пысăкрах утăмсем утăмлать
коммунизм патне совет çынĕ.

*1956, ноябрь*

## ЫЙТРĔ CĂВĂ

Шур куян чупать тет хăвăрт...
Голубева ыйтрĕ сăвă.
Хăвăртрах, тет. Эх, аллах!
Мĕн тесе-ши çырмалла?

Те эс Аля, те Маруся?
Илтĕнмест, кала-ха уççăн.
Э-э, апла иккен ав: Ольга.
Итлесе кăна халь ĕлкĕр.

Те хирте, те улăхра
пĕр черчен чечек çиçет.
Лачакаллă Аксура
Ольга ятлă хĕр ӳсет.

Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм
тин çеç пиçнĕ хуплу пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура
атропин тумлатнипе.

Ахăлтатса кулнă чух
лăнчăр-ланчăр силленет.
Юрласа ярать те, ух! —
пĕтĕм чунăм çӳçенет...

*1956, декабрь*

## ПАРТА АЙĔНЧЕ ÇУРАЛНĂ САВĂ

Эй, парта айĕнче çуралнă сăввăм,
ан кăшкăрсам, ан илттĕр пĕр никам.
Илтсессĕн юлаймастăн сывă,
кĕрсе ӳкетĕн хурлăха.

Сана чăр-чар! чĕрсе лап-лап! таптаççĕ.
Куратăн-и, мĕн чухлĕ сан тăшман.
Малта — Цыфаркин, икс тупаканçă
кирек епле таса япаларан.

Санра та шырĕ икс, игрек, зет.
Мана лектерĕ уравнени капкăнне,
лектерĕ те кăларĕ тинкене.
Ах, пĕтрĕмĕр! Ах, çитрĕ, хирĕçет...

Ытти тăшман вăл пирĕн — пĕтĕм класс.
Кунта пире ытла та шăрăх, тăвăр.
Ан кăшкăрсам, ан хирĕç, ан калаç,
о, парта айĕнче çуралнă паттăр сăввăм!

*1956*

## КАÇХИ КĔЛĔ

Эй, турă, эс пăру мар, этеме юрататăн.
Эп паян сăмахпа, ĕçпе, шухăшпа çылăх турăм.
Каçар эс мана, çырлахсам, эй, турă,
сыхла та чуна эс, упра та,
тăнăçлă-канăçлă ыйхă пар,
усала-тĕселе хăратма ангел яр.
Каç выртсан, канлĕх кирлĕ.
Ир тăраймăп — çул килнĕ.
Эй, турă, ан пăрах,
пăрахсан та, хытах ан пăрах...
Эпир сана хушăран çеç манатпăр,
асилнĕ чух аслăласа мухтатпăр.
Ашшĕн, ывăлин, çветтуй сывлăшин
ячĕпе — аминь...

*1957*

## ШАРАДА

Пĕрремĕш пай шап-шурă манăн,
вĕçет те çаврăнать çерçи пуç пек шултра.
Эсир йĕлтĕрсене тула хăварнă,
пулаççĕ аяла. Тупайăр-ши ыран?

Ман тепĕр пай — алфавитра хыçалта мар,
малта та мар.
Ик пай пĕрле — йĕртетпĕр çын чунне,
е çын нихçанхинчен хаваслă ун чухне.

(Юр + ă)

*1957*

## О, ПОЛОНЕЗ, ОГИНСКИЙ ПОЛОНЕЗĚ...

Хĕрӳллĕ пархатарлă меланхоли,
çап-çамрăк хĕрача сăмахĕ,
аманнă революци, çăткăн тăшмансем,
тăван пейзаж, аннеçĕм Польша,
хуçăк кăмăл хуйăха парăнманни...
О, полонез, сывпуллашу кĕвви!

*1957*

## ТУПМАЛЛИ ЮМАХ

Кĕпер çинче пуп тăрать,
шăрап! тесе кăшкăрать.
Тавай, тавай, шăр ара,
аван пулĕ мухмăра,
хуравлать стакан тытса
мелке пуçлă çĕтĕк сас.
Çакă икĕ çын камне
пĕлет кӳршĕ Кулине.

(Кулине улăшкипе
сăмавар.)

*1957*

## ПАРОДИ

Çиçме тата кăшт май пур чух
ятлисене такмак пиллетĕп.
Мана пур лăпăрти те — чух.
Ытлашши мар. Пĕлетĕп.

Сан пĕчĕкçеççĕ талантна
умра куратăп эпĕ.
Çыратăн хывăхлă ытла.
Туяп, çапах тӳсетĕп.

Чиртен хăп çеç, пуçла утма —
сана никам палламĕ.
Сан ансăр, курăклă сукмак
нихçан та такăрланмĕ.

*1957*

* * *

Ҫӑнах-ши вӑл, ача чухне
эпир ҫӑлкуҫ пек таса чунлӑ,
уйӑраймастпӑр ниепле:
кам чӑн-чӑн ҫын, кам хура юнлӑ.
Ҫӑнах-ши вӑл, нумай-нумай
ун чух тӗнчен ыр тӗлӗнтермӗш.
Ачалӑх, ҫутӑ сан пӗлтерӗш.
Хӗрхен мана: ан кай, ан кай.

Юлсам, ачалӑхӑм, манра
унчченхиллех, ним улшӑнмасӑр.
Ахаллӗн эп кашни ҫынра
начар енне ҫеҫ курӑп сансӑр.
Ҫунсам, ҫулсем васканӑ май,
каҫхи пӗртен-пӗр ҫӑлтӑр евӗр.
Е пул чарусӑр ҫил кӗрлевӗ,
пурӗпӗрех: ан кай, ан кай.

Ҫынна эп  юратмастӑп мар,
анчах тишкӗререх пӑхатӑп,
турра хумастӑп эп ӑна.
Кам мӗнлине таҫтан туятӑп.
Эп йӑнӑшатӑп пуль самай,
ытлашшипех пуль... Чунӑм манӑн
иккӗленӳллӗ ҫулӑмланнӑ.
Ачалӑхӑм, ан кай, ан кай!

*1957*

## ТУРТАÇÇĔ

— Сăвăратăн?
— Сăвăрап.
— Мĕн ку: «Спорт» е «Север»?
Пар-ха хăвăртрах, туртап,
кăшт чĕрем сиплентĕр.
Пар халь шăрпăк.
Чим, пул шăпăрт...

Урисене явса ларса,
ик «çамрăк» ĕмрĕç пируса.
Пĕри, тен, пур-тăр вуннăра,
тепри унтан кăшт аслăрах.
— Ăçтан эс илтĕн пирусна? —
асли ыйтать туртсассăн.
— Ăçтан илетĕп ăраснах?
Атте парать «сыпсассăн».

*1956, ноябрь*

## ВĂРМАН

Хумханса ларать патварран —
пуçĕ хытă хĕрнĕ.
Юр юрлас текен чарусăр
шухăш пынă кĕнĕ.
Ан кашлаччĕ, сĕм вăрманăм,
ан шавла, тăванăм,
эп юрра инçе хăварнă,
пĕтĕмпех хăварнă.
Тĕттĕмре хăруш ахлатрĕ,
тарăхрĕ, кĕрлерĕ,
итлемерĕ, ăнланмарĕ,
чарăнас темерĕ.
Вăйлă çумăр чăшăр-чашăр!
чашласа çӳрерĕ.
Сассипе чун сӳ! сӳлетрĕ,
сивĕнчĕ чĕремĕм.
Çумăрлă сукмак — çап-çутă.
Кăмăл тĕксĕмленчĕ.
Çывăхрах кисренчĕ-ӳкрĕ
темĕн эсремечĕ.
Малалла ярасшăн мар-и,
ахăрать хăватлăн...
Лăплансамччĕ, сĕм вăрманăм,
ан шавла, тăванăм.
Юрă ман кунтах-мĕн пулнă,
ачалăхăм — юлнă.
Çаврăнчĕ, çуталчĕ кăмăл,
чĕререх-мĕн юррăм.

*1957*

## МАНĂН ТЫМАР

Чулпалăкçи — ял çумĕнчи хĕвеллĕ çурутрав.
Çак çĕр лаптăкĕнче пăлхар-асаттесем канаççĕ.
Чул палăксем кунта чăнах та пит нумайччĕ.
Ача-пăча — килеттĕмĕр тавра чупмашкăн çаруран.

Чупсан-чупсан, тантăшсенчен инçе кайса,
лараттăм çырана, путаттăм шухăша.
Куçа кăштах хупсан, чуна йӳле ярсан,
вуншар хăрушă юланут иртетчĕ шăхăрса.

Вăрмансенче кĕрлетчĕ юнлă вăрçă,
тутар-монгол хуплатчĕ пĕлĕт пек.
Пĕр йĕкĕте вунпиллĕкĕн хăваççĕ.
Тен, йĕкĕт — ман тымар, мăн асатте?

Халь юлнă пĕр чул çеç. Ыттисене салатнă
килкартисем сарма, тумашкăн мунча чуль.
Пăлхар асаттесен çĕршер çулсем сăваплă
упраннă шур масарĕ халĕ çук.

Тен, тăлăх чул мăн асаттен тăпри?
Хăй пĕтнĕ чух, тен, инçетре мана вăл курнă?
Паллах, ман асатте! —хастар та чухăн пулнă,
çут ирĕклĕх ун пулнă пур тупри.

Таса чулсемлĕ çурутрав çеремĕ
пурнать чĕресенче ачалăхпа пĕрле.
Ачалăха нихçан нимскер те сӳнтереймĕ.
Апла тума мана хама сӳнтермелле.

*1957*

# Шкул вальсĕ



## АЧА ЧУНĔ

*Ача пек ирĕклĕ пуласчĕ.*
БАЙРОН

Ун чух шур лĕпĕше курсан та
кăртах сикетчĕ ман чĕре.
Çырма та, хырлăх та, çаран та
ачалăхра илемлĕрех.

Хĕвел кулсан, кулса яраттăм.
Хĕвел ансан вăрман хыçне,
самантлăха сулхăнланаттăм,
сăнаттăм уйăх тухнине.

Хĕп-хĕрлĕскер тухса çитсессĕн,
каллех пуçлаттăм савăнма.
Киле кĕрсен, яшка çисессĕн,
çитетчĕ вăхăт çывăрма.

Епле халь пурăнăç хавассăр.
Ача чухне вăл туйăнман.
Эп пĕчĕкчĕ, эп ăнланмастăм.
Тепре ача пуласчĕ ман.

*1957*

## ИДЕАЛ ШЫРАСА

«Нумая хапсӑнса юлатӑн-ха пӗрресӗр», —
витӗмлӗн хӑратрӗ кӳршӗ хӗрачи.
Эй, Валя, ҫын чӗрине пӗлмесӗр
ҫав терех шеллевсӗр хӑртаҫҫи.
Хӗрсенче эп, санра мар, каҫар, тархасшӑн,
идеал шыратӑп пикенсех.
Сӑнӗпе хӑйсем чӑн пикесем,
чунӗпе — айван, ҫапах чике тӑршшех лартасшӑн.
Кашнинех вулатӑп сӑвӑсем.
Хуть пӗри, пӗри хуть ӑслӑн итлесенччӗ!
Пӗр каяп вӗриленсе, пӗр сивӗнсе.
Сӑввисем-ҫке чи лайӑххисемччӗ.
Шухӑш-ӗмӗт иксӗлмесӗр эп пӑрахмӑп
шырама вӑл каттӑршнӑй идеала.
Пулмаллах. Пурах вӑл. Ыр-сывах-тӑр.
Тупӑнмасть кӑна. Ак япала!

*1957*

## КĂМĂЛ

Уйăх карталаннă.
Пĕлĕтсем кăтра.
Эп, Анюта-Анна,
тăлăх сан патра.

Эп кунтан каясшăн.
Ан ыйтсам: «Ăçта?»
Эп çултан аташнă,
килнĕ йăнăшпа.

Мĕншĕнне пĕлместĕп,
пĕтрĕ кăмăл ман.
Шутласассăн, эс те
суйнă, юратман.

Эс те тăлăх, Анна,
çакă вăхăтра —
уйăх карталаннă,
пĕлĕтсем кăтра..

*1957*

## ШКУЛ АЧИН ЁМĔЧĔ

Чĕремре янрать пĕр юрă.
Юрăпа пĕрле тухать
уçнă çĕрсенчи çӳл курăк,
хăмăш пек тыр пуç ухать.

Çавă юрă питĕ ырă.
Хамăн та юрлас килет.
Юрăпа нихçан та ырмăн —
тăрăшан, хавас ĕçлен.

Чун хавалĕ манăн чиксĕр,
ёмĕт пысăк. Кружокра
шкул атьсем, эпир, вуниккĕн,
вĕренетпĕр трактăра.

Эпир те час, ак, пыратпăр
çавă çĕнĕ çĕрсене,
чаплăн юрă янрататпăр,
çĕнсе йывăр ĕçсене.

*1957, январь*

## АННЕ ПАТНЕ

Çилсем юрлаççĕ пралуксем çинче.
Тулта — куçпуç уçмалла мар тăман.
«Ай-яй, хуплать. Лăпланмĕ кĕçĕрех.
Епле çитсе килес-ши леш вĕçе?
Аванччĕ те... хыпар пĕлсе тăма».

Çак самантра ачу килсе кĕрет.
Пăхсан — паллаймăн, чисти шур упа.
— Эх, ачăпчу! — тен эсĕ. — Чим, шаккан.
Каллех пĕччен пуль-ха? Мĕн нушупа
памастăн канăç ешĕл шăмшакна?

Хывса хуратăп йĕп-йĕпе тума:
— Аннесĕр пĕлейместĕп пурăнма.
Ху леш вĕçе тата мĕскер тума,
мĕн нушупа, пуçтарăннă кайма?

...Мĕнех калайăн, тĕрĕс ку, чăнах:
анне патне магнит пекех туртать
вунтăхăр çухрăмри вăтам шкулта
юлашки çул вĕренекен çынна.

*1957*

## ВИÇĔ СĂВĂ

* * *

Çиçсе иртсессĕн
çут тĕлĕк пек ачалăх
йăлл! çиçĕм евĕр,
мĕнех курайăн-ши эс,
мĕн ыррине курайăн?

* * *

Санра, Тамара,
эп яланах тупатăп
çĕнрен-çĕн савнăç.
Сана пĕлмен пулсан, эп
салхулăхра вилеттĕм.

* * *

Чун-чĕререн эп
куштансене шеллетĕп
айван пулнишĕн:
пĕртен-пĕр кунçулне те
çын пек пурна пĕлмеççĕ.

*1957*

## КĔТЕТ Е КĔТМЕСТ?

Уйăх кичем пăхать мана.
Йĕпе юр çыпăçать пите.
Каяп ялтан эп Заряна.
Пĕччен эп, тăлăх эп хирте.
Уйăх кичем пăхать мана.

Часрах, часрах çитес тесе
васкатăп эп, çунатăп эп,
таттисĕр шухăш вĕçтерсе,
вăрçса юра та «тĕттĕме»,
часрах, часрах çитес тесе.

Сайра юр витĕр ан пăх эс
кичеммĕн ман çине, шур уйăх.
Кĕтет Тамара е кĕтмест?
...Эс, уйăх, эс тăкатăн хуйăх.
Сайра юр витĕр ан пăх эс.

*1957, январь*

## АЛĂКĂРТАН ПĂХРĂМ

Алăкăртан пăхрăм —
аллă çын.
Ан пăрах-ха, Маруç,
эп те çын.
Катăк пуртă та кирлех
хăш чух.
Тен, çĕнрен эп пулăп
сан тусу?
Тен, тарçу? Тен, мăшăру?
Вара
çумăнтан хăвма та
пултаран,
урăхпа сикме те
пултаран,
утланса ларма та
пултаран.

*1957*

## АМУР ХУМĔСЕМ

«Амур хумĕсем» баянист юхтарать.
Анюк Кришшаран пăрăнать ташăра.
Кĕвĕ юхни тухатать чĕрене.
Хĕр хулĕпе стенаран тĕренет.
Кĕвĕ... Ытла та сулăмлă кĕвĕ,
çепĕç, мухтавлă, тунсăхлă кĕвĕ,
кĕвĕ-кĕрлев.
Кунтан аякра, Тухăçри тайгара,
Амур-шыв çинче яш Ванюк матросра.
Чĕлĕх сасси çупăрлать чĕрене,
мусăк пулса хускатать чĕрене.
Кĕвĕ тĕрлет
курăнми тĕрĕ.
Ăшшăн калать хĕре çав тĕрĕ:
«Чăт, час килет».

*1957*

## УРÇА-КАЧЧĂ

Шав ташлать, йăл-йăл кулать
урçа-каччă Микула
каçсерен клубра çĕрле
çамрăк-кĕрĕмпе пĕрле.

Чалăш лартнă çĕлĕкне,
хывнă çапнă кĕрĕкне,
кирза аттăн кунчине
тавăрнă вăл çуррине.

Урçа-каччă Микула
ĕçнĕ сарă «анкала».

Микула авланнă иккĕ.
Микула çунать халь чиксĕр
авланас тесе тепре
çитес çывăх çимĕкре.

Шав ташлать, йăл-йăл кулать
урçа-каччă Микула...
Эй, асту, свинарка Нина,
Микула сана куç хывнă.

*1957, январь*

## КĔМĔЛ СЕРЕНАДА

Эп шик! шăхăратăп
çут кĕмĕл саспа.
Çухамăм шуралчĕ
сип-сивĕ паспа.

Пĕлетĕн-ши эсĕ
кам шăхăрнине?
Сисетĕн-ши, тусăм,
тусу кĕтнине?

Унтах эп, çав вăрттăн
юман патĕнчех.
Тавра — лăпкă, тăнăç
çут кĕмĕл тĕнче.

Çут кĕмĕл саспа эп
йыхрав шăхăрап.
Шăнмашкăн шăнман та,
санпа — ăшăрах.

*1957*

## ТАМАРĂНА

Хальччен сире усал тумарăм.
Каçарăрсам мана, Тамара.
Тен, эп сире хыт çиллентернĕ?
Тен, эп текех юлташ та мар?
Анчах эсир мана мĕн терĕр?
Эсир шантартăр тĕл пулма.
Сире çавтер эп йăлăхтарнă.
Çав териех начар-шим эпĕ?
Сире ахаль эп чăрмантарнă.
Калаçăр тетĕп-çке, тивместĕп.
Тĕл пулăр, курăшăр, калаçăр.
Тамара, эпĕ кӳлешместĕп.
Чĕрем кăна çав чарăнаймĕ
сире курсассăн хĕмленмешкĕн.
Лява маттур, Лява йĕркеллĕ,
Ляван мĕнпурĕ килĕшет.
Епле-ха музыка итлемĕр.
Мĕскер пăхас пӳ çӳллĕшне.
Татман, тет, пĕлĕт вăрăм çын та.
Мĕн лутрине пăхса тăрас —
илемлĕн кăкри çине ывтăн.
Сăнран хитре вĕт, сăтăра...
Тамара, тен, эп йăнăшатăп?
Сире, тен, хуйхă пуснă пулĕ?
Шанма та çук пур шухăша та.
Каçарăрсамччĕ, сывă пулăр.

*1957, январь*

## ÇУРХИ ÇИЛ

Каçхине тĕттĕмре
çил çӳрет, çил йĕрет,
манăн тус, Аксу çилĕ.
Уçă çил, тен, эс чирлĕ?
Мĕскер пит улатăн,
кама йыхăратăн?
Илтмест, çил — хăлхасăр,
асать хăлтăр-халтăр!
Эп тăратăп пĕччен
Тамуçсен умĕнче.
Тусăм, тус, Аксу çилĕ,
сан кама çилĕ килнĕ?
Кампа ятлаçатăн,
мĕскер пит улатăн?
Эп кĕтетĕп темччен
хăй çути умĕнче.
Ах, Тамуç... хура куçăм,
юрататăп сана,
сан хитре юрруна.
Сассу сан янравлă, Тамуçăм.
Чĕремрен уйрăлмасть
ху пекех чаплă вальс.
Тухас çук эс халь тин —
сӳнчĕ кантăк çути —
таврас çук савнăçа
нихăçан, нихăçан...
Каç. Çурхи тĕттĕмре
çил асать, тилĕрет,
манăн тус, Аксу çилĕ.

Уçӑ çил, тен, эс чирлӗ?
Мӗскер пит улатӑн,
кама йыхӑратӑн?
Анчах... çил хӑлхасӑр —
чупать хӑлтӑр-халтӑр!

*1957, март*

## МАРТ

Кăнтăр çилĕ лĕп те сулчă.
Хĕл тек патшара çӳреймĕ.
Нӳрлĕхпе çанталăк тулчĕ,
ту-сăртсем йĕпе çеремлĕ.

Акана колхозлă ялăм
çĕнĕ машшинсем кӳлесшĕн.
Çĕкленет-çке чун-хавалăм
хатĕр сеялка-сӳрешĕн.

Ав мăлатукпа шаккаççĕ
тимĕрçсем пĕр чарăнмасăр.
Хурçă вăкăрсем сас пачĕç
сыввăн,
паттăррăн,
хавассăн.

*1957*

## ИЛЬИЧ ТУНĂ ÇАР

Ильич тунă çар хăвачĕ
тĕлĕнтерчĕ тĕнчене,
тăрайми хуçса антарчĕ
хапсăнчăк тăшмансене.

Вутлă тăвăллăн, патваррăн
хура вăйсене сирет.
Совет Çарĕ — халăх çарĕ,
сыхлать ирĕке, мире.

«Çарĕ ма вĕсен хăватлă?» —
тĕлĕнеççĕ тăшмансем.
Тавăраççĕ пĕр сăмахлăн
ту-вăрман, шывсем-уйсем:

«Пирĕн нимĕн хапсăнмаççĕ,
ал йăтмаççĕ çын çине,
тăван çĕршĕн кар тăраççĕ,
аркатса тăшмансене.

Юншăн пирĕн хирĕнмеççĕ,
янтă ылтăн кирлĕ мар.
Ĕçлесех пурнатпăр теççĕ,
ирĕк пирĕн пурăнма».

*1957, февраль*

## ÇИЛ АЧИ

Кантӑкран шаккарӗ, шик! шӑхӑрчӗ, пӑхрӑм — çук никам.
Тӑхтаса та тӑтӑм юриех пӗр ӑстрӑм — çук никам.
Пиншака уртса пусма çине те тухрӑм,
чӑрмантарнӑшӑн вӑрçса та тӑкрӑм — çук никам.

Тӗлӗнсе те аптраса уттартӑм урама,
урамра та телефон юпи çеç, çук никам.
Шикленсе эп кайрӑм, эп пуçларӑм хӑрама.
Кантӑкран каллех шаккарӗç. Çук никам.

*1957*

* * *

Чĕреçĕм, канăçсăр чĕре,
санра ялан чăн юрату çӳрет,
анчах хăртать те типĕтет туссен бойкочĕ.
Йĕреп, йĕретĕп эпĕ, пĕлтерместĕп çынсене.
Аксу мана тăшман вăл пулса тăчĕ.
Ĕнер кăна-ха сăввăмсем маттурччĕ,
паян — выртать сăмах купи.
Ах, муза, ку — тупик, тупик...

*1957, март*

## ШКУЛ ВАЛЬСĔ

Иртеçсĕ ырă вăхăтсем.
Çулсем пит хăвăрт-çке шăваççĕ.
Чуна хурлантарать шкул вальсĕ.
Кĕçех тухатпăр вĕренсе.
Иртеçсĕ ырă вăхăтсем.

Çулсем пит хăвăрт-çке шăваççĕ.
Тĕллевĕм халь те уçă мар.
Мĕскер кĕтет-ши пуçăма?
Мĕнле-ши пулĕ ман шăпаçăм?
Çулсем пит хăвăрт-çке шăваççĕ.

Чуна хурлантарать шкул вальсĕ.
Ăна итлетĕн хăраса
эс те, çут куçлă хĕрача.
Тен, ыттисем те кăшт хăраççĕ?
Чуна хурлантарать шкул вальсĕ.

Кĕçех тухатпăр вĕренсе.
Ятлас тесессĕн те ятлаймăр,
мухтас тесессĕн те мухтаймăр,
курас килсессĕн те кураймăр
текех пире, учительсем.
Кĕçех тухатпăр вĕренсе.

Иртеçсĕ ырă вăхăтсем.
Вальс çеç иртмест, иртмест шкул вальсĕ.
Кĕрлет ачаш, маттур, хаваслă!
Мĕн виличчен чĕресенчен
çухалмĕç çакă вăхăтсем.

*1957, март*

## КРУЖОКРА

Урăх тек каяс теменччĕ
ташă-юрă кружокне.
Шуйттанах пуль çав иленчĕ —
мантăм мĕн шутланине.

Ӳкĕтлеп хама: ан ашкăн,
чарăн, чарăн çил хăвма.
Мĕн тăвас-ха, тур çырман
пĕррене кăна савмашкăн.

Кĕр-кĕрлет «Молдовеняску».
Ай, маттур хĕрачисем!
Мĕн тума юпа пулас-ха,
ташлама кăшт тĕшмĕртсен.

Ылтăн медаль кандидачĕ
Нина Плотниковапа
манăн çĕн роман пуçланчĕ —
йӳç шӳтпе, ăш кулăпа.

Эпĕ ӳкесрен хăрать-тĕр,
вĕçертмест куçран куçне,
ачалла кулса ярать те —
чун каfive ура тĕпне.

*1957*

## МАРТРИ ХĔВЕЛЛĔ ХИР

Çын умĕнче пулас темесĕр
чун тăвăрланнă вăхăтра
ăçта тухса чупатăр эсĕр?
Ăçта сывлатăр лайăхрах?
Уя тухса уйпа сулланăр
хĕвеллĕ, çиллĕ кунхине.
Çултан тухса хавас пускалăр
шак хытă хытнă юр çине.
Тӳррен ашса сукмак тупсассăн,
кайса пĕрмай вăрман енне,
курса йăпанăр юр тусанĕ
епле хир тăрăх юхнине.
Юхать вăл çырмана, яла...
Хир варрине пырса çитсессĕн,
вăрман патнех ан кайăр эсĕр.
Çаврăнмалла анăçалла.
Унта — юрпа хĕвел çути.
Унта, çӳлте, кăшт сăртарах,
ытла çап-çутах мар фонра,
силленчĕк хурăнсен утти!
Çак лăпкă, ырă сăнлăхпа
эсир тăванлăх пуçаруçăн,
тăрса юлатăр куçа-куçăн
куç виçейми тасалăхпа...

*1957*

## УЙРĂМЛĂХ

Сентименталлĕ ача мар,
лирикăлла ача,
кăмăлăма лăплантарма
санпа эп калаçап.

Жорж Санд та Сент-Экзюпери,
Теодор Драйзер та Ремарк.
Аван, аван... хăшĕ-пĕри.
Мĕнех вара, эп хирĕç мар.

Хемингуэй, Джек Лондон... Шеплĕ.
Анчах «Шекспир» теместĕн-çке,
анчах эс Лорка, Байрон, Шелли
таврашĕнчен çавтер инçе.

Çав чаплă уйрăм прозăра та,
чăн кирлине йăлт хуратса,
кирлĕ мара кăна куратăн —
сентименталлĕ хĕрача.

*1957*

## ТУСĂМ, ТУСĂМ

Эп санран тӳпене вĕçсе кайрăм,
эпĕ — савнăç юрри.
Эс мана тӳперен хăваларăн
те чăнах, те юри.

Эс манран кăн-кăвак тинĕсе туртса илтĕн,
эпĕ — парăслă кимĕ.
Кулянуллă ялан сăнăм-питĕм,
савнăçне эсĕ илнĕ.

Эс манран каçсене туртса илтĕн,
эпĕ — уйăх.
Халь чĕресĕр тăвасшăн эс питĕ,
манăн вăл — вутлă туйăм.

Унсăр эпĕ мĕскер?
Ху шутла.
Тусăм, тусăм,
эс мĕншĕн капла?

*1957*

## КАРМЕН

Эп йăнăшнă: эсĕ иккен Кармен.
Эп çуннă, эп ĕненнĕ, эп пĕлмен.
Эс çавă тутапах мана та, урăхне те
кăваррăн чуптумашкăн çӳçенмен.

Анчах эп Хозе мар. Калатăп эп: «Сан ирĕк».
Эп хурах мар, пуçкасан мар. Поэт.
Поэт юратура чарусăр çирĕп —
тĕнче пĕлменнине пĕлет.

Куçать çав сăлтавпа асамăçа вăл.
Вăл тухатсан — Кармен пĕтет, вилет.
Ун вырăнне çурхи чечек пек çамрăк
Джульетта
                поэта кĕтсе илет.

*1957*

## ÇУПКĂ

Çапла. Эп — вĕççĕр çăмăлттай,
мана çав кăлтăк чыс кӳмест,
балра сана çупни, чăн та,
этем картнех ларса пĕтмест.
Ыйтмашкăн пĕчĕк каçару
эп хатĕр пулĕ, тен, халех те.
Тен, сан чĕрӳ, сан çăвару,
чăнах та, чаракне пĕлет-тĕр.
Ай, чаплă çупрăм-çке сана!
Янтравлăн, çуттăн, тап-тасан.
Эс ăнлансамччĕ, эс курсам,
епле ман пуçăм усăнать.
Сана çупни
хама çупни вăл, ĕненсем.
Çынна кăшт тăн кĕрет, тет,
хĕнесен...

*1957*

## ХĂНАРА

Сĕтел çине сарнă сĕтел çитти.
Мĕнле хапăрăкра тĕртнĕ-ши?
Çак ыр çынсемпеле ĕçсе-çиме
мĕнле турă ларса çырнă-ши?

Сĕтелех те тулли яшка-çăкăр.
Сĕтел ури епле чăтать-ши?
Эх, ĕçетпĕр ĕçкĕ, ĕçетпĕр.
Пуçăмăрсем епле чăтать-ши?

Ĕçрĕм кăна, ĕçрĕм, ӳсĕр пултăм.
Ĕçкĕçĕ иккен эс, манăн пуç.
Выртрăм кăна, выртрăм, çывăраймарăм.
Шухăшлă иккен эс, манăн пуç.

Илĕп эпĕ алла сĕрме купăс,
тухăп кайăп аслă урама.
Сĕрме купăс хĕлĕхĕ ылтăн мар.
Ĕмĕр пĕрре пирĕн, иккĕ мар...

*1957*

## ТУРĂ ЧУРИ

Куншăн тур каçартăрах...
Яккăм — вуннăмĕш класра.
Яккăм çылăх пуласран
пĕтĕм чунĕнчен хăрать.
Унăн амăшпе асламăш
пуççапса пурнаç турра.
Пуççапмасăр.
Ним тăваймĕç.
Унсăрăн — «турри курать».
Турри «курчĕ-тĕк» — çухалчĕç:
Яккăм параймасть экзамен,
амăш (спекулянт) — çакланчĕ,
лекрĕ тамăка асламăш.
Лайăх мар-ха та пĕрмай
çын çинчен сăмах сарма,
ни клуба, ни урама
кăлармаççĕ Яккăма.
Пĕр юлташ та çук пуль унăн.
Вĕреннин те тулкки çук.
Пит айван çав Яккăм чунĕ.
Йăлт тĕп турĕ тĕшмĕш çурт.
Аннӳне кала-ха, Яккăм:
«Эс пĕтертĕн», — те, кала.
Авланаймăн та эс акă.
Ан пул ĕнтĕ тăмана.

*1957, март*

## СУМЕЛ ЙĂВАНĔ

Ял тени Йăвансăр мар,
тĕрлĕрен Йăванлă.
Пирĕн пур Йăван Сăрнай.
Ĕçекен Йăван вăл.
Хуплу Йăванĕ те пур.
Ку шӳтпе ят тупнă:
туй вăхăтĕнче хуплу
хĕвне чикнĕ тухнă.
Виççĕмĕшĕ — чи чапли,
тилĕлле чее чунли.
Вăл — Сумел Йăванĕ.
Вăл ĕçсе йăванмĕ,
ятлаçса ят тăвас çук,
чисти флюгер майлă:
е сарçу, е пăрăç, вут.
Пысăка халь кайнă —
кĕнĕ ларнă пуçлăха,
сăнне улăштарнă.
Çарататъ вăл халăха
тӳррĕн мар, ытарлăн.
Ик ялта ун пĕрер çурт.
Пур «Москвич» та унăн.
Мĕн кăна, мĕн кăна çук
çакă çăткăн чунăн.
— Бухгалтер кăна та, мел
ун пуйма ăçтан çитет?
— Ан шарла. Сумел. Сумел.
Тем кăтартĕ. Хăй килет.
Арăмĕпе пĕртăван
аптрамасăр вăл аптрамĕ,
хут çинчи Лукин Иван,
халăхри Сумел Йăванĕ.

*1957*

## ПОЭТ МАР СĂВĂÇ

Алăк хуппи шăлтăрт! турĕ, тусăм, тус,
поэт килет терĕн-им?
Ун чухне Парнас мĕн курĕ, тусăм, тус,
кун пекки унта пĕр виççĕ иленин?

Поэт мар-çке, турра шĕкĕр, сăвăç çеç.
Ĕмĕр тăршшĕпе — çӳретчĕ, халь — вĕçет!
Хăпартмаççĕ-çке ăна çавах çӳле.
Эсĕ, теççĕ, аялтах ĕçсе çӳре.
Эсĕ, теççĕ, лапамрах такмак кала,
гонораршăн урлă-пирлĕ пăхкала.

Çӳçĕ те чăлтах шуралнă та, пĕрех
такмаклать хастар — ачи пакартамас:
пуç усмасть вăл çамрăк чухнехи пекех,
хырăмне тытсассăн тутă — аптрамасть!

*1957*

## ПĔР ХĂЙШĔН ÇЕÇ

Пĕр хăйшĕн çеç пурăнакан çынна,
эй, пурнăç, тыттарсамччĕ катăк пуртă.
Юратура та хăйшĕн çеç çунать,
хăй сыв пулсан, савниййĕ хуть мĕн куртăр.

Чĕререн мар сире ыр кун сунни,
çунмасăр çеç юрлать вăл юррине те.
Нимех те çук ун чунĕнче чăнни.
Шанмастăп кулнине те, йĕрнине те —
калаçма мар, пăхма та йĕрĕнетĕп.

*1957*

## ПĔР РЕДАКТОРА

Хазĕр, терĕн, вăхăт çуккă манăн.
Тепĕр кун кĕместĕнччĕ-ши, жьанăм,
çавă ул, çук вăхăт, как ни странно...
Эп, ыран кĕме пулса, çапла шутларăм:

«Син, малай, чăн чăвашла не знаешь.
Тутарла та темех мар, товарищ.
Вырăсла — Çитăркка пек суяешь,
итлесессĕн, ăнланать сахалăш.

Должность хушнипе тытатăн сăвăсем те.
Сăвăран эс, сăвăс пек, юнне ĕçен те
хаçатра çапан. Мĕн-ма чунна çиетĕн?
Лучше ан кăлар ăна совсем те...»

*1957*

## ТУЙРА

Эпĕр — Маруçпа Якур —
нихçан маххă памăпăр:
ĕçлеме те халсем пур,
ĕçкĕре те пит маттур.

Çӳлтен вĕçсе анаканни
улăм пĕрчи мар-ши вăл?
Ура хуçса ташлаканни
манăн мăшăр мар-ши вăл?

Сак айĕнче витре,
ун хăлăпĕ хитре.
Пăхăр-халĕ ман арçынна —
метр çурă сикрĕ.

Ылтăн — ытарайми.
Кĕмĕл — шăтарайми.
Икĕ тантăш ташлană чух
курса тăранаймăн.

...Туя каяс хаваспа
качакана хупмарăм.
Кайран килсе пăхрăм та,
хăлхине те тупмарăм.

*1957*

## ТĔРЛĔ ÇĔРТИ ÇЫРУСЕМ

### Доскан хыçал енĕ

* * *

Чăнах калап: çĕркаç Раман
директор хĕрĕпе ларман.

* * *

Шуркка + Таруç =
мĕскер ку? Пĕтрĕ пуç...

* * *

Тангенспа котангенĕс
экзаменра кутран хĕнĕç.

* * *

Ку, галстукли, шĕлепкелли,
Лаврентьев, Илемпи Кули.
Ак ку, çумран пыраканни,
савниййĕ, Чурнухха Анни.

* * *

— Ăш хыпнă химикăн, ау!
Часрах парсамăр ащдвао.
— Ма ащдвао? Мухмăра кирлĕ
шӳрпе тата спиритус вини.

* * *

Ĕнертенпех: «Вир алле зинд да бай!» —
тесе çӳрет «хӳреллĕ» Минтăпай.

### Доскан мал енĕ

Хроника

Учком членне Ефимова
ирпе туланă, тет, махха.

Пĕлтерӳ

Паян каçпа лавкка пенче — дуэль.
Класри Печорин (Е. Мишша)
тата Грушницкий (Носов (Чăвашъел))
пайлаççĕ Мэри-Натюша.

**Парта çине çырса хунă**

Кăранташпа

...Елена, ма хуравламастăн:
ма ĕмĕрне качча каймастăн?

Чернилпа

(а + в)². Тухмасть...
Ых, шуйттан, кӳпшек Караç.

Пурăпа

Иван — пăван.

**Хӳме çине — кăмрăкпа**

Киномеханик Вăлача,
хырăмунта улт ача.

Предколхоз,
тула тухса хăс!

**Çырмара, юр çинче**

Пăлюк, Верук.
Ку — амăшĕсем.
Лява, Мишша.
Ылтăнĕсем.
Килне кайма хăраç вĕсем:
шарт! хуçăлнă йĕлтĕрĕсем.

*1957*

## УРАМСЕНЧЕ

Урамсенче пĕччен çӳретĕп.
Çырма енчен уç çил вĕрет.
Манмасть таçта чĕнме пĕрре те
шур уйăх янкăр тӳпере.

Юнра вĕрет çĕн туртăм, сисĕм.
Çут тăкăнать вĕçĕ-хĕррисĕр
çав сисĕм-туртăмăм çине,
чунпа чĕремĕн варрине.

Васансенче шывсем шавлаççĕ.
Кĕреп, çӳрерĕм самаях.
Сая каять, сая каять
çурхи мăнтарăн лăпкă каçĕ!

Мĕскер шур уйăх, çил, васан,
юлташăм, эсĕ пулмасан?

*1957*

* * *

Мана асра эс тытас çук.
Эп манăçăп, ӳксе çухалнă
йăлл çăлтăр пек, çап-çутă халлĕн.
Эп манăçăп, сан кив тусу.

Пуçран тарать инкек тӳсни
хаваслăх, ырлăх таврăнсассăн.
Чĕрӳ туймашкăн чарăнсассăн,
шупкаланать пĕрле ӳсни.

Мĕскер кив тус? Çĕнни вуншар.
Киввисем мар, çĕнни те — кивĕ.
Асра тытмашкăн мĕн нуша?
Эс мар, вĕсем тытмашкăн тивĕç.

Анчах чĕнсем, хӳтлев ыйтса,
синкер самант килсе тухсассăн.
Эпваскăп кӳренме манса,
чĕнсем, эп çитĕп тăхтамасăр.

*1957*

* * *

Çусам, çусам, ăш çумăр, çу,
мĕн ирчченех çусам вăраххăн.
Çук чĕрере усал сăмахăм,
çул каясси те манăн çук.

Хурал тăрать киле-çурта
виç шурă хурăн хускалмасăр.
Çусам, çу, çумăр, васкамасăр,
сĕм шăплăхра эс шăпăртат.

Эпир сан вăрăм юмахна
ăша хывма епле юратнă...
Юлташ мана кĕтме пăрахнă,
эп хам та маннă халь ăна.

Çук хирĕçӳ, çук çураçу.
Çук чĕрере вут пек сăмахăм.
Инçе, инçе — хитре юмахăм...
Çу, çумăр, çу, таттисĕр çу.

*1957*

## ЮЛТАШĂМ

Эс уксах Тамерлан пек хаяр.
Пулă юнĕ пек сан сивĕ юн.
Эс лăпкăлăхпа — Наполеон.
Мĕншĕн эс ун пек? Урăхла мар?

Мĕн сана çапла пулма хушать?
Мĕншĕн ачаллах эс мăн арçын?
Ӳкрĕ пуç çине мĕнле нуша?
Е тӳрккес этемччĕ-и аçу?

Астăватăн-и, нумай-и-ха,
вăрманта çӳрерĕмĕр пĕрле,
леçсе ятăмăр хурăнлăха
пĕлтĕр тупнă шăпчăк чĕппине?

Хурчăка амантнă кайăка,
Тамерлан, йĕре-йĕре сиплерĕн,
юсансассăн та çавах шеллерĕн.
Халĕ — шăпчăк вĕçнĕ аякка...

*1957*

## ТЫМАРСĂР ЙЫВĂÇ

Пĕр тымарсăр йывăç лартрĕ
пĕчĕк шăллăм пахчана.
Шăварать те шăварать вăл
çавă çамрăк хурăна.

Савăнса ĕмĕтленет хăй:
— Хурăн çурĕ папкине...
Айванскер шута илмест-çке
йывăççи тымарсăрне.

*1957*

## ЯТ ХУНИ

Ял Советĕнче пĕр ашшĕ
пепкине ят çыртарать.
Ачи — хĕр. Епле хурать-ши?
Чим, кăштах тăхтас ара...

Тахçанах шутланă ашшĕ,
ним тăмарĕ кĕттерсе:
«Зоя ят хĕре парасшăн,
героя хисеплесе».

*1957, апрель*

## МĂНУК

Хĕвеллĕ Италире пĕр пулăça
тур пачĕ çĕн кайăк — ывăл ача.
Ачийĕ — ачах, уалатрĕ тӳрех,
анчах ячĕ çук. Мĕнле ят хитререх?
Çемьере чи ватти, мăнукне юратса,
ним чĕнмесĕр ларать, чĕлĕм пак-лат-тарса.
Сăмах хушрĕ старик: «Антуни, ирĕк пар,
ят хурам мăнука. Ятсăр пит ырă мар».

Тухса утрĕ. Лере тĕлĕнеç пуçлăхсем:
«Ывăл тетĕн? Ятне мĕнлерех хурас тен?»
Хуравлать: «Ывăлăн ывăлĕ ыр чунах.
Вăл пултăрччĕ Ленин. Çапла ман сăмах».
Шак хытса, шăлт аптраççĕ: «Ленин тетне?
Ун пекех ят та çук. Суйланан мĕн мурне?»
«Мĕнле — çук? Пур. Куллен Антуни
хаçатра та вулать, вырăс, тет, çав çынни.
Ăслă та ырă, тет. Чимĕр, епле
хальччен пĕлейместĕр çав çыннăн ятне?»

Кинĕпе ывăлне кайрĕ чĕнчĕ. Калать:
«Юратнă мăнук Ленин ятлă пулать».

*1957, апрель*

## ИЛЬИЧ

Тĕп чăнлăх сăнарĕ —
Владимир Ильич.
Çĕр çаврăннăçем
тачăрах пирĕн йыш.

Çĕн ăрусем килĕç,
çĕн ĕмĕрсем килĕç,
пĕтĕмпех планета
телей курма тивĕç.

Телей курма тивĕç
йышпа пĕтĕçсе,
пур харампыра та
вăрçа пĕтерсе.

Вăрçа пĕтерсе те
ĕçре тар тăкса...
Кашнин пулмалла
кристалл пек таса.

Кашнин пулмалла
кăмăллă, тикĕс,
Ленин пек çирĕп,
Ленин пек тӗрĕс.

Тĕп чăнлăх сăнарĕ —
Владимир Ильич.
Çĕр çаврăннăçем
чаплăрах пирĕн йыш.

*1957*

* * *

Ирсерен шкулалла
утнӑ чух шоссепе
сывлӑш уҫӑ янках,
ҫутҫанталӑк чипер.

Тӳпери ӑш саламлӑ
хӗвел чун уҫать,
манӑн савӑнӑҫ ҫуттӑн
ҫиҫет, йӑлкӑшать.

Шӑхӑратӑп эп юрӑ,
сӑнап таврана,
нихӑҫан хуйхӑрмастӑп,
кунҫулӑм ӑнать.

Ирсерен шкулалла
утнӑ чух шоссепе
эпӗ хам та маттур,
эпӗ хам та чипер...

*1957, май*

* * *

Каç пулсассăн, уйăх
çутатать сада.
Сукмакпа салхуллăн
хĕрача утать.

Курнă-ши хальччен эп
çав хĕрачана?
Шăппăн çеç çӳрет вăл,
уйăха сăнать.

Уйăха сăнать те
юрăсем юрлать,
юрласа пĕтсессĕн,
тарăннăн сывлать.

Пытанса итлетĕп,
шухăша каяп.
Шкул ачи эп, çамрăк,
а чĕрем... туять.

*1957, май*

## ЮРĂ

Хĕрачасем юрлаççĕ юрă
савни инçе пулни çинчен.
Савниййĕсем çумрах-мĕн, курăр,
сĕнксе лараççĕ темĕнччен.

Ӳпкелесе куçран пăхмаççĕ,
шанаççĕ хăйсене вĕсем.
Хĕрачисем савсах савмаççĕ,
çакна туймаççĕ каччисем.

Пĕри те юрлама пĕлмест-ши,
элле пĕлсен те юрламасть?
Ялан çӳреççĕ кӳлешесшĕн,
каç-каç тухсассăн урама.

Тен, çавăнпа юрлаççĕ юрă
хĕрачасем ялан пĕччен
ĕмĕтсенчи таçти йăлт урăх
хастар чипер ача çинчен.

*1957*

## ПУСРĂНЧĂК ТОЛЯ

Тăрăхлаççĕ — чĕнмест: тек кулăр...
Тăратсан каламашкăн урок,
вăтанса хĕрелет салхуллăн
пусрăнчăк Толя Петров.

Кашнинчех хĕрелет. Хĕрелет те —
тепринче хатĕр мар çĕнĕрен.
Петрова эпĕр намăссăр тетпĕр,
час-часах «иккĕсем» илнĕрен.

Çилленмест, тарăхмасть. Хулă евĕр
кĕлетки — пиçĕ, авăк, çинçе.
Кулли çук çав ачан, çук илемĕ,
куçĕнче çеç — хĕлхем, куçĕнче.

Амăшĕ умĕнче ятлаççĕ,
«тăн кĕртеççĕ» пĕччен чĕнтерсе.
Шухăшлăн вăл итлет, сасăсăр,
куçĕпе таçталла тинкерсе.

Хăлхине пĕр сăмах та кĕмест-тĕр,
хăй — таçта, кĕлетки çеç кунта.
Ăçтине нихăш те пĕлейместпĕр.
Килнелле те мĕлки çеç утать...

Пĕринче тĕлĕпе иртсе пытăм.
Садĕнче — сĕрме купăс сасси.
Хӳмерен карăнса пăхасси
кансĕр те... кăсăкĕ питĕ пысăк.

Карăнтăм... Сĕрме купăс кĕрлет
тăвăл пек. Сĕркĕчне çулăм хыпнă.
Шур кĕпеллĕ ача купăс тытнă —
тинĕсри парăс пек курăнать çĕрле.

Лайăхрах пăхрăм та: парăсне те вут тивнĕ.
Ав епле вăл... вăт музыка... уф...
Ах, шуйттан эс, шуйттан... Паганини...
пусрăнчăк Толя Петров!

*1957*

## ЮЛТАШ ЙӐМӐКӖ

И Шур Атӑл, Шур Атӑл,
Шурӑ Атӑл кӑпӑкӗ.
Шурӑ Атӑл кӑпӑкӗ пек —
ман юлташӑн йӑмӑкӗ.

Чӗкеҫ евӗр чӗвӗл-чӗвӗл
тӗл пулсассӑн калаҫать.
Килӗшӳллӗ ӳчӗ-пӗвӗ,
куҫӗ йӑл-йӑл вылянать.

Пултарать вӑл ӗҫлеме те,
савӑнма та пултарать,
вӑрттӑн ман ҫине пӑхать те,
чуна вут пек ҫунтарать.

*1957, май*

## ПОЭТСЕМ

Данте. Назон.
Ют çĕрте тилмĕрсе типсе хăрнă.
Байрон ютра пуçне хунă.
Шелли ютра тинĕсе путса юлнă.
Гейне.
Çăкри хĕсĕкрен ĕмĕрне выçă сăнлă.
Грибоедов.
Кăна Перççинче çурса ывăтнă.
Пушкина дуэльте «ĕретленĕ».
Лермонтов.
Кунăн тусĕ тус мар, ирсĕр йытă:
поэта пĕр ним çукшăн пĕтернĕ.
Рылеева
çакнă.
Çеçпĕл
çакăннă.
Есенин
çакăннă.
Маяковский
перĕннĕ.
Лоркăна
пенĕ.
Куба чысĕ Марти, ун мухтавĕ,
юнлă çапăçуран тухайман-мĕн.
Моабит тĕрминчен тухайман
Джалиль.
Çав хĕнпех пуçне çирĕ Митта,
вилчĕ ир...

*1957*

## УЛТӐ ЭПИТАФИ

1.

Ачасем вӗрентрӗн вӑтӑр ҫул.
Пӗтӗм ял сан патӑнта вӗреннӗ.
Эс ялан ял хушшинче ҫӳренӗ.
Сансӑр тӑлӑх юлчӗ ял, илемӗ ҫук.
Пурнасси пурнаттӑн-ха нумай.
Ывӑл ҫын хурри пулни хавшатрӗ.
Самайлантӑн — тепӗр хуйӑх ҫапрӗ.
Куртӑн эс ҫӗр тӗрлӗ самана.
Яков Федорыч, Якку мучей,
ырӑ ҫын, яту — чӗресенче.

2.

Кунта канать ял пуҫлӑхӗ Емкке.
Ҫӳретчӗ кивӗ кительпе, кив галифе-йӗмпе.
Пӗрре те ырӑ кун курман,
ҫынна та ырӑ кӑтартман.

3.

Ку тӑпра ҫине килсессӗн, хӳхлӗрсем:
каччӑ вилчӗ кӑмака ҫинчен ӳксе.

4.

Ҫак хӗрӗн чунӗ ҫӑлкуҫ пек таса —
ӑна ҫук тунӑ тусӗ чуптуса.

5.

Левентее леш тӗнчере
бухгалтера ан лартӑр.
Эрех ӗҫсе кӳпӗнесрен
ҫак сыхлӗ мӗскӗне. Ӑнланӑр...

6.

Сыв пул, тӑван, юратнӑ Кӗпитун,
сана тӗп турӗ сарӑ сӑмакун.

*1957*

* * *

Каç пулсассăнах кĕретĕп
лăпкă уйăх çутине.
Саврăм эп, юратрăм эпĕ
шурă çĕмĕрт çеçкине.

Шурă çĕмĕрт сывлăм сыпнă,
йăлтăр-йăлтăр чӳхенет.
Эп çӳретĕп шăппăн-шăппăн
урамра çур çĕрчченех.

Пӳрт çине пăхса иртетĕп,
кĕмĕл çĕмĕрт леш енне.
Саврăм эп, юратрăм эпĕ
кӳршĕ класс хĕрачине.

*1957*

* * *

Сан йăл куллун пайăркисем
чуна хавассăн кăтăкларĕç.
Унта ачалăх кунĕсен
поэмине ман куç палларĕ.
Анчах эп тивĕç тĕлĕнме:
вĕçне темме çырмашкăн маннă —
çӳçне эс темшĕн çитлемен,
мелке пуçпах шкула тапраннă.

«Поэмăн» вĕçĕ те хитре:
ик шурă роза — çивĕтре.

*1957*

## ÇУРХИ КАÇ

Çăлтăрсем илемлĕ
тĕлĕксем тĕлленнĕ.
Шурĕ шăппăн уйăх —
çутă-çутă хуйăх.

Васансем чĕнмеççĕ,
васансем çывраççĕ.
Ылтăн пек çур каçĕ.
Вăрансам, чĕкеçĕм.

Вăрансам, чĕкеçĕм,
курма тух, пĕччен эп:
айлăма кӳпченĕ
çăлтăрсем ӳкеççĕ.

Юлнисем илемлĕ
тĕлĕксем тĕлленнĕ.
Анчĕ ĕнтĕ уйăх.
Тĕксĕмленчĕ улăх.

*1957*

## ÇУРХИ СЕРЕНАДА

Ах, уйăхлă каçĕ...
Урамра — çуркунне.
Никам та курмасть
эп кунта тăнине.

Кĕрлет чаплă шăпчăк,
чĕнмест сирĕн çурт.
Пĕлеп: çук сан канăç;
пĕлеп: ыйăх çук.

Кĕмен-ха хĕрсем,
шăхăраç йĕкĕтсем.
Сада сиксе ан та,
эп илĕп кĕтсе.

Ăçтан çыврас килтĕр:
тулта — çуркунне.
Ахаль-и эп татрăм
сирень çеçкине.

Лере каçса кайăпăр,
пар аллуна,
çырма леш енне —
çап-çут айлăма...

*1957*

## СЕРЕНАДА

Итле-ха, тух-халĕ,
тухсам хăвăртрах.
Шăп — Çирĕклĕ ялĕ,
тӳлек ыйхăра.

Çӳлте çутă питлĕ
арпус шăвăнать.
Вут пек вĕçсе çитрĕм,
кĕтеп тахçанах.

Ак кантăк та сӳнчĕ.
Эс çук. Çук та çук.
Мĕн-ма пурнăç йӳçĕ
аçу килте чух?

Вăл çывăрнă ĕнтĕ.
Итле, кантăк уç.
Саднах эпĕ кĕтĕм.
Тухсам, тух, Тамуç...

*1957*

## ТАНГО

Хурăнсен çулçисем — çăтăл-çăтăл
музыка çеммипе.
Тулли уйăх çӳлте çутă-çутă
вылянать çĕрĕпе.

Эс манпа ăш сăмах калаçасшăн
шăппăн, ĕлĕкхилле:
хăрпăксем çĕкленеççĕ ачашшăн,
çĕкленеççĕ хуллен.

Эпĕ те пĕлейместĕп-ха, эс те
малашри çулсене.
Куçпа куç тĕл пулать те, чĕнместĕн,
темĕншĕн именен.

Сан кăтру, çыр çӳçӳ, илĕртӳллĕн
сĕртĕнет питĕме.
Эсĕ çеç чи сăпайлă, хитре, йăрăс пӳллĕ,
эсĕ çеç — чăн телей.

*1957*

## ПИКЕ ЁМĔЧĔ

«Эрех ĕçмен этем алхасмĕ,
типшар кăтартмĕ çемйине...»

Çапли çапла. Анчах, ак, касмăк,
хĕнет-çке кӳршĕм арăмне.
Туртмасть, ĕçмест. Мĕскер çитмест-ши?
Мĕн-ма вăрçаççĕ мăшăрсем
кашни сăмахшăн, вак-тĕвекшĕн
тем чухлĕ нервă пĕтерсе?
Сăлтав мĕнре? Пускил — чĕресĕр,
хăйне кăна хыт юратать.
Хăрахĕ чăтĕччĕ чĕнмесĕр,
хĕрӳ пулни аптăратать.

Сăпай — сăпайшăнах. Пикеçĕм,
ăнлантăм эп сана йăлтах.
Туртман, ĕçмен яшсем çӳреççĕ
сахал-и хамăрăн ялтах.
Пурте маттур, кăвар пек чунлă,
пурте килейнĕ салтакран...
Мана хама чи çывăх пулнă
Тамара тантăш ачаран.

*1957*

* * *

Уйăхлă çурхи вырсарникаçчĕ.
Чарăнтăм эп санăн умăнта:
«Халĕ çеç çап-çутă çăлтăр анчĕ,
анчĕ пулĕ, тетĕп, çакăнта».

Эсĕ пăрăнса кĕрсе каймарăн
шашулккаллă пĕчĕк алăкран.
Йăл кулса чеен каларăн: «Авă
юр юрлать Тамара анатра.

Çавăнта ӳксе саланчĕ мар-и
санăн çутă-çутă çăлтăру?
Мĕншĕн-ха авантарах пăхмарăн?
Тен, унта та йĕрĕ çук-тăр ун?»

Эп каларăм: «Кансĕрлерĕ шăпчăк,
антăхса итлеттĕм кĕввине,
эсĕччен йăлтраканни ним çукчĕ,
çутă çăлтăр — эсĕ, Каринэ».

*1957*

* * *

Итлесемччĕ шăпчăк сассине.
Мĕншĕн вăл салхуллă илтĕнет?
Сăнасамччĕ çăлтăр çуннине,
çăлтăр тĕксĕмлетнĕ çутине.

Ăсатсамччĕ уйăх куллине,
уйăх кĕнĕ пĕлĕт хĕррине,
ылтăн тытнă сылтăм аллине,
кĕмĕл тытнă сулахаййине.

Пăрахсамччĕ сивĕ çӳреме.
Ан ыйтсамччĕ кĕмĕл çĕррӳне.
Ăнлансамччĕ манăн чĕрене,
йышăнсам чĕремĕн ăшшине.

*1957*

## ТУНСĂХ ПУР

Пулăпинччĕ эпĕ çутă уйăх
тĕксĕмленнĕ çӳллĕ тӳпере,
курăттăнччĕ, курмасассăн — туйăн:
тунсăх пур хаваслă сăн-питре.

Пулăпинччĕ эпĕ çута çăлтăр,
çӳрĕттĕм таттисĕр йăр! та яр!
Çăлтăртан канăçсăрри ним çук-тăр,
канăçсăр, анчах тăрлавсăр мар.

Пулăпинччĕ эпĕ çепĕç шăпчăк
çуркуннешĕн хытă савăнма.
Шăпчăкчен чуну сан кĕрхи шăнччĕ,
халĕ путрĕ вутлă çулăма...

*1957*

## СĂМАХСĂР ЮРĂ

Мĕншĕн эп кунта? Пĕлетĕр.
Ах, епле аван-çке каçĕ...
Хушăран лĕп çил килет те —
çулçăсем шăпăлтатаççĕ.

Эпĕр нимĕн пуплеместпĕр.
Пуплемесĕрех вăл паллă:
эп сире хама йăлт панă,
эсĕр... юратмастăр эсĕр.

Манăн чунăм хурланасшăн.
Çивĕч каччă пулаймарăм.
Туйăмсен хĕрӳ кăварĕ
ахалех çулăмланать çав.

Шăплăха пăсма хăранăн,
темĕн итлесе ларатпăр.
Ытлашши куляннăран-тăр,
кăмăл питĕ хуçăк манăн.

Калаçмастăр-çке пĕрре те!
Тĕршĕнетĕр, анаслатăр,
йăпшăнса ачаш кулатăр,
лăпкă-лăпкă тĕлĕретĕр...

*1957*

## ЧЕЧЕК, ХИРТИ ЧЕЧЕКĔМ

Чечек, хирти чечекĕм,
сана ăнланма çук:
çилпе пăшăлтататăн,
юман çинче куçу.

Чун-чĕрӳне кашниййĕ
хăйне тĕрлĕ аван.
Хăшне, хитре чечекĕм,
суйлатăн кăмăлтан?

Пĕлеп, çил икĕпитлĕ:
хăш чух йăпăлтатать,
тепрехинче — йăлт урăх —
хаяррăн харкашать.

Çĕре тымар яман вăл.
Чечек, эс çĕр ачи.
Шутлатăн-ши, чиперĕм,
ултавçă мар-ши çил?

*1957*

## ЫРĂ ЮРĂ

Хĕрачасем юрлаççĕ юрă,
эп юрататăп итлеме.
Хăш чух хавас, хăш чух салхуллă
пулса каять чун-чĕреме.

Хура куçли ытла та çепĕç,
ытла та тунсăхлă юрлать.
Юрланине итленĕçемĕн
асра ĕмĕрлĕхе юлать.

Вăл — юрăç мар, вăл хăй ыр юрă:
хăш чух йĕрет вăл, макăрать.
Хăш чух хавас, хăш чух салхуллă,
хăш чух хастарлă та кăра.

Ăна илтсессĕн ман мăнтарăн
кўреннĕ чун та çĕкленет.
Хам уншăн юрă пулаймарăм,
хускатаймарăм чĕрине.

*1957*

## САРĂ ХĔРĔ ЮРĂ ЮРЛАТЬ

Садра, садра,
сад пахчинче
сарă хĕрĕ юрă юрлать
çĕмĕрт йывăç айĕнче:

«Эпĕ савнине юратрăм
чĕри ытла вĕрирен,
чĕри ытла вĕрирен,
ĕçре питĕ хĕрӳрен.

Ой, çӳле, çӳле, çӳле
тăратрĕç хĕрлĕ ялавне.
Ой, инçе, инçе, инçе
илсе кайрĕç савнине.

Асăнатăн-ши мана,
элле мантăн та?
Сана эпĕ асăнмасăр
юрламан пĕр юрă та.

Юррăм ман çитсе янратăр
таçти çĕрсене,
çĕн вăй-хал парса лăпкатăр
салтак чĕрине...»

Садра, садра,
сад пахчинче
колхоз хĕрĕ юрă юрлать
çĕмĕрт йывăç айĕнче.

Тӳпере çӳрет шур уйăх.
Çĕмĕрт çеçки кĕмĕл пек.
Хĕрĕн тунсăх, хĕрĕн хуйăх.
Сасси шăпчăк сасси пек.

*1957, май*

## ХĔР ЮРРИ

Утап утас килнĕрен мар,
утап кая юлнăран.
Юрлап юрлас килнĕрен мар,
юрлап ăшăм çуннăран.

Хура кĕркунне çитсен,
аслатийĕ шăпланчĕ.
Наян иккен эс тесе,
савни мана хăварчĕ.

Йăлăхрăм пит хĕретсе,
кусхарши сăрлап пĕрмай.
Аттестатлă хĕр тесе,
каçăртаттăм пуçăма.

Сассăм çук, сассăм çук,
калаçма та сассăм çук,
кĕрхи тĕттĕм каçсенче
пĕччен çӳреме те çук.

Çӳлти çутă çăлтăрсем
çутатаççĕ çĕр çине.
Ман савни юлташ-хĕре
каçсерен клуба чĕнет.

Юлташ, сана шурă тутру
килĕшет те килĕшет,
яштак пĕвӳ, хура куçу
ман савнине илĕртет.

*1957, май*

## ЙĔКĔТ ЮРРИ

Уттарам-ши утçăма,
чуптарам-ши,
элле чарăнсан та юрĕ-ши?
Юр юрлам-ши эпĕ,
сăв калам-ши,
элле шăп пырсан та юрĕ-ши?

Чарăнмарăм эпĕ,
уттармарăм, —
кăлкан тĕпĕсене хускатрăм,
никам итлемин те, юр юрларăм,
шăннă туйăмсене шăратрăм.

Уйăхран инçе мар
пĕр çăлтăр пур,
çав çутатать уйăх çутине.
Хамăртан инçе мар
сарă хĕр пур,
çав çунтарать çамрăк чĕрене.

*1957*

## УЙРĂЛУ ЮРРИ

Пухăннă чух, туссем, пухăнтăмăр
пĕр савăта сунă сĕт пекех.
Уйрăлнă чух, туссем, уйрăлнă чух
татăлатпăр çинçе çип пекех.

Хуракăшсем вĕçрĕç, куртăр-и?
Тур утăра утланса тăтăр-и?
Çамрăк ĕмĕр иртрĕ, сисрĕр-и?
Элле сисмесĕрех юлтăр-и?

Кĕмĕлех те çĕрĕ, çыру куç.
Тăхăнăр-ха çыру пĕтиччен.
Эпирех те кунтан уйрăлсан,
асăнăр-ха асăр пĕтиччен.

*1957*

## ĂСАТУ ЮРРИ

Ăсатсамччĕ ăсатан пулсан,
тасатсам пусму çине шăлса.

Тасатсам пусму çине шăлса,
хир хапхинчен тухиччен ăсат.

Хир хапхинчен тухиччен ăсат,
куçран çухаличчен пăхса юл.

Куçран çухаличчен пăхса юл,
куçран çухалсассăн, ална сул.

*1957*

## ИРХИ ЮРĂ

Тухăç ылтăн сапăннă,
вут пек ялкăшать.
Эс халех Светланăна,
амăш, ан вăрат.

Туслăх пирĕн пĕлĕтсĕр,
çук кӳрентерӳ.
Мĕн курать, эп пĕлĕттĕм,
тĕлĕкре хĕрӳ.

Çывăртăр, ан илттĕр вăл
пуйăс чĕннине.
Сĕнк пулса çеç илтĕм эп,
тухрăм çул çине.

Эп инçе пуçтарăннă,
кулянса тăрап...
Эс халех Светланăна,
амăш, ан вăрат.

*1957*

## МУНЧАРА

Атте, сăпайлă та ĕçчен чăваш,
хутла-мĕнле темех мĕн мар.
Ман çурăма мунчалапа çăва-çăва:
— «Демонстративлă тарнă» мĕн сăмах? —
тесе ыйтать йăвашшăн мунчара.
Калап чăнне, вĕрентнĕн ачаран:
— Çын умĕнчех, ним пытанмасăр
кайни пулать, выçса çитсе.
Атте, эс килнĕ ăнланмасăр,
шутлан эп айăплă тесе.
Яра куна акса та, чĕптĕм
çăкăр тавраш ăша яман.
Хампа тусăмсене те чĕнтĕм.
Апла ăçтан-ха акаян?
— Çапли çапла, анчах та, ывăлăм,
шкула кĕртесшĕн мар сана.
Епле малла эс пурнăн, сывлăн,
вĕт... пĕтĕм пурнăç тусăнать?..

*1957*

## ÇЫРМА ХĚРРИНЧЕ

И хěвелěм, хěвелěм,
ачу шыва кайрě.
Турчăкупа туртса ил,
мелкӳпеле шăлса ил,
таканупа ăсса ил.
Юлташсемпе темěнччен
эп кěтетěп хěвеле.
Тухсам пěлěт хыçěнчен —
атьсен çимěк çитиччен
çиччě шыва кěмелле.
Çиччě кěнě, çиччěпе
сахалтарах çимěке —
çитмěл çиччě кěмелле.

*1957*

## ШЫВ ÇИНЧИ УЙĂХ ÇУТИ

Канмасăр килтĕмĕр чупса...
Пăч-тĕттĕм çырана çитсессĕн,
эп тăтăм шăппăн чарăнса,
вăрман енне касса ÿксессĕн.
Хыçран такам йĕрленĕ пек
туяттăм эп, васканă майăн.
Çав туйăм хыт илĕртнипе,
пăхса илес-ха, терĕм, лайăх.
Эй, тусăмсем! Эй, мур ачи! —
мĕскер куратăп, мĕн куратăп:
çиçсе выртать асам тĕнчи.
Куççуль тухать, эп макăратăп.
Шыв лăпкăн юхнă май, ун çийĕн
пин-пин хĕлхем ташлать-сикет.
Çав çутăсен ыр çавраçилĕ
чуна лăпкать те илĕртет.
Ак ĕнтĕ темĕнле хăват
ман савнăçа лăскарĕ-çапрĕ.
Куратăп: çутă чакрĕ, чакрĕ.
Мĕн пулчĕ? Мĕн тума чакать?
Тăхта! Чакать. Çук, çук, чакмасть.
Татах çуталчĕ те ялтрарĕ,
хаваслăхпа çиçсе вылярĕ.
Çыран çеç — тĕттĕм те чапрас.

*1957*

## ПĚЧĚК АКĂШСЕН ТАШШИ

Çĕтрĕ, тĕлĕк пек çухалчĕ,
зал, çынсем, çынсен хушши.
Умăма тухса çуталчĕ
пĕчĕк акăшсен ташши.
Ыткăнать сулмаклă кĕвĕ
пĕр юхса, пĕр çĕкленсе,
йăлтăрать ун шурă хĕмĕ
çĕнелсе те çĕнтерсе.
Пĕчĕк акăшсем ташлаççĕ,
çатлатаççĕ çунатсем,
çамрăкрах пулма хушаççĕ,
ачашлаç, чуна тивсе.
Карталанчĕç... Ах, юлатăп,
хатĕрскер таçти çула —
эпĕ хам кунта ларатăп,
кăмăл манăн,
чунçăм манăн
шурă акăшла
вĕçрĕ малалла,
вĕçрĕ малалла.

*1957*

## КУИНДЖИ

«Ирхи Днепр» — ун тӳпи. Вӑл иксӗлчӗ. Ун вучӗн
кӑварӗ ҫук. Палитра та, мелке те
тек ӗнтӗ уншӑн савнӑҫ мар пӗрре те.
Ҫапла вӑл ҫирӗм тӑхӑр ҫул йӑвашшӑн ҫунчӗ.

Картинисем халь выставкӑшӑн мар.
Унта текех ура та ярса пусмӗ.
Аманмасӑр кӑйкӑр ҫунат усмӗ,
сас ҫӗтмесӗр чарӑнмӗ вӑл кӑшкӑрма...

Пӗр никам пӗлмест ҫунат хуҫӑккине, —
ҫӗнӗ «Ирхи Днепрсем» ыйтать унран тус-йышӗ.
«Куинджи эп. Ҫавна пӗлесчӗ сирӗн», — тет Куинджи,
салхуллӑн тинкерсе тусӗсене.

*1957*

## ХУДОЖНИК

Боринаж. Шахтерсем-скелетсем.
Инкек хыççăн синкек. Взрыв. Авари.
Забастовка та нимĕн памарĕ.
Тӳпере — вĕççĕр-хĕрсĕр хура пĕлĕтсем.

Тамăк пек пурнăçра пулса мар,
çыннăн хĕн-асапне чĕрепе сăнаса,
çӳçĕ-пуçĕ тăрать вирелле. Аптраса,
хуйхăрса, антраса çын çӳрет пĕр самант.

Тĕнчене çуралман вăл хăравçă.
Пурăнăç тулани пĕтерет.
Çамрăк пастор Ван-Гог пирĕсем, ак, тулаççĕ
тамăкри сăнсемпе. Чун кӳтет, чун йĕрет.

Чăтаймасть. Юлашки хавалпа çын тарать.
Çутă-çутă сăнсем кăларать куç умне.
Халĕ — савнăç, хĕвел, ун кашни картинра,
хăрани сирĕлмест ĕмĕрне.

Ман ун пек пулас марччĕ. Ăçта та
тĕссене эп чăнла кăтартатăп.

*1957*

## МОЦАРТПА САЛЬЕРИ

Моцартсем талант кивçен илмеççĕ,
хăйсемех хĕвеллĕн кĕвĕлеççĕ.
Шухă çын, куштан, элекçĕ е ултавçă
тăнласан, именерех утаççĕ.

Нихăш те кĕвве ӳпкелемерĕ.
Кăмăллать ăна кĕвĕç Сальери.
Моцартпа Сальери çывăх туслă.
Туслăхĕ Сальерин виçĕ пуслăх.
Вăрттăн чаврĕ шăтăк, — нӳрĕ, тарăн, —
ĕнтĕ миçе Моцарт анса кайрĕ...

Ӳркенмесĕр, тивĕçе манмасăр,
саманамăр сассине итлер-и:
çут тĕнче тăмасть талант памасăр,
Моцартсем пулсан, пурах Сальери.

*1957*

## ЫВӐННӐ КАРАП

Артӳр Рембо, эс генилле каланӑ
вунулттӑрах ху мӗн калассине.
Вара поэзин ывӑннӑ карапӗ
кайса çухалнӑ ют тинӗссене.

Унта вӑл ывӑнми çӳрет. Инçе эс ху та:
шыратӑн ылтӑн — шӑрӑх çӗрсенче.
Тем тӗрлӗ тертленӳ те, тарӑху та
сана сивӗтеймест пуяссинчен.

Çав вӑхӑтра Париж каллех йӗксӗксемпе тулать,
Офелия çаплах юхать, шывра путса;
çакса вӗлернисем пуçтарӑннӑ бала,
ташлаççӗ шӑмӑ шакӑртаттарса.

*1957*

## ЕСЕНИН

Хальхи эпир вулан томĕсенче
пуçланнă çеç Есенинăн таланчĕ.
Апла та чунĕ ыратнин хăвачĕ
çуталĕ ĕмĕрсен ĕмĕрĕнче.

Ун чунĕ ыратни юратнипе пĕр шайлă.
Ма ӳкĕнет, ма кулянать çапах?
Хăй пурнăçне вăл пурăннă çул майăн,
утса ĕмĕтсенчи тасти çулпа.

Çынсемпеле татулăх тупаймасăр
шавланă, ашкăннă, ĕçсе эрех,
авланнă, уйрăлнă, ташланă харсăр.

Ăçта кăна çитсен те тĕнчере,
вăл — питĕ чăрсăр, тытса чарма кансĕр,
анчах пиртен пин хут илемлĕрех.

*1957*

## ЭП БАЙРОН МАР

*Нет, я не Байрон...*
М.Ю. Лермонтов

Эп урăххрахчĕ, пĕр ĕç пулчĕ...
Те куçăмра пăлхавçă вучĕ
салхулăх витĕр çуннăран,
те çӳçĕм хумлă-хумлăран,
сăнран пăхса ытарлăн, выççăн,
шкулти чи чаплă интриганка
çирĕмсенчи Краснова Галка,
ихĕлтетсе куç хĕснĕ хыççăн:
«Джордж Байрон», — терĕ пухура.
Кам Байрон? Эпĕ-ши вара?
Ун чух пуху пуçланайманччĕ.
Эх, хуçкаланчĕ, хĕвĕшрĕ.
Эп мар, пĕрер салтак аванччĕ
çак кӳршĕ класăн хĕрĕшĕн.
Джордж Байрон... Мăшкăл... Ха-ха-ха!
Кулатăп эп, анчах та вăрттăн
тапать чĕреçĕм кăрттăн-кăрттăн.
Пуху. Трибуна. Эп тухап.
Юлхавсене хурлатăп эпĕ
çур пинлĕ актăвăй залра.
Тарлатăп, антăхап, типетĕп...
Зал — алăра, зал — алăра!
Çунатлансах пуль кайрĕ ăстăн,
хама хăватлă туйнăран:
такăнасран эп хăрамастăп,
пĕр такăнмасăр çунтарап.
Эрехçĕ завхозран кулатăп,
сăвва яратăп сăмах май.
Эп Байрон мар, анчах пулатăп
епле те пĕр-пĕр Хусанкай.

*1957*

## ТĔЛЛЕВ ПАТНЕ

*Ты Джиоконда, которую надо украсть.*
Вл. Маяковский

Туйăмсем чунра çӳреççĕ
тинĕсри хумсем пекех.
Эсĕ, ывăнми чĕреçĕм,
çав хумсем çинче текех.

Иш те иш, хастар чĕреçĕм,
Чăн Поэзи патнелле.
Туйăмсем пĕр çĕкленеççĕ,
пĕр путаççĕ тĕпнелле.

Никама та итлемесĕр
эп васкатăп çĕннелле...
Тинĕс аслă, çул пĕлместĕп,
пĕлмесен те çитмеллех.

*1957*

## ТЕРЦИНСЕМ

Ĕмĕтĕмсем сӳнес пек туйăнни
паян мана уйрăммăнах пăлхатрĕ.
Эп çыртăм çĕрĕпех чарăнайми.

Мĕн-ма сӳнеççĕ? Тен, талант çукрах-тăр,
хыпса çунни йăваш-тăр чĕремре?
Мĕскер шыратăп эп? Мĕскер çухатрăм?

Çухатрăм эпĕ шăп вунçиччĕре
хастарлăха. Ăçта, епле? Пĕлместĕп.
Пуçа, шăмă-шакка тем çĕмĕрет.

Эп çавăнпа хевтесĕр те илемсĕр.
Халь-халь татăлас пек янраççĕ нервăсем,
тăрлавсăр реквиемсем кĕвĕлеççĕ.

Çĕр варринче, теме аса илсе,
сĕм кантăкран пăхатăп хăпăл-хапăл.
Çут уйăх çук, пăч-тĕттĕм — пур тĕнче.

Пăшăрханса тула чупса тухатăп.
Капан пек пĕлĕт... Пĕлĕт хыçĕнче,
лупас енче, çут уйăха куратăп.

Эй, уйăх, уйăх, тух, кармаш инçе,
сан пек хавассăн йăл кулас килет ман,
çĕр варринче теме аса илсе.

Эй, уйăх, уйăх, тух хĕвелленсе...

*1957*

## ÇУРХИ УЙĂХЛĂ САД

Шурă уйăхлă садăм,
садри яштака хурăнсем,
мĕн тери эп сире юрататтăм,
пĕр çынна чĕререн ĕненсе.

Аллея тӳлек те капăр.
Тĕлĕрет çутă-тĕттĕм тĕнче.
Калаçмасăр хуллен çеç утатпăр.
Халĕ çав ыр каççем ай... инçе.

Халĕ çавă çынна эп мансан та,
чĕререх юмах пек вăхăтсем —
çурхи уйăхлă садăм,
садри яштака хурăнсем.

*1957*

## СĂВĂ ÇУРАЛНИ

Пĕччен юлатăп пӳлĕме. Унта та
лăпланăç çук. Чун кӳтнĕ. Пĕчченех,
Бетховен пек, тухса утатăп
çаран çине, вăрмансене.

Никам илтме пултарайман кĕвве илтесшĕн
тăнлатăп чĕреме. Чĕре майпен пуçлать.
Эп чĕрĕлетĕп çуркунне пек ешĕл.
Тем тĕрлĕ шухăш таврăнать пуçа.

Çитсе тухатăп утнăçем уя та.
Куçпа виçеймĕн унăн анлăшне.
Эп ĕнтĕ туйăмсен шавне туятăп,
пĕлмешкĕн вĕренеп пĕлтерĕшне.

Эп туйăма шухăшпала пĕрлештерсессĕн,
ятсем парсан, кĕвĕлесе ярсан,
мана курма çил пек тапранăр эсĕр,
мĕн ĕмĕрне манаймăттăр, курсан.

*1957*

## ÇАМРĂК КОММУНАР

Тĕллеççĕ, тăрăшса тĕллеççĕ.
Ӳкет. Сиксе тăрать. Чăмăрĕпе юнать.
Кула-кула чăрсăрскере переççĕ.
Хавассăн кăшкăрать. Юрлать:
«Коммуна сывă пултăр!»
Кĕрс!
Ах!
Хупларĕ тĕтĕм.
Ача — шăпах.
Анчах каллех çĕкленчĕ. Пичĕ юнлă.
«Ан савнăр, çăхансем! Коммуна çĕнтерет!»
Коммунарсем ĕнтĕ сахаллăн юлнă.
Версалецсем хĕсеççĕ çĕнĕрен.
Ача енне, ак, вăйлă залп кĕрлерĕ.
Тытăçу тан мар, хăруш, хăруш.

...Сан пек пуласшăн — поэзире эп,
баррикада ачи Гаврош.

*1957*

## СИРЕНЬ ТУРАЧĔ

Сирень турачĕ шурă та кăвакчĕ —
ытарайми асаилӳ хăварчĕ.
Ăна именчĕклĕн эп тăсрăм каçхине,
ыр хĕрача Тамара, сан енне.
Телейччĕ маншăн парнелӳ саманчĕ.

Эп хăрамарăм, туйăмсен хăвачĕ
мантарчĕ эс савниллĕ пулнине,
лексессĕн те кайран ун аллине
сирень турачĕ.

Курмассерен тусу манран кулатчĕ.
Парасшăнччĕ вăл «авăрлă кулачă».
Ни кĕркунне, ни çутă çуркунне
чĕркуçленмерĕм эпĕ ун умне.
Çĕнеттĕм эпĕ. Асăмран тухмастчĕ
сирень турачĕ...

*1957*

## ЮЛАШКИ ШĂНКĂРАВ

Ахаль чухне вăл янраман чан çапнăн,
паян чан çапнăн хурлă илтĕнет,
шкул вĕçленсе шкулпа пĕрле ачалăх
пире ал сĕлтнине вăл пĕлтерет.
Пуçтарăнчĕ, шăпланчĕ пĕтĕм класс.
Коридорта темле, лăпчăнарах, тăратпăр,
чи юлашки шăнкăрава тăнлатпăр.
Чун кулянать, туссемĕр, мĕн тăвас.

Капла сасартăк илтессе кĕтмен.
Епле хӳтлевсĕр, тăлăххăн курнатпăр.
Иртет-çке вăхăт... Ĕнтĕ уйрăлатпăр...
Хăçан тĕл пулăпăр-ши ӳлĕмрен?
Ăçта, хăш çĕрсене çул выртĕ пирĕн?
Епле эп сирĕнсĕр пурнайăп, тусăмсем?
Кама юлташ тесе, кампа-ши каçăн-ирĕн
чуна пусарăп ăшшăн пуплесе?

Кама парнелĕп вутлă сăвăсем?
Чĕре вăрттăнлăхне, ун кăварне хĕрӳллĕн
кама шанса, кама-ши парăп ӳлĕм,
маттур класри маттур хĕрачасем?
Пĕртăван пек сире эп хисеплеттĕм
хусамăр та мана юп курнăран.
Ахальтен мар — куççуль, ахальтен мар, пĕлетĕп, —
шăнкрав, чан çапнăн, мĕскĕн янăрать.

Тен, шăнкăрав малта ку çеç те мар?
Тен, институт енне кунçул илсе çитерĕ?
Анчах çак юлашки кирек хăшне çĕнтерĕ,
урăххисем кун пек янравлă мар.
Чĕресенче вăл хуйхă пулса кĕрлĕ,
вăл кĕрлĕ чăн-чăн пысăк савнăç пек.
Ман пурнăç тăршшĕпе вăл юрă пулĕ,
вилме те вилĕп унăн кĕввипех.

*1957*

## КАЛАС ТЕНИ

Сан ĕмĕтне куратăп витĕр.
Çав ĕмĕт — лăпкă упăшка,
чус витнĕ çурт. Вара эс питĕ
телейлĕ. Эсĕ — çавнашкал.

Халех эс ватă — утмăлра.
Çирĕмсенче — çĕре те çитĕн.
Чунна-юнна куратăп витĕр:
çур грамм поэзи çук санра.

Йăваш пăру эп пулаймарăм.
Эп — канăçсăр поэт-ухмах.
Шухăшупа эс арăм. Арăм.
Тен, чăннипех те арăмах.

*1957*

## ШУХĂШСЕМ АПТРАТСАН

Шухăшсем аптратсан, çăмăл мар шухăшсем,
тăрăшатăп ялан эп санпа тĕл пулма.
Эс ларатăн мана кăмăлтан итлесе,
унăн-кун пăхнине нихăçан та курман.

Пирвайхи юрату — чыс пекех хаклăскер.
Манăнне ăмсанса вараларĕç хаяр.
«Кив тĕнче мĕлкисем, — терĕн лăпкăн, кĕскен, —
йĕксĕксен элекне мур тĕпне туса яр...»

Шухăшсем, шухăшсем, купипе шухăшсем.
Эп васкатăп, юлташăм, санпа тĕл пулма.
Лăпланаççĕ чунсем, кăмăлтан пуплесен, —
сан ăшра та вут-тăвăл алхаснă нумай.

Чун-чĕре пăр марри пурнăçра — чăн илем:
ырă ĕмĕт, хастарлăх килет те вутлать.
Эй, мăнтарăн, эй, çамрăклăх, яш вăхăтсем...
Хуйхă мар, йăл çутти çĕр хут, пин хут ытла!

*1957*

## ШЎТЛЕ СĂВĂ

Калаçма мар, патна пыма та хăяймастăп,
курса тăранас çук мĕн ĕмĕрне.
Ман пеккине эс ху та çывăха ямастăн,
асăрхамастăн эс ман пеккине.

Сана эп çавăрма пултарас çук.
Тĕл пулсанах чĕлхем çĕтет, ай-ай.
Вилмех вилместĕп те, анчах чут чĕрĕ, чут.
Кăшт сĕртĕнес те пур, çунсах каяп.

Паттăрлану та, ашкăну та — манăçра.
Арçын ача-и эпĕ? Эпĕ — чўпĕк.
Эс бриллиант, эс хаклă чул, эп — çўпĕ.
Ман чунăм çук эс, чул, çухаласран.

Хама ĕмĕтпеле чылай йăпатрăм,
анчах çиçмест малта пĕр çутă та.
Вара çырлахрăм: эсĕ — Клеопатра,
эп мĕскĕн чун — чура — сан умăнта.

*1957*

## ШКУЛ ПӖТЕСПЕ

Шкулта эп капӑр çӳреймен,
çиме те çӗрулми çеç çинӗ,
хӗрсем çине пӑхма ӑс çитнӗ —
директор хӗрӗччӗ Кармен.
Аристократка. Эп чунпа çеç
патриций пулнӑ та, çапах
çакна тытап та ӑсатап
пӗррехинче. Хыçран — чупаççӗ.
Шкул пӗтеспе, халь тин пӗлетӗп —
ӑш пӑтранать: «У, пӗлетке!» — теп...

*1957*

## АСКĂНЧĂК

Сашшук пуçне
çавăрнă май
Куля çинчен
шутлать нумай.
Куляпала
кăшт калаçсассăн,
пăхать те —
Минтăпай милай...

*1957*

## УЛАХРА

Улаха чĕнет савни: Лява, Çина,
Тамуççа пулаççĕ, тет, унта.
Ăшă туйăм çупăрлать чуна.
Пуçăм тарăн шухăша путать.

Кĕçĕр пурпĕрех эп чуптăвап.
Темшĕн питĕм пĕçерет-çунать ман.
Темшĕн хама хам туяп çунатлă.
Чуптăватăп кĕçĕр, чуптăвап.

Лампа сӳнтерсе, ларатпăр чăххăн.
Лявапа Тамуç, Çина темрен
пӳлĕмре кулаççĕ чăхăл-чăхăл!
уйăхсăр кĕрхи сĕм тĕттĕмре.

Варрине пăрахрĕç Лявине.
Эпĕр те выртатпăр майĕпен.
Ак савни: «Макарпала анне
çарамас çывраççĕ, — тет, — ирччен».

«Кам Макарĕ?»
«Аннен юратни...
Кĕçĕр эп те çапла çывăрасшăн».
Хывăнать те пăрахать савни.
Пуçăм манăн темшĕн çаврăнасшăн.

Вутăн-хĕмĕн чуптуса илеп.
«Эй-эй-эй! — тет Лява кĕтесрен. —
Эсĕр, мĕн, чуптăватра элле?
Астăвăр унта, эп уш сисрэ-эм!»

Салтăнма хăратăп наччасах.
«Тепĕр чух, — теп шăппăн, — тепĕр чух...»
Эп туяп: пĕтĕм ӳт-пӳ çунса,
тĕлкĕшсе тăрать иккен, хал çук...

*1957*

## ЮЛАШКИ КАÇ

*Однообразный и безумный,*
*как вихорь жизни молодой,*
*кружится вальса вихорь шумный...*
А.С. Пушкин

Çитет... Ах, цинандали пуçа кайрĕ.
Каçарăрсам, ĕçместĕп «çуттине».
Элле тăрса пĕрре ташла пуçлар-и? —
паллана вальс-фантази илтĕнет.

Мухтавлă Глинка Вакхăн жрецĕ пулнă,
çапах та генишĕн эрех хăрушлăх мар.
Ачаранпах ун музыки — вăй-хал, хăюллăх
чун-чĕреме, шухăшăма.

Мĕскер-ши, Люци Павловна, шутлатăр,
тĕсĕмренех мана йăлт, витĕр, ăнланса?
Пирвайхи хут эп сирĕнпе ташлатăп
сасартăках арçын пек мăнланса.

Тен, кам пĕлет, юлашки хут... Ан кулăр.
Тархасшăн ан çилленĕр айвана.
Калас-тăк тӳррипе, эсир ман пĕтĕм шкулăм,
чи çывăх çыннăм пĕр эсир кăна.

Пăшăрханап шăпа расна килнишĕн.
Эп, ешĕлкке хунав, шăтса нумай кайран
куçа шартаракан юмах пек розăран,
пăхатăп ун çине хăюсăр, нишлĕн!

Анчах çук мар пĕрпеклĕх те пирте:
пире пăлхантарать вальсри пĕр тема,
вутлантарать васкавлă каç илемĕ.
Çак каç пекех кунçул вĕçсе иртет.

Вĕçсе иртет яш ĕмĕр — чун ӳпкевĕ,
ĕрĕхтерсе ачалăх иртнĕ пек.
Тăрса юлать çут тема — вальс кĕрлевĕ,
çак каçшăн лартнă çӳллĕ палăк пек.

*1957*

## ÇУСА ÇАКНĂ КĔПЕ-ЙĔМ

Ватрĕç шăмшака, шывра шӳтерчĕç,
сивĕ çил лăскать пире хаяррăн.
Кантраран тытса вĕçетпĕр кунĕпе,
кунĕпе пĕр вырăнта вĕçетпĕр.

Куççульсем те типнĕ ĕнтĕ пирĕн,
ĕнтĕ унсăрах сиксе йĕретпĕр.
Пĕр çеккунт та канăç çук, минут та.
Мĕн парса ку инкекрен тухар-ши?

Пĕр хутчен çапла типсе хăрсассăн,
утюгпа тепре чуна илеççĕ.
Мĕншĕн çакă нушана куратпăр?
Çын пĕлет, эпир анчах пĕлместпĕр.

*1957*

## ЭЛЕГИ

Вăхăт çитрĕ — эпир салантăмăр.
Тăтăм юлтăм акă пĕчченех.
Эп çурални нумаях мар, сахал та мар.
Пурнăç нуши ӳкрĕ пуç çине.

Мĕнле йĕрпе кайсан тĕрĕсрех-ши?
Кукри миçе, йӳппи, çулĕсен?
Ан та тăрăш çулна ыр вĕçлесшĕн
пусĕнченех йăнăш çӳресен.

Тĕрлĕ этем тĕрлĕ канаш сĕнет,
темĕншĕн-çке, кăмăла килмест.
Çула тухас умĕн канасшăн эп,
мĕншĕн васкататăн, пурнăç, эс?

Шухăшăма тĕплĕн шутламасăр
нихăçан хускатмăп калаçу.
Çутă çăлтăр пулса ялкăшмасăр
эпĕ пурпĕр çĕре кĕрес çук.

*1957*

## СИВĔ УЛĂХ

Çуркуннепе хитре юрлаççĕ
лĕп-ăшă каçсенче хĕрсем.
Хурлантарни кăна çур каçĕн,
чĕнсен мана вăл илĕртсе.

Чунне уçса кĕвве ярать те
сад пахчинчи çунатлă тус —
шур уйăх пек айван туятăп
хама, тем асилсе ун чух.

Пĕррехинче çапах каларăм:
«Чăх çеç кулать ку хурлăхран».
Вара чĕре утне тăлларăм
илсе тухса сив улăхран.

Сив улăхĕ вăл — савнă хĕрччĕ, —
кайса çухалчĕ хулана.
Каппайчăк шухăш унăн хĕрчĕ:
«Сысна пăхса ма хăтланас».

*1957*

## ÇЫРУ

Юратнах, савман мар ĕнтĕ эс те.
Пĕр пулмарĕ çапах пирĕн çул.
Кӳренместĕп сана, кӳренместĕп.
Кăмăла пасарта илме çук.

Пĕрмаях хулана йыхăраттăн:
«Хулара — чăн культура, аван».
Эп пымарăм. Аван ялăмра та
пăр пек сив пулмасан чун-хавал.

Çĕнтерӳ ĕçре турĕ бригада, —
канăç тупнă пек пулчĕ чĕрем.
Туссемпе пĕрлешсе юрра ятăм.
Самантран канăç çĕтрĕ çĕнрен.

Канăçа çухатсан, чун хĕмленчĕ:
ырă ĕç кĕввине мĕн çитет!
Çакăнта вăл этемĕн тивлечĕ,
çакăнта чăн телей, çак тĕлте.

Çĕршыва ăнланма йывăр мар-мĕн:
çамрăксем халь ялта кирлĕрех.
Эс çукран Саврăшпуçĕн урамĕ
мансăрах вăй вылять тĕрлĕрен.

Кӳренет (эпĕ çеç кӳренместĕп)
çĕн клубри радиола, баян.
Эп сисетĕп: çунатăн вĕт эс те!
Килсе çит, хуть ыран, хуть паян.

*1957*

## СЎРĔК КĂМĂЛ

Калаçатăн — хыттăн.
Куçу — сарă-симĕс.
Кăмăлу та... япăх пулмалла.
Мĕншĕн эп шут тытрăм,
мĕншĕн эпĕ тивĕç,
мĕншĕн эп сана юратмалла?
Урăххи ман пурччĕ,
уйрăлса ал сулчĕ,
кайрĕ, таврăнмарĕ каялла.
Чун-чĕре пушанчĕ.
Иксĕлчĕ-шим вучĕ?
Малалла мĕнле пурăнмалла?

*1957*

## ПАЛЛАМАН ХĔРАЧА

Кам ку кӳршĕсен хĕрачипе?
Çуркунне пек çамрăк та чипер.
Калаçма-кулмашкăн та пĕлет
инçетри савнийĕм евĕрлех.

Вăйă салансассăн, юлташа
вĕсемпе эп кайрăм юнашар.
Тепĕр хут тĕл пултăм ир çинче, —
çул выртать-мĕн хĕрĕн пит инçе.

Хальхинче каймарăм юлташа,
ăсатма утмарăм юнашар,
пăхса юлтăм ăшшăн кулянса,
савние пĕр вĕççĕр асăнса.

*1957*

## ВĂРÇĂ

Нихçан манаймĕ вăл: ăсатрĕ
хитре ирпе ик ывăлне,
кăштран — вĕсенĕн ашшĕне.
Вăрçма, çĕнме йĕрсе ăсатрĕ
хĕрĕх пĕрремĕш çулхине, —
чечен сăн-питлĕ лăпкă амăш,
чунтан юратнă ырă амăш.

Тамăкри пек вут-тăвăл урчĕ...
Шыв, йывăç... йăлт çунатчĕ çав.
Çухалчĕ ашшĕ хăй. Пуç хучĕç
ывăлĕсем-çуначĕсем.

Тăшман арканчĕ. Ăшшăн кулчĕ
Çĕршыв-анне: ун сачĕсем,
уй-хирĕсем, вăрманĕсем...
Анчах та паттăр ачисен
ытла та йывăр ыйăх çав,
нихçан вăранмĕç, нихăçан.
Çаплах кĕтеççĕ амăшсем,
çаплах... Шур çӳçлĕ аннесем.

*1957*

## АШШĔСĔР ЮЛНИСЕМ

«Çарпуçĕ», малтикас ухмахĕ,
килетчĕ кĕрлесе хаяр.
Камсем аттеллĕ тытăçма-и,
атя, пуç сывă чух, тарар.

Пĕрмĕш «етрех» мана лекетчĕ.
Атте, фронтран килсен, текех
хут пек шурса, чăлах çӳретчĕ.
Пурĕпĕрех: атте — аттех.

Эп çĕмрĕк сăмсапа кĕреттĕм
куççуль çăтса анне патне.
Анне те манпала йĕретчĕ,
анчах та мана мар шеллетчĕ,
шеллетчĕ... леш ачасене.

Аттесĕрри епле нумайччĕ,
усалччĕ аттесĕррисем.
Халь эпĕр ӳснĕ ĕнтĕ, каччă,
вăрçмастпăр «юнлă вăрçăсем».

*1957*

## ПУРНĂÇ УЛМИ

Çĕрулми шутласа тупаканĕ, тупса пĕлекенĕ
ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă.
Тиесе, караппа океан урлă кӳнĕ
Колумбпа унăн йышĕ — мухтавлă.

Çĕрулми ларттарса халăха тарăхтарнă
ăслăсем те мухтавлă.
Тĕлсĕр кутăнлашса пăлханмашкăн çĕкленнĕ
пур айван та ылханлă.

Çĕрулми пулмасан, эп пулмастăм,
выçăпа шыçăнса каçăхаттăм.
Эсĕ те касăхаттăн, ялйышăм,
е пĕтеттĕн вилсе, пурнаймастăн.

Ленин, парти, юратнă çĕршывăм
вилĕмсĕр те мухтавлă.
Гитлер, ун йыттисем, вĕсен юнĕ
витĕр ылханлă.

Çăмарта, çăкăр, аш вырăнне эсĕ пултăн,
çĕрулми, кăрахмалăм...
Пĕтĕмпе çĕрулми эп: ӳт-пӳ те, ăстăн та.
Кам çакна ăнланать — мухтавлă.

*1957*

## ФРОНТОВИК СĂМАХĔ

Сана усратăп чĕрере,
Çĕршыв-анне, телейлĕ эп.
Мĕскер туса мĕн ĕçлемесп,
ман уссăм йăлт — тăван çĕре.

Яш вăхăт иртрĕ вăрçăра,
анчах та маншăн ку шел мар.
Паянхи кун вăй-халăма
мире сыхлас ĕçе хурап.

Паян та эпĕ фронтăмрах.
Умра тăшман курмасăрах,
хăватлă «танкăмпа» çĕмреп —
уçман çĕрсем уçса çӳреп.

Ăнса пулать те тырă-пулă,
çав тери ăшă ман чуна:
Çĕршыв тата хăватлă пулĕ,
Çĕршывăма мухтав сунап.

Шăвать мăнаçлăн хир карапĕ.
Уй-тинĕс вĕççĕр, вĕçĕ çук.
Карап тытма та пултаратăп
танкпа илмешкĕн май çук чух.

Ахаль хăйрать шăлне тăшман.
Пире çĕнен вăйсем пулман.
Ĕçлеççĕ пирĕн юрласа.
Юта çапаççĕ кар тăрса.

Сыхлавçă, ĕçлекен те ывăл —
эп сан ялан, çĕршыв-анне.
Ыйтан-тăк пурнăç манăнне,
парап ăна, эс çеç юл сывă...

*1957, июнь*

## ХĔВЕЛ

Тухнă ирех, çĕрĕпе каннă хыççăн,
ту урлă каçасшăн.
Чи юлхав вăкăрне утланса
тăвалла вăл хăпарнă.
Çулĕ начар-ши, вăкри вăйсăртан-и,
халь тин çӳле çитнĕ.
Чăн тӳперен аяла савăнса,
çунтараслăн пăхать вăл.
«Ай, вĕри, апапай! пĕçертет-çке хĕвел», —
ачасем тĕлĕнеççĕ.
Сулхăна пытанать пур чĕрчун;
тӳсме çук шăрăх, пăчă...
Ту çинчен аннă чух, кăшт пырсан,
вăкăрне хуса ячĕ.
Йăлăхрĕ сĕтĕрĕнсе,
шур куян утланса хăлхинчен çатăрларĕ.
Анчĕ вăл сиккипе, —
ывăннă, ыйхă килнĕ, килте те кĕтеççĕ.
Этемсем салхуланчĕç:
«Тата тепĕр кун иртсе кайрĕ».
Çĕр çинчи йывăç-курăк, мĕнпур чĕрĕ чун
шăппăн çеç ыйха путрĕ.

*1957*

## ПУШАР

Çӳллӗ каланчча енчен,
кӑнтӑрла-и е çӗрле,
тимӗр сассине илтсен,
кӑрт! сиксе илет чӗре.

Ку — чунран шаккать сӑнавçӑ,
асӑрханӑ та вута.
Васкӑр! Вут асать! Çунаççӗ!
Хӑвӑртрах! Мӗскер тата!

Вӗçрӗ-мӗкӗрчӗ машшинӗ —
иртрӗç хурçӑ шлемлисем.
Тухрӗ чупрӗ ытти çынӗ.
Ӗрӗхтерчӗç лашисем.

Васкаварлӑн сӳнтереççӗ.
Хурçӑ шлем вута кӗрет.
Шыв сапаççӗ е сӳтеççӗ
çулӑмӗ сӳнмесӗрех.

Хӑрӑм, тар питре. Хуралнӑ,
çуннӑ, ӗннӗ тумтирсем.
Хӑшӗн ал-ури суранлӑ.
Çӳçӗ çуннӑ теприсен.

Çӗнчӗç ак: пушар лӑпланчӗ,
юлашки сӳнет хӗлхем.
Сӳнчӗ вут. Хурал хӑварчӗç
çухатмасӑр тимлӗхе.

...Çавӑн евӗр халӑх эпӗр —
вут хыпсан тӑван çӗре,
кар тӑратпӑр, сӳнтеретпӗр,
çӗнтеретпӗр ӗмӗрех.

*1957, июль*

## ПЫЛ ХУРЧĔСЕМ

Пахчара хурт сĕрлет.
Мĕкĕте тĕлĕрет.
Çывăрать çакăнта
кашни кун сулхăнта.
Ах! Мĕскер? Мĕкĕте
çухăрса ячĕ те
йăпăр-япăр тарать
урама пахчаран.
Çапкаланчĕ пĕрех,
кайрĕ ӳкрĕ çĕре,
макăрать, çухăрать:
— Ай-ай-ай! Хурт сăхать!
Сĕр-сĕрлеççĕ хуртсем
кахала йĕплесе.
«Пĕрехмай çывăран,
ĕçлемесĕр пурнан,
пахчара тек ан пул,
сăрă хурт!» — теççĕ пуль.

*1957, август*

## АВГУСТ КАҪӖСЕМ

Кун иртрӗ. Хӗп-хӗрлӗ «ҫатмашӑн»
чупмастӑп вӑрмансем хыҫне, —
сарри ҫӗкленчӗ сӑнамашкӑн
каҫхи ҫӗр пичӗн пурнӑҫне.

Клуба, вӑййа васкатӑп эпӗ
ҫимесӗрех, ӗҫмесӗрех.
Ан тив, ыйха нумайӑш путчӑр,
эп ыйхӑсӑр ҫӳрем пӗрех.

Киле ялан тухса утатпӑр
шур ҫивӗтсемлӗ Машшукпа.
Тӗлне ҫитсессӗн, хӑвӑрт, ма-тӑр,
калинккине уҫать шур бант.

Кӗрсе тарать те уямасӑр
пуҫтах кӑна ҫав хӗрача,
тирексенчен инҫе каймасӑр
ҫулҫа итлетӗп ҫӗр каҫах.

Мӑнаҫлӑ тинӗс пек уя та
сӑнатӑп, ылтӑн пулнӑран...
Ҫанталӑкӗ капла уяр та,
час пӑсӑлма та пултарать.

*1957*

## ШКУЛ УМĔПЕ

Тӳпе сăн-пичĕ уçă, çут-кăвак.
Паян тĕнче уйрăммăнах хитре.
Атьсем хавхаланса, кула-кула,
шкула килеççĕ сакăр сехетрех.

Пит-куçсенче вĕсен хĕвел вылять.
Тумсем — çĕнни, алра — чĕр чечексем.
Илтетĕп ушкăнра эп çывăх ят,
юлатăп кулянса, пуçа чиксе.

Хăйне курас тесессĕн, инçе каймалла.
Пыраймăп эпĕ — аннем чирлĕ-çке...
Аван пĕлсех те, тусăм, кăмăла,
эс хирĕçрĕн, çырмастăн нимĕскер.

Эп шкулăм умĕпе иртсе каяп.
Ырă сунса ват тополь ал сĕлтет.
Мăнаç пике, çав тополе паян
асна хуть ил эс çав инçе çĕрте.

Эп шкул умĕпеле юри каяп.
Нумай-и-ха, кунта чупаттăм эпĕ те.
Халь çак йăлтах тăрса юлать кая,
ват тополь чарăнмасăр ал сĕлтет.

*1957*

## ÇУРАЛНĂ КУН

Ташлать сив çумăр чăрсăр ташă
е алхасать чарусăр çил.
Апла пулсассăн та, юлташăм,
кĕрхи çак вăхăт — чун уççи.

Çĕн саманан çуралнă кунĕ
вăл пирĕншĕн — чи савăк кун...
Халăхăма чăн пурнăç кӳнĕ
Октябрь, ӳсет мухтавлăху.

Сан хыççăн кайнисем пит йышлă,
телей туптаççĕ пур çĕрте.
Тивлетлĕ саманамăр, йышăн
чи чыслă парнесем пиртен.

Ĕçе пули-пулми тумашкăн
эпир тĕллевсĕр-мĕнсĕр мар.
Пин-пинĕн,
пысăккăн,
хавассăн
утатпăр коммунизма.

*1957*

## КĔРКУННЕ

Сисмерĕмĕр, кайса çухалчĕç
çуллан хаваслă кунĕсем.
Сирень çеçкиллĕччĕ çут савнăç.
Сисмерĕмĕр, кайса çухалчĕ.
Ма урăх вăхăтсем пуçланчĕç,
тăрна сассиллĕ вăхăтсем?
Сисмерĕмĕр, кайса çухалчĕç
çуллан хаваслă кунĕсем.

*1957*

## ЧИСТАЙ ПАРКĔНЧЕ

Кĕтсе ларатăп эп темччен
Чистайăн ватă паркĕнче.
Кашни иртен çынна сăнап
тĕл пулмăп-и тесе сана.
Мĕнле пулсассăн та, çак парк
мана пит ют-ха вăл çапах,
туймасть кама эп кĕтнине
пирус ĕмсе çине-çине...
Мĕн чул кĕтсе ларсассăн та,
килесси çук пуль эс кунта.

*1957*

## ЮРАТНĂ ЮЛТАША

Ыр кун, ыр сехет, Кĕтерук!
Мĕнле иртет яш вăхăту?
Пĕлмешкĕн çыратăп çыру,
çырмашкăн хушать юрату.

Сана курсанах, çамрăк пуç,
ах, сулăнчĕ санăн енне,
çап-çут шăрçа пек мăшăр куç
сăнарĕ çунса илемне.

Шутла: çакă çут тĕнчере
юрату — пĕрехçех ăрăскал.
Çавăнпа çамрăк чух ĕмĕре
иртерер савăнса, юратса.

Ан çиллен-ха мана, ан çиллен:
асăнмалăх çырап сан патна.
Ах, çиçет яшă чун çиçĕмле,
вутăн-хĕмĕн çунать, ан ятла.

Тĕрĕсне эс кала-ха, итле,
юрату пулĕ-ши ман санпа?
Сар чечек пек ĕлккен сăн-питне
йăлкăштар хĕвел пек кулăпа.

Пурăнсам юратса. Ун чухне
куçĕ сан илемӳ ман çине.
Йышăнсам юратас тенине,
ăплантар ялкăшан чĕрене.

*1957*

## ИКĔ ХУРĂН

Ача чух лартсаттăмăр та хурăн,
асăнмалăх, иккĕ юнашар,
эс каларăн: «Туслăх, ĕмĕр пурăн».
Эп чĕнмерĕм, кайрăм шухăша.

«Туслăх, ĕмĕр пурăн». Шеп. Илемлĕ.
Пуçăмран тухмарĕ тахçанччен.
Ун чухнех эп шухăшпа тертленнĕ
кăмăл лăпкă мар самантсенче.

Унтанпа — миçе хутчен çаралчĕ,
çĕнĕ тум туянчĕ миçе хут
икĕ хурăн? Пĕлĕтсем çăралчĕç,
хăврĕ юханшыв мĕн чухлĕ хум?

Инçетре тĕл пултăмăр, сисмесĕр,
ĕçсемпе пырсан, мăн хулара.
Палламарăн... Çук, палларăн: «Эсĕ,
кажется, Мишша?» — тесе тăран.

«Туслăх, ĕмĕр пурăн» — шеп, илемлĕ.
Пуçăмран тухман вăл халиччен.
Ĕмĕрех эп шухăшпа тертленнĕ
чунăм тăвăлнă самантсенче.

«Туслăх...» Шеп! Ахаль виç утăм турăм
хыпăнса ӳксе эп сан енне.
Кун çинчен пĕлмеççĕ икĕ хурăн,
туслă пурăнаççĕ ĕмĕрне.

*1957*

## КИЛТЕН КАЯС УМĔН

«Малти кустăрмасем хăш еннелле кусаççĕ,
хыçалтисем те çав йĕрпех чупаççĕ.
Çапла çав... Урăхла мĕнле тата?» —
пуплет аннеçĕм, ыйăхне татать
ларса ман пуç вĕçне, тенкел çине,
эпĕ килтен тухса каяс чухне.

Йăвашшăн хăйă çунать —
аннемĕн ăш çунать.
«Çӳрен çĕрте çын пек çӳре, ачам, — тесе мана
вăл систерет, — ятна ан яр,
сан хыççăн кайĕç шăллусем, ăнлан...»
Аннеçĕм, ăнланап.

*1957*

## НОВЕЛЛА

Манпа юратура ăмăртакан
нар питлĕ ăслă Александр,
çула кăштах пӳлет пулсан та,
ачи сăпай, маттур, аван.

Тӳр кăмăлĕшĕн хисеплетĕп
çап-çамрăк лăпкă ачана.
Вăййа манран малтан çитет те,
эп пăрăнатăп — курсанах.

Унпа юлатăр эсĕр иксĕр
çурхи тĕнче ытамĕнче.
Каятăп эп, каятăп ирĕксĕр,
чун хытарса çын умĕнче.

Пĕлетĕп: эсĕр тупа тунă
мĕн ĕмĕрне сивĕнмессе.
Тен, уйăрсан уйăрайĕ тупăк,
пӳрнĕрсенче пур çĕррĕрсем.

Пĕр шанчăк та кĕтместĕп эпĕ.
Киле утатăп улăхпа.
Савнийӳнтен иртесчĕ, тетĕп,
ăсхакăлпа, маттурлăхпа.

Çирĕплĕхпе хавхалану та,
сăпайлăх, чунăм ырату
унăннинчен çӳлте ман пултăр.
Ан сӳнтĕр ĕмĕр — юрату.

Мана эс ик сăмах хушни те
савăнтарса вăйран ярать.
Эп сансăр питĕ тăлăх, питĕ —
юр-пăр хуплать сăвва-юрра...

Анчах ку мĕн? Килсе тухатăн
мăн хуларан... упăшкапа.
Хай эп тата леш Александр
сикетпĕр тĕлĕнсе шартах!

*1957*

## МАНМĂП САНА

Ĕнтĕ вăхăт иртет, вăхăт иртет,
юрламасть тăри те уй-хирте.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

Кайăк хурсем вĕçрĕç кайри мала.
Ĕнтĕ уйрăлатпăр, каймалла.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

Сад пахчи виç хутчен çеçке тăксан,
сар хĕвел пек килĕп çаврăнса.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

*1957*

# ĂНЛАНАЙМАСТĂП

Шкул садĕнчи кервен çуртра
хăйçути çук. Алкумĕнчи
ыйхăлакан хунар çеç, тин
курса мана, чĕнет ятран:

«Мишша, эккей, хальччен ăçта
çӳрен пулать-ха? Çут тĕнче
хăçантанпа — тĕлĕксенче.
Тахçан çыврать пуль Тамуç та».

Вăранчĕ шăрчăк кĕтесре.
Сывах-и-ха, сывах-и, шăрчăк...
Кунтахчĕ-çке, кунтахчĕ шăрпăк.
Çутса пăхасчĕ, ӳкесрен.

Тĕлне тупса, шаккатăп алăк.
Пĕр-иккĕ-виççĕ шаккасан,
илтетĕп лăпкă сасă: «Кам?»
Чĕнеп. Хуллен. Сас уйăрмалăх.

Тамара, çарапуç, çарран,
тухать те уртăнать мăйран.
Шап-шур кĕпи — йӳле кĕпе.
Пăхап та: çын юмахри пек.

Çур сехетрен вăл ăсатать.
Каятăп эп инçе-инçе.
Шур хурăнсен хӳтлĕхĕнче
ыйтать: «Хăçан килен тата?»

...Çĕр хут, пин хут çакна куратăп,
ăнланаймастăп ниепле:
епле майпа, çапла пулса та,
мана вăл сутрĕ-ха, епле?

*1957*

## ИНÇЕТРЕН

Вăрçа мар, атте пек,
стройкăна эпĕ кайнă.
Пурпĕрех сăнунта
пысăк тунсăх тăрать палăрса,
лăплансамччĕ, аннеçĕм,
малашпа савăнасчĕ халь санăн,
хуйхă-суйхăсене
манăçа хăварса.

Йăвунтан çамрăклах
вĕçсе кайнă пулсан та,
йăнăшмасть-ха чĕппӳ,
ан кулян,
ан хăра.
Сăнару кăтартать ырă çул,
тĕрĕс çул хуть хăçан та,
сăнару çăлтăрла çуталать асăмра.

*1957*

## ШАНЧĂКЛĂХ

Çулталăк çурă çак портра
кĕтсе илет те ăсатать
юлташăма пĕр Атăл хĕрĕ.
Сахал-и тĕнчере кăтра?
Кăвак-кăвак куçсем тата?
Чечен пӳ-си? Çĕршер, пиншерĕн.
Портсем те йышлă Атăл çиййĕн.
Никам чармасть: çĕнрен туп, сивĕн...
Анчах ун пек çын мар юлташ,
хам пек вунçиччĕри чăваш.
Çулталăк çурă çак портра
кĕтсе илет те ăсатать
юлташăма сар вырăс хĕрĕ.
Рейс тăршшĕпе тус — ман патра,
сăввисемпе шалт аптратать.
Тек тунсăхлать хăй, кунĕн-çĕрĕн.
Тунсăхлама тур чăтăм патăр! —
хирĕçлемест шӳт тунине...
Пăхса тăмашкăн юрататăп
вĕсем епле тĕл пулнине.

*1957*

## ÇĔНĔ ÇУЛ ЮРРИ

Килет Çĕн çул, туять вăл,
хăй çĕннине туять.
Каять кив çул, каять вăл,
кивелнĕрен каять.

Килех, Çĕн çул, килех.
Ан юл, Çĕн çул, кая.
Кив çул, пĕлтĕрхилле
каях пиртен, каях.

Хĕл Мучине мухтар-и,
Юрпикене ырлар.
Алран-алла тытар-и,
Çĕн çул юрри юрлар.

Залра сип-симĕс чăрăш,
çап-çутă теттесем.
Паян, юлташăм, тăрăш
выляс-кулас тесе.

Ĕçлетпĕр, вĕренетпĕр.
Хăюллă шав-шавах.
Татах çĕклесчĕ тетпĕр
юратнă çĕршыва.

*1957*

## УЙĂХ

Тăратăп сывлама та хăраса
çӳл тӳпене çут уйăх хăпарсан.
Хаваслă эп, хаваслă
ĕмĕрне манмаслăх, —
тăрап куçа чарса,
çут тĕнчене манса.
Ухх... мĕн тери мăнаçлăх,
мĕн тери мăнаçлăх,
мĕн чухлĕ вăрттăнлăх çӳрет унта!
Мĕн чул хăват унта пырса вырнаçнă!
Сăпай мăнаçлăх,
вилĕмсĕр мăнаçлăх,
эп хам та вилĕмсĕр сан умăнта,
эп — иксĕлми, эп çӳллĕ те инçе
çурхи тивлетлĕ уйăх çутинче!

*1957*

* * *

Кантăкран курăнать анлă Атăл,
çырантан пуçланать сĕм вăрман.
Пурнăçа Атăл пек эп куратăп,
анлă пултăрччĕ, вăрăм вăл ман.

Вăрманта аташма та час пулĕ,
çул тупасчĕ, утасчĕ инçе.
Çитĕ савнăç е хуплĕ куççулĕ —
пурпĕр савăк мана çут тĕнче...

*1957*

# Хӗр утӑрни



## ЙĂВАН САЛТАК

*Юмах*

Çичĕ тинĕс леш енче
кивĕ пĕчĕк пӳртĕнче
карчăкпа старик тахçан
пурнăçланă пурнăçа.
Çитнĕ тăнă çитмĕле:
ĕнтĕ вăхăт — вилмелле.

Ватăсем кĕтмен пачах —
çуралать вĕсен ача.
Ачи — ывăл. Тем шутпа
ӳссе кайнă минутпа.
Ачи вăл ачах пулнă,
анчах ухмахрах кулнă.
Ухмахпала мĕн тăвăн:
вăйĕ пур та ăсĕ çук.
Старикпеле карчăкăн
кулянман самант та çук.

Ак ача васкавлăн ӳснĕ,
эрнерен пĕве те çитнĕ.
Арăш-пирĕш вăйлăран,
панă ят ăна: «Йăван».

Ашшĕн пулнă ылтăн çĕрĕ.
Хăйшĕн çеç ун тĕлĕ-йĕрĕ
паллă пулнă. Ачине
вăл калать чĕнсе пĕрре:
«Эсĕ унпала, ачамçăм,
усă та курма пĕлеймĕн.

Сана мар ăна пиллетĕп,
мăнука вăл пултăр, тетĕп.
Хĕн-инкек килсе тухсан,
тинĕсе эс çул тытан».

Пĕррехинче, ак, çĕрле
ĕç килсе тухать епле:
хура хăмăр ват кĕсре
хăм хăмларĕ витере.
Анчах çапрĕ чĕмере,
вилчĕ ирхине кĕсре.
Çав кунах темле чирпе
вилчĕ Йăван амăшĕ,
вилчĕ ырă ашшĕ те.
Вилес умĕн çĕррине
пачĕ хайхи ывăлне.

Йăвана салхулăх пусрĕ.
Ак качакине вăл пусрĕ.
Ватă ашшĕ-амăшне
тирпейлесе пытарчĕ.
Çу та иртрĕ унтанпа,
çитрĕ пĕр çулталăк та.
Çара кайма сасартăк
такам приказ тыттарчĕ.
Пуç усмарĕ çак Йăван,
шикленмерĕ приказран.
Ӳссе çитнĕ ăйăрне
утă-улăм çитерсен,
ылтăн куçлă çĕррине
хăйпеле пĕрле илсе,

тухса кайрĕ салтака
питĕ инçе, аякка.

Хапхаран вăл тухнăччĕ,
умĕнче çут тинĕсчĕ.
Çутă тинĕс хумханать.
Хумĕ темĕн çырăнать:
«Эх, Йăван, Йăван, Йăван...
нимĕнех те эс курман.
Хĕн килсессĕн, ан пытан,
çĕрĕ витĕр ши! тутар».
Йăван хытă тăнларĕ,
пĕр сăмах та манмарĕ,
утне чĕввĕн тăратрĕ,
çавра çил пек тустарчĕ.

Авал çарта чухăна
этем вырăнне хуман,
шарт! çеç çапнă янахран,
вут-хĕм вĕçнĕ куç-пуçран.
Çав вутра çуна-çуна
майĕпен çак Йăвана
кирлĕ таран ăс кĕрет.
Пуçĕнче шухăш çиçет:
«Ăçтан çакна тек чăтас?
Тăшмана хăйне çапас».
Анчах килте Йăвана
май килмерĕ йăпанма.
Ăна чĕрĕллех тытма
патша çарĕ ыткăнать.
Тинĕс юрлать, кăтăрать,
пӳрт пек хумсем кăларать.

Çарсем çитрĕç кăпăрах.
Йăван тинĕсе тарать.
Кĕсъе тĕпĕнчи çĕрри
сиккеленет, туртăнать,
чăрсăрланса, урнă пек
кимĕ тĕпне вăркăнать.
Йăван тинех астăвать,
çĕррине ярса тытать,
витĕр пĕррех шăхăрать.
Çав вăхăтрах, самантрах,
урăм-сурăм шавласа,
тухрĕ шучĕ çук салтак.
Ушкăн-ушкăн кайăксем,
пурте — хурçă çунатсем,
çĕнтерӳллĕн кĕрлесе
вут тăкаççĕ тинĕсе.
Ак Йăванăн хурçă çарĕ
карапсем çинче васкарĕ,
тăшмана çапса тылларĕ,
тĕпĕ-йĕрĕпе вакларĕ.

Анчах ӳкрĕ хăй Йăван.
Унăн кăкăр сывă мар.
Авкаланать, йăванать,
питĕ йывăр Йăвана.
Пĕтĕм тĕнче хурланать:
мĕн пулнă шур хурăна,
саркайăк ма макăрать?
Сĕм вăрман та каш-кашлать.
Аслă çар салют парать —
тупă сасси ян! каять.

Ӳкрӗ, вилчӗ хӑй Йӑван.
Ячӗ манӑҫа тухман.
Тӗрӗс ӗҫшӗн тӗнчере
пуҫ хурсан та, ҫын чӗрех.
Ӑна халӑх хӳтӗлет.
Халӑхшӑн вилни — телей.
Шыраман вӑл чап, мухтав.
Савнӑ халӑхӗшӗн шав
чӑн-чӑн паттӑр пек кӗрешнӗ,
ирсӗр тӑшмана ҫӗнтернӗ.

*1952 ҫул,*
*Саврӑшпуҫ.*

## ПАТТĂР ÇИНЧЕН

*Юмах*

1.

Упăшкипе арăмĕ
пурăннă тет тĕнчере.
Пĕри ĕçке ярăннă,
тепри шăпах чарăннă.
Пурнăç тени, чĕмере,
пыман ытла чиперех,
уксахланă, тайăлнă,
калама та пайăрлăн
пулман уççи-хуппине...
Çакă çутă тĕнчене
килнĕ вĕсем ма? Кала.
Калăп. Итлĕр малалла.
Курнă нуша-парăм çеç
упăшкипе арăмĕ,
пурнăç пулнă сĕм вăрман —
çутă кун, хĕвел курман.

2.

Ылттăн хаклă теееççĕ
ылттăна сăвакансем.
Сывлăх хаклă теееççĕ
пурнăçа савакансем.
Ылттăнăн та хакĕ çук
ăрăскалу пулмасан.
Сывлăхăн та хакĕ çук
пурăнăçу ăнмасан.
Пурнăç пур-и хĕвелсĕр?
Пурăнăç çук хĕвелсĕр.

Пурнăç çук-тăк, мул та  çук,
çавна та-и пĕлместĕр?
Арăмĕпе упăшки
йăлтах çука парăннă.
Юра ернĕ, аптрашки, —
упăшкипе арăмĕ.

3.

Элле таçта аякра,
таçта-мурта, шуйттанра
арçын телей шыранă —
туллиленмен, шăраннă,
хухнă-пĕтнĕ, начарланнă,
хырăмĕ пĕрмай чăрланă.
Пурсуйĕсене ертсе
вăрман тăрăх, уй урлă
вăл çӳренĕ виркĕнсе —
çӳрени те кăлăх пулнă:
супнă, нимĕн тытайман;
пĕрре çакă çын, айван,
темĕскерпе çапăçнă:
пичĕ-куçĕ — чĕп-чĕр юн,
ватă шăм-шакки те ун
ваннă, хуçăлнă; çĕр каçнă,
тăн çухатнăскер, инçе —
сĕм вăрманăн варринче.

4.

Ватсем пурăннă, пурăннă.
Тинех ывăл тупăннă.
Ывăл пит патмар пулнă.
Тавăрасшăн вăл çуннă:

«Атте, атте, кала-ха,
ăçта пултăн, пĕлтер-ха?»
Ашшĕ ăна итлемест,
вилес умĕн пĕлтермест.
Ача татах та ыйтать,
тархаслать вăл питĕрех.
Юлашкинчен леш пайтах
вăрттăнлăхсем пĕлтерет:
«Çапăçрăм эп тискерпе —
икĕ пуçлă çĕленпе».

5.

Кун хыççăн кун, ак, иртет,
ача кашни кун ӳсет —
çăкăрпа тăвар çиет
тата тăрă шыв ĕçет.
Кун хыççăн кун, ак, иртет,
ача çын пулса çитет.
Ашшĕнчен вăл çӳллĕрех,
ăстарах та меллĕрех.
Ун ик çирĕп алăччĕ,
вăйлă та хăватлăччĕ,
хальхинпе шутласанччĕ —
çĕр пăтпала вылятчĕ.
Кунсерен вăл ĕçлетчĕ,
ĕçне лайăх пĕлетчĕ —
сухалатчĕ, акатчĕ
улăп евĕр çав каччă.
Ашшĕ те ун вилнĕччĕ,
амăшĕ те вилнĕччĕ.
Çӳлти турă аллинче
пурăнатчĕ тăр-пĕччен.

6.

Пĕрре халăха каларĕ,
хисеппе чĕнсе лăпкарĕ:
«Халăх тарĕ, юнĕ — ĕç,
вăл туптатăр çивчĕ хĕç.
Тавра хурлăх эп куратăп,
савăнăçа эп курмастăп,
çавăнпа та пуль калатăп:
хуйхă, терт ялан ан астăр.
Эй, халăхăм, халăхăм,
çавă çĕлен-кайăкăн
мĕнпур пуху пĕркине,
мĕнпур пурнăç йĕркине
йăлтах çапса аркатма
турă çырнă-ши кама?»

7.

Халăх, халăх, халăх вăл,
хурçă çирĕп стена вăл.
Ертсе пыра пĕлсессĕн,
хăй тăшманне сиссессĕн,
хăйĕн ĕçне тăвать вăл.
Турри те мар, ним те мар
(кун çинчен юптартăмăр),
хура халăх тăшманĕ
питĕ сăхă патша вăл —
икĕ пуçлă кайăк вăл.
Çунатне каркаласа,
çут хĕвеле хупласа,
хĕвел кăкăрне сăхса,
пирĕн пата чир ярса,

чике тăршшĕ ларттарса,
хĕвел çинче пурнать вăл.

8.

Тĕнчери пур пек халăх,
çак сăмахран курмалăх,
халăх юнне шăратса,
пĕр çивчĕ хĕç туптаса,
паттăра çўле çĕклерĕ.
Паттăр çиçĕм пек çўрерĕ,
çĕлене çапса антарчĕ,
халăхăн ĕçне ăнтарчĕ,
çунтарса кĕлне вĕçтерчĕ,
тарçисене те пĕтерчĕ:
касрĕ, чикрĕ, йăлт вакларĕ —
çĕр çине ним хăвармарĕ.

9.

Пур йăх-яха пĕтерсен,
хуйха-суйха çĕтерсен,
хĕвеле те хăтарсан,
ырă пурнăç çуралсан,
турă патĕнчи рай пек —
саркайăк шăратĕ тек,
аслă халăх савăнĕ,
ташлĕ, юрлĕ... Çавăнпа:
«Пĕттĕр пусмăр!» — терĕмĕр.
Терĕмĕр — çĕнтертĕмĕр.
Акă тин ĕнтĕ мăнаçлăн
çĕнтерўллĕн те хаваслăн
тытăнать пурнăç тумашкăн,
юхăннине юсамашкăн,

киввине йӑлт ҫӗнетме,
ҫуккине йӳнеҫтерме.
Чӑн та, пурнӑҫ чиперленчӗ,
ҫурхи сад пек чечекленчӗ.
Ҫут хӗвелӗн ӑшшинче
савӑнать тӗнче!
Эпӗ хам та унта пултӑм,
Улӑп паттӑра та куртӑм:
вутран ҫивӗчӗ хӗҫне те,
ирӗк халӑхӑн ӗҫне те...

*1952 ҫул,*
*Саврӑшпуҫ.*

## ХĔР УЙĂРНИ
*Поэма*

1.

Ах, çав музыка... Ах, çав эрех...
Урăлсан та, шухăшсем пĕтмерĕç.
Лăплансан та, туйăмсен пĕлтерĕш
юлчĕ, çунатланчĕ çаплипех.

Ӳсĕр чух темле майпа пĕрре
чун çемçелчĕ те, поэма çыртăм.
Тем суйлантăм... куртăм тĕтрере
ангела та, шуйттана та ылтăнăн.

Уçăмланчĕ пĕр тискер сăнар:
эсĕ мар, тăванăм, чун ӳпкевĕ,
эс ху мар чысна çĕре ӳкернĕ,
Марьене те пăснă эсĕ мар.

Туйăмсен мĕлки! Çухал, çухал...
Ан мухтан-ха, ан мухтан, Мария,
эсĕ мар çапах тĕнче варрийĕ,
эсĕ ман чĕрешĕн халь сахал.

Çакăн пек шутлать çур пуç, çуррийĕ
хуран пек сиксе вĕрет: «Мария
Павăл-савăла пулмасть, пулмасть.
Эс, Мария... ман тĕнче варрийĕ!»

Тапранать пуçра хĕрӳллĕн латсăр
харкашу, чамасăр кӳлешӳ.
Лявапа ларатпăр та шутлатпăр:
кĕçĕр «савăла» тăватпăр çук.

Çимĕк каçĕ. Пуçăмра, ак, Вакх
астарса ярать леш синкере.
Павăл... Сăптăрам-и-ха хамах.
Çук, Лява малтан пырса кĕрет.

Çапнă та ÿкернĕ Павăла.
Павăл шутламан та парăнма:
мĕн тесен те, икĕ çул вăл аслă,
юласах килмен ун парăма.

Лявана ая персе чикет.
Эп, çакна курса, картах сикеп,
тăп чарса лартатăп баяна:
утăръя, çăлар-ха Лявана!

Тăнн! тутартăм. Павăл çухăрать.
Хай, çăлса илетĕп çухаран,
пуçпала паратăп янахран.
Халĕ ĕнтĕ каччă ахăрать.

Кам чарать пырса? Кай, кай, ан çакăн,
шкул директорĕ Лĕнькка Куçаркин,
элегантлă çамрăк педагог.
Яр, ан пăр алла, ан пăр, хуçатăн.

Павăл тарчĕ. Иккĕн Лĕнькkана
çавăрса çапатпăр лап! кăна.
Кĕтесри кÿлленчĕке çапатпăр —
нихăçан типмен лачакана.

Çиçĕм хăвăрт, теççĕ. Çиçĕм мар...
Ман кĕпе те пĕртте çурăлман.

Сан, Лява? Айта, кайса çывратпăр...
Эп, Лява, телейшĕн çуралман...

Ир-ирех кĕрлерĕ педсовет.
Педсовет çиет, тире сĕвет.
Аттене ятлаççĕ: «Ху вĕрентнĕ.
Ху ĕçтернĕ... Тĕрмере çĕретĕн!

Хĕрĕхмĕш çулта çакланнă пек,
çĕнĕрен чикетпĕр. Пĕтрĕн эсĕ».
Хуравлать атте: «Ун чух — репресси.
Айăпсăр-качкисĕр... Çавăн пек».

«Вăрçăран та, — теççĕ, — килтĕн сывă».
Леш калать: «Ак, курăр аллăма.
Пуçăрта арпа-и сирĕн, хывăх?
Шĕшлĕшĕн илетĕр чунăма!»

Ахаль чух йăваш чăваш, тинех
сывă аллипе кăтартрĕ чышкă.
«Слышь-ка, — теççĕ хайхине, — ты, слышь-ка,
чун туртать-им прокурор патнех?»

Сехетрен килсе кĕрет Пăлюк.
Лявине кăкарнă. «Çакăр, — терĕ, —
ашшĕ Гитлер вăрçинчен килмерĕ.
Хам — вилеп. Пăхмашкăн халăм çук».

Йăлтăр миталне çатлаттарать
педсоветăн сĕтелли çине.
Ман Лява йĕмест, кулать ярать,
курман мар вăл педсоветсене.

Педсовет кĕрлерĕ виçĕ кун.
Тек пымасть унта атте-анне.
Аçтаха Наçтаçĕ — йытă чунь —
завучра тăратчĕ ун чухне.

Хăрататчĕ — шкул чĕтре тăрать.
Хăрататчĕ пĕтĕм ялйыша.
Эпĕ пултăм тăхăр «допросра»,
йăлт каларăм хамăн шухăша...

Кунĕпе ислетрĕ — тур вăй патăр
ывăлне касмашкăн аттене.
Тепĕр кун çĕклентĕм сывă, паттăр,
чылайччен тăнларăм аннене.

Допросра каларăм: «Эсĕр кашкăр,
кашкăр çеç çапла усал тăвать.
Эс, Лĕнькка, шăпрах, ытла ан кăшкăр,
района ярап ку ыйтăва.

Пурсăра та шăпăрпа шăлаççĕ.
Пит кирлех-тĕк, инçе мар Хусан.
Халь текех элексене шанмаççĕ,
такамран та кăлараç хуса.

Юлташран ыйтатпăр каçару,
Лĕнькаран — вилсессĕн те ыйтмастпăр,
тĕлсĕр пăхланма вăл хăй те маçтăр,
йĕксĕке кĕтет-ха тавăру.

Вĕренни пирки паратăр справка.
Пур предметшăн та «отлично» чух,

пурсăрăн çине те лач! суратăп.
Çакă шкулсăр урăх шкул-и çук?»

...Поведенипе «пĕрре» лартса,
çичĕ предметпа тыттарчĕç те экзамен,
шкул çине хăвартăм ал сулса.
Районти шкула кĕме ăсантăм.

Çич экзаменран пĕри — «тăваттă».
Аçтаха Наçтаçĕн ĕçĕ ку.
Аксура, хай, «объяснять тăватăп».
Çут тĕнчен ыр секретарь те пур.

Йышăнчĕ шкула шкул секретарĕ.
Штош, вĕрен, тет, сывлăху пулсан.
Пăт! пăт! пăт! куçран куççуль тумларĕ.
Хурланса-ши? Е — хыт савăнса?

Урăллах темле майпа пĕрре
чун çемçелчĕ те, поэма çыртăм.
Тарăху капланчĕ чĕрере —
тарăхсан та чун юрлать-им çыннăн?

2.

Ял кĕр-кĕрлет — туй пулмалла...
Çитсе тăратăп час киле те.
Çăпатана туяпала
шак-шак! шаккатăп та, кĕретĕп.

Атте-анне туя васкать.
Эп, çикелеп те, — урама.
Лява та тухрĕ купăспа.
Тайкаланать хăй, урă мар.

Кĕретпĕр Нинуксем патне.
Улах. Нинук тата Тамара.
Нини писев сĕрет питне.
Хура кăранташне тупмарĕ.

Приколкипе айкашнă май
ман çинелле пăхать хăй вăрттăн.
Пăхин. Ун пеккине нумай
тĕл пултăм, манăçа хăвартăм.

Куçа илмесĕр, сывламасăр
урăххине сăнатăп эп.
Чăн... Тунсăхлать... Хăранă пек —
ун куçĕ. Кулăсăр. Хавассăр.

Мĕн пулнă? Ма чĕнмест саламлăн?
Çапла вăл ларĕ хăçанччен?
Сĕтел çине хĕр чавсаланнă;
асап — ик пысăк куçĕнче.

Асап... вунпиллĕкрех...
— Тамара!
— А?
— Кайрăмăр-и çаксемпе?
Çăматă тăхăнам та мар эп,
ботинкăпах тухам сан пек?

Хуткупăсне Лява йĕртет.
Сасартăк алăк шăлтăрт! турĕ.
Лĕнькка-директор, Мĕкĕте,
Çеруш та Ĕрешит тете
кĕреççĕ... Пурте вилĕ «урă».

Тамарăна тытасшăн пулчĕç
«савни» тесе мăшкăлласа:
— Курнăçланать-ха, кишĕр пуçĕ,
епле çӳрет кут алласа.

— Сторово! — теççĕ Лявана. —
Сторово, хаклă пуçана.
Тухса ларар та çатана,
шăпах пулатпăр пĕр çуна.

— Сторово, куккасен Мишши! —
тесе ал пачĕ Ĕрешит.
Алне эп шатăр! чăмăртарăм,
чĕнмесĕрех ирттерĕп-ши?

Туртса çапатăп. Ялт! сикет
краççын ламппи. Çапап тепре.
Лява тăрать те кĕтесрен
шаплаттарать купăсĕпе.

Кĕрслетрĕ Ĕрешит. Каппут.
Тухса тарать Çеруш-улпут.
Лёньвка-директор, Мĕкĕте —
таçта çухалнă. Тĕсĕ çук.

Ытла ахлатнипе, хĕрсем:
пуçне шăтарчĕç пулĕ, терĕç.
Шыраççĕ бинт та йод хĕрсе,
анчах юлман-мĕн йăхĕ те.

Тарăхнипе сиксе чĕтретĕп.
Пĕррех илеп те çухаран,

тухса перетĕп алăкран.
«Чĕресĕр, — тет Нинук, — чĕресĕр».

«Чĕресĕр? Юрĕ. Сывă пулăр.
Ак таврăнĕç чĕреллисем.
Хĕрхенĕр, шеллĕр, выльăр-кулăр.
Эп уттарам, черет çитмен».

Тамара куçĕсем — йăл-ял!
Карт! туртăнчĕ, сăмахĕ çĕтрĕ...
Тулта — туй-çуй. Кĕрлет çур ял.
Туя каяс — сăхманăм çĕтĕк.

Туя каяс — унта Маруç,
тахçан эп хам тиркенĕ фея,
мана кӳрет халь «тавăру».
Халь çак хĕр — Павăлăн трофейĕ.

Çутăличчен чĕретĕп хут.
Ним çырăнмасть. Лап! сӳнчĕ лампа.
Сисместĕп хам та, сĕнк пулатăп...
Çук юрату, çук тарăху.

...Иртет эрне, иртет çур уйăх.
Çаплах чун сӳрĕк, пуш-пушах.
Пур унăн хуйăх, хуйăх, хуйăх;
ыр ĕмĕт, савăнăç — çукрах.

Эп шанчăка йăлтах çухатрăм.
Эп кĕтнĕ юрату — суя.
Вăл проститутка пек хĕрарăм, —
питрен сурсассăн та, кулать.

Пăсăлнисем тултан хитре,
текен сăмах ахаль тухман-мĕн.
Улт-çич савниллĕ çав «хĕре»
пĕр эпĕ çеç тытса курман-мĕн.

Тулли ун çӳллĕ кăкрисем.
Сăпсанни пек çинçе ун пилĕк.
Вăл ман умран тепре иртсен,
ӳт тунсăхне путса эп вилĕп.

Çав пулĕ пĕтĕм юрату...
Миçемĕш эп пикен, миçемĕш?
Ку — ӳт тăранманни-ши ун
е «дух» тенин шырав-вĕçевĕ?

Кама шырать? Мĕнле çынна?
Ăс-кăмăл улăпĕ, о, Лермонтов,
сан  куç çак пикере çунать.
Умран ăна нихçан çĕтермĕттĕм.

Тамара, хуйхăллă Тамара,
эп — çăмăлттай, тӳрккес этем.
Тек юрату ыйтасшăн мар эп.
Пĕлетĕп: урăх çын кĕтен.

Ман пеккисем тивĕçтереймĕç,
тивĕçтереймĕç леш «туссем».
Чун ирĕк чух çӳлтен çӳле вĕç,
хĕвел патнех çитес тесе.

Анчах мĕн-ма каллех тапранчĕ
манра вут-тăвăл, çил-тăман?

Мĕн-ма чун ыратнин хăвачĕ
кĕрлет ӳкĕнӳпе пĕртан?

3.

Ак Çирĕкле персе çитетĕп
инкогнито пĕр шăмат каç.
Кĕреп те хăвăрттăн иртетĕп,
залра пулаççĕ шăпăртах.

Лява чĕрçиййĕнче — Тамара.
Ав Аçтаха Çерушĕ... Чун...
Ав Мĕкĕте... Никам тăмарĕ.
Чим... Ĕрешит тете... Вăл — çук.

Зал варринчи улт-çичĕ мăшăр
тăп чарăнчĕ мана пăхса.
— Ухх, — терĕ баянист, — ухх... ăшă,
канма та маннă каласа.

Ларакансем çĕкленчĕç кăпăр.
Йăрст! тăчĕç капланса ума.
Лява кулса тухать, ăнман:
— Ну мĕн? Салам, салхуллă кăйкăр.

Тамара çĕрелле пăхатчĕ.
Картах çĕклерĕ те пуçне —
чуна касса каять вут хачă,
анчах эп çĕнтĕм хĕр куçне.

Зал варрине хĕрпе тухатăп.
Çăвар карса юлать Лява.
Баян калаканни, Туктаров,
вальсне кĕрлеттерсе ярать.

Усал кухвайккăма хыватăп.
Çап-çутă атă кунчине,
кăшт авăнса, кăрт-карт! туртатăп.
Пурте пăхаççĕ ман çине.

О, иксĕлми мухтавлă вальс,
яш пурнăçăн таса тивлечĕ.
Ах... урасем çĕре тивмеççĕ.
О,  вальс...

«Тамара, пурнăçăм... Куççулĕм...
Нарспиçĕм... Аслă, çӳллĕ-çӳллĕ
ман чун. Эп — эсĕ халь. Эс — эп.
Мĕн виличчен çапла эп çӳрĕп.

Сан асапу вăл ман асап.
Сан ĕмĕтӳ вăл манăн ĕмĕт.
Пулар хăюллă та таса, —
кунçул сунать пăлхавлă ĕмĕр».

Тамара çакă шухăша
куçран пĕрре пăхсах ăнланчĕ...
Тăхта! Кам йытă? Хăшĕ — анчăк?
Лява? Мĕскер вăл çухрашать?

Ах, çĕçĕпе... Кунта килесшĕн.
Туссем ямаççĕ. Питĕ шел.
Каятăп хам, шуйттан илесшĕ:
— Перчатки брошены! Дуэль.

Çат! çатлатать ик перчетке
залри вĕр-çĕнĕ урайне:

— Кам секундант? Ма çĕçĕпе?
Тен, чышкă, çĕçĕ вырăнне?

Лява мана питрен сурать, —
ал тутрипе майпен çеç шăлтăм.
Ярса илетĕп çухаран.
Çапмастăп. Юрĕ. Пур-ха чăтăм.

Кайран Тамара ăсатать
вăрман хĕрне çити мана.
Эп... Хамран хам эп ăс ыйтап,
тем каласа сĕм вăрмана.

Тамара тупсăмне пĕлесшĕн
чĕре те, пуç та пăтранать:
«Кампа çыхлантăм эп? Вăл мĕншĕн
вунпиллĕкри хĕр пек те мар?

Кампа çыхлантăм? Куçĕнче
мĕн-ма вĕçĕ-хĕррисĕр хуйăх?
Çапла эп ыйтăп хăçанччен,
хăш самантчен ухмахлăх туйăп?..»

Хуравлаймастăп Аксура та.
Çав хĕр магнит пек туртнине
сиссе илетĕп те, куратăп —
çаклантăм тигр аллине.

4.

Кунсем тăманлă та хавассăр.
Класра ларатăп — кăсăк мар.
Юлташ кĕрет — çыру хăварчĕ.
Вулатăп... Ырă мар хыпар:

«Эс кайсанах Тамарăпа
çӳре пуçларĕ Мĕкĕте.
Тамари те хыт юратать
хитре те çӳллĕ йĕкĕте».

Инкек! Суя-ши, чăн-ши? Ах!
Шăматкунччен епле пурнас-ши?
Эппин асту, Майрук тавраш<br>ĕ,
ытла хăлаçланан... Шăпрах.

...Çул йывăр. Çитрĕм тăххăра.
Каçхи урам. Туктаров курчĕ:
«Тамуç? Пĕччен кайма хăрать.
Халь Мĕкĕте ун ăсатуçă».

— Хăçантанпа?
«Ак, пĕр эрне».
— Чăнах-и илнĕ çĕррине
е хăй, Тамара, парнеленĕ?
«Паллах, Тамуç... Мĕн тĕлĕнен?»

Пĕр-пĕчченех Çирĕклелле
каллех çул тытрăм... Клубĕ хупă.
Çырма енче çĕмĕрттерет
«Подгорнăй» кĕввине хуткупăс.

Çирĕклĕхрен сукмакпала
çав купăс çинелле чупатăп.
Ак тамаша! Мĕн япала?
Миçен пĕр мĕлкене çупатăр?

Кама — кулач? Хĕр уйăратпăр?
Тамарăна? Миçе пая?

Тусна хăлха чикки паратпăр?
Тамуç пулать Минтăпая?

Кам? Минтăпай? Тавай, тавай.
Эй, Мĕкĕте, сывах-и, тусăм?
Çапла! Çапла!.. Тата пĕр пусăм...
Тепре! Хӳтте тăр, куçнă май!

Кăшт кан. Юнна шăлсам. Итле,
боксёр. Çапла! Ан ӳк. Хыçа тăр.
Çирĕклĕсем, ай-яй хитре
ман тус-тăшманăма хыçатăр!

— А ну, сысна, ăçта кĕрен?
Сана мĕн тунă Мĕкĕте?
Мĕнпе çапатăн йĕкĕте?
Аха! Тутантăн? Ан кӳрен.

...Хашка-хашка вăрçа кĕретпĕр
Мĕкĕтепе, пĕр вăй пулса.
Туртса илеп те купăса,
купăсçинех «парне кӳретĕп».

Шăп пулчĕ... ахлатса выртать.
Тăваттăнччĕ. Халь виççĕн юлчĕç.
— Тамарăна хăтар та, юх эс! —
тени кĕрлет ман çăварта.

Тараççĕ... Йывăр пĕччене.
Çĕнме пулмасть-тĕр. Самбо кирлĕ.
Минтăпайне çапатăп вирлĕн —
тĕлех лекет, сăмсинченех.

Чим, çĕçĕ кăларать. Тапатăп.
Пĕтĕрĕнсе ӳкет çĕре.
— Эхей, пытарăр çĕççĕре!
Çĕçĕсемпе пулсан — таратăп.

Аран тухатăп çăлăнса.
Вăрман енне пăлан пек кайрăм.
Чун тарăхсан, чупма ансат,
уйрăммăнах аван — çил майлă.

Çĕр çăтрĕ тейĕн, Мĕкĕтен
шăрши те çук. Мана кĕтмен.
Тамарăпа хальччен тăмасть-ши?
Пултарĕ те... ăнман этем.

Тулать те çиллĕм капланса,
хăрушлăха каяп манса.
Çирĕклĕхе калла килетĕп
разведчик пек асăрханса.

«Тăшманăмсем» инçех те мар —
çаплах шавлаççĕ. Умăмра,
сăртра, шкул çурчĕ палăрать.
Шăлать, улать тискер тăман.

Шкул çумĕнчи пӳрт чӳречи
йăлл! çутăлчĕ. Хура мĕлке
унта çывхарчĕ. Çил ачи
юрларĕ тĕрлĕрен мелпе...

Пытантăм ват юман хыçне.
Ха... карăнать. Каяс, паллас.

Шур çĕлĕк... Минтăпай пулас?
Çапла... Ярса тытать «хĕçне».

— Юрать, юрать, лăплан, ан хирĕл.
Çынсем çывраççĕ, пул шăпрах.
Чĕнсе кăлар, Тамара кирлĕ.
Эс мĕн, тăванăм, шап-шурах?

Харкашмăпăр. Сăмсу тӳрленĕ.
Эп килтĕм питĕ инçетрен.
Хам мар-çке, тарăхнă чĕрем
сана сăмсаранах тĕллерĕ.

Хĕре чĕнер-ха, хăйĕнчен
ыйтса пĕлер: кама хаклать вăл.
Эп мар, эс мар, вăл çеç хăватлă
çак кăткăс самантра, ĕнен.

...Çут сӳннĕ. Ахале сӳнмен-тĕр.
Тем шăлтăрт! турĕ хапхара.
Мăкăртатса, эпир сисмен те —
пике умра тăра парать:

«Мĕскер? Мĕн кирлĕ? Ой, Мишша...
Тăванăм...»
— Эпĕ кам, Тамара?
«Ах, Минтăпай? Бабай, ишшак.
Каларăм-çке сана, каларăм.

Мĕкĕтепе чухнех каларăм:
савма саватăп, чун туртмасть».
— Эс халĕ ман почти штă арăм.
Апла... ма патăн чуптума?

«Ах, кай-ха, сассуна илтсен те
ăш-чикĕм пăтранать, шăплан.
Эс те Мĕкĕтеллех кĕсел-тĕр,
ялан макран, ялан таран».

Лаштра юман — хура, патвар.
Эпир ун хӳттинче. Тамара
Минтăпая каллех ятларĕ:
«Сыв пул, сыв пул, тавай уттар.

Ман юрату ячĕпеле
эс Мишшана тăван пек йышăн.
Ахаль те ун çулне пӳлет
усал-тĕсел виçесĕр йышлăн.
Ун чух çеç пулăн чăн-чăн çын...»

Çапла ăс вĕрентсен Тамара,
яш каччă нумаях тăмарĕ.
Юлать тăман çеç — чунуççи.
Телей те пур-тăр тĕнчере,
телей кĕтсе чылай эп ыртăм.

...Вара темле майпа пĕрре
çĕклентĕм те поэма çыртăм.

*1957 çул,*
*Саврăшпуç — Аксу*

# ПИРВАЙХИ ТĂВĂЛСЕМ

*Поэма*

## Умĕнхи

Чун-чĕрен яшлăхри пирвайхи тăвăлĕсем...

«Пирвайхи тăвăлсем» поэма геройĕ Мишша çамрăклах хăйĕн малтанхи юратăвĕнчен мăшкăлласа кулнине, тӳсме çук хура элеке чăтса ирттерет, тӳссе пурăннăçемĕн пурнăçри хура вăйсене курайми те курайми пулса пырать. Шкул пĕтернĕ çĕре вăл çут тĕнчери çынлăхпа юрату тăшманĕсене витĕр курса тăрать ĕнтĕ, вĕсене хирĕç тан мар кĕрешĕве тухать...

1.

Хĕрача куллисем!
Чуна çуттăн кĕрсе
çутататăр эсир урама.
Çивĕтсем, çивĕтсем,
çеçке çурнăскерсем,
мухтăп-ха эп сире пĕрре мар.

Çивĕтсем, çивĕтсем,
юхĕ сирĕн сăвапăр
чаплă кĕвĕ пулса,
сăввăмпа килĕшсе,
çепĕç хуçăрсене чечеке çавăратăр
астра пек, мăкăнь пек, пион пек тĕлкĕшсе.

Çĕр халь çеç сывпуллашрĕ-ха
юр-тумĕпе.
Ир-ха, ир ешерме,
вăрман-улăх çара.

Кӗленче савӑтра шыв ҫӑтса тӑнипе
улмуҫҫи хуллисем — ҫулҫӑра.

Юлташ амӑшӗн ку.
Май уявӗ тӗлне
вӗсенчен чечексем тӑвӑп, тет.
Чечексем, чечексем!
Ҫуркунне, ҫуркунне!
Ват ҫынна та лӑпкать, илӗртет.

Ҫуралать-и этем — чечексем ун ятне,
ҫитӗнет — чечексем,
юрату — чечексем,
паттӑра-и тухать — чечексем, чечексем;
чечексем — ватӑлсан,
вил тӑпри — чечексем...

Чечекре эп туятӑп
чӗре хӑватне,
иксӗлми ҫамрӑклӑх
вӗресе тӑнине.
Ҫавӑнпа ӗмӗрех
сире мухтӑп, хӗрсем, —
эп сире, ҫивӗтсем,
ҫеҫке ҫурнӑскерсем...

2.

Йывӑҫран пуян-ҫке
Аксу пахчисем.
Ҫулҫӑ, ав, ҫураҫҫӗ
шкулӑн сачӗсем.

Пĕр çĕрте, садра ман
савнă вырăн пур.
Мĕншĕн вăл тĕле пит
эп юратрăм пуль?

Шăплăха-ши саврăм
е кичемлĕхе?
Çук, унта иленчĕ
пĕр çап-çамрăк хĕр.

Шăпчăк пек юрлать вăл
çурхи каçсенче
ман тĕлтех, асамлă
уйăх çутинче.

Пытанса итлетĕп
хĕр çывăхра чух.
Патнерех пымашкăн
чĕптĕм халăм çук.

3.

Вутла çунтар, Кармен илемĕ,
амант эс шухă чунсене.
Венера тыткăна илейрĕ,
хускатрĕ манăн чĕрене.

Çак вăхăтран çухалчĕ канăç:
чĕнместĕп нимĕн, сăнăм çук.
Кĕтеп: хăçан телейĕм анĕ?
Телейĕм ман вăл — курнăçу.

Венерăна, ав, Радда тесшĕн,
Кармен вăл, тет, тепри темме.

Венера кашнинех тиркесшĕн,
Венера юратас темест.

Вăл чаплă Асхата савмарĕ.
Нимскер те çавăрмасть пуçне.
Миçе чĕре хыпса çунмарĕ —
çунать-çунать те... лап! сӳнет.

...Çил паçăр ăшшăн çеç вĕретчĕ.
Ак халь, вăйланчĕ те, туллать.
Тен, купăссă та, леш, чĕтрет-тĕр
сив çил лăсканине пула.

«Шăнмарăн-и, Венера? — тетĕп. —
Ав уйăх тухрĕ... ав ишет».
Венерăн çӳçĕ варкăшать те,
мана çав питĕ килĕшет.

Пике хăй кил умне çитсессĕн,
ал патăм эпĕ уйрăлма.
Венера ним чĕне пĕлмесĕр
шур хут хăварчĕ аллăма.

Çил ачисем вĕçсе иртеççĕ...
Кĕсъе хунарĕн çутинче:
«Юлташăм, эсĕр сăвăç, теççĕ, —
вуларăм эпĕ хут çинче. —

Юлташăм, эсĕр сăвăç, теççĕ.
Ыйтатăп сăвă эп сиртен.
Ман сирĕн сăввăра илтесчĕ
çил-тăвăл ахăрнă çĕрте.

Эп ыйтнӑ сӑвӑ кӗр-кӗрлетӗр —
пур тӑвӑлран хӑватлӑрах.
Унпа усал чунсем чӗтреччӗр
кив пӳрт чӗтренӗн тӑвӑлра».

4.

Венерӑна, чӑнах, Кармен
тесессӗн тӗрӗсрех пулать-тӗр.
Ачи эп ахаль чух пит паттӑр,
халь, ак, хӑрап сӑмах чӗнме.

Чуна витет синкерлӗ куҫ.
Епле ҫиҫет, епле ҫунать вӑл.
Пӗрре туяп хама ҫунатлӑ,
тепре сисеп: ҫухалчӗ пуҫ.

Хулран тытасчӗ — халӑм ҫук.
Мӗн пытарас, эп ҫӗтӗк-ҫатӑк,
чӗлхе те тӑм ман, калаҫатӑп
начар — шӳт мар ҫав курнӑҫу.

Кӗпер ҫинче мана Асхат,
чи ҫывӑх тус, тутар малайӗ:
«Пӑрах, — тет вӑрттӑн, — ан хускат
чун-чӗрӳне, харама кайӗ.

Ҫут тӗнчере ун пек ухмах
курман. Калаҫ — тӳрех сисетӗн.
Виҫӗмкун каҫ миҫен сӳсе те
тӑрантайман. Ак эп... хамах...»

Юлташӑма куҫран пӑхатӑп,
чаратӑп тутарлах: «Рехмет,

шанмастăп. Калаçтарăп хазĕр...»
«Кармен» ĕхĕлтетсе илет:

— Мĕнле чĕлхе ку? Браво, браво.
Эс, Михаил, чăн-чăн джигит...
Асхат хушса хурать: «Вăл — Байрон.
Эс кам? Кармен. Чикан пики.

Каçар та, Мишеле сана
памастпăр — ачана пăсатăн.
Ӳсĕрпеле май çук хăсатăн.
Ха! Поэтах-çке хапсăнан?!»

...Чăнах та, Хусанта кăларчĕç
çапса пĕрремĕш сăввăма.
Туссем халь шӳтлесе кулаççĕ,
поэт, теç... Байрон... Ырă мар.

5.

Виç «блатарь» мана пĕррехинче —
Вася, Сеня та Асхат — куç хĕсрĕç:
«тутанса» пăхас килсен, енчен,
пыр — отказ памасть çав майра хĕрĕ.

Юрĕ, терĕç, Вася хыççăн пул.
Вăл, эсрелĕ, Сеня хыççăн пулчĕ.
Хырăм пăрахтарнă Сеня у.
Мĕн вăтанмалли сан, кишĕр пуçĕ!

Пулчĕ тепĕр каç уллах, уллах.
Вася кайрĕ уллахран чăлах.
Чим-ха, кам çумне мана вырттарчĕç?
Эп те кайрăм... тем чуна уртарчĕ.

Кучĕпе пуҫа ҫавăрнă май,
ман ҫинчен шутлать-и ҫакă аскăн:
тăранать те — Асхатах милай,
ҫĕнĕрен-ҫĕн каччăпа кусасшăн.

Васьăна хăлха чикки парса,
хĕрĕнкĕ «Кармен» ҫине выртмарăм.
Суккăр эпĕ! Ҫак усал хĕрарăм
идеал-и? Пĕттĕр вăл — ясар!

Асхата тинех ĕнентĕм, ак.
«Пăсăлнă» Асхат мана юнарĕ,
Васьăна амантнăшăн ятларĕ.
Уҫрĕ куҫăма эсрел. Тавах.

6.

Чĕреҫĕм, канăҫсăр чĕре,
санра ялан Чăн Юрату ҫӳрет,
анчах туссем курнăҫланаҫҫĕ латсăр.
Йĕреп. Йĕретĕп эп. Ним палăртмастăп.

Сивлеҫҫĕ, ҫыхăну тытмаҫҫĕ,
кулма кăна, кулма, кашнийĕ маҫтăр.
Ҫапла, тек ҫырасси пулмасть.
Сыв пул, эй, муза. Ҫырăнмасть.

Эп Байрон-и? Ҫук, ҫук, туссем.
Эп гений мар, пуҫларăм ҫеҫ эп.
Мăн кăмăллă? Куҫсем ҫиҫеҫҫĕ?
Апла чăнах поэт пуль тем?

Чашлаҫҫĕ, ҫĕлен пек, шăл витĕр,
часрах ята ярасшăн питĕ,

кашни усаллăн шăл йĕрет,
эп вăрă, тет, поэзире.

Чĕреçĕм, ăнăçсăр чĕре,
санра ялан тус мăшкăлĕ çӳрет.
Савни те, сĕтрĕнчĕк,
кулать манран, калас-тăк.
Йĕреп, йĕретĕп эп,
анчах ним палăртмастăп.

7.

Курса тăранайми сăнатăп
аристократ пикесене.
Пырса чикмешкĕн сăмсана та
эп именеп — вĕсен класне.

Краснова — калăн, Иоланта,
куçран пăхать — сиплет чуна.
Юлташĕ, Зотова, унтан та
чĕнӳллĕрех; чĕре çунать.

Анчах ăна эп савни мар,
ыр йăмăк тăвăттăм, çут çăлтăр,
пĕрле çунма та савăнма.
Пулмасть пуль çав, пулмасть пуль, çук-тăр.

Ах, Зотова, Валюша тусăм,
çав саккăрмĕш класран эс çеç
çумра утан хаваслăн, уççăн,
ман музăна хыт ĕненсе.

Вырсарни каç РДКра
ташлас ĕмĕтсене директор
приказ çыра-çырах чарать те, —
ташлакалатпăр, ху куран.

Ăҫтан эс ман чуна иленнĕ,
ытла та ăслă-ҫке чуну.
Епле ҫав таранччен илемлĕ
туса ҫуратнă-ха аннӳ!

Ҫивĕтĕнти бантна юсам-ха,
пĕр шурă лĕпĕшне... тăхта.
Эс, Валя, чи хитре юмахăм,
тен, пулăн чаплă юррăм та...

Ягунина алхастарать
ӳт тунсăхне. Пӳ-сийĕ чăмăр,
тулли, яштак. Ăс-пуҫĕ — ҫăмăл.
Утма та... ясарла утать.

Ҫапах Краснова ҫывăхрах.
Поэзи сăнлĕ пулнăран-ши,
куллен ҫунап ăна курасшăн?
Тен, ҫунтарать калас сăмах?

8.

Хальхинче шăнкăрав йăнăшман-ши,
шăнкăрав сасси мĕншĕн халь тин?
Ҫутă телей эсĕ, Линăҫăм, маншăн,
маншăн эс пурнăҫ ҫути.

Пирĕн сăнсем тĕл пулаҫҫĕ.
Сӳнчĕ куллу, ав, сан.
Тем систерсе куҫусем йăлтăраҫҫĕ —
вутлăн, чуна ҫунтарса.

Уроксем вĕҫленсен те нумай вăхăт темшĕн
уйрăлса каяймастăп шкултан.
Сан сассуна эп илтесшĕн,
чун ешерет — куллунтан.

9.

Ах, Лина, мĕн тăвам сана:
ху курăймастăн — тĕмсĕлсе пăхан.
Эп йăнăшрăм; кам ăмсанать
ман шăпана, çав çын айван.

Эс картманни чуна касать.
Яланлăх пулĕ ку асап.
Тăратăп эпĕ шалкăм çапнăн.
Мăн кăмăл çĕтрĕ. Эп çуралнă
сĕм вăрманта. Халь туйăм-капкăн
упан мĕкĕрттерет пĕр авкăм.

Сӳнет поэт чунри хавассăр.
Ятлан мана, каçарăймасăр.
Пĕтерчĕ пуль йăлтах элек.
Малтан пурте эсир хисеплĕн
«поэт» та, «Байрон» та тесеттĕр.
Мĕн пулчĕ халь? Шуйттан пĕлет.

Эх, Гамлет чăтăмĕччĕ, унăн
шеллевсĕр чăрсăр ăсĕ халь —
мĕнле хĕрӳн те киленӳллĕн
эп çапăттăм ултавлăха!

Анчах та, çемçескер,
каллех хурав ыйтатăп,
кирек мĕн çыр, анчах сăмах çыр —
виç-тăваттă...

10.

Эп саврăм çак шкула чунран.
Вун çул эп çакăнта çӳрерĕм,
ăс пухрăм, тăрăшрăм, итлерĕм.
Пит йывăр уйрăлап унран.

Ĕнтĕ манран ачалăх кайрĕ.
Вунулт çул тулнă кунăмра
йăлкăшакан чĕре кăварĕ
çĕклерĕ çулăм чунăмра.

Çынна халь ăнланатăп хăвăрт:
тăрăхласа çыраттăм сăвă
вĕçкĕнсене-мĕскĕнсене,
вĕренӳри кахалсене, —

нумай та вăхăт иртмĕ акă,
килме пăрахĕç асăма та,
анчах та манмăп ĕмĕрне
хама ыр тунă çынсене.

Тата —
çак уйăх çутинчи
каçхи Аксун тӳлек тĕнчи
саркайăка тăнланине,
тем анлăш улăхсем çине
çĕкленнĕ шурă тĕтрене,
умри тирекĕн çулçине
ирпе уç çил вылятнине
асилĕп эп çине-çинех.

11.

Шап-шурăччĕ садсен çеçкисем,
сисмерĕм те вĕçсе пĕтнине.
Халь кунтаччĕ, туссем, халь манпаччĕ,
сисмерĕм те пĕччен юлнине.

Уйăхăн та кураттăм эп сире,
хĕвелĕн те кураттăм эп сире.
Ӳтĕмех те пĕтĕ — шăммăм юлĕ,
çавăн чух та манмăп эп сире.

Иртнĕ илĕм-тилĕм çамрăк вăхăт —
куç хупсан та курнан мĕлке пек.
Савни пекскер, халь те чаплă çӳрен,
юмахсенчи патша хĕрĕ пек.

Анчах çунмасть ĕнтĕ чĕрем, шурмасть сăнăм.
Хăçан кĕлрен вутă пулни пур?
Пĕртăванччĕ чунпа, халь сивĕнтĕм.
Асра малтанхи çеç эсĕ пур.

Ахаль чух та туяп эп çакна,
тĕлĕкре те курап эп çакна.
Ĕмĕрех те иртĕ, ватлăх çитĕ,
çавăн чух та манмăп эп çакна.

12.

Пулаймастăп хампа хам та пиллĕ.
Пиллĕ çеç ăçтан пурнайăн-ха?
Кама кирлĕ çакă, кама кирлĕ,
кам ман пеккине юраттăр халь?

Пĕр тĕлте вăраххăн лараймастăп,
çĕршер çухрăм çаврăнса килеп.
Каç çитсе ирпе-ирех алпастăн
çухалмашкăн таврăнап киле.

Мĕн шыратăп? Мĕн çитмест? Калаймăп
халлĕхе. Калаймăп, ват анне.
Ятлăсăн. Пĕлтермĕ пурпĕр айăп
мĕскере пула ăш вĕçнине.

Çун эс, чун, пăлхан... Эх, халь çитесчĕ
Каспий, Ашхабад таврашсене.
Пĕр поэт унта çӳренĕ, теççĕ,
пусман чух ури çине ĕне.

Ах, туймашкӑн хӗвел витӗр тӑвӑл
эпӗ пӗлнӗ пуль мӗн ачаран...
Хӑрамастӑп, ҫирӗп манӑн кӑмӑл,
ан чармаклӑр сивӗ куҫӑра.

Ҫамрӑклӑх, ачалӑх — уҫӑ, паллӑ.
Ыттине курман-ха, паллашман.
Иртӗ ӗмӗр, ҫӗр ҫултан та калӑп:
ыйхӑллӑ чӗре — мана тӑшман.

Ҫӗр ҫултан та, йӗксӗксем, сире эп
канӑҫ памӑп, ҫӗмӗрӗп ялан.
Ак каллех эп инҫетре ҫӳретӗп —
вӗҫнӗҫем ҫунат тӗреклӗ ман.

13.

Ҫивӗтсенчи ик пысӑк лӗпӗш
сенкер, шап-шурӑ та кӗрен.
Чӑнра курса тӑранаймастӑм,
курма пуҫлаттӑм тӗлӗкре.

Сӑн-пит — ҫӗн уйӑх пек вӗр-ҫӗнӗ.
Ҫурхи ир пек унри уяр.
Пӳ-сийӗр хӑмӑшпа пӗр ҫемӗ
хумханнӑран чунра — уяв.

Чипер айванлӑхлӑн, тӳрремӗн,
тин курнӑ евӗр тӗлӗнсе,
куҫа чарса пӑхнин илемӗ
умра тӑрать тӗрӗленсе.

Кӗрхи ҫилсем харкашнӑ майӑн
кичеммӗн шкул бульварӗнче
чӗвӗлтететтӗр ҫумӑр витӗр
миҫен пӗр сунчӑк айӗнче!

...Каç ларнă юр. Ах, юр, атьсемĕр.
Никам иртмен-ха таптаса.
Пĕрремĕш юр. Çак çут юр евĕр
ят-чысăр сирĕн тап-таса.

...Çу каçĕнче йĕтемĕн — савăк,
ĕçчен те йышлă çутисем.
Темле пит чаплă хапрăк-савăт
ларать ку, тейĕн, çĕкленсе.

Епле сире ытараймастăм
эсир унта шавланă чух!
Каять те вăхăт — тавраймастăн:
йĕтем те халь, эсир те çук.

Сире хуйха эп палăртмарăм,
палăртмаллаччĕ — савнăçа.
Кайран та ним те калаймарăм,
каламаллийĕ пулнă çав...

## Юлашкинчен калани

Умра — сĕм вăрман пек малашлăх. Унта аташса кайма та, ӳксе ĕнсене хуçма та, пуçа çухатма та пулĕ. Епле пулсассăн та, турă мĕн пӳрнине курмаллах ĕнтĕ, килес тăвăлсен айĕнче хуçăлса ӳкес марччĕ кăна. Вĕсене парăнмасăр çĕнтерсе пыма, эй пулăшсам, пӳлĕх, вăй-хал, ăс-тивлет парсам, пĕтме ан пар.

*1956—1957 çулсем,*
*Аксу — Чистай.*

# *Саврӑшпусӗн, ай-хай, савӑк тӗнчи*



## АСЛАТИЛЛĔ ÇУМĂР ХЫÇÇĂН
*Калав*

Эпир çăмăллăн сывласа ятăмăр. Тин çеç çумăр чашлаттарса çăватчĕ, çиçĕм çиçетчĕ, аçа çапатчĕ. Аслати сасси аякран-аякка кайса пычĕ. Вăл халь таçта, сăртсен хыçĕнче, кĕмсĕртетет. Çумăр та, тăтăшланса хăйĕн шултра йăлтăркка тумламĕсене вĕтетсе янăскер, инçетре, чăрăш вăрманĕ хыçĕнче çăвать. Тӳпе майпен пĕлĕтсенчен тасалать.

Эпир, юлташпа иксĕмĕр, витĕрех йĕпеннĕскерсем, урапа çулĕ тăрăх лаплаттарса пыратпăр. Юлташăм шăнса кайрĕ, шăлĕсене шакка пуçларĕ. Васкарах утрăмăр. Çулĕ начар. Юрать-ха, çара уран тухрăмăр, ахаллĕн пушмак тулли пылчăк тулатчĕ ĕнтĕ. Çумăрччен те çак çулпах кайнăччĕ. Ун чухне тусан ура лаппи таран путса пыратчĕ, юр тăрăх пынă пек. Акă халь тусан вырăнне пылчăк ашса пыр.

Сăрта хăпартăмăр. Пирĕн ял сăртран ывăç тупанĕ çинчи пек курăнать. Ял тавра укăлча тытнă. Çул хĕрринчи канавра шыв юхать. Вăл канав пĕчĕкçĕ кăначчĕ-ха. Астăватăп-ха, туплашкаран тунă шыв арманĕ епле кăлтăртатса çаврăннине. Халĕ акă мĕн пысăкăш вар пулса кайнă. Леререх шывсикки пур. Унта пысăкрах шыварманĕ туса эпир çутатма тăрăшса пăхнăччĕ — «электростанци» темле сăлтава пула хута каяймарĕ.

Васан леш енче иккĕн тăрмашаççĕ. Вĕсем, эпир паллакан «маçтăрсем», каçă хываççĕ. Яла пырса кĕтĕмĕр. Пирĕн умрах пĕр ушкăн ача-пăча çерем çинче лапталла вылять. Вăййи çапла вăл: малтан икĕ ушкăна уйрăлаççĕ. Шăпа тытса, кам шалта, кам тулта пулмаллине

палăртаççĕ. Çыра тулашне юлнă ачасем «йĕкĕр» тăваççĕ, урăхла каласан, пӳскине пĕр-пĕрин хушшинче пытараççĕ. Унтан çаврашкари вылякансене пӳскепе пеме тытăнаççĕ. Пӳске пырса лекнисем çаврашка тулашне тухаççĕ. Вăйăра кайри кассем çĕнтерсех пыратчĕç, анчах та юлашки «малти кас» пӳскене вĕçсе пынă çĕртен ярса тытса пурне те çăлчĕ. Вăйă çĕнĕрен пуçланчĕ. Эпир кăшт пăхса тăтăмăр та малалла утрăмăр: аслă урам пĕтсе кĕтессе пăрăнсанах, пирĕн пӳрт курăнса кайрĕ. Çурри кивелнĕскер, тĕреклĕ ларать-ха вăл. Урам енчи чӳречене уçса янă. Пӳртрен юрлани илтĕнет. Хитре, янăравлă юрлать анне. Ун сассине эпĕ пин сасăран та уйăрса илме пултаратăп. Ман юлташ Элекçи кӳршĕре çеç пурăнать, тимĕр витнĕ пӳрчĕ вĕсен те тĕреклĕ-ха. Пире анне чӳречеренех курчĕ, кулса ячĕ те хирĕç тухрĕ: «Ну, мĕнле, ĕç ăнчĕ-и? — ыйтрĕ вăл темшĕн питĕ хăвăрт. Эпир хамăрăн ĕç ăнни, пире педучилищĕне вĕренме илни çинчен савăнса каласа патăмăр. Вара эпĕ аннепе пӳрте кĕтĕм. Юлташăм та килне кĕрсе кайрĕ. Ун хыçĕнчен калитке шашулкки шалт! туни çеç илтĕнсе юлчĕ. Амаланма тытăннă шухăш сасартăках килсе тапăнчĕ пуçа: мĕншĕн-ха анне нихçанхинчен те савăнăçлă паян? Э, мĕн те пулин пулнах-тăр çав: сĕтел çинче сăмавар кашлать, сĕтел умĕнче çурăмне алăк еннелле туса çар çынни лара парать. Кам ку? Атте мар-и? Эпĕ юпа пек хытса тăтăм. Мĕнле-ха капла, чӳречерен асăрхаймарăм аттене? Темĕнле хутсем пăхса лараканскер, алăк сасси пулсан ялтах сиксе тăчĕ. Кăкри çинче — орденсем. Эх, мĕншĕн-ха ман алăсем аттенни пек çирĕп мар, ма эп атте пек тĕреклĕ те çӳллĕ мар-ха? Атте мана ыталаса чуптурĕ те: «Ну, Çеруш, ĕçсем мĕнле, тăванăм?» — терĕ.

«Во! — терӗм эпӗ пуҫ пӳрнене кӑтартса, — студент пулса тӑтӑм».

Атте мана мухтаса пӗтерчӗ. Мухтав сӑмахӗсем хыҫҫӑн ҫиес килни таҫта кайса ҫухалчӗ. Апата эпир пурпӗрех ҫирӗмӗр-ха. Эпӗ вара ҫӗрӗпех аттерен летчиксен пурнӑҫӗ ҫинчен ыйтса пӗлсе йӳтетсе лартӑм. Ӑҫта вӗҫеҫҫӗ, миҫен вӗҫеҫҫӗ, мӗнле машинӑпа, конструкторӗ кам, хӑш летчикӗ маттуртарах, летчике вӗренме миҫе ҫултисене илеҫҫӗ тата ытти те. Ҫаксене ыйтса пӗтерсен: «Атте, сана питӗ курас килекен пулчӗ», — тесе хутӑм.

Кучченеҫ нумай илсе килнӗ иккен. Аккордеон, велосипед, фотоаппарат мана савӑнтармаллипех савӑнтарчӗҫ. Чӑн та ӗнтӗ, епле савӑнмӑн-ха ҫавӑн пек чаплӑ парнесемшӗн. Аттепе эпир ҫывӑрма выртсан та таттисӗр калаҫрӑмӑр. Нумайччен ҫывӑрса каяймасӑр педучилищӗре епле вӗренесси ҫинчен шухӑшларӑмӑр. Летчиксем ҫинчен ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен ыйта-ыйта пӗлтӗм. Атте хӑҫан пусӗпех таврӑнасси пирки интереслентӗм. Унтан аслатиллӗ ҫумӑр аса килчӗ. Эпӗ тӗттӗмре йӑл кулса илтӗм: мӗн тери пысӑк савӑнӑҫ пулма пултарать иккен аслатиллӗ ҫумӑр хыҫҫӑн...

*1953 ҫулхи июнӗн 25-мӗшӗ,*
*Саврӑшпуҫ.*

## САВРĂШПУÇĔН, АЙ-ХАЙ, САВĂК ТĔНЧИ

*Новелла*

1.

Хĕвел тӳперен ăшшăн пăхать. Унăн ылттăн пайăркисем çĕр питне ачашлаççĕ. Мĕн пулĕччĕ-ши, енчен, хĕвел пăхмасан, çутатса ăшăтмасан? Çĕр çинче нимĕнле ӳсентăран та ӳсеймĕччĕ. Çынсем, чĕрчунсем пулман пулĕччĕç. Çĕр чăмăрĕ çинче нимле пурнăç та пулмĕччĕ. Ак халь хĕвел çутатса ăшăтать. Антив ăшăттăрах, пĕçерттĕрех. Хĕвел вăл шăрăхне те, çумăрне те хăй тăвать. Хĕвел ăшшипе тĕнче киленсе савăнать. Тӳпе кăн-кăвак. Вăл тем пысăкăш кăвак чаршавпа витĕннĕ тейĕн çав. Хăш-хăш кун тӳпене пĕлĕт татăкĕсем, шурă мамăк чăмăркки пек пĕлĕт татăкĕсем, тухаççĕ — кăвак чаршав çинчи мамăк чăмăркkисем. Тата, хăш чухне, лăпкă çил килсе питрен ачашшăн лăпкаса илет те таçта кайса çухалать. Вара каллех шăрăх, вĕçĕмсĕр шăрăх пуçланать. Пуринчен ытла июль—август кунĕсем шăрăх тăраççĕ. Эх, хĕвеллĕ те вăрăм кунсем-çке вĕсем!

Ак, сасартăк хуллен-хуллен çил тухать, вăйлăланать çил. Часах хĕвеланăç енчен хура çумăр пĕлĕчĕсем шума пуçлаççĕ, тӳпене чăпаррăн карса илеççĕ. Çывхарсах çитрĕç ĕнтĕ. Вăйлă тăвăл ахăрттарса илет. Çумăр чашлаттарса ярать. Вутлă хĕç пек çиçĕм çурса каять сывлăша. Çиçĕм йăл-ял! тăвать те, хыçĕнчен мăн саслă аслати хăваласа килнĕрен шикленсе-и, таçта, çут тĕнчен ăшне кĕрсе çухалать. Аслати те майĕпен аякка кайса пырать. Халь çеç мăнаçлăн кĕмсĕртететчĕ-ха вăл пуç тӳпинче. Çумăр вĕтелсе каять. Унтан, кĕмĕл тумламсем пулса, хуллен-

хуллен иртсе пĕтет. Çумăр иртсен, хĕвел каллех çутатса ярать. Уçă сывлăш. Савăнăç...

Ача-пăча урама тухать. Çумăр хыççăн, йĕм пĕççисене тавăрса, лупашкасене тулнă шыв тăрăх чăмпăрттаттарса чупаççĕ ачасем.

Çав тери ырă-çке çуллахи кунсем!

2.

Симĕссĕн курăнать вăрман. Унта ĕмĕрхи юмансем лараççĕ-и е яштака хырсем пĕлĕте çити кармашаççĕ-и, вĕсем пурте — илем те мăнаçлăх. Вăрман! Эсĕ мĕншĕн кăна кирлĕ мар-ши çынсене: сана касаççĕ, çурт-йĕр, сĕтел-пукан, вут-шанкă, çатан-карта тăваççĕ, çамрăк йывăççусене кăларса кайса, урамсене ешертеççĕ. Санăн хунавусем-çке ялта кашни кил умĕнчех, сан çулçăллă ачусем. Вăрман хĕррипе сукмак тăсăлса выртать. Ăçталла илсе каять-ха вăл? Çав сукмакпа пыратăн-пыратăн та, вăл сире вăрман ăшнелле илсе кĕрет. Чăн малтанах кунта — шĕшкĕлĕх. Унта кашни çулах кунтăкĕ-кунтăкĕпе мăйăр пухатпăр эпир. Шаларах кĕрсен — çăкалăх. Çăкалăха пырса кĕрсессĕн, сасартăк тĕттĕм пулса каять. Вара эпир çакăнта пирамида евĕрлĕ чăрăша тĕл пулатпăр. Татах кĕретпĕр сукмакпа — пĕр вĕçĕмсĕр чăрăш та çăка. Çăкапа чăрăш вăрманĕнче хĕвел ӳкмест. Унта мăк нумай. Çăка кăмпипе чăрăш кăмпи курăна-курăна каять.

Акă пире сукмак уçланка илсе тухать. Кунта çутта юратакан хурăнсем ӳсеççĕ. (Вĕсем каçхине шурă чул юпасем пек е статуйăсем пек курăнаççĕ.)

Сывлăш уçă. Утас, пĕрмай утас килет. Тата тепĕр уçланка тухатăн. Кунта вара çĕмĕрт йывăççĕсем курăнса лараççĕ. Эх... çуркунне еплерех ку уçланкăра! Шапшурă çĕмĕрт чечекĕсем хушшине, çӳле хăпарса ларатăн

та — анас та, киле каяс та килмест. Ёмӗр-ӗмӗр ларасчӗ ҫапла ҫав ырӑ шӑршӑллӑ шурӑ ҫӗмӗрт ҫеҫки хушшинче! О, мӗн тери лайӑх тата уҫланкӑра ӳсекен пин-пин чечекрен суйласа чечек ҫыххи тума, пуҫкӑшӑль ҫыхма! Сукмак урлӑ ӳкнӗ хӑрӑк туратсем ҫине пуса-пуса утатӑн вӑрман ырлӑхӗпе киленсе. Пӗр вӗҫӗмсӗр — вӑрман та вӑрман. Тем анлӑш сарӑлса выртать-ҫке вӑл. Мӗн чухлӗ хӑмла ҫырли ҫимен-ши эпир унта, мӗн чухлӗ татса пуҫтарман пулӗ кӑмпа, ҫӗмӗрт, пилеш, палан, мӑйӑр!..

Кайӑксем илемлӗ юрӑ шӑратаҫҫӗ.

3.

Ырӑ ҫанталӑк. Хирте тырпул хумханса ларать е пӗр хускалмасӑр тӑрать. Ак — ыраш пусси. Вӗҫӗ-хӗрри те курӑнмасть унӑн: симӗс тинӗс! Пучахӗсем вӗт, э! Туни вӗсен йывӑрӑшне тӳсеймесӗр авӑнса аннӑ. Ыраш пуссинче лашапа пынӑ чухне пӗкки кӑна ҫур библиотека... 

Ыраш пуссинчен сылтӑм енче хӗрлӗ лаптӑк сарӑлса выртать, леререх — сарӑ лаптӑк. Ҫӗр ҫине хӗрлӗ тата сарӑ кавирсем сарса хунӑ тейӗн ҫав. Иккӗшӗн ҫине те пыл хурчӗсем пинӗ-пинӗпе вӗҫеҫҫӗ. Ҫав ылттӑн хуртсем мӗншӗн килеҫҫӗ-ши кунта? Вӗсем клеверпа горчица чечекӗсем ҫине килеҫҫӗ. Юратаҫҫӗ пыл хурчӗсем клевер чечекӗпе горчица чечекне. Вӗсем, ӗҫченскерсем, кунӗпе пыл сӗтӗреҫҫӗ хӑйсен вӗллине.

Акнӑ пусӑсем пурте илемлӗн курӑнаҫҫӗ. Ыраш пуссинчи путене каҫса кайсах авӑта пуҫларӗ. «Пӗт-пӗл-тӗк, пӗт-пӗл-тӗк», — тет путене. Чӑн та, ман Кӗришша юлташ пекех «юрлать» ӗнтӗ путене.

*Пĕт-пĕл-тĕк! тет путене,*
*йăвине шырать.*
*Пĕлмĕш пулать Ăçтаппанĕ—*
*йăвине памасть,* —
теме юратать Кĕришша.

Акнă пусăсем çумĕнче — çаран. Пирĕн колхоз çаранĕ тем пысăкăш. Курăкĕ мăй таран пулать те, ача-пăча яланах килет унта. Пинĕ-пинĕпе чечекĕ, чечеклĕ çитсă витнĕ пек курăнать ку вырăн. Тем те парса тавлашма хатĕр эп — пирĕн çаран Майн Рид прерийĕсем пекех анлă та тулăх. Америкăри çав прерисенче тискер лашасем — мустангсем — нумай çӳренĕ, тет. Епле аван пулнă пуль тискер мустангсем хыççăн юланутпа сиккипе хăваласа пĕрне те пулин лассо текен хатĕрпе мăйран çаклатса илсен.

Çаран тăрăх пынă чух час-часах çапла та пулкалать: утатăн-утатăн та ху ăçтине те манса каятăн, астумасăр çаранран тухса кайса вĕтĕ вăрмана, колхозăн хир урлă лартнă вăрманне, пырса тухатăн, уй-хире сыхламалли вăрман тăрăхне. Ăна лартни виç-тăват çул кăна-ха. Вĕтлĕх вăл. Унта пĕлтĕр Левентей куян çури тытнăччĕ. Вăрман кайăк юррипе тулса ларнă. Кайăк юрри вăрмана уйрăмах илем кӳрет. Хĕлле вăрмана каятăн та кайăк юрламасть, чечексем те çук унта...

Вĕтлĕх вăрманăн музыкипе тата уçă сывлăшĕпе киленсе çăра курăк çине месерле тăсăлса выртатăн та ху сисмесĕрех çывăрса каятăн.

4.

Каçхине... Таврара шăп. Ниçта та ним илтĕнмест. Тĕттĕмре çуртсен хура кӳлеписем курăнаççĕ. Ял хĕрринче темĕн сарлакăш шыв сарăлса выртать. Шывăн

ку енӗпе вӗтлӗх вӑрман тӑсӑлать. Тивмеҫҫӗ ҫав вӗтлӗхе, вӑл ҫинҫе йӗрпе ҫырма тӑрӑх таҫта ҫитиех каять. Тепӗр енче те — ҫавӑн пекех.

Акӑ пӗлӗт ҫутала пуҫларӗ. Вара кӗҫех вӗҫӗ-хӗррисӗр тӳпе тинӗсне «ылттӑн кимӗ» — уйӑх — ишсе тухрӗ. Вӑл тухсассӑн, ҫырма та ялтӑраса, тӗкӗр евӗр, ҫуталса кайрӗ. Пӗве лӑпкӑ. Унта ак часах пулӑсем сиксе выля пуҫларӗҫ. Хушӑран ҫил килсе щыв хӗрринчи тӗлӗрекен хӑмӑша хумхатса хӑварать. Унтан каллех шӑп, тӗлӗнмелле шӑп пулса тӑрать. Инҫетре ҫеҫ темле йытӑ уласа илчӗ.

Акӑ ҫывӑхри пӳрт патӗнче пӗр мӗлке вӑрӑммӑн шӑхӑрчӗ, тепре, тата тепре. Унтан ҫав пӳрт патӗнченех иккӗн тухрӗҫ: тепӗр юлташне чӗнеҫҫӗ.

Кусем вӗсем — ачасем. Кашниех хулӑпа. Хулли вӗҫне ҫип чӗркенӗ. Кунсӑр пуҫне, пӗрер котелокпа пӗр пысӑк банка илнӗ, шӑнкӑртатасран вӗсене ҫирӗп тытнӑ. Хӳме ҫинче тӑваттӑмӗшӗ курӑнчӗ. Вӑл матрос тельняшкипе, хура шӑлаварпа тата сӑмсасӑр карттуспа. Уринче ботинка. Хӳме ҫинчен хуллен кӑна анса тӑчӗ те пӑшӑлтатса: «Пурте-и?» — тесе ыйтрӗ. Кӗсйинчен вӑлтасем туртса кӑларчӗ:

— Мейӗр, ҫыхӑр, ҫипписем пур-и?

— Лере ҫыхӑпӑр, Эрхип, атьӑр халь каяр, — тутине хускатса ҫеҫ илчӗ тепри. Вӗсем часах каҫхи тӗттӗмре ҫухалчӗҫ. Ачасем хыҫҫӑн уй хапхи чӗриклетни, котелок чӑнкӑртатса илни тата хыттӑн тапӑртатса чупса кайни илтӗнсе юлчӗ. Кусем тӑватӑ тус — Эрхип, Лариван, Кӗришша тата Лява — пулчӗҫ. Вӗсем хӑйсемпе пӗрле вӑлтасем, котелоксем, ҫӗҫӗсемпе зажигалкӑсем илнӗ, пӑшалпа патрон та пур. Тӑварпа ҫӑкӑрне те манса хӑварман. Пӑшалсӑр пуҫне, пурне те

салтак кутамккине персе чикнĕ. Анчах ялтан тухсан нумай та каймарĕç — чарăнса тăчĕç:

— Эй, чимĕр-ха, компаса манса хăварнă вĕт, — пăшăрханса каларĕ Эрхип, тельняшкине тӳрлеткелесе.

— カларăм ан хыпалан тесе, — çилленсе сурчĕ Лариван ятли.

— Кайса илетпĕр-и, Эрхип?

— Килтисем сиссен?

Нумай калаçса тăма вăхăт çук: ботинкисене хывса пăрахрĕç те сиккипе яра пачĕç. Вунă-вунпилĕк минутран каялла ĕрĕхтерсе те çитрĕç. Лариванĕ те, Эрхипĕ те чăм шыва ӳкнĕ. Сăнĕсем çиçеççĕ хăйсен. Лариванĕ компасне алăрах тытса пырать, кĕсйине те чикмест.

— Çырса та хăвартăмăр, — пăшăлтатса каларĕ Эрхипĕ, — пирĕншĕн ан пăшăрханăр, инçете пулла каятпăр. Икĕ эрнерен таврăнатпăр, тесе çыртăмăр.

Кутамккине вĕсем черетпе çĕклесе пычĕç. Ялтан самай кайсан, çырма хĕррипе ӳсекен вĕтлĕх çарала пуçларĕ. Ун вырăнне кунта хăмăш çӳллĕ. Халь вăл пĕртте хускалмасть. Хăмăш хушшинчи ансăр сукмак вĕсене шыв хĕррине илсе тухмалла. Унта — кимĕ. Ăна шалча çумне кăкарса хунă. Кĕсменĕсем те çавăнтах.

Кутамккана халь лутра пӳллĕ Лява çĕкленĕ. Вăл хăйне майлă тумланнă, уринче сăран атă, сарлака шăлаварне атти кунчи ăшне чикнĕ. Унтан унăн урăх япала та пур — сунарçă çĕççи. Лариванĕ вара, салтак пек, пилĕкне патронташ çыхнă, хулпуççи урлă пăшал çакса янă. Уринче — ботинка, шăлаварне чăлхи ăшне чикнĕ, пуçĕнче — хĕрлĕ çăлтăрлă шлем. Чисти хĕрлĕ армеец ĕнтĕ. Кăтра çӳçлĕ Кĕришша, яланхи пекех, спорт формипе, çара пуçăн. Çӳçне хăй пĕр вĕçĕмсĕр вирелле сăтăрах тăрать. Йăли çапла ĕнтĕ унăн.

Хӑмӑш хушшинчи сукмакпа тӑваттӑшӗ те шыв хӗррине ҫитсе тӑчӗҫ. Кимӗ ҫине чи малтан кутамккине хучӗҫ, унтан хӑйсем кӗрсе ларчӗҫ те хускалса кайрӗҫ. Эрхип кимӗ хӳри тытса пычӗ. Лариван компаспа «ҫул кӑтартать». Ориентирне вӗсем тахҫанах палӑртса хунӑ. Кӗришшапа Лява кӗсменсемпе авӑсаҫҫӗ.

5.

Шурӑмпуҫ килет. Ҫутҫанталӑка ҫутӑ сӑн ҫапрӗ. Уйӑх ҫаплах ҫутатать-ха, имшеррӗн, часах ак палӑрми те пулӗ. Ял ҫумӗнчи вӗтлӗхре каҫса кайсах шӑпчӑк юрла пуҫларӗ. Пӗвене тӗтре карса илчӗ. Сывлӑш уҫӑланса кайнӑ та, тулта сулхӑн.

Сасартӑк шӑплӑха витресем чӑнкӑртатни, кӑвакалсем нартлатни пӑсрӗ. Уйӑх йӑлтах шурӑхнӑ ӗнтӗ. Ун вырӑнне хӗвелтухӑҫӗ хӗреле пуҫларӗ: малтан хӗрлӗ тӗс, унтан ҫутӑ хӗрлӗ тӗс илчӗ, вара хӗвел те курӑнчӗ. Хӗвел ҫак Саврӑш шывӗ анакан енчен, вӗтӗ вӑрман хыҫӗнчен, курӑнса кайрӗ. Шывран ҫав-ҫавах пӑс хӑпарать-ха, курӑк ҫинче мерченпе ахах шӑрҫасем йӑлтӑртатаҫҫӗ. Хӑмӑш хушшине хурсем, кӑвакалсем пырса тухса хыттӑн кӑшкӑрашма пуҫларӗҫ.

Тӗттӗмре пӳртсем мӗлкесем пек ҫеҫ курӑнатчӗҫ, халь кун ҫутинче капмаррӑн ҫӗкленсе лараҫҫӗ. Пӗве тӗлӗнчи урам сарлака та вӑрӑм. Урамӑн икӗ енӗпе те хӑма витнӗ илемлӗ ҫуртсем ларса тухнӑ. Умри пӗчӗк сад пахчисенче ҫӗмӗрт, улмуҫҫи, чие ешерет. Урамӑн тӑршшӗпе — телефон юписем.

Мӗнпур ҫӗрте выльӑх мӗкӗрни, макӑрни илтӗнет. Пур енчен те кӗтӳ хӑвалаҫҫӗ.

Акӑ куҫ умне чус витнӗ пысӑк шатрун ҫурт тухса тӑрать. Унӑн урам енче пилӗк чӳрече, кунтах — ҫырла-

çимĕç пахчи. Унти чие, çĕмĕрт турачĕсем кантăк патнелле кармашаççĕ. Пĕр чӳречи уçă. Шалтан хуткупăс калани илтĕнет. Ку вăл Эрхипсен килĕ. Эрхип амăшĕ, ырă сăнлă сатур хĕрарăм, юрла-юрла апат пĕçерет. Ашшĕ хуткупăсне сакайне лартрĕ те тулалла тухрĕ. Эрхип пиччĕшĕ Çеркей те сиксе тăрса ларнă ĕнтĕ. Вăл хăйĕн вăрăм çӳçне малалла усăна-усăна аннăшăн вăрçса илчĕ те пахчана çăвăнма тухрĕ. Часах апата ларчĕç. Анчах кам çитмест-ха? Эрхип çук иккен. Пурте тĕлĕнсе кайрĕç. Вăл нихçан та ку вăхăтчен çывăрман.

— Ун вырăнĕ пушă, — терĕ ăна чĕнме кайнă амăшĕ, — ĕнер мĕнле пуçтарса хунă, çаплипех тăрать.

Çыру сĕтелĕ çинчи хута асăрхарĕç: «Пирĕншĕн ан пăшăрханăр, инçете пулла каятпăр. Икĕ эрнерен таврăнатпăр, ан шырăр. Хамăрпа пĕрле мĕн кирлине илтĕмĕр, компас та пур — çухалмастпăр. Эрхип, Лариван, Кĕришша, Лява»...

— Мĕн хăрамалли пур, пултаруллă ачасем, — терĕ ашшĕ, амăшне лăплантарса. Вара Эрхип çинчен часах манса та кайрĕç.

Ирхи апат хыççăн пурте килтен тухса утрĕç: амăшĕ больницăна, ашшĕ района, пиччĕшĕ — библиотекăна; вăл унта ĕçлет. Пӳртре ула кушак аçи çеç тăрса юлчĕ. Вăл та пулин чӳрече çине хĕвел ăшшине кĕрсе выртса ыйха путрĕ. Пӳрт умĕнчи пахчара çерçисем чĕвĕлтетрĕç, унтан лупас айĕнче чăх кăтиклеме тытăнчĕ.

...Урамра лаша ури сассисем илтĕнсе кайрĕç. Виçтăват ача юпах тихасене утланнă та тусан мăкăрлантарса пыраççĕ. Çара пуçăн, çара уран. Кашниех вуникĕ-вунвиçĕ çултан ытла мар. Пурте имшеркке. Юпахĕсене вара хăйсем пĕтĕм хăватпа хăвалаççĕ. Камсем-ши вĕсем? Ăйăр-тиха çинче пыраканни

Эрхиппе яланах çапăçакан Ваççа, ыттисем унăн тусĕсем: Петĕр (хăй «Петро» тесе чĕнме хушать), Элексантăр («Сашко»), Митрахван («Димо»), Мишук («Мишель»). Çак хранцуссемпе украин-пăлхар хушшинче Ваççи вырăс иккен. Çитменнине тата — Чапай. Çук, хастарлăран мар. Ячĕ çапла тӳр килет ун. Ашшĕне унăнне Чăпăк Йăванĕ, теççĕ. Çавна пула ку камитçи ирĕксĕрех Ваçли Иванччă пулса тăнă. Чăпăк теме аван мартан, Чапай, теççĕ халь ăна. Хастарлăх пирки калас-тăк, никамах та курман-ха ун хастарлăхне, Эрхип пĕрре сулса ярсанах, каялла кайса ларать. Сĕмсĕрлĕхĕ пур вара хăйĕн.

«Кавалеристсем» çаран çинелле çил пек вĕçтерсе кайрĕç. Шуйттансем, лаша çинче самай меллĕ ларса пыраççĕ. Ак ĕнтĕ вĕсен кăшкăрашни инçетре илтĕнет. Горизонталла кусене те, паллах, вăйă, чăрсăрлăх, çутçанталăка чунран-чĕререн парăнни, Саврăшпуçĕн, ай-хай, савăк тĕнчи вĕрсе кĕртнĕ ирĕклĕх вăйĕ хăвалать. Сад-йывăç айĕнче ларакан савнăях та урам, Саврăшпуç, тăрса юлать ыр кун, ай, сунса.

6.

...Кимĕ шыв çинче тăрать. Вăл хăмăш хушшинче кăшт çеç палăрать. Вăштăр-вăштăр çил вĕрет те хăмăш шăпăлтатса илет. Çырми, кино çинчи Урал шывĕ пекех пулмасан та, самаях анлă. Ху пуçунта шутлатăн та вара, шыв урлă чапаевецсем ишеççĕ пек. Анчах та кусем Чапай ăмăрткайăкĕсем мар, вĕсем кимĕпе килчĕç, ун çинчен анса, хăмăш хушшине кĕрсе çухалчĕç. Вĕсенчен пĕри матроссен йăрăм-йăрăм кĕпипе сăмсасăр карттусне тăхăннă, тепри, кутамкка йăтни, хĕрлĕ çăлтăрлă шлемпа. Тата тепри — пăшалпа,

яланах малта пырать. Ку вырӑнсене ытти юлташӗсенчен аванрах пӗлет пулас. Пурте ҫирӗппӗн утаҫҫӗ. Вӗсем, хастар ҫулҫӳревҫӗсем, Романтика ятлӑ куҫа курӑнман, анчах та яланах малалла чӗнсе ҫунатлантаракан «аппӑшне» хирӗҫ утаҫҫӗ.

— Йывӑр ҫулта пуҫ усмастӑр-и, шӑллӑмсем? — ыйтать «аппӑшӗ».

— Чипер «аппаҫӑмӑр», епле йывӑр пулсан та, малаллах пырӑпӑр, мӗншӗн тесен эс пире пӑрахмӑн.

Шыв тӑрӑх вунӑ ҫухрӑма яхӑн килнӗ. Ҫаран вӗсенчен пилӗк ҫухрӑм хыҫала юлнӑ ӗнтӗ. Инҫе вӗсем халь тӑван ялтан, Саврӑшпуҫӗнчен. Ӑҫтан пӗлетӗн, тен, вӗсем кунта ик эрне кӑна та пурӑнмӗҫ. Саврӑшпуҫӗн, ай-хай, савӑк тӗнчи, тавтапуҫ сана ҫакӑ ҫамрӑк ачасене поэт чунӗ, салтак чӑтӑмлӑхӗпе ҫирӗплӗхӗ панӑшӑн, тайма пуҫ. Эс мана та, ялан шухӑш шухӑшлакан Кирука, вӗсенчен катӑк тумарӑн. Малашне те ҫунатӑмсене усма ан парччӗ, инҫе вӗҫесчӗ, ҫӳле вӗҫесчӗ...

Пирӗн хӑюллӑ та хастар ҫулҫӳревҫӗсем ҫаплах хӑмӑшлӑхпа пыраҫҫӗ. Ялан — хӗвелтухӑҫнелле. Палӑртнӑ вырӑна ҫитес тесен, вӗсен тата чылай каймалла-ха. Чипер ҫитӗр, эппин, тусӑмсем, ырӑ ҫул пултӑр!

*1953 ҫулхи июлӗн 22-мӗшӗ,*
*Саврӑшпуҫ.*

## УРОКРА

*Юмореска*

Çитăр Çитăрĕ текен вĕрентекен хăй ертсе пыракан класа усал йытă пек пăхса çаврăнчĕ. Ĕнер савнийĕн менельникĕнче пулнă та, паян мухмăрне чĕртсе ĕлкĕреймен иккен. Çитăр капла, ахаль чух, пит ĕçсех каймасть, ĕçкĕсенче яркалать вара, çавна пулах пуль, мухмăрĕ унăн йывăр, хуçине хыт аптратать.

Çитăр Çитăрĕ, класа пырса кĕрсен, ачасене палласа илмелле мар хулăм сасăпа сывлăх сунчĕ, тенкелĕ çине, тулли ыраш миххи пек, лаштах ларчĕ. Ик-виç минут, ӳсĕркелесе, ним чĕнмесĕр, ачасен хушамачĕсене çырнă список çинелле тинкерчĕ, хут çине мĕн çырнине çапах та ниепле те вуласа кăлараймарĕ. Чавсипе сĕтел çине те таянса пăхрĕ, çамкине те аллипе тĕрелерĕ — çук, вуласа кăларасси пулаймарĕ.

Çав хушăра шĕвĕрккесем кам мĕн пĕлет çавна туса лараççĕ: пĕрисем парта айне кĕрсе кайрĕç, теприсем хаваслăн темĕн чăшăлтатаççĕ...

Çитăр Çитăрĕ юлашкинчен пĕр хушамата вуласа кăларчĕ-кăларчех:

— Пестров! Чăпар Йăванĕ...

— Кам? Эпĕ-и? — илтĕнсе кайрĕ аякри кĕтесрен Чăпар Йăванĕн çинçе сасси. Хĕрлĕ çӳçĕ — тăмаланчăк, сăмси чернилпа вараланса пĕтнĕ, куçĕ-пуçĕ — чеерен те чее.

— Пестров, каласа пар, мĕн вĕренсе килнĕ эс?

— Киле мĕн панине вĕренсе килнĕ.

— Вăт-вăт, каласа пар мĕн панине.

— Пире «Мужичок с ноготок» парса янăччĕ...

Шĕвĕркке çав хушăра кӳршĕ партăри сар хĕрача еннелле хут чăмлакĕ вăркăнтарать, лешне çамкинчен лектерейместь те, «смирно» тӳрленсе тăрать: — Мужичок с ноготок...

Однажды в студенную зимнюю пору
я из лесу вышел. Был си-ильный мороз.
Гляжу: поднимается медленно в гору
лошадка, везущая собственный хвост...

Çакăнта çитсен Йăван такăнать, тус-юлташĕсем айккинчен пăшăлтатса мĕн чул пулăшсан та сăввăн малаллине астуса илеймест. Питне-куçне пĕркелентерсе те пăхать, сăмсине те туртать, çук, пĕр йĕрке те аса килмест. Вара вăл, питне-куçне тем ыратнă чухнехи пек туса хурать те, мĕскĕннĕн:

— А мĕн вĕсем кансĕрлеççĕ мана-а... — тесе хăй ырăнне лаках ларать. Çитăр Çитăрĕ, паçăрхи манерлех список вулаканскер, ăна каллех вуласа кăларайми пулчĕ: мĕн мурне пĕтĕм саспалли пĕрлешсе кайрĕ — ниепле вуласа кăларма çук. Мĕн çырнă, хуть вĕлер, паллă мар.

— Маттур Пестров, Чăпар Кукукук, тăваттă сана куншăн, — мăкăртатать сăмса айĕн Çитăр Çитăрĕ. Вара лăштах пулать — вăрăммăн сывласа илет те ыйха путать.

Хĕрлĕ çӳçлĕ Чăпар Йăванĕ вĕçтерсе янă хут чăмлакĕ çав самантрах пускил-хĕрача çамкине çат! çеç çыпăçса ларать...

*1954, Саврăшпуç.*

# БИЛЕТ СУТНĂ ЧУХ...

*Сценка*

Вылякансем:

СЕХРЕ МИТРАХВАНĔ — клуб заведующийĕ.
АЧА.
КИНО КУРАКАНСЕМ.

Ĕç Аксу районĕн пĕр кĕтесĕнче пулса иртет.

Кино пуçланас умĕн. Клуб заведующийĕ Сехре Митрахванĕ билет сутать. Кино курма пынисем, аслисем, кĕçĕннисем, клуб алăкĕнчен кĕреççĕ те, ик сеансшăн пĕр харăс билет илсе, саксем çине кайса вырнаçаççĕ. Пурте тенĕ пек кĕрсе пĕтсен, пĕр арçын ача пырса кĕрет.

СЕХРЕ (йĕрĕнсе). Укçу мĕн чуххăль?

АЧА (хашкаса). Аллă пус.

СЕХРЕ. Ма?

АЧА. Анне çапла кăна парса ячĕ. Икĕ кино пĕр тăрук пулать-им вара? Пĕлтерӳ çапманччĕ те...

СЕХРЕ. Кай, калаçса ан тăр. Çынсем пĕлтерӳсĕрех пĕлнĕ. Вĕçтер, илсе кил тепĕр аллă пус... Эй, тата кам кĕрет?

АЧА. Кӳрт ĕнтĕ, Митрахван пичче, кайран парăп.

СЕХРЕ. Кам кĕрес тет? Хăвăртрах! Пуçлатпăр атту! (Алăкран пуçне кăларса пăхать. Хăй тĕллĕн.) Никам та юлман унта. (Киномеханике кăшкăрать.) Тытăнар, пуçлар!

Кăшт тăрсан, тулта мотор кĕрлеме пуçларĕ. Лампа çутăлчĕ те сӳнчĕ. Музыка выляса ячĕ. Экран çинче сăмахсем çырăнма пуçларĕç.

АЧА (макăрас пек). Митрахван пичче, кӳрт ĕнтĕ. Чупкăнсен Анна аппине ялан ахалех кӳртетĕн те... Эп кайран парăп.

СЕХРЕ (чарăнса тăрать, тĕлĕнсе каять, унтан, урса кайса). Мĕн?! Кама?! Вăл ман ар... вăл ман пĕлнĕ хĕрарăм! Сăптăрса ярсан, кайса ӳкĕн!

АЧА (алăка шаплаттарса хăварса тухса тарчĕ, тултан). Эп сана сăптăрттарăп! Чупкăн Анни упăшки! Кĕтерук аппана каласа парап-ха çавна!

Чаршав

*1957, январь*

# ЯЛ АЧИСЕМ

*Повесть*

Мишша — аслăраххи, Ванюш — кĕçĕнреххи, вĕсем — пиччĕшĕпе шăллĕ, анчах та, темшĕн ĕнтĕ, йĕкĕрешсем пек туйăнаççĕ. Çакă вăл Ванюш пĕвĕпе Мишшана хуса çитсе пынăран çапла пуль. Пурис Павăлĕн ывăлĕсем татах та пур: Петĕрпе Кĕришша, вĕсем пĕчĕкçĕ-ха — Петĕр ултă çулта, Кĕришша икке кайнă. Мишшапа Ванюшăн йăмăкĕсем те пур: Çинукпа Лисук — пĕри саккăрта, тепри тăваттăра. Çапла вара Саврăшпуçĕнчи Пурис Павăлĕпе унăн мăшăрĕ Вера аппа сак тулли ача-пăча ӳстереççĕ — ывăл тесен ывăлĕ пур вĕсен, хĕр тесен хĕрĕ пур, ултă чун, çиччĕмĕшĕ вара халлĕхе малашра-ха... Вĕлле хурчĕ пек ĕçчен пиччепе аппа хĕвел тухса сарăлсан колхоз ĕçне тухса каяççĕ те хĕвел ансан тин ĕçрен таврăнаççĕ. Çав хушăра килти ача-пăчана ватти — Турхан Крахвини — асламăшĕ — асăрхаса тăрать: апат пĕçерсе çитерет, çăвать-тасатать, киле-çурта тирпейлет, аслăраххисене ĕç хушать — мĕн кĕçĕнрен ĕçе хăнăхтарма тăрăшать.

Колхозĕ пĕлтĕртенпе Сталин ячĕпе хисепленсе тăрать, районти чи кайра пыракан хуçалăх — тырăпулă енĕпе те, аш-какайпа сĕт-çу енĕпе те, çăмарта енĕпе те; кантăр ӳстерес енĕпе çеç вăл малта пырать — вăрманлă-мĕнлĕ çĕрсенче çак культура парка çитĕнетмĕн, хĕвелçаврăнăш та аван ӳсет, анчах пайти çукрах, ĕç алли çитменрен вăхăтлă пуçтарса илеймеççĕ, юр айне юлса харам пулать. Ку çĕрсем çинче кок-сагыз текен кăнтăр хăни пачах çитĕнеймест, йăл илеймест, пуçлăхсем темшĕн ĕнтĕ çине тăрсах, кăшкăрашсах актараççĕ çав апăршана, хăйсем те тĕплĕн пĕлеймеççĕ пуль

мĕншĕнне, çавна пĕр турă кăна аван пĕлет пуль. Мăкăнь, вир пуссисем те тупăш параймаççĕ, пăрçа çеç хăшпĕр çул вăйлă ӳсет, çавапа çулнă чух чисти халтан каятăн — туртса илме çук хулăм пулаççĕ паккусĕсем. Хире çĕрулми те ларткалаççĕ — йĕркеллĕ пăхса тăманран çум айне путать, мăян айне юлса путланать...

Колхоза Пашшар Илькки текен эрех шампи ертсе пырать, тĕрĕссипе каласан ăна никам та ертсе пымасть пулмалла, мĕншĕн тесен çав этем яланах хĕрĕнкĕ е вил ӳсĕр, çавна пула чылай чух вăл районти канашлусене те каяймасть, хăй вырăнне яланах е партбюро секретарьне, ялти шкул пуçлăхне Уçаркина, е ялканашĕн председательне Якур пиччене ярать.

Колхозра эрех ĕçмен пĕр пуçлăх та çук: бригадирсем пурте ĕçеççĕ, ĕне, лаша, сурăх, сысна, чăх енĕпе яваплисем те, сеялка-плуг-сӳре йĕркелесе тăраканнисем те, тĕнче пĕтсе килет тейĕн, хăрушла ĕçеççĕ. Кладовщикĕсем ĕçеççĕ. Сысна çăмарти касаканни, арман авăртаканни — пурте алкаш.

Турхан Крахвини вăхăт-вăхăт пĕççине çапсах шалт тĕлĕнет вара: «Хăспати, пĕсмĕлле! Мĕнле саланса каймасть ку калхус, епле тытăнкаласа тăрать?!» Колхоз хăшпĕр çул ĕçкунĕ пуçне икçĕр грамм ыраш валеçет, урăх ним те валеçмест. Кунта колхозниксене ыраш улăмĕ те пĕр сенĕк те валеçсе памаççĕ — çĕрсен çĕрет купасенче, улăм ури патне çывхарма ан хăй, тĕрме тĕпĕнче çĕретĕн.

Çапла вара хĕлĕн-çăвĕн ĕçленĕшĕн Павăл пиччепе Вера аппа колхозран нимĕн те илеймеççĕ, ĕçе вĕсем кил çумĕнчи (анкартинчи) çирĕм тăвата соткă пахчине туртса илесрен хăранипе çӳреççĕ. Пахчара килйыш икçĕр-виççĕр витререн кая мар çĕрулми, витри-

витрипе хăяр, помидор, кишĕр, сухан çитĕнтерет, хĕрлĕ кăшман, купăста, кавăн, çарăк туса илет. Улмуççисем улма параççĕ, хурлăхан тĕмĕсем — хурлăхан, чиесем — чие, хăмла çырли аврисем — хăмла çырли... Пахчана туртса илсен çак нумай ачаллă çемье пĕр çул хушшинчех выçă вилсе пĕтме пултарать.

Пире халлĕхе Мишшапа Ванюш ытларах кăсăклантараççĕ, мĕншĕн тесен Мишши вăл эпĕ хам, Ванюшĕ — манăн пĕрремĕш шăллăм, чи юратнă юлташ та тус. Ыттисем пирки сăмах май каласа кăтартса пырăпăр.

Хальччен эпĕ повесть тавраш çырса курман, сăвăкалав вара чылай çырса курнă. Калавĕ, тĕрĕссипе, иккĕ çеç-ха, кăçал, хальрех çырнăскерсем, сăвă вара тăватăпилĕк çул хушши шăрçалатăп ĕнтĕ — иккĕмĕш класра вĕренме пуçласан, кĕркунне тытăнтăм пек астăватăп. Анне йăмăкне, вун тăххăрти Люда аккана пытарнă çул. Çап-çамрăкла çĕре кĕнĕ акка сăвăç пулнă, «Асăнмалăх» ятлă чаплă поэма çырса хăварнă, хăйĕн вăй-хăвачĕпе çак хайлав «Нарспирен» пĕртте кая мар теççĕ...

Хальччен çырса курман пулин те, повеçе малалла тăсас кăмăл питĕ пысăк. Çын туман ĕç çук теççĕ, çавăнпа та пуçланă ĕçĕм ăнăçлă пулса тухасса эпĕ чунран-чĕререн шанса тăратăп, пурнăç калама çук йывăррине, ĕнсе хыçма та вăхăт çуккине пăхмасăрах хайлава малалла тăсатăп...

1.

Ката хĕррин кăнтăр енĕ. Унти вăрăм курăкла çеремлĕ вырăнсем. Хĕвел анас умĕн, ял кĕтĕвĕ кĕрсен, ĕнинесурăхне, ытти выльăхне килкартине хăваласа пуçтарнă хыççăн, Мишшапа Ванюш та юлташĕсенчен юлас темерĕç, ут кĕтĕвĕпе пĕрле ката хĕррине выртмана килчĕç.

Юман кати ялтан çурçĕр-хĕвелтухăç енче, çухрăм-çухрăм çурăра вырнаçнă. Кунтан ял та, ытти тавралăх та ывăç тупанĕ çинчи пек лайăх курăнать: кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче инçех те мар — Шурăмпуç поселокĕ, чăвашла, кунтилле, каласан — Çара (Заря) паççулкки, унăн масарĕ, Саврăш çырми пуçĕ, çырма леш енче виçĕ армак-чармак киремет йывăççи — вата хырсем... Çырма тăрăх малтан — Киреметай текен йывăçлă-курăклă-çаранлă вырăнсем, каярахпа — ялăн кăнтăр енче, Чулпалăкçи текен çеремлĕ çурутрав. Вара — Саврăшпуç. Çырма ун çумĕпе анăçалла юхать, Кĕçĕн Çарăмсаналлаваскать.

Вунвиççĕри Мишшана, çырă çӳçлĕ, самаях кĕрнеклĕскерне, пĕрремĕш бригада бригадирĕ Сăрнай Вани (Харитонов) самаях çивчĕ кĕсре шанса панă. Кулюкка ятлă. Ванюша вара, вунпĕрти сар çӳçлĕ, çинçешкерех, анчах та пиçĕ ачана, Сарпай ятлă кастарнă вата ăйăр лекнĕ. Сарпай çав тери лăпкă, васкама юратсах кайман чăтăмлă ут.

Выртмана килнĕ çич-сакăр ачаран Ванюш чи кĕçĕнни, унăн тусĕ Карланкă Кули — вуниккĕре, ыттисем пурте ик-виç, тăват-пилĕк çул аслăрах. Куля пиччĕшĕ Эрхип, сăмахран, вунпилĕк çулта (вăл паян, темшĕн ĕнтĕ, выртмана килеймен, урăх ĕçпе кайнă пулĕ, тен, Аксуран шкултан таврăнайман), вунвиççĕри Уçтине Çерушĕн тетĕшĕ Митраппан та вунпиллĕкре, вăтăр саккăрмĕш çул çуралнă. Майур Ваççи вĕсенчен те аслăрах — вунçиччĕре! Унăн шăллĕ Вăлача (хырăмĕнче улт ача!) Мишшаран пĕр çул аслăрах.

Лашасене тăлласа ката хĕрринчи çаран çине ярсан, шалтан хăрăк вутшанкă сĕтĕрме пуçларĕç, сĕтĕрсе тултарсан сарлака юман тунката патне кăвайт чĕртрĕç.

Çулăм хыпса илсе, вут кĕрлесе çуна пуçласан, пурте савăнса кăшкăрашма, тискер çынсем пек чупкалама-ташлама, вут тавра çаврăнма тытăнчĕç. Тĕрткелешеççĕ. Пĕрне-пĕри ура хурса ӳкереççĕ, тытмалла выляççĕ. Çав тери хаваслă, тату йыш тейĕн. Пурте малти кас ачисем, кайри кассем пĕри те çук, туслă пулмалла пек ĕнтĕ, анчах та апла мар иккен. Ак часах хирĕçӳ те сиксе тухрĕ: Карланкă Кули Уçтине Çерушне ура хунă та, лешĕ тунката çине тăрăнса аннă, тутине катнă, ача юн сурса тăрать. Шăллĕн хутне кĕрсе, Митраппан Куля патне сиксе пынă та хăйĕнчен тăвата çул кĕçĕнрехскерне йăлтăр-ялтăр! çупса янă:

— Аттеллĕ-ха тесе аттесĕррисене мăшкăллас те-тĕр-и-ха эсĕр?! Мăшкăллаттармастпăр!

Куля, ушкăнри ботинкăллă пĕртен-пĕр ача, Митраппан пекех, хăравçă йăхран мар, Левентей Васĕлей йăхĕнчен, хăйне çупса яракана ботинккин шĕвĕр пуçĕпе хысаран шаклаттарчĕ. Вара икĕ арçын ача çыхлanса ӳксе çапăçма тытăнчĕç. Аттеллисем кунта виççĕн çеç — Мишша, Ванюш тата Куля, — ыттисем пурте аттесĕр. Мишшапа Ванюш ашшĕ Павăл пичче, Мускава хӳтĕлесе йывăр аманнăскер, хăрах алăллă чăлах, инвалид. Куля ашшĕ, Карланкă Якурĕ, ялти пирвайхи трактористсенчен пĕри, фронта кайман, броньпе юлнă, фронт валли тырă нумайрах туса илес тесе тылра ырми-канми, кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Митраппанпа Çеруш ашшĕне, Муçилей Ваççук Хветĕрне, Павăл та, Якур та вĕлермен, вăл фронтра, хăй асăрханусăр пулнипе, мина çине пырса кĕнĕ... Çакна Мали карчăкран, Çеруш кукамăшĕнчен, хăй хăлхипе илтнĕскер, Мишша тарăхса кайрĕ, çапăçа-кансем патне чупса пырса уйăрса ячĕ те:

— Эпир кунта виççĕн çеç, эсир — пиллĕкĕн! — терĕ. — Хăтланса пăхăр: кама — кам!

Мишша, Ванюш, Куля сасартăк пĕр çĕре пухăнса çурăмпа çурăм тăчĕç:

— Круговая оборона! Часах вара, Эрхип таврăнсан, сире — полный разгром пулать, кинори пек каласан!

«Эрхип» тенине илтсен, Митраппана тăн килсе кĕчĕ пулмалла, вăл Майур Ваççине тем кахарĕ те, лешĕ Мишшана пуç урлă туртса çапма тесе чĕрĕ шĕшкĕ патакки тытнăскер, йĕрĕнчĕклĕн кулса ячĕ:

— Карланкă Якурĕн ачисем мăян çисе ӳсмен çав, аш яшкипе тулă çăкри пехлесе ӳснĕ, çавăнпа вăйпитти. Ăçтан пирĕн вăй пултăр... курăк шӳрпи сыпнипе...

Митраппан кун çумне çапла хушса хучĕ:

— Пурис Павăлĕн сынокĕсем те ыр курса ӳсеççĕ!

Çапла калани тĕрĕслĕхе юратакан аттесĕр кӳршĕ ачине Чукмар Лариванне, Мишшапа Эрхип тусне, килĕшсех пĕтмерĕ. Вăл аттесĕррисен ушкăнĕнчен уйрăлчĕ те аттеллисен çумне пырса тăчĕ, çав майпа шут 4:4 пулса тăчĕ, вăйсем танлашрĕç:

— Суятăн эс, Митраппан, — терĕ Ларивап, — Павăл пичче ачисем, ултташĕнчен пĕри те, ыр курса ӳсеймеççĕ, пирĕн пекех çарран çӳреççĕ, шӳрпе сыпаççĕ, мĕншĕн тесен ашшĕ чăлах, инвалид, йывăр ĕç ĕçлеймест, асламăшĕ ватă, амăшĕ колхозра ним те ĕçлесе илеймест. Пысăкрах ачисем те Мишшапа Ванюш кăнаха. Эсир тăваттăн, аннӳ, асаннӳ тата Çерушпа эсĕ, икĕ ĕне сĕтне-турăхне, хăймине-çуне чыхса пурăнатăр — пĕр çуртра икĕ çемье пурăннă пек туса суя хут тутарнă. Аннĕр фермăна хуралçа кĕнĕ пекки тунă та хураллас вырăнне хăй вăрлать — фураж йăкăртса пурăнать. Икĕ

ӗнӗрӗн те хырӑмӗ яланах ҫурӑлса тухас пек тулли, сӗчӗ ҫиллисенчен сума пуҫличченех юхса тӑрать...

Ҫакна илтсен Митраппан лач! сурчӗ те Ларивана:

— Предатель! — тесе хучӗ. — Чукмар таврашне нихӑшне те шанма ҫук!

Майур Ваҫҫине Яка Ҫини текен хӗрачашӑн хӗлле Эрхиппе Мишша самаях хытӑ пӗҫерккӗ панӑччӗ. Ҫавна асра тытса пуль, Ваҫҫа та Лариван майлӑ ҫаптара пуҫларӗ:

— Вӑрҫӑ умӗн пирӗн атте, бригадир пулнӑ май, Павӑл пиччене, саботажник, халӑх тӑшманӗ тесе тӗрмене хуптарнӑ. Апла пулин те, ачисем те, Мишша, Ванюш, Ҫинук, хӑйсем те, Крахвине кинемей, Павӑл пиччепе Вера акка, нихҫан та пире шӑмарса ҫӳремеҫҫӗ: «Ашшӗ ухмах пулнӑшӑн ачисем айӑплӑ мар», — тесе, Мишшапа ерсе кӗнӗ Вӑлачана кинеми яланах ҫӑкӑр чӗлли ҫине ҫу сӗрсе тыттарса кӑларса ярать. Такштӑ, мир тумалла пирӗн, пӗр кас ачисен, хирӗҫмелле мар...

Ҫерушпа Куля мирлешсе пӗрне-пӗри ал пырса пачӗҫ. Лариван вӗри кӗл ӑшне ҫур хутаҫ ҫӗрулми вырнаҫтарса хучӗ. Аслӑраххисем, улма пиҫиччен тесе, утсем патнелле кайрӗҫ — тырӑ пусси ҫине кӗрсе кайман-и вӗсем, пӑхса килес.

Тӗттӗм вӑрманта, теме сиссе е систерсе, ӳхӗ ӳхлетет...

## 2.

Саврӑшпуҫӗнче тулли мар вӑтам шкул уҫӑлнӑранпа икӗ ҫул анчах ҫитнӗ-ха.

Мишша кӑҫал экзаменсене ӑнӑҫлӑ тытса (пур предметпа та пиллӗк!) ултӑ класс пӗтерчӗ те ҫиччӗмӗшне

куçрĕ. Ванюш та экзамен лайăх панă, тăватă класс пĕтерсе пиллĕкмĕшне куçнă. Çинук кĕркунне иккĕмĕш класа каять. Хирĕç çуртра пурăнакан Пăлюк Ляви каллех тăваттăмĕш класа ларса юлнă, питĕ начар вĕреннĕрен ăна экзамена та кĕртмен. Лява Мишшасемпех вĕренме пуçланă, халĕ, ак, Ванюшран та тăрса юлнă. Çак ачана Свердловск хулинче резина япалисем туса кăларакан заводра ĕçлекен Марье ятлă аппăшĕ хуткупăс парнелесе пани пĕтерсе хунă — Лява кĕвĕ вĕренес тесе кунĕн те çĕрĕн купăс лăрăлтаттарнă, урокĕсене пĕртте вĕренесшĕн пулман, çапла майпа вара тăваттăмĕш класа... тăваттăмĕш çул ларса юлнă: «Купăс калама çеç вĕренем, ун чухне эпĕ ниçта та хур пулмастăп, ĕçкĕрен ĕçке, туйран туя кăна çӳретĕп — унта ĕçтереççĕ, çитереççĕ... Ялти чи кирлĕ, сумлă çын пулатăп...», — тесе анрашнă айван Лява.

Митраппан тăваттăмĕш класра вĕреннĕ чух çулла шкул сыскăлчăкне йыт çури ярса (путарса) вĕлернĕ те çакăншăн ăна шкул пуçлăхĕ Уçаркин хытă ятланă, хăлхине шатăрах пăрнă. Ултă çула çитиччен амăшĕн чĕччине ĕмнĕ, халĕ сĕт те хăйма çеç ĕçсе пурăнакан ачаш ача шкула урăх пырса çакланман, чĕнме кайсан — тара-тара пытаннă. Хальхи вăхăтра вăл, каччă çулне çитсе пыраканскер, лашапа колхозра ĕçлет, килеçуртне пайта кӳрет: алра лаша пур çыннăн выльăхчĕрлĕхĕ те, кайăк-кĕшĕкĕ те, йыт-качки таранах, тутă. Вут-шанки килкарти тулли. Килкартийĕ те, хуралтисем те яланах юсавлă. Ĕне кӳлсе уй хапхинчен тухакансенчен лĕкĕрт çеç кулать халь Митраппан.

Мишша, Ванюш тата Çинук паян ирех пахчана тухрĕç: Çинук йăрансем çумлать, тетĕшсем катмакпа (маттикпе), çĕрулми тĕмĕсене çумран тасатса пынă

май, вӗсен тавра тӑпра купалаççӗ, çӗре çемçетеççӗ, ялтилле каласан — «улма купалаççӗ». Çитмӗлти асламӑшӗ килре-çуртра кӑшӑртатать, пӗчӗк Лисукпа Кӗришука хӑйпе ертсе çӳресе, чӑхха-чӗппе апат парать, пахчара тар тӑкакансене тутлӑрах, çӑмӑлрах, техӗмлӗрех яшка пӗçерсе çитересчӗ-ха тесе чӑх йӑвисене тӗрӗслесе тухрӗ: салма яшки пӗçерес те тутлӑ турӑхпа юрса çитерес, кашнине пӗрер паття хурса парас — çитермесен ыр выльӑх та ывӑнать, мӑнукӗсем вара выльӑх мар, ӳсекен çамрӑк ачасем. Тата — питӗ ӗçчен, халтан-сӗлтен кайиччен ӗçлеççӗ-тӑрӑшаççӗ. Çитерес-ӗçтерес пулать маттурсене, вара кӑнтӑрла хыççӑн та тӑрӑшса лайӑх ӗçлӗç...

Петӗр хурсемпе çырма хӗрринчи çаран çине кайнӑ. Вӑл та апата часах таврӑнать пулӗ-ха...

Ир сулхӑнӗпе ӗçлеме питӗ аванччӗ, хӗвел çӳлелле хӑпарнӑçем ачасене шӑрӑх пусса çитере пуçларӗ, ӗç кал-кал пыми пулчӗ, катмаксем йывӑрланчӗç, тар куçа хуплать, çурӑм тӑрӑх юхать. Пуçа хӗвел, çара урасене вӗри тӑпра пӗçертет. Ванюш виçӗ рет катмакласа тухать те канса тӑрать, вара катмакӗпе тӑпрана чӗрсе тата виçӗ рет таран паллӑ тӑвать, çав йӗре çитиччен каллех шӑлне çыртса, пӗтӗм вӑйне пухса ӗçлет. Тетӗшӗ унран кӑшт маларах пырать. Çинук, хӗвел пусса çитернӗскер, йӑран çумне тӗршӗннӗ те пиччӗшӗсем мӗнле ӗçленине пӑхса ларать.

— Çинук, пӗтрӗ-им санӑн ӗç?

— Пӗтрӗ, тете, йӑрансене йӑлтах çумласа тухрӑм.

— Маттур, апла пулсан киле кӗр ӗнтӗ, асаннене пулӑш, вара пире апат çиме чӗнме тухӑн.

— Юрӗ, тете, чӗнме тухӑп. Эсир те ывӑнтӑр пулӗ ӗнтӗ, чарӑнӑр, апат та пиçет пуль.

— Часах эпир те кĕретпĕр, Çинук, пуçланă ретсене тухатпăр та... Эсĕ кĕр ĕнтĕ, кĕр...

Пĕчĕкçĕ пулин те, çырă çӳçлĕ Çинук çав тери ăслă хĕрача. Вăл тетĕшĕ: «Кĕр ĕнтĕ», — тесенех кĕрсе каймарĕ-ха, тӳрех кĕрсе çухални аван япала мар, çавăнпа та тетĕшсем патне пычĕ те катмаксене тытса пăхрĕ: «Ай-ай, епле йывăр! — терĕ. — Эсир арçын ачасем çав, сире çак тимĕр катмаксем те тĕк пекех çăмăл...»

Мишша йăмăкне аллипе пусĕнчен шăлса саврĕ те çурăмĕнчен лăп-лăп лăпкарĕ. Савăннипе хĕрачан кăвак куçĕсем çуталса кайрĕç, вăл йăл кулса ячĕ те, вĕлт! çеç çаврăнса, пӳрчĕ патнелле йăран тăрăх путек пек сиккелесе чупса кайрĕ, пахча алăкĕнчен кĕрсе часах курăнми те пулчĕ.

3.

Ял вĕçĕнче çырмана сарлака та çӳллĕ пĕве пӳлсе хунă. Ăна пĕлтĕр Хусантан килнĕ экскаваторпа самосвалсем çулла пĕвелерĕç. Пĕвере кăçал шыв тулăх, вăл таçтан-таçтан, тинĕс пек, сарăлса та çуталса выртать. Ун таппи Киреметайнех çитнĕ. Çавна пула чылай çирĕкпе çĕмĕрте, ытти йывăç-курăка шыв илнĕ, вĕсем, шывра тăраканскерсем, хăрма пуçланă.

Çыранĕсем чăнкă пулнăран, тулли çырман шывĕ питĕ тарăнланса кайнă. Ишме пĕлмесен унта ан та кĕр, путса вилетĕн — хĕрринченех тарăн, пӳ ярса пӳ çитмест. Чечек Кĕркури пахчи хыçĕнчи çырма хĕрри — çеремлĕ тикĕс вырăн. Кунта ир пуçласа каçчен тенĕ пек ача-пăча хĕвĕшет, çимĕкчен çиччĕ мар, çитмĕл çиччĕ шыва кĕрсе тухма ĕлкĕрет: тухсан çӳçĕ те типме ĕлкĕреймест, çӳллĕ çырантан каллех авăралла чăмать.

Ача-пăчапа пĕрле мăннисем те курăнкалаççĕ.

Ишме пĕлмен Лява та ытти вĕтĕр-шакăрпа пĕрле труççик вĕççĕн çеç чупкаласа çӳрет, шыва пилĕк таран кĕрет те, çырантан тытса, ишенçи пулса, урисемпе шыва çатăлтаттарать. Хăй калама çук хаваслăн ахăлтатать, çухăрашать. Епле савăнмăн-ха, шыва çынсемпе танах, çынсем пекех кĕретĕп тет ĕнтĕ.

Сталин паççулкки тĕлĕнчен иртсен, çумăр чашлаттарса ячĕ. Аналла çул тăваллана çаврăнсан, пĕрĕхсе, лĕштĕр-лĕштĕр çума пуçларĕ. Икĕ вăрман хушшине çитсе пынă вăхăта Мишшапа амăшĕ çинче пĕр типĕ вырăн та юлмарĕ. Малтанах, шыва çĕр сăхса иличчен, кустăрмасем çав-çавах çăмăл кусса пычĕç-ха, часах вĕсем çумне çăра пылчăк çыпăçма, кустăрмасене явăнма тытăнчĕ. Çул сасартăках йывăрланса кайрĕ. Кулюкка çумăрпа йĕпенсе татах та нăкăланнă лава тапса туртса пырать. Пырать-пырать те чарăнса тăрать. Мишша ăна хистемест, хăй уттипе, хăй еккипе пытăр тет.

Икĕ вăрман хушшинчи Ката хĕррипе пыракан урапа çулĕ лайăх мар, начар, унта çине-çинех лан-

кашка тĕл пулать. Ланкашкасенче шыв тăнипе, вĕсем мĕн тарăнăшне те тӳрех чухлама çук. Акă Мишша лашине сарлакарах ланкашкаран пăрчĕ те ансăрри çине пырса кĕчĕ, ансăррисем сарлакисенчен сакăлталлăрах пулнине уяса ĕлкĕреймерĕ. Лавăн малти сулахай кустăрми тарăн ланкашкана лакса ларчĕ. Кăрман чут çеç тӳнсе каятчĕ. Анаталла пулсан, Кулюкка, лава пĕррех картлаттарса туртса, ланкашкаран тухса та каятчĕ пуль, анчах та тăвалла тухса каяймарĕ. Унталла туртать лава, кунталла — ни малалла, ни каялла иртейместь. Мишша ăна çурăм тăрăх тилхепепе те хистесе пăхрĕ, туртса та çапрĕ. Усси çук. Чĕрĕ хулă хуçса тухрĕ. Унпа лашана хăлхи урлă сăтăрчĕ. Кулюкка малалла каяс вырăнне хыçалалла чака пуçларĕ, хăмăчĕ чут çеç пусĕнчен тухса каятчĕ. Вара çул хĕрринчен йĕлме кӳсек тупса тухрĕ. Ку вырăнта вĕсем кăна мар, ытти çынсем те пĕрре мар тертленнĕ иккен. Кӳсекне çавсем пăрахса хăварнă пулас. Йĕлмене курсан, амăшĕ хăраса кайрĕ:

— Ан çап, ан çап рычакпа! Вилсе выртĕ те, иксĕмĕр те халăх тăшманĕ пулса тăрăпăр! Тĕрме тĕпĕнче çĕртĕç!

— Çапмастăп, анне, ан хăра, атте вĕрентнĕ пĕр мел-меслет аса килчĕ-ха: кун пек чух вăл яланах кӳсекпе усă курать.

— Астурăм, астурăм, Мишша, эпĕ те астурăм! Чим-ха, ак çапла тăвăпăр: тыт-ха, ак, паçăрхи çăкăр татăкне, рычакна мана пар, эпĕ мăн çын, санран вăйлăрах, эсĕ ача кăна-ха, пилĕкӳ хайрăнса кайма, хусканма пултарать.

Амăшĕ Мишшана хĕвĕнчен çăкăр татăкĕ кăларса пачĕ, Мишша ăна кӳсек тыттарчĕ:

— Эсĕ лашана çăкăрпа илĕрт, йĕвенĕнчен тытса малалла турт, эпĕ лакса ларнă енчи тĕнĕле рычакпа хайăрăп. Икĕ ĕçне те харăс, пĕр самантра тăвăпăр. Атя-ха, пыр-ха... Чикрĕм рычака! Раз, два, три!

Тĕлĕнсе каймалли япала: лав сасартăк хăватлăн малалла туртăнчĕ те ланкашкаран тухса та тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ çул пĕр икçĕр-виççĕр метртан каллех анаталла каять, яла кĕрсе килне çитиччченех çапла.

Йĕпенни çеç çитмен, Мишшапа амăшĕ йăлтах пылчăкланса пĕтрĕç. Ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпине çитиччен — çап-çара пылчăк. Çăпатисем лăчăртатса тăраççĕ.

Шăнса пăсăлас мар тесе, амăшĕ тӳрех вĕри мунчана кĕрсе кайрĕ: киле çĕнĕ утă кĕнĕ ятпа хунямăшĕ хутса хунă. Унтах кĕпи-йĕмне çуса çакăп терĕ.

Мишша лаша леçме кайрĕ: кăрманĕ хăйсен, ут-таврашĕпе лаши — колхозăн.

Лаша вити хапхинчен кĕнĕ чух ачана Сăрнай Вани ярса илчĕ:

— Аха! Тупăнчĕ лаша вăрри! Лаша вăрласа хăвăр валли утта кайнăшăн сире аннĕрпе иксĕре штраф тăватăп, паянхи ĕçкунĕсене сирĕн çине çырмастăп.

— Кам çине çыратăн?

— Хам арăм çине! Вăл сиртен çĕр хут лайăхрах ĕçлет — ударница!

— Сан Наçтуку ялта пĕр чĕр кахал тата ху пекех алкаш. Çыр... пуçăра пултăр!

Ӳсĕр Сăрнай ачана çапса яма хăтланчĕ, анчах та Мишша вĕлт! çеç пăрăнчĕ те тара пачĕ.

— Каçхине утă капанĕсем патне тусура тух, шак-ăртма ил, никама та çывăха ан яр. Вут ӳкерсе хăварĕç те, вара — пĕтрĕмĕр: эсĕр те, эпĕ те!

Бригадир сăмахĕ пушă сăмах маррине Мишша тӳрех ăнкарса илчĕ, килне çитсенех кĕлетре шакăртма шырама пуçларĕ...

Ашшĕпе Ванюш Курмилле енчен ирпе çеç таврăнчĕç. Вĕсем ĕне масарĕ патĕнче никам та тĕкĕнмен вырăн тупнă, курăкĕ, чавкка пуç, Ванюша мăй таран пулнă та, лавĕ самантрах тулса ларнă, ĕни, пăлан пек Манькка, ăна киле аран-аран туртса çитернĕ: пырать-пырать тет те лаш-лаш! шăрать тет, пырать-пырать тет те шăрать тет...

8.

Вырăсла хапхан кĕçĕн алăкĕ яри уçăлса кайрĕ те хурсемпе Киреметай çеремне ăсаннă пĕчĕк Петĕр кĕрсе тăчĕ. Килкартинче утă типĕтекен Мишшапа Ванюш харăсах ун еннелле çаврăнса пăхрĕç. Петĕр, хур чĕппи йăтнăскер, лĕр! макăрса ячĕ.

— Ма йĕретĕн, Петĕр, мĕн пулчĕ, ма халех таврăнтăн? Хурусем ăçта?

— Пĕр хур чĕппи кăна тăрса юлчĕ, ăна та пулин лашапа таптатса амантрĕç. У-у-у! вилет пуль ĕнтĕ в-ă-ăл! — Петĕр ӳлесех макăрать.

— Ыттисем ăçта?

– Митраппанпа Тăрна Ванькки пăру ферми еннелле хăваласа кайрĕç...

— Ма лайăх хуралламарăн вара хурсене?

— Ачасемпе çĕмĕртлĕхе çĕмĕрт çиме кĕтĕмĕр те, çав вăхăтра пĕтĕм хур ыраш ăшне чăмнă...

— Камăн-камăн хурĕсем?

— Нумайăн... Тăвата-пилĕк ушкăн.

— Юрĕ. Хăваласа çитерсе пăру ферми килкиртине хупса хуччăр-ха, лăпланса çитчĕр, вара эсĕ, Петĕр,

хапха умне хурала кам ларса юлнине пăхса килĕн. Асту, патне ан пыр, хăвна ан паллаттар.

— Юрĕ, тете, паллаттармăп, эпĕ лайăх разведчик, партизан Мурат...

— Халĕ, партизан Мурат, хур чĕппине пахчана яр та ху канма вырт, каçпулттипе, çынсем ĕçрен киличчен, задание каятпăр. Эсĕ тыла кĕрсе хуралçине паллăн, хăвна паллаттармăн.

— Канма выртмастăп, тете, эп ывăнман, сире утă типĕтме пулăшатăп.

Хурсене пăлявайсем арестлесе хупса хунине асламăшне калас мар терĕç. Каласан, вăл пĕр тăхтаса тăмасăр атакăна кайнă пулĕччĕ. Лешсем вара, хурсем камăн иккенне пĕлсе, ашшĕпе амăшне тем тĕрлĕ инкек кăтартса пĕтерме пултараççĕ: «Ачăра колхоза сăтăр тума хăвăр вĕрентнĕ, тĕрмене тепре каяс килет-и элле?» — тесе пĕтерĕç, правленине чĕнтерсе. Штраф туса укçа тӳлеттерĕç. Укçине вара ниçтан пĕр пус тупса илме те çук. Мĕн сутаян, кам туянать ăна Анат Саврăш пасарĕнче? Ку таврара халăх питĕ чухăн, выçă та çĕтĕк...

Утта аслăк çине хăпартса пĕтерес умĕн «Мурат партизан» разведкăна кайрĕ те часах каялла персе те çитрĕ:

— Генрих Шварц ларать унта, хапха умĕнче! Фашист!

— Хулленрех эс... Мĕнле Генрих Шварц? Хăш ялсем?

— Тельман паççулккисем. Тăрна Анюкки патне киле кĕрсе пурнаканни. Уксак Улькkине хырăм йăттараканни.

— Ванькка апла вăл, тĕнчере пĕр путсĕр этем. Тăрна Ванькки!

— Шăпах çавă, тете. «Мĕн туса ларан кунта?» — терĕм те: «Хурсем хураллап, — тет, — сирĕн хупăнман-и, хупăннă пулсан, çур литр аншарли илсе кил те, кăларса яратăп, — тет. — Ахтур мухмăр касать, пуç çурăлса тухать, чуп часрах, çур литр чӳпĕк пуçлине тупса кил». «Хупăнман пирĕн, — терĕм, — эпĕр сăмакунпа çыхланмастпăр, лавкка эреххи кăна ĕçетпĕр». «Кам ачи эс?» — тет. «Агротехник Михеевăн, Тяппак Симунĕн», — терĕм. «О-о! Агротехник Михеев ханша лакмасть, паллах, пирĕн пек, каçункка кăна кӳпет. Салам кала аçуна, агротехник пăхĕ!» — терĕ Ванькка, мана хăлхаран ярса илме хăтланса, вара эпĕ тара патăм, килелле вĕçтерсе килтĕм...

«Агротехник Михеев» тени Мишшана шухăша ячĕ. Çак икĕ сăмаха пула плансем улшăнчĕç, задани ансатланчĕ. Унта виççĕнлетсе кайма кирлех те мар-мĕн, пĕчĕк Петĕр кайни те çитет: вăл халь — агротехник Михеев ывăлĕ. Михеев, йăпăлти те чеескер, сĕмсĕр те куштан вăрă, правлени составĕнче тăрать, колхозри чи пысăк пуçлăхсемпе ĕçсе-çиет.

Çур литр пуш кĕленче тупса тухрĕç, унта пирвай Мишша кăштах шăчĕ, унтан — Ванюш, вара — Петĕр. Хăйсем виççĕш те кулса вилеççĕ. Тепĕр çур литр кĕленчинче ашшĕ Мĕтри кумĕнчен ĕнен вăкăр çурса янă хуртланнă кутне сĕрме илсе килнĕ тăм ярса тасатнă денатурат ларать. Ăна шăклă кĕленчене ячĕç те, тутлă эрех пулса тăчĕ — хĕрĕх-аллă градусран кая мар! Кĕленчене Петĕре тыттарчĕç.

— Вĕçтер, партизан! Эрехе тӳрех ан пар, хурсене кăларса çитерсен çеç пырса тыттар. Илĕрт фашиста, кĕленчене курсан алкашăн сĕлеки юхса антăр, куçĕ

хуралса килтĕр. «Уç хапхуна, хурсене хуса тухатăп, вара — тархасшăн!» — тесе тĕмсĕлтер ухмаха...

Петĕр куçран мĕнле килнĕ çапла хăвăрт çухалчĕ, хурсене малтанах килне мар, Чулпалăкçи текен çĕре илсе çитерме пулчĕ, ма тесен Ванькка хыçран йĕрлесе килме пултарать.

Мишша, повесть çырма хăтланаканскер, Ванькана лешĕ яла килсе кĕнĕренпех сăнать. Уксак Ульки текен вунтăххăрти маттур хĕре Ванькка хырăм йăттарнă та Тăрна Анюкки текен пĕр ачаллă арăм патне киле кĕнĕ. Улькка, хĕр пуççăн ача тусан çын куçĕ умне мĕнле курăнмалла тесе, тĕпсакайĕнче хырăм пăрахнă, юн кайнине ниепле чараймасăр, çавăнтах вилсе выртнă.

Виççĕмĕш çул пурăнать Тăрна кĕрӳшĕ пулса, хăй те «Тăрна» ят илчĕ. Малтан Анюккана ывăл çураттарчĕ, халĕ хĕрарăм каллех йывăрлă. Мĕн çуратса парать, ăна пĕр турă кăна пĕлет, урăх никам та, çав шутра Мишша та, пĕлмест. Вăл Анюккана пăрахса тухса кайса урăх çĕрте те киле кĕркелет. Сăмахран, нумаях та пулмасть-ха Вырăс Шупашкарĕ текен ялта пĕр «вунçич çулхи» майра патне каллех киле кĕнĕ. Ванькка — хитре сăн-питлĕ, илемлĕ хул-çурăмлă, вĕçкĕн уссиллĕ хĕрĕхелле çывхарса пыракан арçын. Майра патĕнче пĕр уйăх ытларах ыр курса пурăнсан-пурăнсан, тухать те шăвать хайхи Ванькка, Саврăшпуçне таврăнать. Каллех авланчĕ. Хальхинче, ял çыннисем каларăшле, Ванькка тата вăйлăрах ăнтарнă. Каласан ĕненмелле мар çакна: лайăх киллĕ-çуртлă, чăнах та тин çеç вунçиччĕ тултарнă хĕр патĕнче пурăнать.

Мĕн туса пурăнать-ха хĕлле е кĕрлĕ-çурлă Власов Иван? Нимĕн те тумасть. Ĕçет-çиет те çамрăк хĕре

килентерет, канать, çулла валли вăрманта çараçланма вăй пухать. Çу кунĕсем унăн, чăнах та, вăрманта иртеççĕ. Каргали тутарĕсенчен кастарса пама шантарса делянкăсем илет. Тем те хăтланать вара çавăнта. Хăй вăл, паллах, урлă выртана тăрăх та çавăрса пăрахмасть, пĕр сыпă вутă та, пĕр пĕрене те касмасть, çынсене илĕртсе ĕçлеттерет, пура пураттарса ăна виçĕ хутчен сутать те, чике тăршшĕ лартса, улталаса, аллисене кĕсъене чиксе, шик! шăхăрса кăна çӳрет. Хăй патне вăрман касма пыракансене хăшне ĕçĕн çурришĕн çеç тӳлет, хăшне пĕр пус та памасть.

Мĕн чухлĕ пайта тумасть-ши çав çуллахи кĕске вăхăтра! Çавăн чуль укçа тупнă çĕрте вăл тахçанах улпута çаврăнмалла пек ĕнтĕ, анчах та çук, Ванькка улпут пулайман-ха, çаплипех çапкаланса çӳрет. Ăçта хурать тетĕр-ха эсир çавăн чухлĕ нухрата? Ванькка эрекене чĕререн юрататъ. Халь сисрĕр-и ĕнтĕ вăл ма хальччен те, ниепле те пуйса каяйманне? Пусăра шыв вырăнне эрех пулсан, Ванькка пĕр тăхтаса тăмасăрах пусса пуçхĕрлĕ чăммалла. Эрех тесен, ăна нимĕн те тытса чараймасть. Укçи пĕтсен, вăрласа та пулин ĕçет. Сăмахран, ак, пĕррехинче вăл Саврăшпуçĕнчен инçех мар ларакан Çирĕклĕ ялĕнчи лавккаçă патне пырса кĕнĕ те, лешĕн килĕнче пĕчĕк ывăлĕ çеç пулнипе усă курса, малти пӳлĕмрен пĕр литр çуттине çаклатса та тухнă.

Мĕн чухлĕ шульăкла ĕç туман пуль Власов Иван! Ялти пуçлăхсем çак çыннăн нумай киревсĕр ĕçне пĕлсе тăраççĕ ĕнтĕ, анчах та темшĕн вара пархатарсăр чун çинчен çур сăмах та хускатса калаçмаççĕ. Мĕншĕн, ним айăпсăр таса çын пек, айккинче, палăрмасăр, ним айăпсăр тăрса юлать-ха çак этем? Мĕншĕн Миш-

ша ашшĕне, вăрçăра аманса пĕтнĕ, туртман-ĕçмен, никама нихăçан пĕр усал сăмах каламан, çыннăнне шăрпăкне те тытман тӳрĕ чунлă, сăпайлă та ĕçчен çынна пуçлăхсем, Сăрнай Вани бригадир таранччен, ялан сăхма хăтланаççĕ, тĕрмепе хăратаççĕ? Пĕрле ĕçмест, пĕрле вăрламасть вĕсемпе. Акă ăçта ăна юратманнин, унран шикленнин, кун пек çынран хăтăлас килнин чăн сăлтавĕ! Мишша çакна, вунвиççĕ те тултарман пулин те, лайăх курса тăрать.

Кĕтӳ анас умĕн тин Петĕр хăйĕн юратнă тусĕсене — хурсене — Чулпалăкçинчен килне хăваласа таврăнчĕ. Тăшман тыткăнĕнчен ăнăçлă хăтăлнăскерсем, вĕсем ыраш çине урăх пĕрре те кĕмерĕç тет — юланутсем сиксе тухса асар-писер таптаса тăкасран шутсăр хăракан пулнă.

Хурсене кĕртсе пĕтерчĕ те, Петĕр пахчара ларакан тусĕ патневаскарĕ. Мишшапа Ванюш, хăярпа купăстана шăварса пĕтерсен, кĕтĕве хирĕç кайрĕç: Мишша — ĕне патне, Ванюш — сурăхсем патне. Уй хапхи патнелле утнă чух вĕсем кĕçĕн шăллĕне Петĕре питĕ ырласа калаçрĕç, тăнлă, ăслă ача ӳссен пысăк çын пулать терĕç. Тен, Николай Кузнецов пек чаплă разведчик? Тен, дипломат? Çук, разведчик ан пултăр, пĕтĕмĕшле илсен, разведчиксен ĕмĕрĕ вăрăм мар, тетĕшсен вара Петĕре нумай-нумай, ватăлса çăпатине кутăн сыракан пуличчен, йĕм тĕпĕ çĕре перĕнекен пуличчен пурăнтарас килет...

Çинукпа Лисук тата Кĕришук пуканелле выляма тесе пӳрт хыçнелле пăрăннă кăначчĕ, асламăшĕ Çинука хăй патне чĕнсе илчĕ: çĕрулми шуратмалла — ашшĕпе амăшĕ ĕçрен килнĕ çĕре яшка пĕçерсе хумалла.

9.

Пĕр вăхăт путек милĕкне çӳрерĕç. Ял çумĕнчи, çурçĕр енчи, Раща вăрманĕнче икçĕр çăка милĕкĕ таранах касса хатĕрлерĕç. Киле икĕ кустăрмаллă алурапипе туртрĕç. Милĕк каснă хушăрах Мишшапа Ванюш хăрăк, анчах ӳкмен, ура çинчех янраса тăракан ăвăссене пăхса çӳрерĕç. Хăрăк йывăçа каснăшăн кунта хытах айăпламаççĕ: штраф тукалаççĕ е, штраф тумасан, лесник каçхине килне пырать те çур литр ĕçсе тухса каять, çавăнпа вара ĕçĕ те пĕтет. Чĕрĕ йывăçпа тытсан, пачах урăхла: чунна кăларса илме пултараççĕ — ĕмĕрне тӳлесе пĕтереймĕн...

Вырмана тухиччен, тырçин хĕрӳ кунĕсем килсе çитиччен, вутă-шанкă пирки хытах шухăшлас пулать.

Мишшапа Ванюш пĕр лавлăх хăрăк ăвăс кăнтăрла кайса хатĕрлеççĕ. Кĕтӳ кĕрсе ĕнене сусан, ăна кӳлеççĕ те, кăрмана майпен çеç кăлтăр-кăлтăр кустарса, вăрманалла хăпараççĕ. Вăрманĕ ал айĕнчех, инçе каймалла мар. Кунта та вăрманалла хăпарнă чух — тăвалла, аннă чух — анаталла. Тĕлĕнмелле ăслă та тавçăруллă йĕкĕтсем пулнă Вăрмантейпе Юмантей, Саврăшпуç ялне пуçласа янă тĕне кĕмен маттур чăвашсем. Пурне те шута илнĕ: вăрманне те, çырмине те, вырнаçса лармалли вырăнне те. Питĕ меллĕ вырăна вырнаçса ларнă.

Тăхăр хутчен аванах кайса килчĕç. Вуннăмĕшне кайсан, кĕтмен-туман çĕртен пăтăрмах сиксе тухрĕ, чутах инкек курса тăратчĕç. Юлашки лав, аяла «деловой материал», урăхла каласан, чĕрĕ пĕренесем хунăран, йывăртарах та пысăкрах пулса кайрĕ. Çакна Манькка та сисрĕ пулмалла, лава пĕр вунă утăм туртсанах канăçсăрланма пуçларĕ: пĕрре чарăнса тăрать, тепре анăш-тăвăш хускалса каять. Тӳрех паллă — кăмăлсăр.

Вăрманта тĕттĕмлене пуçларĕ, каç çывхарса килет. Лавпа кĕнĕ çул питĕ тăвăр. Ăна çул темелĕх те çук. Квартал çине тухаспа ĕне, темрен хăраса, тилĕрсе кайрĕ те айккинелле çĕмĕрттерсе кĕчĕ. Çӳлте ларса пыракан Ванюш йăпăр-япăр! вăштах сиксе юлчĕ. Çиçĕмле хăвăртлăхпа сиксе ĕлкĕреймен пулсан, йывăç çумне çапăнса пуçне çĕмĕрттеретчĕ.

Ĕне тăварăнса кайрĕ, лав йывăçран çакланса ларчĕ. Ĕнене çĕнрен кӳлме, лава пушатма тӳр килчĕ. Ачисем час таврăнманран, инкеке лекрĕç пуль тесе, вăрмана ĕçрен тинрех çеç таврăннă ашшĕ хăпарчĕ. Аллинче пуртă. Анчах та Мишшапа Ванюша ашшĕн пулăшăвĕ кирлех пулмарĕ, ăна вĕсем вăрман сăмсинче тĕл пулчĕç.

— Ăçта çухалтăр эсир? Аннӳпе асаннӳ питĕ пăшăрханаççĕ, мана апат çитермесĕрех сире хирĕç ячĕç.

— Лав йывăртарах пулчĕ, атте, çакланса лартăмăр.

— Ĕне выльăх лаша мар çав вăл, унпа пынă чух ыйхăласа пыма юрамасть.

— Ыйхăламан эпир, лешсене, «деловойсене», хутăмăр, хăв хушса янине.

— Апла пулсан, юрĕ. Пырăр эппин хуллен, эпĕ сенĕк аврилĕх çĕмĕрт касам-ха çул май, ятарласа килесси кайран...

Ашшĕ Мишшапа Ванюш лава пушатса пĕтернĕ тĕле таврăнчĕ. Чĕрĕ йывăçсене çилнике кĕртсе вырнаçтарчĕç, çиелтен утăпа витсе хучĕç.

Амăшĕпе асламăшĕ савăнса тăранаймаççĕ: мĕн чухлĕ вутă-шанкă хапха умĕнче! Кай, хăш хушăра ӳссе çитсе çакăн пек маттур ĕçченсем пулса тăчĕç Мишшапа Ванюш?! «Ĕçченĕсем» вара: пĕри — çул вĕçĕнче вунвиççĕ тултарать, тепри — майăн тăххăрмĕшĕнче вуннă

тултарса вунпĕре кайнă. Ашшĕ те савăнать пулĕ те, палăртмасть, ним шарламасăр ĕне уттаврашне вите çумĕнчи йывăç пăтасенчен çакса çӳрет. Кăрмана килкартине кĕртсе хăйĕн яланхи вырăнне майласа лартрĕ. Вара пӳртре трубасăр лампа çутса апата ларчĕç.

Пĕчĕккисем паçăрах çисе тăраннă та халĕ çывăраççĕ...

10.

Тепĕр чух ял çине сăртран пăхса тăнă май Мишша тарăн шухăша путать. Вăрманĕ те çывăхра ĕнтĕ, вăрçă иртни те тăххăрмĕш çула кайрĕ, Саврăшпуç çав-çавах çĕнелеймест-ха. Пӳрчĕсем пурте тенĕ пек тăйлăк-тайлăк, кивĕ, çине улăм витнĕ. Улăмĕ те тахçанах хуралса, çĕрсе кайнă. Çивиттисем çине тĕлĕ-тĕлĕпе мăян, тĕлĕ-тĕлĕпе армути шăтнă, кашласах ӳсеççĕ тес пулать. Клуб çийĕ те пулин улăм.

*Вăрман айĕнче,*
*Саврăшпуçĕнче,*
*эп çуралнă чăваш ялĕнче*, —

тесе юрлаççĕ кунта. Çуралнă пуль-ха, вăрман айĕнче пуль, анчах та ял мĕншĕн çав таранччен юхăнчăк та çап-çара? Ниçта пĕр йывăç та курăнмасть тесен те йăнăш пулмасть пулĕ, тăвансем? Йывăç лартма вăйхал нумай кирлĕ-ши вара? Вăрман айĕнче терĕмĕр. Вăрман айĕнче пулсан, сад айĕнче те пулмалла пек ĕнтĕ, анчах та, каларăмăр ĕнтĕ, аплах мар çав. Саврăшпуçĕнче пӳрт умне е уйрăм йывăç пахчине йывăç лартма юратсах каймаççĕ. Паллах, пĕр йывăç та лартмаççĕ теме çук, лартаççĕ кăшт (ял Ванюксăр пулмасть тенĕ ваттисем), анчах та питĕ сахал. Çерçи Хветĕрĕн пӳрчĕ умĕнчи хурăнсемпе Кушак Ваççи-

лийĕсен е Теттюк Çеркейĕн çĕмĕрчĕсем пулмасан, кунта мухтанмалли ытлашши нимех те çук. Чылайăшĕ, хăйсем лартас вырăнне, пахчара е çырма çинче ларакан йывăçсене касса йăвантарса пĕтереççĕ. Савкка Петтăрĕ текен çын, Мишшасен кассисем, пахчинчи çĕмĕрчĕсене, хăвисене тахçанах касса-кăкласа вутта хутнă, анчах та хăй нихçан та пĕр йывăç та лартса курман. Халĕ пахчи хыçĕнчи лаштра йăмрана, пахчи хыçне çурхи шыв çурса каясран сыхлаканскерне, кăкласа хăртма тăрăшать. Пĕр йăмрине унчченех тӳнтерсе чунне пусарчĕ. Кун хыççăн теприне тапăнчĕ. Юлашки йăмри те хăрса ларас патнех çитнĕ ĕнтĕ, ăна йăлтах касса, турачĕсене амантса пĕтернĕ...

Шикки Кĕркурийĕ текенни те çавăн пекех хătланать. Ун пеккисем пайтах кунта. Тата тепĕр йышшисем те пур: кĕркунне çырмара пăр шăнсан, вăрмана хăпарас вырăнне аната анатчĕç те çыранти çирĕксене, хурамасене, йĕлмесене, вĕренесене йăвантарса килнелле сĕтĕретчĕç. Пăр тăрăх сĕтĕрме йывăрах та мар-мĕн, йăкăртатса çеç шуса пырать йывăç кантăк пек яка пăр çийĕпе. Аялтан çакна пулăсем тĕлĕнетĕлĕне пăхса юлаççĕ пуль.

«Вутă кӳме колхозран лаша памаççĕ-шим вара кунта?» — теме пулать. Паркалаççĕ-и, çук-и, анчах та ку этемсем колхозра ĕçлекен йышшисемех мар. Пĕри, Мишшасене хирĕç çуртра пурăнаканни, Нăрăк Сухйи, хут çинче кăна колхозница шутланать. Вăл колхозра халиччен те виçĕ ĕçкунĕ туса курман. Çулла ĕç вăхăтĕнче таçта кайса çухалать те хĕл каçма яла таврăнать. Унăнне темшĕн ĕнтĕ пахчине те туртса илмеççĕ, ăна ял Советне (кĕнччелере) чĕнтерсе те ятламаççĕ, тĕрмене ярассипе хăратмаççĕ.

Тепри, Сармантей Марйи, арçынсемпе асса пĕччен хуçалăхпа пурăнать. Ăна та пахча акма ирĕк параççĕ. Самсун Хветуçĕ текенни колхоз ĕçне унччен те сайра хутра кăна тухкалатчĕ, халĕ вара пачах тухми пулчĕ.

Йывăççем çырма тăрăх ял патне çитиех тăсăлатчĕç — çирĕксем, хурамасем, çĕмĕртсем, палансемпе катăркашсем, хăвасем... Анчах та халь ĕнтĕ ялтан пайтах аякка кайнă. Çырма леш енчи ватă хурăнсене, хăвăлне вут хурса, кĕтӳççем тӳнтерсе пĕтернĕ.

Пурнăç малаллах шăвать. Саврăшпуç çыннисем те çулран-çул лайăхрах та лайăхрах пурăнма тытăнĕç акă. Ял çĕнелĕ, ӳсĕ те сарăлĕ, анчах та «йăмрасăр ял», çап-çараскер, мĕнле ял пулĕ-ха вăл? Çакăн çинчен ял пуçлăхĕсем шухăшласа пăхсан та аван пулĕччĕ те, çук, шухăшламаççĕ. Вĕсен кун пирки пуç ватса чăрманма ерçӳ çукрах, вĕсем пурте ĕçке ярăннă — социализм çуртне купалаççĕ.

Йывăç нумай лартса яла сăн, илем кĕртесси пирки паян Мишша шухăшлать — Егоров Михаил Павлович, ялтилле каласан, Пурис Мишши. Пурисĕ вăл Мишшан мăнаслашшĕ, Якурăн ывăлĕ. Якур ашшĕ — Макçăм. Макçăм ашшĕ тĕне кĕмен чăваш Кулюк. Вăрмантейпе Юмантей таврашĕ... Мишша—Павăл—Кавăрле—Пурис—Якур—Макçăм—Кулюк—Вăрмантей е Юмантей. Иккĕшĕнчен пĕри. Ял вунтăххăрмĕш ĕмĕрте пуçланса кайнă теççĕ — Пушкин чĕчĕ ĕмнĕ вăхăталла. Ун чухне тата Хусанта чăхсене сунă тет...

## 11.

Кĕнччелер тесен ашшĕ яланах шурса каять: паккăç кантур вăл çав кĕнччелер. Кĕнччелер Мишшасен пахчи хыçнех вырнаçнă. Пĕр путлĕ çын та кĕрсе çӳремест

çав кантура. Уйрăмах районтан йăтăнса килекеннисем нĕрсĕр. Асламăшĕ кĕнччелере (ял Советне) кантурчунилли тет. Тĕрĕсех калать. Ултă ачаллă, ватă амăшĕллĕ Павăлăн çулталăк тăршшĕпе патшалăха мĕнле-мĕнле кăна парăм парса татмалла мар-ши? Налук, сайăм, сĕт, çу, çăмарта, аш-какай, сурăх çăмĕ, качака çăмĕ, сурăх тирĕ, пăру тирĕ... Турăçăм, пĕсмĕлле! Сĕтне вицçĕр литр ыйтаççĕ, ашне-пăшне — пăчĕ-пăчĕпе, аллă килограмм. Сайăмне тĕрмепе хăратса, пусмăрласа «хăвăн ирĕкӳпе» çырăнтараççĕ тăхăрçĕртен икĕ пин тенкĕ таран. Налукне тата мĕншĕн-мĕншĕн кăна хумаççĕ-ши? Улмуççи тĕпĕсемшĕн, вĕллесемшĕн... Авланманшăн, качча кайманшăн, ача туманшăн... Ачине тата тăваймасан мĕнле тумалла-ши ăна? Арçыннисем вăрçăра вилсе пĕтнĕ, кампа выртса тумалла ачине?

Павăла амăшĕ паян начар хыпар каларĕ: авăртмалли ыраш пӳлме тĕпĕнче çеç пĕр-ик витре пек юлнă, çăнăхĕ — такана çинчи. Çĕрулми те нумаях мар. Çиекенĕсем вара тăххăрăн. Манькка ятлă ĕнине шутламасан. Сĕт лайăх антартăр тесен, ăна та çăнăхĕ те пăсмĕччĕ, тураса панă улми те чухах килнĕ пулĕччĕ. Вара, сĕчĕ тулăх пулсан, патшалăхне те парса татĕччĕç, хăйсене çикелеме те кăштах юлĕччĕ.

Аш вăхăтлă парса татманшăн Кăнюк Микулайĕ, ял çинче Аш Миккулайĕ тесе ят панăскер, хĕрарăмсене кĕнччелере чĕнтерет те талăкĕ-талăкĕпе шăма та кăлармасăр усрать, хĕнесе пĕтерет, пусмăрлать, тĕпсакайне хупа-хупа хурать, тăван-пĕтенĕсем кăштах та пулин аш тупса килсе памасăр та кăларса ямасть, хĕлне те, çуне те уяса тăмасть: ухмаха аш пуçтарма хушнă, вăл пуçтарать, шăрăх çу варринче выльăх пустарать çак киревсĕр чунилли. Кĕнччелерте Аш

Миккулайӗ пусмӑрланӑ Ҫирӗклӗ хӗрарӑмӗ Кулине ҫак паккӑҫ этемрен хырӑм йӑтса ывӑл ҫуратса панӑ. Пӑрахасшӑн пулнӑ тет хырӑмне, хӑранӑ: саккун хытӑ — хырӑм пӑрахнӑшӑн пилӗк ҫула тӗрмене хупса хураҫҫӗ.

Мишша ашшӗ йӑлтах хуйха ӳкрӗ: иртен пуҫласа каҫчен колхоз каторгинче тӑрмашатӑн, хӑшкӑлатӑн, чун хӗнетӗн, ху пурпӗр выҫӑ, ҫӗтӗк, ҫемйӳ — паян кун выҫӑ вилсе пӗтме пултарать. Нумай та юлмарӗ ҫӗнне тухса ӳкме, йӗтем ҫине тырӑ кӗме пуҫласан кӗсъене те пулин, ҫӑпата пуҫне те пулин кӑшт-кашт ярса килме пулӗччӗ. Аларманӗпе кӗрпе ҫурса пӑтӑ пӗҫерсе ҫийӗччӗҫ. Кӗрпе аса килчӗ те, ҫӑнӑхӗ такана ҫинче ҫеҫ юлни Павӑлӑн чунне ҫурса, чӗрине каскаласа кайрӗ: «Ӑҫтан илмелле ыраш, ӑҫтан илмелле пӗрре ҫӑкӑр пӗҫермелӗх те пулин ҫӑнӑх?» Шухӑшларӗ-шухӑшларӗ, нимӗн те шухӑшласа тупаймарӗ. Шухӑшласа тупма аслӑ ывӑлӗ Мишша пулӑшрӗ.

— Атте, пирӗн ҫӑнӑх тӑвакан аларманне ӗҫе кӗртсе хута ярас пулать, кӗрпе авӑртаканне эпӗр санпа пӗлтӗрех туса пӗтернӗччӗ, куна вара вӗҫне ҫитерейменмерӗмӗр: ытти хӗрӳ ӗҫ пуҫланчӗ те, юлнӑ ӗҫ ҫине юр ҫурӗ...

Ашшӗ Мишша ҫине чӑр! пӑхрӗ.

— Ӳссен кам пулӑн-ши эсӗ, ульӑм? Ытла шухӑшлӑ, ытла туйӑмлӑ та тавҫӑруллӑ, канӑҫсӑр чунлӑ... Ытла ӑслӑ... Пӑхатӑп та сан ҫине, вунвиҫҫӗри ача пек те мар эсӗ, ӳссе ҫитнӗ мӑн ҫын пек. Ҫавӑнпа та питӗ хӑратӑп, чун ҫук эс ҫут тӗнчере пӗве кӗрсе ҫитиччен те пурӑнаймасран: йӑл! тӑвӑн та ҫунса та кайӑн, ма тесен икӗ хутчен ӗнтӗ хытӑ чирлесе кӑтартрӑн, чут ҫеҫ вилсе каймарӑн. Ачаллах ҫапла хавшак сывлӑхлӑ пуҫпа аякках каяйӗ-ши ку ача тесе хуйхӑратӑп. Хӑш чух шухӑша путатӑп та ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе ҫывӑраймастӑп...

— Ан хăра, атте, пĕчĕкле вилĕм кусĕнчен пăхнă ача кайран питĕ нумай пурăнать тет. Эпĕ, Пурис мăнасатте пек, сакăрвунă саккăра çитесшĕн-ха...

— Унта вара тăхăрвунна çитме те нумай юлмасть.

— Тен, тăхăрвунна та çитĕп. Ку эсир, атте, анне, асанне, мĕнле пехилленинчен тата турă сывлăх панинчен чылай килет. Эсир панă асамлă пехил ман чуна тĕпрен çĕнетĕ, атте, кăвар пек вĕри те хурçă пек çирĕп тăвĕ, вара эп тăхăрвунна ним мар çитсе тăрăп.

— Кам пулăн-ши вара ӳссен?

— Çыравçă пулăп.

— Эп икĕ класс кăна вĕреннĕ те, чухлаймастăп çавна ытах, мĕн япала вăл çыруçă?

— Çыруçă мар, çыравçă, кĕнеке çыракан эппин...

— Ай-уй! Çынна хурласа, влаçа вăрçтарса ан çыр кĕнекӳне — тем курса тăрăн.

— Хурламăп, атте, вăрçтармăп та...

— Вăт маттур! Калап ĕнтĕ, çакăн пек ăслă пуçпа çавăн пек ухмах ĕç тумастех ĕнтĕ ку тесе.

— Атте, эпĕ вĕсене хурламăп та, вăрçтармăп та, тӳрех тĕпрен çапса хуçăп, сана ним айăпу çук çĕртен концлагерьте этем тӳсейми асап кăтартнăшăн, выçă тĕмсĕлтерсе шăммупа тирне çеç хăварнăшăн, фронтран йывăр аманса килнĕскере çӳпĕ вырăнне те хуманшăн йăлтах, пĕтĕмпех тавăрăп вĕсене!

— Эсĕ, ачам, карахтĕрĕпе ман пек те, аннӳ пек те мар. Кам пек?

— Асанне пек. Тата — Микуç кукка пек...

— Пушали, тĕрĕс те пуль ку...

— Тĕрĕс пулмасăр. Ванюш — анне пек. Петĕр — сан пек.

— Ăçтан çак хатер витĕр курма пĕлетĕн-ха эс?

— Çынна витĕр курма, тĕпрен сăнама мĕн пĕчĕкрен вĕренме тăрăшмасан, епле пулайăп-ха ĕнтĕ эпĕ писатель? Сталин атте каланă тăрăх, писатель вăл этем чунĕн инженерĕ.

— Айтур-тур! Кăна ăçтан пĕлетĕн?

— Кĕнекере çырнă. Хусанта чăвашла тухакан «Хĕрлĕ ялав» хаçатра та час-час çыраççĕ кун пирки. Хут вулама эпĕ «Букварь» тăрăх мар, çав хаçата çавăркаласа пăха-пăха вĕрентĕм, пилĕк çулта чухнех анне вĕрентрĕ.

— Калап çав, ма ытла ăслă ку ача тетĕп: пилĕк çултах «Хĕрлĕ ялав» вуласан, такам та, Тăрна Ванькки те, ăслă пулĕ — ăçта кайса кĕрен, ниçта кайса кĕме те çук.

— Шăл ан йĕр, атте, пакăлтатса ларса эпир çăнăх авăртакан аларманĕ çинчен мансах кайрăмăр.

— Астăваймастăп, хăçан та пулин чĕн пиçиххипе çара кутăнтан пĕçертнĕ-и эпĕ сана е çук-и?

— Çук. Асанне вара пĕçертнĕ. Сухан йăранне çумламасăр шыва кĕме тарнăшăн. Ун чухне эпĕ улттăраччĕ — 1946 çулхи выçлăх çул. Выçă пирки асаннен, кăра çилĕллĕскерĕн, чунĕ кӳтсе çитнĕ пулнă. Кайран шеллерĕ хăй, аплах пĕçертмесен те юратчĕ тет.

— Ну, юрĕ. Усса кайнă пулсан, ку питĕ вырăнлă. Асаннӳ мана та пĕрре мар пĕçертнĕ. Сиенлĕ мар вăл пиçиххипе кутран пĕçертни, усăллă. Халĕ ĕнтĕ, ак, пĕçертес тесен те пĕçертеймĕн, ӳссе кайрăн, часах хама пĕçертмелĕх пулатăн.

— Ку япалана кĕтсе илеймĕн вара, атте, çиччĕ пĕтерсен килтен яланлăхах тухса каятăп, киле хăнана çеç килме пуçлатăп. Сире валли кучченеçсем, ĕçле

пуçласан укçа илсе килетĕп. Вăй çитнĕ таран тăрăшăп шăллăмсемпе йăмăксене ура çине тăратма.

— Рехмет, ульăм, турă сывлăх патăрах сана. Ĕçме тата туртма çеç ан вĕренччĕ, вара пĕтрĕн, çын пулаймастăн.

— Мана Ырă Пирĕшти сыхлĕ, вăл — Çунатлă Ĕмĕт. Вăл — эсир: атте, анне, асанне тата кĕçĕн тăванăмсем. Эпĕ, атте, университета вĕренме кĕресшĕн, Ленин вĕреннĕ çĕре...

— Эпĕ, тăлăх тата пурнăç çав тери йывăр пирки, вĕренеймерĕм, тăххăртах сухапуç авăрĕ тытрăм. Эп вĕренеймен хурашне эс вĕрен, эпĕ икĕ класс, аннӳ пилĕк класс пĕтернĕ, эсĕ вара пуриншĕн те вĕрен, тăван халăха юрăхлă çын пулма тăрăш.

— Юрĕ, атте, пысăка вĕренсе пысăк çын пулăп та, сана пур тăшманусенчен те хӳтĕлĕп.

— Хăвна кам хӳтĕлĕ?

— Хама эпĕ хамах хӳтĕлĕп, атте, эсир пĕтĕм килйышпа мана юратни чуна яланах вăй парса тăрĕ, ĕмĕтĕм çутă, чунăм çунатлă пулĕ.

— Ульăм, эс асаннӳпе Микуç куккуна çеç мар, сăвăсем çырнă, вунтăххăртах çĕре кĕнĕ Людмила аккуна та, аннӳн йăмăкне, хывнă пулас. Людмила акку вара ашшĕне, Атнакăл Микулайне, хывнă пулнă. Вăл та санăн кукку...

— Атте, тата эпĕ сан кукамуна та, асанне амăшне Акулина Алексеевнана, хывнă. Кукаму хăйех юрă шухăшласа тупса хăйех юрлама юратнă.

— Пĕлетĕп. Ăна эп хам та курнă, хам итленĕ. Питĕ çемçе те ырă кăмăллă, йăваш çынччĕ, сан кукаму пекех ир вилчĕ.

— Ав мĕнле чаплă йăхран иккен эпĕ, тавах пурсăра та мана çакă çутă тĕнчене парнелесе панăшăн, та-

вах сире мана ҫуратнăшăн, ҫуратнăшăн-ӳстернĕшĕн. Эпĕ сирĕн ятăра, ытарайми атте-анне, халăхăмăр умне кăларма тăрăшăп.

Ҫакăн чуль хĕрӳ шухăш-туйăм сасартăк капланса килнипе Мишша хăйне темле ĕшеннĕ пекрех туйма пуҫларĕ, ӳсĕрĕлсе кайрĕ тейĕн, пуҫĕнче хурт сĕрленĕ евĕр шав тăрать, куҫĕсем ҫунаҫҫĕ, чĕри шаккать, нервисем халь-халь татăлса каяс пек каръннă. Сăвă йĕркисем кĕрлесе киле пуҫларĕҫ. Мишша сăвăсене малтан пуҫра кĕвĕлет, кайран тин, строфисем йĕркеленсе ҫитсен, хут ҫине ӳкерет.

Ҫакна сисрĕ те, ашшĕ Мишшана вырса канма, канас килмесен пахчана ҫĕмĕрт айне тухма сĕнчĕ, хăй, ҫăнăх авăртакан аларманне майласа ҫитерес шутпа, ҫилнике кĕчĕ. Армана ашшĕ туса ҫитернĕпе пĕрех: аялти чулĕ те, ҫиелти чулĕ те — йывăҫран, ҫурăлман хурăн кутсыппинчен. Ҫиелти чулĕнваррине тырă ямалли шăтăкне те, чула ҫавăрмалли тыткăччине те пĕлтĕрех тунă. Ҫавăрнă чух алă хăпаланса ан тухтăр тесе, тыткăча кантăк катăкĕпе хырса якатнă. Аялти чул варрине тимĕр йĕке ҫапса лартнă, йывăҫ шанчăклах мар терĕҫ. Йĕке ҫине шапа тăхăнтартнă, шапине лартма ҫиелти йывăҫ чула кăшт картса кăларнă. Тырра аялти чул ҫине юхма кансĕрлемест-и тесе, ашшĕ шапана тепре тĕрĕслерĕ, ҫук, кансĕрлемест. Тата мĕнмĕн тумалли юлнă-ха? Пушăтран касса йĕке ҫине тĕпек тăхăнтармалла та калай татăкĕнчен ҫăнăх юхмалли валак ăсталаса хумалла. Тĕпекĕ вăл аялтипе ҫиелти чулсене пĕр-пĕринчен кăшт уйăрăларах тăма кирлĕ. Вара ҫиелти чул тĕпне тата аялти чул ҫине чукун катăкĕсем ҫапса тултарса чулсене шăллантармалли кăна юлать.

Павăл ĕçе пуçăнчĕ, çилникрен тимĕр çумне тимĕр çапса шаккани илтĕнсе тăма пуçларĕ. Çакна çĕмĕрт айĕнче итлесе тăнă май, Мишшана асламăшĕн шўчĕ аса килчĕ: «Упи кăшкăрать, тĕкĕ тăкăнать». Аларманĕ çинчен Мишша сăвă çырман-ха, шыварманĕ çинчен вара 1951 çулхи çуркуннех çырнăччĕ:

**Шывармань**

*Килчĕ çитрĕ çуркунне*
*сăртсем тăрне хуратса,*
*вара атьсем çак кунне*
*ывăнчĕç арман туса.*

*Пирĕн умра çуйхашать*
*пĕр ушкăн ача-пăча.*
*Пурте, пурте сиккелет.*
*Хăшĕ-пĕри çапăçать.*

*Вĕсем тунă шывармань*
*кăлтăртатса çаврăнать.*
*Епле хўхĕм вăл аврать! —*
*чĕререн савăнтарать...*

Мишша сăвва аса илчĕ те йăл кулчĕ. Шыварманне Мишшапа Ванюш туплашкаран тунăччĕ. Вăл нумаях авăраймарĕ, ăна Лява вăрласа кайрĕ... Кун пек сăвăсем Мишша тахçанах çырмасть ĕнтĕ, халĕ унăн пуçĕпе чĕринче ак çакăн пекреххисем вĕçĕ-хĕррисĕр явăнаççĕ:

* * *

*Мана макăртма шухăшларăн*
*юрату çиçнĕ вăхăтра.*
*Кала, кала-ха, мĕн паврарăн? —*
*хуть сассăм янрĕ сăвăра.*

*Ку — мăшкăл. Ку йĕрсем час каймĕç.*
*Ытла та хурлăхлă вĕсем.*
*Хаяр кулăллă çав йĕрсем*
*тĕтре пек сирĕлсе саланмĕç.*

Ку сăвва Мишша ниçта та çырса хуман-ха, çырса хума та васкамасть, ăна юлташа ун пекех темиçе сăвă çуралса килессе кĕтет. Нумаях кĕттермĕç ак, персе те çитĕç, çаврăнаççĕ ĕнтĕ таçта, чун тĕпĕнче, анчах та, ак инкек, юратăвĕ вара тахçанах сӳннĕ, юратмасть халь Яка Çинине Мишша, çавна май Ваççана кĕвĕçме те тахçанах пăрахрĕ. Çук, юратăвĕ сӳннĕ пулсан та, унăн çулăмĕ сӳнмен, вăл халĕ Мишшана ирхине вăранас умĕн тĕлĕксенче курăнса йăл кулакан ытарайми Палламан Хĕрачашăн ялкăшать...

Мишша тепĕр хут йăл кулса илчĕ те ашшĕне пулăшма çилнике кĕчĕ, савăнăçлăн ассăн сывласа ячĕ.

## 12.

Çурла уйăхĕнче сарă ыраш пуссинче çурла вылянать.

Амăшĕпе Йӳплĕ Укахвийĕ кăвак çутăпах тăрса тухса урам вĕçĕн кăнтăр енне сулă патне, çырма хĕрне анаççĕ. Шурă тутăрĕсене каялла çавăрса çыхнă. Йӳле пилĕк çӳрени хĕре те, хĕрарăма та килĕшмест, çавăнпа та вĕсем кипке çинчен пиçиххи çыхаççĕ. Урисенче — шур тăла çинчен çăпата сырнă. Çăпатапа утма çăмăл. Тата унпа хĕлле — ăшă, çулла — сулхăн. Ура тарламасть, пиçсе каймасть.

Курăк çинче шурă сывлăм шăрçаланать. Пĕве çинче пăс тăрать. Ниçта пĕр сас илтĕнмест.

Сулăпа çырма урлă каçсанах, сăрта хăпарса çитсен, — ыраш пусси. Курмилле вăрманĕ енчи уй ку.

Ыраш кунта Ката хыҫӗнчинчен те, Киреметайӗнчинчен те маларах ӗлкӗрет. Те ҫӗрӗ лайӑхрах пулнӑран, те кӑнтӑр енне хӗвел ытларах ӳкнӗрен, калама хӗн...

Сулхӑн чух ытларах ӗҫлесе юлас тесе, туслӑ инкесем, вӗтӗ шӑллӑ ҫивӗч ҫурлисене хулпуҫҫи ҫинчен илсе, тӳрех хута ячӗҫ, кӑчӑрт! та кӑчӑрт! тырӑ вырма пикенчӗҫ. Пуҫӗсене ҫӗклемесӗр ӗҫлерӗҫ вӗсем пӗр вӑхӑт, тул ҫутӑлса кайнине те сиссе юлаймарӗҫ. Сывлӑм ҫӑтса ҫемҫелнӗ хӑмӑл нӑтӑрт! та нӑтӑрт! туса лайӑх касӑлать. Ырашӗ кунта питӗ ҫӳллӗ те ҫӑра.

Верапа Укахвийӗн каҫалӑкӗсем юнашарах. Тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ туссем, пуҫӗсене ҫӗклеме пачах манчӗҫ пулас. Ыттисем ыраш пуссинелле туртӑна пуҫланӑ ҫӗре тем чуль нумай вырса тӑкрӗҫ. Каялла ҫаврӑнса пӑхрӗҫ те, хӑйсенчен хӑйсем тӗлӗнчӗҫ: тӗмӗ хыҫҫӑн тӗмӗ ларса тулнӑ — вуншар соттӑх кӑна мар пуль вырма ӗлкӗрнӗ... Ҫурлисене ҫатӑрласах тытнипе, пӳрнисем тӑваткаллансах кайнӑ. Вӗсене сурса йӗпетрӗҫ те паҫӑрхинчен те йӑрӑрах вырма тытӑнчӗҫ: вӗсен, пуҫлӑхсем палӑртнӑ нормӑна епле те пулин хӑвӑртрах тултарса, яланхиллех хӑйсем валли тырӑ шӗкӗлчемелле. Шӗкӗлченӗ тырра хӗрарӑмсем кӑкӑрӗ патне хӗве ярса пиҫиххипе хытӑ туртса ҫыхаҫҫӗ, йӗм тӗпне тултарса йӗм кантрипе йӗм пӗҫҫисене шанчӑклӑ ҫирӗплетеҫҫӗ, ҫанӑсенче те — тырӑ. Ҫанӑ вӗҫӗсене ҫыхма ятарласа ҫип кантра ҫӗленӗ...

Вырсан-вырсан, хӗвел тухса сарӑлсан, ӗшене пуҫларӗҫ, ҫан-ҫурӑмӗсем тӑварлӑ тара пула ҫӑтӑртатса кӗҫӗтме тапратрӗҫ. Тепӗртакран Вера Мишшипе Ванюшӗ, Укахви Нинукӗ, Мишшапа пӗр ҫултискер, йывӑҫ чӗрессемпе вӗри яшка йӑтса ҫитрӗҫ. Амӑшӗсем ирхи апат ҫинӗ хушӑра ачасем тӑрӑшсах ыраш вырчӗҫ. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, Нинук Мишшапа Ванюш-

ран чылай мала иртсе кайрĕ. Çакна Верук аппăшĕ тӳрех асăрхарĕ:

— Ну маттур та хĕрачу, Украх, чисти ху пек!

— Мĕн акан çав шăтать ĕнтĕ, хам пекех ухмах.

— Пурте сирĕн пек ухмах пулсан, мĕн тери аван пулмалла, анчах та, шел те, сайра çав ун пек ухмахсем.

— Сан хăвăн та, арçын ачасем пулин те, таçтах ӳксе юлмаççĕ: пăх-ха, мĕн хулăнăш яра-яра илсе кăчăртаттараççĕ ылттăн ыраша!

— Арçын ачапча вăл вырассинчен ытларах акасуха тата пуртă ĕçне кăмăлларах парать çав.

— Санăн вара пурне те пултараççĕ пек туйăнать, купăс вылянтарма пĕлни таранах.

— Купăсне калĕç-ха ăна, купăс каласси ĕçлесси мар.

— Не-най, Верук, ĕçе ухмах та ĕçлет, купăсне вара ай-хай пуртех калаймасть.

— Пулĕ те пулĕ, Укахви тантăшăм...

Апат çисе тăрансан, амăшĕ Мишшапа Ванюшăн йĕм пĕççийĕсем ăшне тата пушă чĕресе ĕнер каçпа шĕкĕлченĕ ыраша ячĕ, йĕм пĕççисене кантрапа çыхсан, чĕресе хупăлчипе витсен, вăл салхун кулса илчĕ:

— Мĕн пĕчĕкрен ырра вĕрентес вырăнне вăрра вĕрентме тӳр килет çак ылханлă влаçа пула...

— Айуй, Вера, ку сăмаха ытти çын умĕнче персе ан ярах, Савкаçри Найтушана, çич ачаллăскерне, тырă вырнă çĕртенех, уйранах тытса кайнă. Пилĕк çул иртрĕ ĕнтĕ, халĕ те таврăнаймасть-ха.

— Чун тарăхнипе калатăп.

— Вăрă пулмаççĕ ачусем, Вера, ан хăра. Ку вăл вăрлани мар, ыйтмасăр илни çеç. Ыйтсан сана кам

парать, çавăнпа та ыйтмасăр илес пулать. Кил-ха, Нинук, сан хĕвне те кăштах ыраш ярам.

Нинук, вăтанса, йĕм тĕпне ыраш ярттармарĕ. Вара «йĕкĕтсен» пăрăнса çаврăнса тăма тӳр килчĕ...

Кăнтăр апачĕ тĕлне выракансем патне Сăрнай Вани, пĕрремĕш бригада бригадирĕ, янрашса çитрĕ.

— Тĕрме тĕпĕнче çĕртетĕп — тăр кăнтăрла çарататăр колхоза! Хăвăр çаратни çитмест, ачăрсене мĕн пĕчĕкрен вĕрентетĕр!

Çакна илтсен, Верапа Укахви шартах сикрĕç. Укахви хăй те сисмерĕ Сăрнай патне мĕнле çитсе тăнине.

— Кама калан эс ку сăмахсене?

— Сана. Ирхине Марук Анни сан хĕрне Нинука йĕм тĕпĕнчен икĕ кило ыраш пушаттарнă, сулăпа каçса çитнĕ-çитмен ярса илнĕ.

— Тата кам-кам пулнă ман Нинукпа пĕрле?

— Пурис Павăлĕн ачисем, Веран аслă ывăлĕсем.

— Вĕсен йĕм тĕпĕнче миçе пăт ыраш пулнă?

— Вĕсен пулман. Вĕсен пĕр пĕрчĕ те пулман.

— Тĕлĕнмелле... Пĕр пĕрчĕ те?

— Пĕр пĕрчĕ те. Вера ачисем вăрă мар, санăн ху пекех — вăрă.

— А эсĕ кам, вăрă мар-и? Намăссăр сысна! Эсĕ, вăрçăран темле майпа тарса юлнăскер, лавĕ-лавĕпе тырă кĕртетĕн, пылне те, çуне те, ашне те пăшне те, выльăх фуражĕ таранах, ху шăтăкна сĕтĕретĕн. Санăн ути те, улăмĕ те, сĕлли те, урпи те пур, пирĕн ним те çук. Пирĕн эсĕр мăнтăр пурăнччăр тесе вăрçă хирĕнче пуçне хучĕ, сирĕншĕн пуçне çирĕ, халь эсир пирĕн пуça çиесшĕн!

— Ан çухăр! Ак тытăп та тăлу-çăпату, пăху мĕнĕпе çăтса ярăп.

— Яраймӑн, пырна ларӑпӑр. Хӑвӑн шалчу тултӑр!

Кун пек харкашуран ним усси те ҫуккине курса, Укахви Сӑрнай еннелле лачлаттарса сурчӗ те каҫалӑкӗ патне таврӑнчӗ. Харкашса вӑхӑт иртерме вӑхӑт ҫук: вырас пулать. Ырашне хӑҫан вырса пӗтерес-ха, сӗлӗ тулса пырать, урпа ӗлкӗрнӗ, пӑрҫа ҫулма тухмалла.

Верапа Укахви, кӑнтӑрлахи апата ялалла каҫмарӗҫ, пурте килӗсене каҫса пӗтсен, Киреметайне анчӗҫ те пӗр-ик ывӑҫ ҫырла пуҫтарчӗҫ, ӑна ҫӑкӑрпа ҫисе ячӗҫ те ват хурама айӗнчен шӑнкӑртатса выртакан ҫӑлкуҫӗнчен шӑла шантаракан сивӗ шыв ӗҫрӗҫ.

Верапа Укахви, ҫакӑн хыҫҫӑн канма выртас вырăнне, ҫынсем кӑнтӑр апачӗ туса ҫырма урлӑ каялла каҫиччен, ват хурама сулхӑнне ҫитти сарса хучӗҫ. Вара, пӗрер кӗлтен-пӗрер кӗлтен хурса, ҫитти ҫинче «авӑн ҫапма» пуҫларӗҫ, кӗлте пуҫӗсене ташла-ташла урисемпе таптарӗҫ. Пучахӗсем шӗкӗлченсе, пушанса ҫитсен, кӗлтисене ҫӗмел ҫумне, ӑҫтан илнӗ ҫавӑнта, каялла кайса хучӗҫ. Авӑнне ҫапсан-ҫапсан, ҫитти ҫинче ыраш купи самаях ӳсни палӑрчӗ. Сӑвӑрса тасатсан виҫсе пӑхрӗҫ те, шӑпах пӗр витре шӑлами пулчӗ.

— Уках, кӑлар хутаҫна, ку сана пулӗ.

Вара каллех кӗлте йӑтма, ӑна ҫитти ҫине хурса ташлама, ташласан-ташласан, ҫапнӑ ыраша сӑвӑрма пуҫларӗҫ. Хальхинче сӑвӑрнӑ ыраш пӗр витрех пулаймарӗ.

— Юрӗ, Уках, мана юрӗ. Ман хутаҫӗ те пӗчӗкрех тата эпӗ ирпе те ҫакӑн чуль ӑсатнӑ-ха «йӗкӗтсемпе». Урӑх халлӗхе хӑтланар мар, чарӑнар ҫакӑнпа. Ҫынсем асӑрхӗҫ — каҫма пуҫларӗҫ те ӗнтӗ ав.

Чарӑнчӗҫ. Ҫиттие, пуҫтарса илсе, тусанран силлесе тасатрӗҫ те пытарчӗҫ, витрепе ҫур витре ҫӑлшывӗ ӑсрӗҫ. Шӗкӗлченӗ икӗ хутаҫ ыраша хурама хӑвӑлне

антарчӗҫ. Хӑйсем, ним пулман пек шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса, каҫалӑкӗсем патне таврӑнчӗҫ.

Хӗвел ҫав тери хытӑ пӗҫертет. Сывлама сывлӑш ҫитмест, пӳлӗнет. Темӗнле, ӳте чӗпӗтекен типӗ шӑрӑх тӑрать. Кӗпе ҫурӑм ҫумне ҫыпӑҫса ларнӑ. Пит — йӗп-йӗпе. Кут тӑрӑх тар юхать. Ҫак чӑтмалла мар шӑрӑхпа ӳт те ирӗлсе каяссӑн туйӑнать. Ҫамрӑк хӗрарӑмсен пӗҫ хушшисем пиҫсе кайрӗҫ. Тар касса вӗчӗлтеттернипе шӑмалли тӗлӗсем канӑҫсӑрланма пуҫларӗҫ, Укахви текех тӳсеймерӗ, хӑйне чаринчен ярса тытрӗ.

— Эх, Вера, сан Павӑлу таврӑнчӗ, ман Павӑл таврӑнаймарӗ, вӑрҫӑ хирне выртса юлчӗ... Эсӗ те арҫын мар хуть, Вера... Мӗн тери юрататӑп эп сана, лайӑх ҫын эсӗ, анчах та хӗрарӑм.

— Ҫав териех пӑркӑчлать-им? Эп арҫынсӑр хам ҫулталӑкран ытла пурӑнса курман та?..

— Чӑтма ҫук, Вера. Вунӑ ҫул арҫынсӑр вӗт эп, вунӑ ҫул... Иртет ҫамрӑк ӗмӗр, харама каять. Алӑсӑр, урасӑр таврӑнинччӗ хуть, пуҫӗ сывӑ таврӑнинччӗ...

Ҫунтарса ярасла хӗвел айӗнчи шӑрӑхра каторгӑри пек йывӑр ӗҫе иртен пуҫласа каҫчен, кун каҫа, кунран-кун чӑтма пулать-мӗн, арҫынсӑр пурнӑҫа чӑтма вара ҫав тери йывӑр, май та ҫук. Ахальтен мар пуль, авӑ, Палюк амӑшӗ текен тӑлӑх арӑм патне вӗри ҫӗлен каҫ-каҫ ана пуҫланӑ. Палюк ашшӗ пулса анать тет. Ку вӑл ҫак хӗрарӑм арҫынсӑр пурӑнса ухмаха ерсе кайнине пӗлтерет...

— Палюк амӑшӗ пек, ухмаха ерсе каяс марччӗ кӑна. Вара пӗтрӗмӗр: мӗнле пурӑнӗ вара пӗчӗк хӗрӗм, мӗнле ӳскелӗ хӑр-тӑлӑх?

— Ун пекех ан хуҫӑл-ха, Уках, тен, тупӑнмӗ-и пӗр-пӗр хусах.

— Çук, çук, мана хамăн Павăлсăр пуçне урăх никам та кирлĕ мар.

— Уках, ылттăнăм, эсĕ ăслă хĕрарăм, хут-ха шăматкун мунча, мана мунчана хăнана чĕн, вара эпĕ сана хам пĕр çул хушши Павăла никампа улăштармасăрах чăтма-тӳсме мĕнле пултарнине каласа кăтартăп.

— Илтнĕ-ха эп, тем те хăтланаççĕ-мĕн мăнтарăн шеремет тăлăхсем, уйрăмах тĕрмери хĕрарăмсем хыт айкашаççĕ тет. Çылăх пуль вăл ун пек хăтланни, каçарса каçарайми çылăх пуль?

— Çылăх мар, Уках, çылăх, паллах, тăван юна хутăштарсан çылăх. Тăван юна хутăштарма пачах та юрамасть теççĕ. Ун пекки те пулкалать çав хушăран. Ав Шикки Петтăрĕ 1947-мĕш çул хăйĕн тăван йăмăкне Клавтие хырăм йăттарса ача тутарчĕ, ывăл ачи, Санюк, ман Петĕрпе пĕр çулхи, урамра ыр-сывах чупса çӳрет. Пулкалать ун пек те, Уках, тĕнчере тем те пулать, анчах та пирĕн ун пек пулас марччĕ — çав çĕр чăтмалла мар намăса епле тӳссе ирттермелле, ăçта кайса чикмелле?

— Епле чăтайман-ха Клавти, епле ирĕк панă?

— Кун пирки калама йывăр. Пĕве кĕрсе çитнĕ вăхăт пулнă. Качча тухнă чух эпĕ хам вунçиччĕ те тултарманччĕ, çав тери качча каяс килчĕ пĕр вăхăтра. Тĕлĕнмелле! Турă çапла туса янă пулĕ ĕнтĕ пире — этем пурнăçне малалла чăсакансем вĕт эпир, пирĕнсĕр этемсем çуралма пăрахаççĕ, Укахви.

— Çавăнпа çапла çунтарса кĕçĕтет пуль ĕнтĕ çакăнта? — Укахви татах чарине ярса тытрĕ. — Мур илесшĕ пуçне!

— Лăплан, тăванăм, ĕçлер-ха тата пăртак. Мунчине вара хут, чăнах пыратăп. Марук Христинйи сикнĕ

хулсене вырăна лартас тата ют арçынсемпе ача тăвас енĕпе ăста, эпĕ вара çак халь калаçни енĕпе хăйне манерлĕ тухтăр пекрех. Ырă ĕçех тăватăн теççĕ мана, ятламаççĕ, тав тăваççĕ. Тата ку питĕ вăрттăн япала, ят каяссинчен хăрамалли çук.

— Вĕренмелле пулнă сан, Верук, аслă шкулта вĕренмелле пулнă çав енĕпе, тухтăра тухмалла пулнă. Мĕн чухлĕ мĕскĕне телей парнелесе панă пулăттăн.

— Питĕ вĕренесшĕнччĕ эпĕ, анчах та пилĕк класран урăх вĕренме ниепле те май пулмарĕ, çитмен пурнăç çапса хуçрĕ...

— Лайăх Павăлсем тупнăччĕ эпĕр санпа, ыр курса кăна пурăнăпăр теттĕмĕр, анчах та усал вăрçă сиксе тухрĕ те — йăлтах тĕп турĕ çутă ĕмĕте, ун вырăнне сирсе сирĕлми хурлăхпа асап хура тĕтĕм пек явăнать. Манăн ăшра, Верук, вут çунать, çулăм тухни курăнмасть.

— Манăн ылттăн пек пичче çирĕм тăххăрта харам пулчĕ.

— Хуйхă-суйхăсăр çын çĕр çинче пĕрре те юлмарĕ-тĕр.

— Пур ав, Сăрнай Вани пеккисем. Вĕсем те инкексĕр, хуйхăсăр мар: Вани ĕçет, арăмĕ ĕçет...

Хĕвел анас умĕн çырма ку енне пĕчĕк Петĕр, «партизан Мурат», каçрĕ те амăшĕсем патне хашкаса чупса пычĕ:

— Анне, анне! — терĕ вăл сывлăшне аран çавăрса ярса. — Яла милици килсе тулнă, Упа Çерукĕпе Пашка Çеркейне тырăпа тытнă та Аксăвах лартса кайнă. Тĕрмене хупаççĕ тет... Анне, кил-ха кунтарах, — терĕ Петĕр сасартăк, амăшне кăчăк туртса, — асанне патне Марук Анни кĕрсе ларчĕ, Мишша тетепе Ванюш

тетене сутмастăп тет, ытла ăслă та лайăх ачасем тет, Мишша шкулта Христинья Нинипе пĕр парта хушшинче юнашар ларать, хĕрачана юрататать пулас, хĕрачи те ăна чунранах кăмăллать, ӳссен никама та мар, Мишшана кăна качча каятăп, ун пек маттур ача шкулĕпе те, ялĕпе те çук тесе калать тет. Христинья вăл Марук Аннин тăван йăмăкĕ, пĕлетĕн пуль, анне?

— Пĕлетĕп-çке.

— Асанне пĕр пĕрчĕ ыраш та илме хушмарĕ. Астăвăр, ан илĕр: кашни тăкăрлăк пуçĕнче «сука» та «мусор» тăрать.

— Айтур-тур! Ăçтан илтнĕ эс ку сăмахсене?

— Атте каларĕ. Вăл тĕрмере илтнĕ пулнă.

Укахви Петĕр патне пычĕ те ăна юратса çурăмĕнчен лăп-лăп! лăпкарĕ:

— Нинук акку, ман хĕрĕм пирки мĕн суйланнă Марук Анни?

— Каçарнă та пулăттăм икĕ кило ырашшăн, амăшĕн чĕлхи вăрăм, пĕр тытăнсан каламанне хăвармасăр хăртать, терĕ тет. Асанне тархасласах ыйтнă каçарма, тăлăхсене, ху пек тăлăхсене хĕрхеннĕшĕн сана турă умĕнче те, ялйыш умĕнче те сăвап пулĕ тенĕ, вара Марук Анни йĕрсе ячĕ тет: ан хăраса тăччăр Укахвипе пĕчĕк хĕрĕ, сутмастăп терĕ тет, чĕлхине кăштах чартăр амăшĕ терĕ тет, тата Турхан Крахвинипе кинне çĕре çити авăнса тав тутăр терĕ тет... Анне, темшĕн вăл сана Марук Анни питĕ юратать, хам тăван йăмăкран та ытларах юрататăп тет. Муçилей Ваççукĕн ухмах Мишукĕн аллине çакланас пулсан та ман пата чупса пыччăр тет. Мишук Анна аппаран хăраса-чĕтресе тăрать иккен. Кăмаки çине телефон кĕртсе тĕрмене кайнă Шампа Çерукĕ унăн тăван шăллĕ пулнă...

— Ну, юрĕ, ульăм, халĕ ĕнтĕ паян хамăр мĕн чуль вырнине виççе пăхăпăр та килелле лăпăстатăпăр — çип татмалăх вăй юлмарĕ, урараn ура иртми пулчĕ.

Виççе пăхрĕç. Тĕлĕнмелле: икĕ норма! Хăйсене хăйсем ĕненмесĕр тепре виçрĕç: çирĕм тăватшар ар. Тĕрĕсех: икĕ норма! Сăрнай Вани вĕчĕрхенсе икĕ хут сахалтарах çырас пулсан та, норма туп-тулли тулнă. Верапа Укахви чухлĕ выракан паян та, унччен те никам та пулман...

Хĕвел темшĕн питĕ хĕрелсе анать. Çанталăк пăсăласса ан пултăрах.

13.

Çурçĕр çитеспе тӳпене пĕлĕт карса илчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, таçта аякра, Чистай енче, йывăç кĕпер урлă йывăç кустăрмаллă пушă урапа кăлтăртатса каçнă чухнехи пек сас илтĕнсе кайрĕ: аслати сасси.

Кунĕпе кĕлте турттарса сĕлтен кайнă Мишшапа Ванюш мунча пăлтăрĕнче ашăк çинче ыталашса çывăраççĕ. Ытла та юратаççĕ пĕрне-пĕри, çывăрнă чух та пĕрлех пуласшăн, уйрăм пуласшăн мар. Вăратма та шел, анчах та вăратасах пулать: çумăр чашлаттарса ярсан, хурама хăвăлне туллиех шыв тулĕ, çирĕм килона яхăн икĕ хутаç шывра ишсе çӳрĕç. Вара çăнăх тума мар, салат туса пыллантарма çеç юрăхлă пулĕç. Халлĕхе салат кирлĕ мар-ха, халлĕхе çăкăр пĕçерме çăнăх кирлĕ...

Ачисене вăратса лартрĕ те çапла ăнлантарчĕ: çăл патĕнчи ват хурама хăвăлĕнче — икĕ пĕчĕк хутаç таптаса ыраш: пысăкрахне Укахви аккăра кĕртсе хăварăр, пĕчĕкрехне киле илсе килĕр; эпĕр ĕçленĕ вырăнтан анăçарах, çиларманĕсем енче «Коммунар» темиçе бун-

кер вырса ҫапкаланӑ, вара ванса ларнӑ; тыррине уях, ҫерем ҫине тӑка-тӑка хӑварнӑ; тыррӑн пӗр кӑшӑлне Упа Ҫерукӗпе Пашка Ҫеркейӗ куҫ хывнӑ-мӗн, анчах та ҫакланнӑ, ҫавна май яла пакунлисем килсе тулнӑ — асӑрханӑр: ялти кашни кӗтесе хурал тӑратса тухнӑ.

Ачасем амӑшне тимлӗн итлерӗҫ те задание йӑлтах ӑнланчӗҫ. Малтан пӗве патне, унтан кӗпер патне, вара сулӑ патне йӑпшӑнса пырса пӑхрӗҫ, пур ҫӗрте те ҫын мӗлки палӑрать — хытӑ хуралласҫӗ постсене! Ҫӗнӗ вӑрӑсем ярса тытса тата ытларах палӑрасшӑн ӗнтӗ ҫӳлтисем умӗнче, звани, награда, преми илесшӗн пулӗ-ха...

Хурама патне Мишшапа Ванюш Киреметайӗнчен каҫма шутларӗҫ, ялӑн кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ енчен; таврӑнма вара Ҫара кӗперӗ урлӑ каҫса ҫырман сылтӑм ҫыранӗпе аван пулӗ терӗҫ. Питӗ таврараран ӗнтӗ капла, анчах мӗн тӑвӑн, икӗ Ҫеркей пек ҫакланас мар тесен, таврараран ҫӳреме те ӳркенес пулмасть. Ахальтен каламан ваттисем: тӳррен каякан пӑх хыпнӑ...

Кӗпипе йӗмне пӗр аллипе пуҫ тӗлне тытса, тепӗр аллипе ишсе пычӗҫ. Шывӗ питӗ ӑшӑ-мӗн: шалта шӑнмарӗҫ, тухсан кӑшт ҫӳҫентерчӗ. Йывӑҫ хушшинче пӑчӑ-тӗттӗм, темле чӗрчунсем пӗлтӗрхи ҫулҫа чӑштӑртаттарса чуна хӑратаҫҫӗ. Шывра пулӑ вылять пулас, шӑмпӑлт! шӑмпӑлт! туни тӑтӑшах илтӗнсе тӑрать. Ҫӗрлехи ҫырма ҫийӗ кӑнтӑрлахи пек мар, чуна темле сивӗ пек — шиклентерет ирӗксӗрех. Килнӗ енчен чуна хӑратса тӑмана ӳхӗрсе ячӗ: «Тӗв-в-в-ик!»

Туратсене сирсе хурама патне тухма тӑчӗҫ те, унта пысӑках мар кӑвайт ҫуннине асӑрхарӗҫ. Кӑвайт умӗнче... сарӑ вӑрӑм ҫӳҫне тураса... вутӑш хӗрӗ амӑшӗ мӗнле ҫуратса янӑ ҫавӑн пек тумпа ҫеҫ, ҫап-ҫара тӑрать.

Мишшан сывлăшĕ пӳлĕнсе, куçĕ хуралса килчĕ çакна курсан — тин çеç шывран тухнă пулас, кĕпи-йĕмĕ хурама туратти çинче типет. Мишша вут çутинче вутăш çине пăхрĕ-пăхрĕ те ăна çак пике таçта курнă пек туйăнса кайрĕ. Лайăхрах пăхрĕ те, турăçăм-пĕсмĕлле, Марье вĕт ку, кӳршĕ Марье! Мишша хĕр умне тухса тăчĕ те, Марье шари! çухăрса ячĕ.

— Ан хăра, Марье аппа, эпĕ ку, Мишша, — терĕ Мишша. — Мĕнне, хура çăлтăрна хупла-ха, унта, тĕмсем хушшинче, манăн шăллăм та тăрать.

— Мĕн туса çӳретĕр эсир çĕрĕпе, мана йĕрлесе çӳретĕр-и?

— Ху мĕн туса çӳретĕн?

— Эпĕ кĕтӳç Лекçей патне килтĕм. Вăл мана качча илесшĕн. Тăрри питĕрĕнсех çитеймен те, юрĕ ĕнтĕ, пулă курмана шӳрпи те пулă пекех теççĕ.

— Халь ăçта вара Лекçей?

— Ĕшнене ĕнисене пăхма хăпарнă пуль, эпĕ килнĕ чухнех çукчĕ, кăвайчĕ кăна çунатчĕ.

— Апла наччасах персе çитес çук-ха вăл? Тăхăн-ха кĕпӳ-йĕмне, çунакан вутпуççи ил те пире çутатса тăр.

Марье малтан труççикне, унтан кăкăр çаккине, вара кĕпине тăхăнчĕ те, кунта çарранах килнĕскер, çунакан вутпуççи ярса тытрĕ.

— Çутат ак çакăнта, — кăтартрĕ Мишша аллипе хăвăл çăварĕ тĕлне.

Вут çутинче пирвай пĕчĕкрех хутаçа, вара пысăкраххине туртса кăларчĕ.

— Эпĕр сана курман, Марье, эсĕ пире курман. Лекçее пĕр сăмах та пулин персе ярас пулсан, эпĕ иккĕ персе яратăп та, Лекçей сана нихçан та качча илмест.

— Мишша шăллăм! Мĕн калаçатăн эсĕ? Ма ют çын пек калаçан?

— Халь вăхăчĕ çавăн пек вăхăт — çывăх тăванна та ним шанса калама çук, сутать...

— Тĕксе калатăн ĕнтĕ, Мишша, юрĕ, ăнлантăм.

— Юрĕ-тĕк, юрĕ эппин. Пирĕн нумай калаçса тăма ерçӳ çукрах — çумăр айне пулас марччĕ тетпĕр. Тата — ял тулли милици, пĕтĕм çĕре хурал тăратса тухнă... Кил, Ванюш, тыт, çĕкле, кайрăмăр...

Мишшапа Ванюш çыранăн çӳлти сукмакĕпе кайма тăрсан, Марье вĕсем патне чупса пычĕ:

— Аялтипе кайăр, çӳлтипе кĕтӳç Лексей таврăнма пултарать. Вăл питĕ шăракут этем — тӳрех милицисем патне чупса кайĕ.

Марье Мишшана юлашки хут ыталаса чуптурĕ те йĕрсе ячĕ:

— Турă сана мĕншĕн вунă çула яхăн каярах çуратса янă-ши, ылттăнăм. Эх, пулас çук пуль ман телей тени...

— Пулать, Марье. Хăвна çирĕп те ăслă тытсан пулать, тытаймасан — пулмасть...

— Çулăр ăнăçлă пултăр. Лайăх çитĕр.

— Чипер юл, Марье...

Марье юлас-юлас тесех ачасене Çара кĕперри патне çитиех ăсатрĕ, Ванюш хутаççине çĕклесе пычĕ.

Савкка Петтăрĕн пахчи хыçĕнчи мăян та вĕлтрен пусса илнĕ тарăн вара çитнĕ çĕре çумăр аванах ӳккелеме пуçларĕ. Умра куçа йĕппе чикес пулсан та ним курăнмасть. Укахви пахчи Петтăр пахчинчен темиçе пахча урлă кăнтăрарах. Мишша пахча тăрăх Укахви килĕ патне çывхарчĕ: çӳремест-и кил тавра кам та пулин? Чылайччен тимлĕн итлесе тăнă хыççăн, Мишша çенĕк алăкне хуллен шаккарĕ. Нимле сас та çук-

ран хытăрах шаккама тиврĕ. Çенĕкре мар, Мишша хыçĕнче сасартăк Укахви сасси илтĕнчĕ:

— Мĕн кирлĕ сана, кам эс?

— Эпĕ ку, Мишша. Хутаçна кайса илтĕм. Акă, ме, тыт, пытар. Эпĕ кайрăм — мана Ванюш кĕтсе тăрать.

Укахви сăмах чĕнсе, тав туса ĕлкĕриччен Мишша çĕр тĕттĕмĕнче палăрми те пулчĕ. Укахви тĕлĕнсе, шак хытса юлчĕ: кун пек ачасем те, кун пек этемсем те пулаççĕ иккен...

Савкка Петтăрĕн, Савалин, мунчи тĕлне çитсен, тăкăрлăка тӳрех сиксе тухас мар терĕç. Килĕ тăкăрлăк тăрăх анăçалла тухса урам урлă каçсанах пулин те, унта çитме ансатах марри палăрчĕ — тăкăрлăк вĕçĕнче такам уткаласа çӳрет: пĕрре урлă каçать, тепре кунталла, мунча патнелле çывхарать. Кĕсъе хунарĕ пур эсрелĕн! Çутата-çутата пăхать. Часах аça çапрĕ те çумăр чашлаттарса ячĕ. Мишшапа Ванюш Савали мунчине тарса кĕчĕç те хутаçа кăмака хыçне лартрĕç, хăйсем лавкка çине хăпарса ларчĕç. Мунча çумĕпе çумăртан таракан çын таканлă йывăр аттипе таплаттарса чупса иртсе кайрĕ. Ура сасси Нухай Уçăпĕсен енче çухалчĕ. Çавă пулчĕ иккен каçхи канăçсăр хуралçă, ял халăхне пĕрерĕн-пĕрерĕн сутса ярса ыр курма хатĕрленекен тепĕр йĕксĕк! Уçăп та вăрçăран тарса юлнă. Мĕнле майпа? Ăна Мишшапа Ванюш çеç мар, Уçăпăн тăван ашшĕ-амăшĕ те тĕплĕн пĕлеймест...

14.

Патшалăх çĕнĕ тырă ыйтать. Кĕпер леш енчи ту пуçĕнче — колхоз йĕтемĕ. Унта паян «сложнăй машшинапа» ыраш çапаççĕ. «Сложнăй машшина» тесе кунта çĕнĕ йышши хăватлă молотилкăна калаççĕ. Ăна

Эрхип ашшӗ — Карланкӑ Якурӗ — ӗҫлеттерет. Унччен кӗлте турттарнӑ «йӗкӗтсем» халӗ пурте авӑн ҫапма пухӑннӑ. Аслӑрах ачасем — Митраппан, Эрхип, Ваҫҫа, Лариван — улӑм ури купаланӑ ҫӗрте виҫӗ йӳпӗллӗ вӑрӑм йывӑҫ сенӗксемпе ӗҫлеҫҫӗ, кӗҫӗнреххисем — Ванюш, Ҫеруш, Вӑлача, Куля, Лява — тимӗр сенӗксемпе вӗсем патнелле улӑм сӗтӗреҫҫӗ. Молотилка хыҫӗнчен сирпӗнсе тухса пухӑнакан улӑма икӗ хӗрача — Яка Ҫинипе Шихва Раисси — тимӗр сенӗксемпе, иккӗш икӗ енчен, айккинерех сирсе Мишша валли купаласа пыраҫҫӗ. Вӑрӑм турталлӑ хӑма кӳлсе янӑ Кулюккана купа патне илсе пырать те, Мишша улӑма хӑмапа лаша хушшине хӑварать, хӑй хыҫалтан хӑма ҫине тӑрать те лава улӑм ури патнелле илсе каять, тилхепене унталла-кунталла турткаланӑ май шӑхӑра-шӑхӑра илет, но-но! текелет. Темшӗн ӗнтӗ Яка Ҫини Мишша ҫине пӑхма та хӑяймасть, иманнӗ пекки тӑвать.Раисси вара пӗр вӗҫӗмсӗр пакӑлтатать, ҫӑварне хывӑхпа арпа туласран та хӑрамасть. Молотилка хыҫӗнче тусан хӑрушла мӑкӑрланать, хӗвел ҫутинче тӗтре пек те, тӗтӗм пек те туйӑна-туйӑна каять. Ҫак асамлӑ ҫутӑ тӗтрелӗхре сенӗксемпе ылттӑн улӑм авӑсакан яштака та илемлӗ хӗрсем юмахри ытарайми пикесем пек курӑнаҫҫӗ. Мишша вӗсем ҫине чунӗ каниччен тӑранайми пӑхать. Ҫакна Ҫинук сисет пулас, ҫавӑнпа пит вӑтанать, Раюк вара ним те сисмест, пакӑлтатать те пакӑлтатать.

Авӑн ҫапнӑ чухнехи чи йывӑр ӗҫ — молотилка ҫӑварне кӗлте парса ӗлкӗртесси. Унтан та йывӑртараххи — кӗлте ҫыххине ҫурлапа касса ӗлкӗрсе, кӗлтене салатса молотилка ҫӑварне чиксе тӑрасси. Ҫаврӑнӑҫусӑр, ыйхӑллӑрах хӗрарӑм кунта ҫур сехетрен ытла тӑраймасть: е йӗркеллӗ парса тӑрайман кӗлтене пула

молотилка çĕмĕрĕлсе каять, е хĕрарăм аллине барабан сĕтĕрсе кĕрсе лучăркать. Саврăшпуçĕнче хальччен ун пекки пулманччĕ-ха, ан пултăрччĕ те, анчах та инкек нихăçан та куçа курăнса килменрен, çак явапла çĕре нихçан та кахал Пăлюка, Лява амăшне, тăратмаççĕ, яланах кăнтăрлаччен Йӳплĕ Укахвине, кăнтăрларан Пурис Павăлĕн арăмне Верана тăратаççĕ. Халĕ, кăнтăрла хыççăн, молотилка çăварне Мишша амăшĕ кĕлтепе тăрантарса тăрать. Вăл тутăрне куçĕ çине антарса çыхнă, тепĕр шур тутăрпа сăмсипе çăварне хупланă, тутăр витĕр сывлать, тусан Вера аппан сăмсипе çăварне лекеймест, тутăр çине ларса юлать. Унăн тутăр айĕнчен куçĕсем çеç курнаççĕ, савăнăçлăн, чĕррĕн йăлтăртатаççĕ.

Авăн çапнă çĕре Çинук, Петĕр, Лисук тата Кĕришук та килнĕ. Вĕсене тетĕшĕ хăйпе юнашар хăма çине тăратса кăштах лашапа ярăнтаркаларĕ те ту пуçне хӳтерсе ячĕ, ĕçлекенсене чăрмантарса ан çӳрĕр терĕ. Лешсем çĕнĕ вăрăм улăмран кĕлте туса çыхаççĕ те, çунашка çине утланнă пек утланса, тăвайккинчен яка çерем тăрăх кĕрлеттерсе анса каяççĕ, вара типварăн тепĕр енне хăпарса каллех кĕрлеттерсе анаççĕ. Çуйăхаççĕ хăйсем, ахăлтатаççĕ. Мĕн тери пысăк савăнăç çитнĕ: хĕл пуличченех, çу кунĕнчех тăвайккинче ярăнаççĕ те-ха. Тата хĕллехи пек сивĕ те мар халь, ăшă, юр ăшне чăмса кĕрсе ӳкессинчен те хăрасси çук.

Ашшĕ те кунтах çӳрет. Ăна авăн вучаххисем валли шертесем якатса, вĕсене авăн шăтăкĕсем çине конус евĕр тăратса тухма хушнă. Çуррине яхăн хатĕрленĕ те ĕнтĕ авăн вучаххисене, каç пулттипе ыттисем те хатĕр пулаççĕ. Пĕр вучахне чĕртнĕ, вăл, шĕвĕр тăрăллăскер, кăвак тĕтĕм тĕтĕрсе ача-пăчана чунран савăнтарать.

Нӳрĕрех кĕлтесене çавăнта типĕтеççĕ. Ачасем типнĕ кĕлтесене амăшне йăта-йăта кайса параççĕ. Вăхăтран-вăхăта ашшĕ вучаха анса унта типĕ пуленкесем хурать. Пĕрре Петĕр те кĕрсе курчĕ. Ванюш та чăтаймарĕ, анса пĕрер пуленке пăрахрех кăвайт çине. Хальтерех çеç «Пуççăр юланут» вуласа тухнăскер, Мишша умĕнче мухтанса илмесĕр тӳсеймерĕ.

— Вигвам. Каснă-лартнă индеецсен вигвамĕ...

— Чукчасен чумĕ пулĕ, Ванюш, йăнăшатăн пуль эс?

— Çук, вигвам. Чум вăл сивĕ енче, Чукоткăра.

— Пулса куртăн-им эс унта?

— Пулса куртăм. «Алитет тусем хушшинче» вуларăм та, пулса курнă пекех пулчĕ.

— Ванюш, эсĕ халь Ванюш ятлă мар теççĕ, Егоров Иван Павлович мар.

— Çапла. Эпĕ халь Гекльберри Финн ятлă, çырма хĕрринче пысăк пичкере пурăнатăп.

— Айтурах! Пĕлнĕ çын тесе мана ху патна хваттер яратăнах ĕнтĕ?

— Эсĕ кам?

— Палламастăн-и вара, Том Сойер-çке эпĕ... Томас Сойер. Сан çывăх тусу!

— Апла пулсан мĕн калаçса тăмалли пур! Яратăп, паллах!

Çапла перкелешсе, çапла йăпанса вăхăт хăвăртрах шурĕ, вара майпен каç енне сулăнчĕ. Пĕчĕк ачасем килĕсене кайса пĕтрĕç.

Ак ĕнтĕ молотилка та чыхăна-чыхăна кая пуçларĕ. Юлашкинчен чарăнсах ларчĕ. Çынсем киле кайма пуçтарăнаççĕ. Йĕтем çине Сăрнай Вани килсе çитрĕ те, кунта ĕçленĕ çынсенчен пĕри те кĕсйине пĕр ывăç ыраш та ярса каяймарĕ...

15.

Çурла уйăхĕ вĕçленсе, авăн уйăхĕ çывхарса пырать. Ачасем часах шкула çӳреме пуçлĕç, ялта пахча ĕçĕсем пуçланĕç. Çавăнпа та юлашки кунсенче Мишшапа Ванюш килте ĕçлерĕç, хапхи умĕнче пристаньри пек арканса выртакан вутта-шанка ал пăчкипе татса ваклярĕç. Ашшĕ сыпăсене пуртăпа çурса тăчĕ, асламăшĕ купаларĕ. Çинук, Петĕр, Лисук тата Кĕришук çурнă вутта асламăшĕ патне йăтрĕç.

Виç кун хушшинче пĕтĕм вутта касса, çурса, шаршансене купаласа хучĕç, ĕçленĕ вырăна лайăх шăпăрпа типтерлĕн шăлса кайрĕç, шăлса пуçтарнă çӳп-çапа ал урапи çине тиесе Савали хыçне вар пуçне кайса тăкрĕç.

Лайăх ĕçленĕшĕн асламăшĕ мăнукĕсемпе ывăлне çĕнĕ улма кăларса чăмăрла пĕçерсе пачĕ.

Чăмăрла улма çисе ларнă май, ашшĕ пекех, Мишша та тарăн шухăша путрĕ: мĕнле пурăнмалла малашне, хĕл мĕнле каçса ӳкмелле? Тырă ăçтан тупмалла, мĕнпе туянмалла ăна? Утă та сахал, улăм вара вуçех çук — хĕлле уйри улăмурисем патне çунашкапа вăрттăн, çĕрле, çӳремелле пулать. Лексен — тĕрме...

Апат хыççăн ашшĕ трубаллă лампа çутса тĕп-сакайне анчĕ. Унта виçĕ витре çĕнĕ ыраш ларать. Çав ыраша çĕнĕ аларманĕпе авăртса çĕнĕ çăнăх тумалла. Такана çинчи кив çăнăх тахçанах пĕтнĕ. Аларманне çилникре çавăрса кĕмсĕртеттерме ытла мелсĕр — сасса илтсе, кĕнччелертен милицисем тӳрех чупса çитĕç, çĕнĕ ыраша курсан тӳрех Аксăва лартса кайĕç... Эх, пурăнăç: тырă хушшинче çӳресе выçă вилес пулать.

Пулăшу кирлĕ мар-и тесе, Мишша та тĕпсакайне анчĕ, анчах та ашшĕ армана хăех аван та ăста авăртать.

Вăл Мишшана ют çын килсе кĕрес-тăвасран çӳлте пулма хушрĕ...

Мишша кăраççын ламппи çутинчен тухса кил-картинче утрĕ-утрĕ те, ăшĕ пусăрăнман енне, урамах тухса кайрĕ. Тăкăрлăка пăрăнсан, шухăшлă та хуйхăл-лăскер, чутах çынна пырса çапăнатчĕ. Пуçне ялтах çĕклерĕ те, умĕнче Марук Анни тăра парать!

— Мĕн пит салху эс, шăллăм, килӳнте тем инкек пулман пуль вĕт?

— Пулнă, Анна Марковна, пирĕн çиме çăкăр çук. Леш çĕнĕ ырашне, ик-виç витре, армана леçме хăратпăр — тĕрĕслеме пырĕç те тӳрех ярса тытĕç.

— Утирек пуян арманĕнчи мельник, арман хуçи эппин, Çемен Мăкăçĕ старик сире курайман çын мар-и?

— Курайман çын мар, вăл асаттен çывăх тусĕ пулнă, мана та, аттене те çав тери юрататъ. Уйрăмах вĕсем асаннепе питĕ килĕшттереççĕ — кумлă та куммаллă. Пĕчĕк чух аннепе армана кайсан, Мăкăç мучей мана хăймапа çăрнă тулă пашалăвĕ, паття çитеретчĕ, пылпа чей ĕçтеретчĕ. Старик аннене те питĕ хисеплет, тĕл пулсан калаçса тăранаймасть.

— Çемен Мăкăçĕ, чăнах та, çав тери аван çын. Вăл манăн аттепе те, Марукпа, туслă пулнă, пĕрремĕш тĕнче вăрçинче окоп нушине пĕрле тӳснĕ. Шăллăм! Пуç усма санăн нимĕнле сăлтав та çук! Хĕвел ансан, пыр-ха ман пата киле — Мăкăç мучине курма армана кайăпăр, атту нумайранпа курман эпĕ ăна, тунсăхласа çитрĕм. Халь манпа калаçнине килĕнте халлĕхе никама та ан кала-ха.

— Юрĕ, Анна Марковна.

— Малашне те çакăн пек ăслă пул, Михаил Павлович. Кĕнекӳне нумай çыртăн-и-ха?

— Пĕр аллă страница патнелле.

— Асту, ман валли те вырăн туп унта, пĕр-пĕр кĕтессинче...

— Тупатăп, Анна аппа, хисеплĕ те сумлă вырăна кĕртсе лартатăп сана. Ырă çын эсĕ. Тата — çĕлен пек ăслă та чее, ялти нумай вĕренмен хĕрарăм та темĕн.

— Урăхла юрамасть, шăллăм, пĕтерсе хураççĕ. Ну, пыр вара каçпа, манса ан кай. Аçуна ан кала халлĕхе — ямĕ тата...

Марук Аннипе Мишша армана пырса çитнĕ чух, шур кăтра сухаллă кĕрнеклĕ мучи тулта чăххисене йыхăрса тăратчĕ. Сывлăх сунса ал тытсан, хăнасем ун патне ахальтен килменнине тӳрех сиссе, армана кĕрсе кайрĕ. Аннапа мучи пĕчĕк пӳртелле иртрĕç, Мишша алăк хыçĕнче тăрса юлчĕ. Анчах та пӳрт алăкĕ тачах хупăнаймарĕ, старикпе хĕрарăм калаçăвĕ аванах илтĕнет.

— Пурис Павăлĕ пысăк инкеке лекнĕ, — терĕ Анна тӳрех, — хăй вăл хăюсăр та ытла честнăй çын, упа пек, йăванса кайиччен ĕçлеме çеç пĕлет, урăх ниме те пултараймасть.

— Пĕрре куртăм та, каламарĕ-çке, систермерĕ...

— Выçă вилсен вилĕ, çын куçĕнчен пăхмĕ — çынни çавнашкал. Арăмĕ те çавах — çӳпçипе хупăлчи, тăхăр хырăма саппунĕ кĕсйине пĕрер ывăç ыраш ярса киле-киле тăрантарма хăтланать. Вунвиç çулти аслă ывăлĕ вара вĕсенчен ăслăрах та, пултаруллăрах та. Авă, алăк хыçĕнче тăрать. Паллатăн пуль?

— Палламасăр! Мĕн пĕчĕкрен ăслă ӳсрĕ. Çитĕнсе çитсен пысăка кайма пултарать — аслашшĕне хывнă. Кавăрле çаплаччĕ, анчах та ĕмĕрĕ вăрăм пулаймарĕ, вăтăртан иртсенех вăрçă хирĕнче выртса юлчĕ.

— Леш, юлашкинчен кĕртни мĕн чухлĕ пулчĕ?

— Икĕ центнер ытларах, икçĕр вăтăр кило. Çавра алапа алласан çавăн чухлĕ юлчĕ.

— Йăлтах ак çак ачана пултăр, тĕрĕсрех каласан Пурис Павăлне.

— Бесплатах-и?

— А мĕнĕ пур Пурис Павăлĕн? Ултă ачи пур та ватă амăшĕ, тата — вĕлле хурчĕ пек ĕçчен арăмĕ. Чăлах алли пур. Вут пек вĕри çилли. Урăх нимĕ те çук. Совеçĕ пур тата, йыт çиесшĕн. Çавна пула выçă ларать. Хăй выçă ларни çеç çитмест, ачисене выçă вĕлерет.

— Ну... ачисене выçă вилме памăпăр. Хăй те чĕрех юлĕ. Крахвине кумма та... Вера кин вара вăл хăйне хăй саппун кĕсйипех тăрантма пултарать... Бесплатах апла?

— Бесплат пулмасăр... Мускав хирне тăкăнса юлнă хĕрлĕ юнĕшĕн пултăр. Тата... ырашĕ вăл Упа Çерукĕпе Пашка Çеркейĕ пĕçертнĕ ыраш... Пĕлетĕн-çке ĕнтĕ... Ăна мана çывăхри йĕтем çине кайса тӳнтерме хушнăччĕ, пăтрашупа усă курса, никам курман чух эпĕ сан патна кĕтĕм.

— Хăçан парса ямалла?

— Халех мар, пĕрер уйăхран. Халех парса ярсан, ялти çĕлен-калта йăшăлтатма пуçлĕ. Армана çĕнĕ тырă нумайрах кĕтĕр-ха, вара пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пара-пара ярăн. Халь вара авăртса хума пултаран.

— Юрĕ, Анна йăмăк, хăвăнне те авăртас-и?

— Авăрт. Çĕннине мар, киввине...

Мучипе аппа калаçăва вĕçленĕ тĕле пӳртре чей вĕренĕ-мĕн, Мишшана чей ĕçме чĕнсе кĕртрĕç. Икĕ центнер ыраш çăнăхне Пурис Павăлне Анна мар, Мăкăç старик кучченеç вырăнне парнелесе панă пек

тăвас терĕç — тахçан Кавăрле Мăкăçа, тусне, фронтра вилĕмрен çăлнăшăн, юн юхтарса выртаканскере çапăçу хирĕнчен сĕтĕрсе тухнăшăн. Хăй фронтра йывăр аманса курнăскер, Павăл ку халапа ĕненмесĕр тăма пултараймастех терĕç.

Шухăш Мишшана та килĕшрĕ.

Çăнăх хыпарĕ пĕлтерме Çемен Мăкăçĕ Павăл патне хăй пыма пулчĕ, ыраша авăртса пĕтерсенех çитме тăрăшăп терĕ.

Çавна та аван ăнланчĕ Мишша: кусем, иккĕш пĕр пулса, колхоз тыррине сутаççĕ те иккен, çӳçенсе-туса тăмаççĕ. Вăрласа мар, çынсем вăрланине ыйтмасăр илсе айккинелле ярăнтараççĕ. Мĕн тăвас тен: самани çавăн пек. Самани мĕнле, çыннисем те çапла. Урăхла пулма та пултараймасть.

**Эпилог**

Çичĕ класс пĕтерес умĕн, экзаменсем пуçланасси пĕр эрне юлсан, Мишшана шкултан кăларса ячĕç. Çурхи ăшă каç вăйă карти айккинче икĕ аттесĕр «автан» — Лявапа Вăлача — çапăçса кайнă. Аттелли — Мишша, — хĕрсене купăс каласа ташлатаканскер, çакна курсан, купăсне чарса çĕре лартать те чупса пырса çапăçакансене уйăрса ярать. Лешсем кун çине сиксе ӳкеççĕ, иккĕн пĕр çынна тапăнаççĕ, çапса ӳкерсе аяла тума хăтланаççĕ. Самбо меслечĕпе усă курса, Мишша Ляван хулне сиктерсе мăкăлтать, Вăлачана чĕп-чĕр юн пуличченех ислетсе тăкать. Çăхав пама шкула Пăлюк ирех çитнĕ, Елянкка вара, Вăлача амăшĕ, пыман: «Хăйсем çапăçнă, хăйсемех мирлешĕç, — терĕ тет, — ачапча хыççăн кайса тарасаллă çăла сикеймĕп-ха. Ашшĕ те çапăçатчĕ, ку та çапăçать...»

Вăлачана педсоветра Анастасия (Аçтахха) Михайловна текен хаяр та куштан вĕрентекен, Вăлача ашшĕпе пĕртăванĕн арăмĕ, хыт хӳтĕлерĕ, сиксех хутне кĕчĕ: «Халăх тăшманĕн ывăлне фронтра пуç хунă паттăрсен ачисене мăшкăлласа хур тума памалла мар: çак мерзавец пĕрин хулне сиктернĕ, теприне чĕп-чĕр юна ӳкернĕ, тăнлавĕнчен çапса сулахай хăлхине илтми тунă!» — тесе çухăрчĕ.

Мишшана пĕтерме Аçтаххапа Кахал Пăлюк малтанах калаçса татăлнă пулмалла, мĕншĕн тесен Лява амăшĕ те лешĕн юрринех юрларĕ: «Ачана пĕлтĕр чут çеç çырмара путарса вĕлеретчĕ, кăçал, авă, алăсăр хăварма шут тытнă. Çамрăклах никама та юратмасть, пĕр хăйне çеç юратать. Ашшĕ çавăн пекчĕ, халĕ те çавăн пек. Ашшĕ вĕрентнĕ пуль-ха хăйне вăрçă умĕн саботажник туса тĕрмене ăсаттарнăшăн тавăрма... Кăларса çапмалла шкултан, урăх ниçта та вĕренме илмелле мар текен хут çырса памалла!»

Сыпкалама юратакан Уçаркин, шкул пуçлăхĕ, ыйту политика енне сулăнса кĕнĕрен, хытах шикленсе ӳкнĕ курăнать: шикли шикленнĕ, çĕтĕк кĕрĕк пĕркеннĕ, ним айăпĕ çук çĕртенех пур предметпа та пиллĕклĕх вĕренсе пыракан пултаруллă ачана шкултан кăларнă та çапнă.

Приказ коридорта пĕр эрнене яхăн çакăнса тăчĕ. Мишша кашни кунах ирпе шкула пыратчĕ, шăнкăрав хыççăн ыттисемпе пĕрле урока ларатчĕ. Анчах та ăна урокран яланах кăларса яратчĕç, вĕрентекенсем вăл тухса каймасăр урок пуçламастчĕç.

Хулиганла ĕç тунă вĕренекене шкултан кăларса яни çинчен района пĕлтерсен, РОНОран ятарлă çын персе çитрĕ. Çап-çамрăк хĕрупраç. Райкомол секре-

тарĕ Камзина Елена. Çамрăк пулин те, Камзина çирĕп кăмăллă та тĕплĕ, ăслă та тарăн сисĕм-туйăмлă çын пулни палăрчĕ. Чи малтанах вăл Мишшапа хăйĕнпе курса калаçрĕ, вĕренӳре мĕнле ĕлкĕрсе пынине кăтартакан табеле уçкаласа пăхрĕ те тĕлĕннипе кăшкăрса ячĕ: «Пĕр тăваттă та çук, йăлтах пиллĕк!» Вара вăл тӳрех сиссе илчĕ: кунти ĕçе-пуçа пачах урăхла ăнланмалла иккен — ачана айăпсăр çĕртен айăпласçĕ, утне тивмин, туртине тенĕ пек, ашшĕ-амăшĕшĕн ачине тавăраççĕ пулас...

Камзина çапăçава пăхса тăнă яш-кĕрĕмпе те курса калаçрĕ. Çапăçма чарнăшăн хăй çине иккĕн сиксе ларсан, Мишша самбо меслечĕпе усă курнине пĕлсен, Елена чăтаймарĕ, кулса ячĕ те пырса Мишшана питĕнчен чуптуса илчĕ:

— Молодец, самбист! Сирĕн шкулта кружок ĕçлет-им?

— Мĕн кружокĕ ĕçлетĕр, ĕçлемест. Аксу шкулĕнче тăххăрмĕш класра вĕренекен Леонтьев Эрхип вĕрентрĕ. Вăл унта секцине çӳрет...

— Пĕлетĕп Архипа. Чаплă спортсмен.

— Çапăçма та чаплă пĕлет.

— Ыттисене те вĕрентет.

— Вĕрентет.

— Халлĕхе çапах та урăх ан çапăç-ха, шкула çĕнĕрен вырнаçса пур экзамена та пиллĕклĕх пар, вара... курăнĕ унта.

— Хам çине иккĕн кĕрсен те-и?

— Иккĕн мар, пĕччен кĕрсен те, хăй малтан çапсан, çĕрпе танлаштарма пултаратăн, мĕншĕн тесен саккун та, тĕрĕслĕх те — сан енче.

Çĕнĕ педсоветра Камзина Елена, РОНО янă çын, Мишшана хӳтĕлесе çулăмлă сăмах каларĕ, ăна шкула

тавăрса экзамена кĕртме хушрĕ. Вĕренекенĕпе унăн ашшĕ çинчен суя сăмах сарнăшăн Анастасия Михайловна Майорова учительницăна выговор çатлаттарчĕ.

Мишша экзаменсене пурне те ăнăçлă тытрĕ, çичĕ предметран улттăшĕпе пиллĕк илчĕ, анчах та вырăс чĕлхипе ăна пиллĕк мар, тăваттă лартса пачĕç, мĕншĕн тесен, пурте пиллĕк пулсан, Мишшана «Похвальный лист» памалла пулатчĕ. Памарĕç вара «Похвальный лист». Ним тăвайман енне, Аçтахха Михайловна çавăн пек майпа та пулин сăтăр тăвас терĕ Мишшана, выговорĕшĕн çурăлса каясла тарăхрĕ: «Пурĕпĕрех нимĕн те пиçмест унран! — тесе чашкăрса çӳрерĕ Мишша пирки. — Тупăннă гений, вундеркинд!»

Пĕтрĕ вара çапла çичĕ класс, вĕçленчĕ. Мишшана тулли мар вăтам шкул чăнах пĕтернине ĕнентерекен пичетлĕ хут тыттарчĕç. Çак хута ĕнтĕ Мишшан заявленипе пĕрле Аксу вăтам шкулне тăратмалла пулать. Саккăрмĕш класа вăл кăçал Аксăва çӳреме пуçлать. Аксу — район центрĕ, чăваш ялĕ. Тӳррен кайсан, Саврăшпуçĕнчен çирĕм çухрăмра, тавра, Кивĕ Саврăш урлă кайсан, çирĕм пилĕк çухрăмра. Вĕренекен ачасем Аксăва вăрман витĕр тӳррен çуран çӳреççĕ, яла эрнере-пĕр килсе каяççĕ. Килмĕччĕç — хырăм выçать: эрнелĕх çурăм хыçне çакса кайнă çăкăр çаври тăват куна та çитеймен, пĕтсе ларнă.

Кĕрлĕ-çурлă çуран танккаççĕ, хĕлле йĕлтĕр çине тăраççĕ.

Кĕпер урлă каçса Курмилле вăрманне çитме икĕ çухрăм, вăрман урлă каçса Хитре Уçланкă текен паççулккă патне тухма ултă çухрăм, паççулккă витĕр тухса вăрманăн хĕвеланăç енĕпе Чăваш Киреметне пырса кĕме тăвată çухрăм, Киреметрен Аксăва —

саккăр. Çапла вара пурĕ çирĕм çухрăм. Ку чуххăм çапла, чăннипе вара, ял хушшисене те шутласан, чылай ытларах пулать. Кĕскен каласан, танккамалăх пур, танкка та танкка виçĕ çул, пуç ан ус. Пуç усрăнтăк, тăрăнса анатăн; тăрăнса антăн-тăк, урăх тăраймастăн, танккаймастăн вара Аксăвалла виçĕ çул!

Мишша пуç та усасшăн мар, тăрăнса та анас темест. Пурнăç епле йывăр пулсан та, мĕн тери хĕн килсен те, Мишша Аксура вăтам шкул пĕтересшĕн. Уринче çăпата, çиййĕнче кивĕ кухвайккă пулĕ, выçă та çĕтĕк çӳрĕ, вĕренме çапах та пăрахмĕ вăл. Вăтам шкул пĕтертĕн, университеталла çул уçă, пĕтереймерĕн — хупă. Университетра вĕренесси — Мишшан çутă ĕмĕчĕ. Ĕмĕт пурнăçлантăр тесен, университета вĕренме кĕмелле. Халлĕхе вара унăн Аксăвалла çул уçă.

Мишшана çакăн пек шухăшлама, тĕллев тытма никам та вĕрентмест, никам та хистемест. Вĕсен ялĕнче электричество çути те, радио та, машшин таврашĕ те, ытти япала та çук. Кино та çулталăкне пĕрик хут кăна килкелет. Ăна та пулин йĕркеллĕ кăтартаймаççĕ. Кăтартсан та, Мишшан кинона кĕме укçа нихăçан та пулман.

Мишшан пĕтĕм пурнăçĕ кĕнекере. Хĕлле вăл кĕнеке нумай вулать, майпен-хуллен хăй те кĕнеке çырма сĕмленет, вăтам шкул пĕтерсе тухнă тĕлелле пысăк кĕнекех çырасшăн. Унта сăвăсем те, поэмăсем те, калавсемпе повесть те пулĕç. Сăвă-калав çырмасăр писатель мĕнле пулайăн-ха, университетра вĕренсе тарăн пĕлӳ илмесĕр ăçтан латлă-пуçлă, йĕркеллĕ произведенисем çырайăн?

Малалла утас тесен çул уçас пулать. Уçаять-и-ха Мишша çĕнĕ çул? Уçаять! Вăл тин çеç çичĕ класс

пĕтерчĕ. Апла-тăк малалла вĕренме çул уçă. Çав çул Аксăвалла выртать. Çавна та туйса илчĕ Мишша: Аксу çулĕ ăна вунтăваттă тултаричченех тăван килтен уйăрать. Тăван киле Мишша малашне нихăçан та яланлăхах килеймĕ ĕнтĕ — вăл ытла та ир çитĕнсе çитсе çунат сарчĕ иккен. Тăван киле çеç мар, тăван тавралăха та малашне час-час килсе кураймĕ ак.

Эй, тăван ен, çуралнă ен! Çил варкăшĕ те çемçерех, сиплĕрех пуль кунта, хĕвелĕ те çутăрах та ăшăрах. Уйăхĕ тата, уйăхĕ! Мĕн тери асамлă та тунсăхлă вăл. Тӳпи — çӳллĕрех. Çăлтăрĕсем — вилĕмсĕр тĕнчен нихçан сӳнми куçĕсем — ытарлăрах. Кашни çырăн, кашни варăн, вăрман сăмсин те ана пуçĕн, улăх-çаранăн, çырма-çатран ачалăхпа çыхăннă ытарайми кĕвви-çемми пур. Лайăхрах итле çеç, çав кĕвве-çемме ярусçăн илтетĕн. Хăлхапа мар, паллах, сасăпа янранине мар, шалтан янранине — чунпа, чун-чĕре сисĕмĕпе илтетĕн, туятăн.

Таркăн ялĕ еннелле пăхсан, Людмила аса килет. Люда аккăшĕ, Людмила Атнакăл поэтесса çĕр çинче пурĕ те вунтăхăр çул анчах пурăннă, апла пулин те, хăй хыççăн тарăн йĕр, ырă ят хăварнă: вăл çырнă «Асăнмалăх» поэмăна çыра-çыра илсе таврари ялсенче йĕре-йĕре вулаççĕ. Вăл Таркăнта пурăннă, утса çӳренĕ, ĕçленĕ, тĕрĕ тĕрленĕ, сăвăсем çырнă, савăннă, хурланнă... юратнă... Çав ялти тавралăха, çынсене, савнине мухтаса юрланă. Унăн пысăк, аслă юратăвĕ кунтах юлнă, ăна çĕр сăрхăтса илнĕ, вăл кашни чечекре, йывăçра-курăкра, уçланкăсемпе ĕшнесенче, тырă пуссинче, шăркара, шăрка тусанĕнче, кашни çăлкуçĕнче, çил варкăшĕнче. Пĕтĕм ял, пĕтĕм тавралăх, çĕрпе шыв хăй юрăçин туйăмĕпе, çутипе тулнă,

вара халĕ çавсене, курăнми асамат кĕперри пек, ярăмăн-ярăмăн шевлелесе тавралăха каялла сапалать. Çав туйăмпа çутă хĕлхемĕ, вĕсен хĕмĕ çын чĕрине хурлăн та эрлĕн пырса кĕрсе ку таврара мĕн тери чаплă та мĕн тери телейсĕр хĕр сăвăç пурăнса иртгерни çинчен калаççĕ.

Килмелли килет, килни каять. Çуралнă чун ӳсет, ӳсет те çитĕнет, çамрăкки çамрăк тăмасть, пурăнать, ватăлать. Мишша та ĕнтĕ пĕлтĕрхи мар, çул вĕçĕнче вунтăват çул тултарать. Ялан килте тăраймĕ. Ашшĕн тĕрекĕ пулса килте Ванюш юлать. Вăл та килте нумаях пурăнаймĕ. Ун вырăнне ыттисем ӳсĕç. Кăçал кĕркунненелле Пурис Павăлĕн йыш татах хушăнать пуласха: арăмĕ, тем, йăраланса утакан пулнă. Павăл — ывăл кĕтет, пулнă-пулнă пиллĕкĕнех пулччăр ывăлсем тет. Вера — хĕр пĕрчи кĕтет, хăйне пулăшакан ытларах пултăрччĕ пӳртре-çуртра тет. Турхан Крахвини ывăлне те, хĕрне те хирĕç мар, пурне те тараватъ, çуралма çеç ырă-сывă та тĕрĕс-тĕкел, чипер çуралтăрччĕ тет. Кĕскен каласан, Пурис Павăлĕн пĕтĕм килйышне пысăк савăнăç кĕтет.

Выçă вилмерĕç-ха, çăва чиперех тухса ӳкрĕç. Выльăхĕ-чĕрлĕхĕ те, хуçисем те сывах. Турă майне парсан, тепĕр çитес хĕлне те аванах каçĕç. Турри вара вăл майне паркалать хăш чух, кĕтмен-туман çĕртен, асра та пулман енчен килсе парать.

Каллех утăçи çитсе тăчĕ. Каллех пĕлтĕрхилле айкашу, тĕпĕртетӳ те çаврăну пуçланать. Çĕр çаврăнать, тĕнче çаврăнать. Вĕсем çаврăннă май вăхăт иртет, ĕмĕр иртет.

Мишшан Аксу вăтам шкулĕнче вĕреннĕшĕн кăçал çĕр аллă тенкĕ тӳлемелле пулать. Ăçтан илмелле

укҫа? Ашшӗ килӗнче пӗр пус та ҫук. Ҫук-тăк, ӗҫлесе тупмалла. Мӗн ӗҫлесе тата ăҫта ӗҫлесе? Ниҫта та пӗр пус памаҫҫӗ. Ҫăпата туса сутса ун чул укҫа вилсе кайсан та тăваймастăн. Пӗр мăшăр ҫăпата виҫ тенкӗ тăрать, ҫӗр аллă тенкӗлӗх сутас тесен аллă мăшăр ҫăпата тăвас пулать. Тата ăна кам туянӗ-ха Анат Саврăш пасарӗнче? Кунӗпе ларса та пӗр мăшăр сутаймастăн — пурте хăйсем валли хăйсем туса тăхăнаҫҫӗ, мӗншӗн тесен ку тăрăх — вăрманлă тăрăх, вăрманта вара пушăт нумай, хатӗрлеме ҫеҫ ан ӳркен. Ҫăпата хуҫма ку ялсенче арҫынӗ те, хӗрарăмӗ те, мăнни те, кӗҫӗнни те, ачи те, пăчи те пит аван пӗлет.

Вăрман касса кăна кăштах укҫа тума пулать. Ҫара паҫҫулкки хыҫӗнче кăҫал Каргали тутарӗсем кубометрне вун тенкӗпе Шакмай шкулӗ валли вутă кастараҫҫӗ, Тăрна Ванькки кастарать. Вăрманӗ — ăвăс та хурăн. Ăвăсне касса тирпейлеме, татма та ҫурма, ытла йывăрах мар, хурăнӗпе вара аванах тертленмелле пулӗ, уйрăмах кутсыпписем ҫурăлмасăр тарăхтараҫҫӗ, сыпăлама та ҫăмăлах мар, шаршана хывнă чух та сӗтӗрсе купалама пит кансӗр, йывăр. Ҫынни те, Ванькка, шанчăксăр ҫын. Хакӗ те питӗ йӳн: пӗр кубометршăн вун тенкӗ вăл ҫав тери йӳн шутланать, так ахаль вăй тăкни пулать ку, анчах та ним тума та ҫук, килӗшмех тӳр килет. Килӗшмесен, кун чухлӗ паракана та кăнтăр кунӗнче хунарпа шырасан та тупаймăн. Памасан — вăйпа илме тивет...

Мишшапа Эрхип кайса пăхрӗҫ те килӗшрӗҫ. Утă ҫине тухса утăпа татăлсанах делянка ҫине кайăпăр терӗҫ.

Тепӗр пысăк ыйту вăл тырă ыйтăвӗ. Ăҫтан тупмалла хӗл каҫмалăх тырă? Пӗлтӗрхи пек ăнăҫу ӗмӗрте

пĕрре пулать, ĕмĕрте пĕрре те кашни çынпах пулса иртмест. Кашни çул икшер-виçшер центнер ыраш та пĕр лаша фургонĕ тулă парнелесе памашкăн Марук Анни сĕм ухмах мар. Лайăх курса тăрать Мишша: ӳснĕ-ӳсмен хăй йăмăкĕн хĕрне Нинана тĕксе парасшăн кăна та тумасть çак ĕçе, маттур сарпикене кирек хăш урăх йĕкĕт те хаваспах качча илсе яма пултарать, пач урăх сăлтавпа тăвать — Марук Анни Мишшан чунне сутăн илесшĕн, колхозăн янтă тыррипе (чăннипе вара хăйĕнчен пĕр пус та тăккаламасăр!) çăмăллăнах сутăн илсе, çав пăсăлма ĕлкĕреймен тап-таса чуна шуйттана сутса ярасшăн. Ак мĕншĕн тăрăшать Анна, ак мĕншĕн хыпса çунать: малтан хăйне пулăшакан куç-хăлха вырăнне усă курĕ, каярахпа, тăрăшулăха кура, ял çыннисене пĕрерĕн-пĕрерĕн сутма хăнăхтарĕ. Çак хăрушă авăра пĕрре чăмса кĕрсе кайсан, каялла тухасси пулмасть вара...

Анчах та тырă ăçтан-тăр тупмаллах. Кун пирки никампа та мар, аслашшĕн çав тусĕпех, Çемен Мăкăçĕ старикпе калаçса пăхмалла пулать пуль. Мăкăç мучей Аннаран чылай ăслăрах тата вăл, лешĕн пек, чунне шуйттана та сутман, урăхла каласан, пĕчĕк Петĕр каларăшле, «сука» мар. Мучей Аннаран хăрамасть, хăрама мар, лешне хăй хăратса тăрать пулас, мĕншĕн тесен хĕрарăмăн вăрттăнлăхĕсене нумай çул хушши йăлтах пĕлсе тăрать. Пĕлтĕр кĕр енне пĕр фургон таса тулă Мăкăç мучей тăрăшнипе кĕчĕ Павăл пӳлмине, Марук Анни тăрăшнипе мар, икĕ центнер ыраш çăнăхĕ çеç вăл тăрăшнипе кĕчĕ. Паллах, Анна аппа та усал шуйттан мар, кăмăлĕ лайăх унăн, чунне те ырă теме пулать, анчах та тĕрлĕ сутăнчăк йăх-ях, «сука» хушшинче, тĕрлĕ вăрă-хураха хăй çаратса, вăл сис-

месĕрех çавсен сĕмне кĕрсе пынă, хăй те çавсем пекрех пула пуçланă.

Çапла шутлать Мишша Марук Анни пирки. Тен, йăнăшать? Апла-и, капла-и, асăрханнине нимĕн те çитмест: асăрханакана турă хăй упрать тет. Çапла калать асламăшĕ, çапла вĕрентет. Малашлăх кăтартĕ ак: Мишша хăй те ытла ухмах ачах мар...

Мишша, улăха тухрĕ те, улăхпа утать. Пĕр енче сĕлĕ хумханса ларать, тепĕр енче çӳллĕ ыраш пуç ухса тăрать. Уçă çил питрен вĕрет. Вăрçăра вилнĕ Калинух Кĕркурийĕ текен поэтăн йĕркисем аса килчĕç:

*Аслă улăхра лăпкă çил вĕрет*
*эп сар хĕрпе çӳренĕ чухне.*
*Сĕлĕ хумханса пуç кăларнă чух*
*сăмах пачĕ «эп — санăн» тесе.*

Ку — «Вăрман айĕнче, Саврăшпуçĕнче» юрăран. Юрри вăтăр çул каяллах халăх хушшинче анлăн сарăлнă. Кĕркурийĕн урăх нимĕн те упранса юлайман, çак пĕртен-пĕр юрри çеç упраннă, анчах та пилĕк куплетлă хурлăхлă юрă пĕтĕм чăваш чĕрине çавăрса илнĕ! Кирлĕ-ши лавĕ-лавĕпе сăвă çырма, ăна никам та вуламасть пулсан? Луччă çыр та пĕр чаплă юрă — ĕмĕрлĕхе халăх чĕринче юлатăн, анчах та мĕнле майпа, мĕнле çырмалла ăна? Ку вара тырă ыйтăвĕнчен те пысăкрах ыйту. Ку ĕçре нимĕнле Марук Анни те, Çемен Мăкăçĕ те пулăшма пултараймĕ, ку ĕçре Мишшана никам та мар, Мишша хăй анчах пулăшма пултарать, урăх никам çине те шанмалли çук. Хăйне шанать Мишша, хăйĕнче мĕнле таса та çутă вăйсем арасланнине вăл лайăх туять, ун чун-чĕри вĕресе тăрать, куçĕсем çунаççĕ, çамки, сарлака çамки, анакан хĕвел пайăркипе çуталнă.

Хӗвел анса ларчӗ те, тухӑҫран, Ҫара паҫҫулкки хыҫӗнчен хӗп-хӗрлӗ, тем пысӑккӑш уйӑх тухрӗ. Киреметай енчен хӗрсем юрлани илтӗнчӗ, икӗ саспа, ҫав тери килтерсе юрлаҫҫӗ. Ҫуркунне те, ҫӗмӗрт ҫеҫке ҫурсан, Мишша ҫакӑнта ҫӳренӗччӗ. Ун чухне те ик сасӑпа юрларӗҫ. Яка Ҫинипе Шихва Раисси пулнӑ. Мишшан ун чухне ҫакӑн пек йӗркесем ҫуралнӑччӗ.

**Каҫхине**

*Вӑштӑр вӗрчӗ ҫурхи ҫилӗ*
*уйӑх тухнӑ чух.*
*Вӑштӑр вӗрчӗ те лӑпланчӗ,*
*таҫта кайрӗ — ҫук...*

*Улӑхра хӗрсем тӑсаҫҫӗ*
*ик хитре саспа*
*ҫуркунне ҫинчен ыр юрӑ*
*тулли кӑмӑлпа.*

*Йывӑҫсем тӑраҫҫӗ шӑппӑн —*
*чӗмсӗр мӗлкесем.*
*Сывлӑм шӑрҫисем ялтраҫҫӗ —*
*ахах пӗрчисем.*

*Ҫӗмӗртсем ҫеҫкине ҫурнӑ,*
*ҫӗмӗртсем — лаштра.*
*Вӗсене те курчӗ уйӑх,*
*курчӗ аякран...*

*1954*

Мишша, хӑй сӑввипе хӑй йӑпанса, хӗрсем юрланине савӑнса итлесе пырать. Ытла илемлӗ-ҫке тӑван тавралӑх, ытла илемлӗ те ырӑ-ҫке ҫут тӗнче! Ытла аван-ҫке ҫав ҫутӑ тӗнчере пурӑнма, хӗрсем ытарайми

юрӑ шӑратнине чун-чӗрепе итлеме! Ытла аван-ҫке сӑвӑ кӗвӗлеме...

* * *

Мишшана халиччен «эп — санӑн» тесе никам та сӑмах паман-ха, сӑмах парасси те пӑхса курӑнмасть. Курнасса вара, каҫсерен тенӗ пек, тӗлӗкӗсенче Палламан Хӗрача курӑнать. Вӑл темлескер: балерина тесен балерина мар, такам, куҫран пӑхса йӑл кулать те ҫаврӑнса уттара парать. Ятне ыйтсан, ятне каламасть, чарӑнса тӑма ыйтсан, чарӑнса тӑмасть. Ытармалла мар хитре те илемлӗскер хӑй, кӑшт тунсӑхлӑскер, ҫырӑ ҫӳҫлӗ, ҫӑлтӑр куҫлӑ... Мишша патне тесех килнӗ ӗнтӗ. Ӗмӗр шыранӑ ӑна Мишша. Анчах та темшӗн Мишшаран уйрӑлса каять, ӑна пӗччен тӑратса хӑварать. Тен, ку вӑл Палламан Хӗрача та мар, унӑн илем сӑнарӗ, унӑн сывлӑшӗ анчах? Пирӗшти е Вутӑш хӗрӗ манерлӗскер?

Паян, ак, улӑхпа утса пыруҫӑн тинех ӑнланса илчӗ Мишша: ку вӑл — Синкерлӗ Илем! Кирек мӗнле илем те час ҫӗмӗрӗлсе кайма пултарать, тӗкӗниччен анчах хӳхӗм пек. Илемлӗ япалана темшӗн ӗнтӗ пурте тӗкӗнсе тытса пӑхасшӑн, татса илесшӗн, ҫӗмӗресшӗн, пӗтерсе хурасшӑн. Илеме алӑпа сӗртӗнме хӑяймасӑр, ӑна чунпа ҫеҫ туйса, ҫумӗнче киленсе пырас темеҫҫӗ. Пуласчӗ телейлӗ вӑл йӑл кулнишӗн, ҫепӗҫ юрӑ юрланишӗн, ырӑ сӑмахӗшӗн, сывлӑшӗн варкӑшӗшӗн... Юнашар лармасӑрах юнашар ларнӑ пек туйса, пурнӑҫра тӗкӗнмесӗрех ӗмӗтре чуптуса... Пурӑнтӑрччӗ ҫав Палламан Хӗрача ҫӗр ҫинче тавралӑха, тӗнчене илем кӳрсе...

Анчах чӑн пурӑнӑҫра апла мар ҫав, йӑлтах урӑхла.

Ҫавна пулах пуль Палламан Хӗрача, ҫав тери илемлӗскер, йӑл кулать те ҫаврӑнса утать.

Çавна пулах пуль Чăн Илем Синкерлĕ Илеме çаврăнать, савăнăç кӳрес вырăнне хурлăх кӳрет, телей вырăнне — хуйхă-суйхă, рай вырăнне — тамăк...

Палламан Хĕрача Синкерлĕ Илем пуласшăн мар.

Палламан Хĕрача — Мишшан Çутă Ĕмĕчĕ...

*1953 çулхи октябрь—декабрь.*
*1957 çулхи март—апрель.*
*Саврăшпуç—Аксу.*

## ХĔЛЛЕХИ КАНИКУЛТА

*Калав*

Юлташĕ-ха эпĕ унăн, Кăнюк Мишшин, тусĕ эппин. Ял клубĕн пĕр кĕтессинче «качакалла» çапатпăр мар-и, эсреметсем.

— Тăман тухинччĕ хуть ыран, каймăттăм Аксуне, — çат! тутарчĕ Мишша «баянне» сĕтел çине тарăхнăн. Курак çуначĕ пек вĕçсе тăракан мулаххай хăлхисем лăстăр-лăстăр! сулланса илчĕç хăйĕн. Кăнюк Мишши доминолла çав хатер вăйлă вылять: курпунне кăларса пуçне чикет те шакмакĕсем çине, çат! та çат! кăна тутарать вара. Çавăнпах старик пек пĕкĕрĕлсе ларчĕ-тĕр ĕнтĕ вăл — чунран юратать курпунне кăларса çӳреме...

Каникул кунĕсем вĕçленчĕç. Кăнюк ыр курчĕ, иçмасса, вуник кун та вуник çĕр, вуник талăк хушши! Апат çиет те клуба килсе доминолла çапать, доминолла çапать-çапать те кайса апат çиет. Малалла та çаплах: çиет те доминолла çапма клубалла сулланать. Супса çитет, куран, ларсан-ларсан, вылясан-вылясан, çапсан-çапсан... кайса канать вара, çыврать кайса. Хăш чух уллахра çывăрать, хăш чух килнех те каfive вăл.

Ыр курчĕ Кăнюк Мишши вуник кун хушши! Виçтăвата кун хăнара, таçта Майна тăрăхĕнче, çӳрерĕ, икĕ каç туй курчĕ, пĕр каç килĕнчен вуçех тухмарĕ. Мунча кĕнĕ пулнă: «Шăнса пăсăласран хăрарăм», — тет. Ытти пилĕк кун та пилĕк каçне вырăнтан пĕр хускалмасăр доминолла вылярăмăр! Çапла вара: тăваттă + иккĕ + пĕрре + пиллĕк = вуниккĕ! Вуник кун — шăп кăна...

Пĕр каçĕнче (çын çинчен ытла калаçма та аванах мар та) ю р а т у тамашипе те хăтланкаларĕ вăл. Анчах та: калаçма пĕлеймерĕм, тет, хĕрĕпе. Вăтанса вилеттĕм, тет. Тарласа кайнă хăй, шăпăрлан: вуннăмĕш класа çӳрет хăй, хĕрпе калаçма пĕлеймест! Йăлтах аптăратса пĕтерчĕ ĕнтĕ мана: вĕрент те вĕрент, тет. Эп хам, Рысак Йăванĕ, Юрттак Йăванĕ эппин, çапах маххă паман вăл енĕпе. Çӳрекен савнă хĕр тени пĕрре мар, иккĕ те пур вăл манăн. Каларăм ĕнтĕ, йăлтах аптăратса пĕтерчĕ мана Мишша. «Мĕнле калаçаççĕ, мĕн теççĕ, хăвна ху мĕнле тыткаламалла хĕрпе тăнă чух?» — тет. Тем те, тем те ыйтать. Мĕнле калаçаççĕ? Чăваш хĕрупраçĕпе калаçас тесен, чăвашла лайăх пĕлмелле пуль ĕнтĕ. Майра-хĕрпе (вырăспа) калаçас тесен, паллах, вырăсла лайăх пĕлни кирлĕ. Мăкшă хĕрĕпе... Ну, пĕр сăмахпа каласан, чĕлхе пĕлни кирлĕ. Мĕн теççĕ? Ак тамаша! Хуть те мĕн те. Хуть те: «Чунăм», — те. Хуть те: «Çăлтăрăм, ылттăнăм, кăвакарчăнăм, хĕвелĕм, пĕсехем, чечекĕм», — те. Калатăп-çке, хуть те мĕн те, мĕнле кăмăлна килерех парать, çапла калама пултаратăн. Хăвна ху мĕнле тыткаласси енĕпе илсен... Люпуй ухмах пĕлет-тĕр ĕнтĕ ăна, люпуй тунката пĕлет-тĕр хĕрпе калаçнă чух пуçхĕрлĕ е ура хуçса ташласа тăмалла марне! Кăнюка çакăн пек калакалатăп та, çилленме пăхать. Çилленĕсĕн тата. Мана, ак, никам та вĕрентмен, хамах вĕреннĕ. Тĕшмĕртнĕ. Эс те вĕрен. Сăмахĕ, йĕрки çапла ĕнтĕ, ахаль, капла хăй, Мишша, кĕвве пыракан этемех, килĕштерме пулать унпа: пĕчĕкрех чухне шар (хоккей) е йытă хăвалана чух, манран, шеремет, шит те юлмастчĕ; халь те çавăн пекех; халь тата та туслăрах эпир.

Хам пирки каласан, çакна çыраканни, ан манăр, Рысак Йăванĕ (чăвашла Юрттак эппин, атте Çимун

пулнӑ манӑн) питӗ вӗренесшӗн тӑрӑшакан ҫын. Халӗ те, ав, шухӑшласа ларать-ха: каяс-ши икӗ куншӑн (эрнекунпа шӑматкуншӑн, вырсарникун каллех — киле) ыран Аксӑва е ҫук-ши? Каяс-ши, ҫук-ши? Ӗнсине кӑтӑр-кӑтӑр! хыҫа-хыҫа сехет ҫурӑ шухӑшласа ларнӑ хыҫҫӑн хӗпӗртесе яштах siксе тӑрать: «Аха! Пулчӗ! Каймастӑп! Мӗне кирлӗ икӗ куншӑн ҫавӑнта кайса выртма? Ҫирӗм ҫухрӑм икӗ ҫухрӑм кӑна мар вӗт-ха вӑл — мӗнех вара вӗренӳрен икӗ кун юлнипе! Темӗскерех вӗренсе ӗлкӗреймӗҫ-ха ҫав хушӑра унта. Манӑн иккӗсем тухман-ха, Кӑнюк Мишшин, тур каҫар, ӗречӗпе иккӗ ларать, а вӑл пурпӗрех: аптрамастӑп-ха, тет. А ман мӗншӗн аптӑрас? Ырантан килтен ниҫта тухмасӑр кӗнеке вулама тытӑнатӑп. Ҫитет! Ахаль те вуник кун хушши ҫил хӑваларӑм! Виҫ кун хушшинче мӑй таранах, тӑраниччен вулама пулать-ха. Ҫитнӗ ҫил хӑваласа, пӗлӳсем хыҫҫӑн хӑвалама вӑхӑт — ҫавӑн пек шухӑш тытрӑм...»

Юлташӗ-ха эпӗ унӑн, Кӑнюк Мишшин, тусӗ эппин, ҫакна сире пин те тӑхӑрҫӗр аллӑ ҫичмӗш ҫулхи январӗн вуннӑмӗшӗнче каҫхине алла хулӑм детективла роман ярса тытиччен каласа парас терӗм. Манмарӑр пуль, Рысак Йӑванӗ эпӗ, ялтилле каласан — Юрттак...

*1957, Аксу.*

## ВЫРСАРНИ КАÇ

*Новелла*

Вăл виç эрне Тамарăна курманччĕ. Кăçал вăтам шкулта юлашки çул вĕреннине пула, çирĕм çухрăмри Шур Шывран яла канмалли куна виç-тăват эрнере пĕрре кăна килет. Хĕвел анас умĕн килне çитрĕ те, тӳрех мунчана ячĕç. Мунчара нумай пулмарĕ. Таврăнчĕ те, сĕтел çинче сăмавар кашлатчĕ. Тӳрех сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ, васкаса чей ĕçме пуçларĕ. Çапла хыпаланнинчен амăшĕ тĕлĕнсе кăна тăрать.

— Ăçта çак хатер васкатăн эс? Канма та ĕлкĕреймерĕн вĕт-ха?!

Амăшĕ ăна тăраниччен çиме хушать. Ашшĕ, маларах мунча кĕрсе тухнăскер, чей ĕçсе тăраннă та алшăллипе тарне шăлса тăрать. Шӳт тума юратаканскер, ывăлне куç хĕсрĕ:

— Амăшĕ пирĕн питĕ сисĕмсĕр-çке! Ну, юрĕ... Эс асту-ха унта каялла килнĕ чух: çĕн шкул урайне сарма урама пĕр трактор çуни хăма килсе тăкнăччĕ. Тирпейлесе хума ĕлкĕреймерĕмĕр — каç пулчĕ. Пĕркун çапла килсе тăкрĕç те, тем чул хăма «çĕр тĕпне анса кайрĕ».

Ашшĕ — шкул завхозĕ.

Йĕкĕт урама тухнă çĕре тĕттĕм пулчĕ. Çанталăк, те çур енне кайнипе, питĕ ăшă. Çил çук. Йĕкĕтĕн кĕçĕр Тамарăна курмаллах. Вăл вăрман леш енчи Çирĕклĕре пурăнать. Вăрманĕ урлă каçма çухрăмран ытла та мар пулĕ. Çула майăн клуба кĕрсе тухма шутларĕ. Вăл пырса кĕнĕ çĕре унта çамрăксем пухăннăччĕ те вальс ташлатчĕç. Пырса кĕчĕ те алăк патĕнче кулкаласа тăрать. Вальс ташлакансем ун çине çаврăнса та пăхмарĕç. Çывăх тусĕ Çемен кăна, ташлама юратманскер, пырса алă пачĕ.

— Лайăх-и?

— Лайăх.

— Пĕчченех килтĕн-и?

— Пĕчченех, — хăвăрт тавăрса каларĕ Пурис, — манпа пыратăн-и?

Çемен тӳрех хуравламарĕ, йĕри-тавра пăхкаласа илчĕ, маччаналла тинкерчĕ. Сăнĕнче ун хăйĕн те питĕ кирлĕ ĕç пурри палăрать.

— Вăхăт çук-ха ман. Ан çиллен ĕнтĕ, — терĕ вăл именчĕклĕн кулса.

Пурис Çеменпе халапласа тăрса вăхăта сая ярас темерĕ, карттусне пусарах лартрĕ те: «Ну, тепреччен», — тесе тухса кайрĕ. Хăй ĕмĕрĕнче вăл çĕрле вăрман урлă чылай каçса курнă. Çавăнпа та каçхи вăрман ăна кăнтăрлахи пекех тараватлăн кĕтсе илет. Вăрмана кĕрсен, йывăççем хушшипе çăлтăрсем мĕнле йăлтăртатнине пăхкаласа пыратчĕ, çара çуна кӳлнĕ лаша туха парать хирĕç. Пăрăнса юр ăшне кĕрсе тăчĕ: лав иртсе кайрĕ. Лавçи, мăнттайскер, ним те чĕнмерĕ.

Çирĕклĕ клубне çитсен, каччă пурне те сывлăх сунчĕ. Ушкăнра часрах Тамарăна курасшăн. Тупрĕ. Лешĕ хĕрсе кайсах хĕр-тантăшĕпе тем пирки тавлашатчĕ. Килнĕскерне асăрхарĕ те тавлашма чарăнса хĕрелсе кайрĕ, часах Пурис умне çитсе те тăчĕ. Ал парать. Ташлакансенчен пăрăна-пăрăна иккĕшĕ сак патнелле пыраççĕ. Тамара çине-çинех ыйтать:

— Иккĕсем çаклатмастăн-и? Ялтан Çирĕкле кампа килтĕн? Ывăнмарăн-и?

Пĕчченех килнине пĕлсен, вăрçма пуçлать. «Сана пĕрре кашкăрсем тытса çиеççĕ те-ха», — тет вăл.

Клубран тухса Тамарăсен еннелле кайнă чухне çурçĕртен сивĕ çил вĕрме пуçларĕ. Ялан чарăнакан çирĕк тĕлне çитсен, Тамара ассăн сывласа ячĕ.

— Ах... каллех эрни-эрнипе кĕтмелле ĕнтĕ. Пĕлетĕн-и, Пурис, çав тери тунсăхлатăп, çав тери курас килекен пулать сана.

— Вĕренсе пĕтерсен, яланах тĕл пулăпăр акă, — тет Пурис.

— Институт епле? Шупашкара каймастăн-им вара эсĕ?

Каччă ăна ăнлантарса парать:

— Аслă шкулсене ик çултан кая мар ĕçленĕ çамрăксене ытларах илеççĕ, ĕçри опыт, практика кирлĕ, теççĕ, эпĕ вара, хăвах пĕлетĕн...

Çил вăйлăран-вăйлă вĕрет, сивĕ пула пуçларĕ. Мунча çинчен Пурис шăнать пулĕ те, палăртмасть. Тамарăна сивĕ çилтен сыхлас тесе хăй хӳттине илет. Çупăрлать. Хĕрача куçĕсем тĕттĕмре, çăлтăрсем пек, хĕлхем кăлараççĕ. Çамки çине усăннă çӳç пайăркине çил ăскать. Тамара Пурис çумне йăпшăнать.

— Чипер кай, — тет вăл йĕкĕте уйрăлнă чух, çамкинчен хĕрӳллĕн чуптуса. Лешĕ савнă тусĕн мĕлки тĕттĕмре çухаличченех çаврăна-çаврăна пăхса утать.

Çил хытăрах та сивĕрех вĕрет. Йĕкĕт тинех хăй шăнса кайнине туйса илчĕ, пуçне пиншак çухи ăшне чиксе, хуран курăнса тăракан вăрман еннелле утрĕ.

Яла çитнĕ çĕре çутăсем сӳннĕччĕ ĕнтĕ. Тăкăрлăкран пăрăнчĕ те темĕн тиенĕ лав умне пырса тухрĕ. Лав хăйпе танлашсан, унта хăма тиенине уйăрса илчĕ. Ак хайхи хăмасем... Ашшĕ сăмахĕсем асне килех кайрĕç. «Таврара пĕр вăрă пурне пур, ну ниепле те хăйне палăртмасть, чее те пултаруллă хăтланать. Йĕтем çинчен тырă çухалсан та пулин тытаймарĕç, пĕлеймерĕç кам иккенне», — тенĕччĕ вăл пĕррехинче. «Тирпейлесе хума ĕлкĕреймерĕмĕр — каç пулса кайрĕ...» —

янăраса тăчĕ хăлхинче кĕçĕр ашшĕ калани. Лавçăн мăнттай кĕлеткинчен ку хайхи вăрманти лавах иккенĕ палăрчĕ. Анчах та кам-ха вăл, лавçи? Çавна пĕлес пулать. Вăхăта сая ярас мар тесе, лава хуса çитрĕ, палламан çынна лашине чарма хушрĕ:

— Тете, утна тăрат-ха, ăçта турттарса каятăн эс шкул хăмисене?

Лавçă чĕнмерĕ, лашине хытăрах хăвалама тытăнчĕ:

— Тете, тетĕп! — илтĕнет çил витĕр. Чупса пырса лаша пуçĕнчен хăш хушăра ярса тытнине, чĕлпĕртен картах туртса выльăха çул айккине пăрса кӳртнине нихăшĕ те астуса юлаймарĕ. Мăнттай çын йĕкĕт патне чупса пычĕ. Пиншак çинчен аçам тăхăннă хăй, аçамĕн хутаççине пуçне тăхăнса янă.

— М-ма чаратăн, мĕн кăшкăратăн?.. — чашкăрчĕ этем, таптаса тăкас пек пырса кĕрсе. Чараканĕ Çирĕклĕ этеммине, Çтаппана, палласа илчĕ.

— Çтаппан тете, кайса тăк хăмасене! — каялла чакмасăр çирĕп тăчĕ йĕкĕт. Сасартăк Çтаппан ăна тытрĕ те юр ăшне тăрăнтарчĕ, — лашине çул çине кăларма хăтланать. Лешĕн кăшкăрмаллаччĕ. Кăшкăрни арçын ачашăн намăс пек туйăннăран вăштах сиксе тăрса çиçĕмле хăвăртлăхпа Çтаппан патне çитсе тăчĕ. Хайпе пĕр çулхи тантăшĕсем хушшинче вăл самай тĕреклĕ, правур шутланатчĕ. Çтаппана пилĕкĕнчен тытса илсе çĕклерĕ те каялла-каялла чакса çавăрса çапрĕ, пусса выртрĕ. Мĕншĕн çапла тунине ниепле те тавçăрса илеймест. Темиçе хут вăйлă Çтаппан çиеле тухасшăн тапаланать, сăмсаран, çăвартан чышма хăтланать. Тĕлех тивертрĕ: сăмсаран кĕрлесех юн юхать, çăвара кĕрет. Юнне Пурис тӳрех Çтаппан çине сурать. Вăйлăскер юлашкинчен йĕкĕте ывăтса ячĕ, сиксе тăчĕ. Хăлхана

çурас пек шăхăрни янăрать. Кăна Пурис шăхăрчĕ. Шăхăру! Кăшкăру! Илтет-и, илтмест-и кам та пулин — паллă мар. Çавна кăна астăвать: Çтаппан, лашине çул çине кăларнăскер, каллех ун патне чупса пычĕ:

— Йытă çури! Çухăратăн-и?! Çакăн çинчен кама та пулин çур сăмах калас пулсан, вĕлерсе хăваратăп.

— Калатăп! — хирĕç тавăрать Пурис. — Ав, килеççĕ те ĕнтĕ!

Чăнах та, тепĕр урамра кĕсъе хунарĕн вăйлă çути йăл-ял! турĕ. Çтаппан, шалтăртаттарса, хăмасене лав çинчен иле-иле пăраха пуçларĕ. Пăрахса пĕтерчĕ те каллех лаша пуçĕнчен çакăннă Пуриса çухаран çавăрса илчĕ:

— Çухăратăнах эппин. Ых-х...

Çавна кăна астăвать Пурис: куç-пуçĕнчен вут тухса сирпĕнчĕ, пĕтĕм тĕнче пуçхĕрлĕ çаврăнса кайрĕ. Ăна, чĕп-чĕр юн пулнăскерне, çул айккинче тупрĕç.

...Çтаппан — Тамара ашшĕ.

*1957 çулхи апрель,*
*Аксу.*

## ЭПИР КУНПА КИЛĔШМЕСТПĔР

*Пулни-иртни*

Аксу районĕнчи Аксу вăтам шкулĕн вуннăмĕш «В» класĕ физикăпа экзамен панă чух И.С. Краснов ассистент Зайцева Елена вĕренекен шпаргалка тыткаласа ларнине курчĕ. Шпаргалкине, хăйĕн ухмахлăхне пула, никам ыйтмасăрах Ильина вĕренекен, икĕ предметпа кĕркуннене юлнăскер, ывăтнă-мĕн. Краснов Зайцевăна, пĕтĕм хучĕсене комиссине парса хăварса, хăйне директортан çĕнĕрен экзамен тытма ирĕк ыйтма кайма хушрĕ, Зайцева килĕшмерĕ.

— Шпаргалки манăн мар, ăна такам ывăтса ячĕ. Эпĕ, çĕрте шпаргалка йăваланса выртни аван мар тесе, ăна пытарас çеç терĕм, — тесе тавăрчĕ. Красновĕ хăйĕнни çинчех тăчĕ:

— Тухса кайăр, ахалĕн эпир экзамена чарса лартатпăр.

Зайцева хĕрелсе кайрĕ, йĕрме пуçларĕ.

— Мĕншĕн? Шпаргалка манăн мар, эпĕ экзамена питĕ тĕплĕн хатĕрленсе килтĕм...

Экзамен партараканĕ П.А. Рыжков вĕренекене лăплантарма хăтланчĕ:

— Зайцева, кайса пăхăр директор патне, тен, çĕнĕрен билет илме ирĕк парĕ.

Вара Зайцева Елена алăка хытă хупса тухса кайрĕ. Шкул картишĕнче вăл шкул директорне Елисей Мурзич Тимирясова тĕл пулнă. Директор ăна ыттисем парса пĕтернĕ хыççăн юлашкинчен экзамен тытма ирĕк панă, анчах та вĕренекен пурĕпĕрех питĕ хуйха ӳкнĕ (чăнах та, Зайцева характерĕн тĕлĕнмелле енĕсем чылайччĕ — хĕрача ним çукшăнах хĕрсе кай-

ма, «кӳрентерекене» темтепĕр каласа тăкма пултаратчĕ, хăй пирки çур ăшă сăмах илтсен те пĕчĕк ача пек савăнатчĕ, вăл çемçе чунлă та сисĕмлĕ çынччĕ, Рыжковпа уйрăмах çывăхчĕ).

Кăшт тăрсан, П.А. Рыжков, Зайцева характерне аван чухлаканскер, Удирякова Зоя вĕренекене, лешĕнпе ку пĕр ялсем тата туссем пулнине кура, хĕрача хыççăн пăхма кăларса ячĕ. Анчах та Зоя вăхăтлă çитсе ĕлкĕреймест, Елена хăй хваттерне уçса кĕнĕ-кĕмен наркăмăш (гексахлоран шĕвекĕ) ĕçет, юлташĕ умĕнчех хуралса-хуралса пырать, вилсе каять.

Çак инкеклĕ хурлăхлă хыпар халăх хушшине çиçĕм пек хăвăрт сарăлчĕ.

Вăл та юрĕ, ку та юрĕ тейĕпĕр — мĕн тăвайăн ĕнтĕ халĕ тин çын пĕрре вилсе выртрĕ пулсан? Ăна ниепле те, епле тăрăшсан та чĕртсе тăратма çук: пысăк йăнăш, пысăк инкек пулса иртрĕ Аксу шкулĕнче. Пурте кулянатпăр, пурте хуйхăратпăр. Хамăр мĕн виличчен те манăçмĕ çакă... Анчах та Елена вилĕмĕ пирки чуна ыраттарнă хушăрах пĕр хитре мар тĕлĕнмелле япала та сиксе тухрĕ: халĕ, Зайцевана шпаргалкине туртса илсе класран И.С. Краснов мар, П.А. Рыжков кăларса янă тесе, Аксу прокуратури физика учительне айăплама пăхать-мĕн. Краснов тĕпчевре (допросра) суя кăтартусем панă: ку ĕçре пĕтĕмпех Рыжков айăплă, Зайцевана экзаменран вăл кăларса ячĕ, тенĕ. Тата çакăнпа пĕрлех çавна та каласа хăварас пулать: шкулти директор кабинетĕнче пирĕн хăшпĕр ачана (Рожнова, Пудихина, Удирякована тата ыт. те) шкул пуçлăхĕсем çапла хăратса пĕтернĕ: «Рыжков айăплă тесе кăтартусем парăр, ахалĕн пĕтĕм экзамена çĕнĕрен тыттаратпăр».

Эпир, Аксу шкулĕнче вуннăмĕш «В» класра вĕреннĕ ачасем, кунпа пĕртте килĕшместпĕр. Зайцева хăйне хăй вĕлернĕ пирки Рыжкова айăплани, Краснов чыслă çын пулса айккинче юлни, пире, Павел Афанасьевич вĕренекенĕсене, питĕ тарăхтарать, çиллентерет.

Çавăн пек нумай вĕреннĕ тата партинче тăракан Иван Степанович Красновăн чунĕ çапла таса мар, ирсĕр пулни пирĕн чĕресене курайманлăхпа тултарса лартать — юратма ниепле те май çук кун пек учителе. Эпир тĕрĕслĕх çиеле тухасса шанатпăр...

Пĕрле вĕреннĕ ачасен ячĕпе — Михаил Егоров.

*1957 çулхи июль,*
*Саврăшпуç.*

## ТУЙĂМЛĂ ЧĔРЕЛЛĔ ÇЫН

*Очерк*

Хăй вăл пурăнасса Заря (Çара) паççулккинче пурăнать, кунта çурт лартса çемье çавăрнă, ĕçлеме вара çухрăм çурăри Саврăшпуçĕнче фельдшер пункчĕн пуçлăхĕнче ĕçлет, Чистайра медицина училищи вĕренсе пĕтернĕреноппех çакăнта тăрăшать вунă-вунпилĕк çухрăмри Хĕрлĕ Шурта çуралса ӳснĕ Зиновий Яковлевич Николаев, çӳллĕ те яштака, çав тери кăмăллă маттур чăваш. Илемлĕ çын теме пулать ăна. Ĕçĕ вара унăн чăнах та канăçсăр та яваплă ĕç. Ял Совет территорине кĕрекен темиçе ял çыннисен сывлăхĕн хуралĕнче тăрать Зиновий Яковлевич.

Кĕçĕр те çур çĕрччен медицина журналĕнчи, хаçатсенчи çĕнĕ статьясене вуласа ларчĕ вăл ак, унтан кăшт уçăлам тесе килкартинче çӳрекелерĕ, вара пӳртĕнче канам тесе выртăнĕ çине майланса выртрĕ, тĕлĕрме пуçларĕ... Çак вăхăтра сиккипе чуптарса пĕр юланут ял хапхинчен килсе кĕчĕ те, паççулккă урамĕпе вĕçтерсе иртсе, фельдшер пурăнакан çуртăн хапхи умне пырса чарăнчĕ. Çамрăк ача, лаши çинчен сиксе ансанах, хапхаран шаккама пуçларĕ. Часах килкартинчен сасă илтĕнсе кайрĕ.

— Кам унта? — чĕнчĕ çав сасă.

— Çинави пичче килте-и? Эпĕ Саврăшпуçĕнчен, Петров Якурăн ывăлĕ пулатăп. Атте йывăр чирлесе ӳкрĕ-ха пирĕн.

Çак вăхăтра пӳртре лампа çутса ячĕç. Пĕр пилĕк минут та иртмерĕ пулĕ, Николаев юлташ тумланса та тухрĕ. Вăл колхоз витине кĕрсе лаша утланать те, икĕ юланут Саврăшпуç еннелле кайса çухалаççĕ.

Петров Якур вар ыратнипе аптраса ӳкнӗ пулнӑ. Николаев вӑл мӗнпе чирленине палӑртать те ӑна ҫийӗнчех васкавлӑ операци тума машшинпа Аксӑва, район пульницине вырттарса ярать. Ҫийӗнчех пулӑшу паман пулсан, Петров пырши шӑтнипе вилсе кайма пултарнӑ. Ҫакӑ вӑл пӗр ик-виҫӗ ҫул каярах пулса иртнӗ. Якур халӗ сывах, колхозра платникре ӗҫлет.

Зиновий Яковлевич училищӗрен вӗренсе тухнӑранпа ултӑ ҫул хӑвӑрт иртсе кайрӗ. Хӗрӳ ӗҫре вӑхӑт иртнине сиссе те юлма ҫук-мӗн. Ҫав хушӑра фельдшер вуншар ял ҫыннине вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑ. Вӑл «вӑхӑт ирттӗр те укҫа килтӗр» текен шухӑшпа пурӑнмасть. Уншӑн ҫын сывлӑхӗн хуралӗнче тӑрассинчен пахи пурнӑҫра урӑх нимӗн те ҫук.

Акӑ тата Мали Иванӗ колхозникӑн ҫӗнӗ арӑмӗпе килнӗ пилӗк ҫулхи хӗрачи йывӑр чирлесе ӳкнӗ пулнӑ. Ашшӗ тӑван мар хӗрӗ чирленӗшӗн пачах пӑшӑрханман. Арӑмӗ те, упӑшкин кӑмӑлне юрас тесе, ҫакӑнпа килӗшнӗ-мӗн. Пӗрре ҫапла, дифтерие хирӗҫ укол туса ҫӳренӗ чухне, Зиновий Яковлевич Маловсем патне пырса кӗнӗ, кӑмака хыҫӗнчи вырӑн ҫинче ҫав хӗрача выртнине асӑрханӑ:

— Сирӗн ачӑра мӗн пулнӑ? — тесе ыйтать фельдшер.

— Чирлекелет-ха вӑл пирӗн, — хуравлаҫҫӗ ӑна хирӗҫ.

Хӗрача умне пырса тӑрсан, Зиновий Яковлевич тӗлӗнсех каять: вӑл вилес патнех ҫывхарса ҫитнӗ пулнӑ, ҫавӑнтах пулӑшу памасан куҫ умӗнчех вилсе кайма пултарнӑ. Фельдшер пилӗк талӑк хушши ачана кашни тӑватӑ сехетренех пенициллин уколӗсем тӑвать, ытти имҫампа сиплет. Часах хӗрачан шыҫҫисем чакма пуҫлаҫҫӗ, апат анакан пулать, сывлӑхӗ юсанса лайӑх-

ланма тытăнать. Пĕчĕкскер халĕ, ытти ача-пăча пекех, урамра чупса çӳрет, вылять-кулать, савăнать, Николаев урампа иртсе пынине курсан тус-тантăшĕсене çапла калать:

— Акă хвершăл тете чирлĕ çынсем патне каять, мана вăл вилесрен çăлса хăварчĕ!

Кăçал çуркунне тырă вăрлăхĕсене имçамланă чухне Гордеева Марье текен çамрăк хĕрупраç химикат нумай сывланине пула аптраса ӳкнĕ пулнă. Ун патне те Николаева çĕрле чĕнсе илеççĕ. Вăхăтра пулăшу панипе Марье сывă юлнă.

— Икĕ каç пĕрре те куçа хупмарăм, пĕрмаях унăн умĕнче лартăм, — каласа парать Зиновий Яковлевич, — хĕрачана пурĕпĕрех çăлса хăвартăм, вилĕме çапах та çĕнтертĕм, халĕ Марье качча та кайрĕ ĕнтĕ.

Кун пек пăтăрмахлă е теветкеллĕ ĕçсем фельдшер пурнăçĕнче куллен тенĕ пек пулса иртеççĕ. Тĕслĕхĕсене вуншар илсе кăтартма, сăнласа пама пулать.

— Ывăнтармасть-и, йăлăхтарса çитермест-и хăш чухне кунĕн те çĕрĕн чирлĕ çынсемпе çараçланасси? — тесе ыйтрăм эпĕ Зиновий Яковлевичран.

— Çук, ывăнтармасть те, йăлăхтармасть те. Эпĕ хамăн ĕçе çав тери юрататăп: чирлисене пулăшу парассине, сыватса ура çине тăратассине тĕнчери чи кирлĕ те пархатарлă япала тесе шутлатăп.

— Сирĕн нухрачĕ те, ĕçукçи текенни, питĕ пĕчĕк пек астăватăп.

— Малтанхи çул уйăхне аллă ултă тенкĕччĕ, халь кăшт ытларах. Мана çитет, эпĕ нумая хапсăнмастăп. Хуçалăх тытатăп килте. Вĕлле хурчĕсем усратăп. Пахча акатăп. Выльăхсем пур. Ĕне. Сурăхсем. Хур-кăвакал. Чăх-чĕп... Ĕç мăй таран, ан ӳркен те пуç ан ус çеç...

Чăнах та, ялти фельдшер Николаев, Саврăшпуç тухтăрĕ, пуç усмасть. Пуç усма унăн вăхăчĕ çукрах. Мăшăрĕ Валентина Аркадьевна шкулта кĕçĕн çулхи ачасене вĕрентет. Хăйсен ачисем пĕчĕк-ха, шкула каймалăх çитĕнеймен. Вĕсене те пăхмалла, сăнасах тăмалла, ĕçтермелле-çитермелле, çийĕсене питĕрмелле...

Зиновий Яковлевич халăх хушшинче профилактикăлла ĕçе те лайăх йĕркелесе янă. Çавна пула халĕ, çак çулсенче, ерекен чирсемпе кунта нихçан та, никам та чирлемен, чечек тухнипе, скарлатинăпа, дифтерипе чирленĕ пĕр тĕслĕх те пулман.

Николаев юлташ ялти обществăлла ĕçе хастар хутшăнать, пропагандист пулса ĕçлет. Вăл тăрăшнине пула ялти çамрăксенчен чылайăшĕ кашни çулах БГСО значокĕсем илме тивĕçеççĕ.

Ырă тĕслĕх маншăн çак ырă кăмăллă та тӳрĕ чунлă, хăйĕн ĕçне ăста тума пĕлекен маттур çын. Ун пекех, эпĕ те Чистай хулинчи медицина училищине фельдшера вĕренме каяс тетĕп. Унта вунă класс хыççăн икĕ çул вĕренмелле. Вара, Николаев Зиновий Яковлевич пек, эпĕ те «ял тухтăрĕ» пулатăп. Ку — манăн ĕмĕт. Шанатăп эпĕ хамăн ĕмĕт пурнăçланасса.

Шанчăк пысăк манăн. Шанчăк пысăккисем вара — çунатлă. Çунатлисем — телейлĕ...

*1957 çулхи июль,*
*Саврăшпуç.*

## ФЕЛЬЕТОНИСТ СУРАНĔСЕМ
*Калав*

Шкулта чухне, сакăр-тăхăр çул, лирика тĕтринче аташса çӳренĕ хыççăн, эпĕ, шкул пĕтсен тепĕр çулне, сасартăк фельетон чирĕпе чирлерĕм. Фельетонĕсене ăна сăвăласа аларах та çыркаланă-ха, «Харитонова халалласа», «Урçа-каччă», «Авланас тесе супса çӳрет Санькка» пеккисем Хусан хаçатĕнче те çапăнса тухкаланă. Малтанхи сăввишĕн Харитоновăн, пӳанчушка Сăрнай Ванин, амăшĕ киле пырса аннен пĕр пайăрка çӳçне тăпăлтарса кăларнă, «ухмах ачине чарманшăн» лекнĕ аннене, хам киле вырсарни кунсенче кăна пыраттăм райцентрти шкултан; анне мана çитсе кĕнĕ-кĕменех, кутамккана хывнă-хывманах макрамакра, ӳкĕтле-ӳкĕтле, тархасла-тархасла ятла пуçларĕ. Вани хăй, колхоз бригадирĕ, кайран анне иртен тытăнса каçчен уйра ĕçлесен те, пĕр ĕç кунĕ те çырмастчĕ. Ман пирки шкула: «Халех ĕçке ернĕ, вăрлать, çапăçать, ашшĕ-амăшне итлемест, тӳрĕ чунлă çынсенех элеклесе хаçата суя заметкăсем çырать», — тесе шалăпă янă.

«Урçа-каччă» вара, Микулай, манпа «лично» калаçма шутланă: каçхине клубри кăмака хыçне илĕртсе кĕртрĕ те пилĕк-ултă çул аслăрахскер: «Тислĕк шăни, манка, чĕчĕ ачи», — тесе хăртса пĕтерчĕ, унтан тапрĕ-чышрĕ, янахран çапса чĕлхене çырттарчĕ. Малти икĕ шăл икĕ эрне силленсе çӳрерĕç, анчах та ӳкеймерĕç.

Санькка... Санькка хĕр чăнах та питĕ вăрах шыранă, çитмен ял, çитмен район хăварман. Ачи вăл, çирĕм пиллĕксенчи кĕреш, эп фельетонра çырса

кăтартнă пек сăнлă-пуçлă марччĕ, лӳппер те, наян та, кăтра та пулман. Сăвви те пĕр çак Санькkаран çеç тăрăхлакансkер марччĕ, пĕтĕмĕшлетнĕ сăнарччĕ, анчах Санькка, те хĕр шыра-шыра хытă тарăхнипе, те литература теорийĕпе интересленмех юратманран, мана хир тăрăх хăваласа масар тĕлĕнче ярса тытрĕ те сухаланă ана çине виçĕ-тăватă хутчен сăмсапа тăрăнтарчĕ: пĕрре кутран тапрĕ, вара, тепре тĕл пулсан вĕлерессипе хăратса, ирĕке ячĕ. Çак мыскарасем хыççăн эпĕ самаях лăпланнă пекчĕ. Шкул пĕтсен йĕри-тавра лайăхрах çаврăнса пăхрăм та, сăрнайсем, урçа-каччă микуласем, санькkасем пирĕн ялта кăна мар, ытти çĕрте те чылай кĕшĕлтетеççĕ иккен. Нумай авланакансемпе авланаймасăр çӳрекенсемсĕр пуçне тата халăх пурлăхне намăса пĕлмесĕр çаратакансем, халăхран кулакан тĕрлĕрен йăх-ях, ĕмĕтсĕрсемпе кĕççепитсем, çавăн йышши урăх камитсем те пур иккен-ха. Çакă мана калама çук хытă тарăхтарса ячĕ. Эпĕ юрату лирине вăхăтлăха арчана хутăм та, аннерен вăрттăн, хĕртнĕ пăшатан ярса тытрăм.

Çирĕм çултан кăштах иртнĕскерĕн, манăн, Мĕкĕтен, пит-куçра, çан-çурăмра, пуçра тата ытти çĕрте ăçта мĕнле çĕвĕ, мĕнле йĕр пуррине паян каласа тăмăп, хăш ура, хăш алă хуçăлса сыпăннине те ялан асра тытаймăн, миçе шăла çапса ӳкернине те калас килмест — тимĕртен ларттартăм, халĕ сире виç-тăватă япалине хăвăр куçăрпа вуласа пăхма сĕнесшĕн. Вуласа тухсан, калăр: килĕшрĕç-и вĕсем сире, килĕшмен пулсан — мĕнлерех çырмалла, мĕнлерех çырмалла марччĕ. Çавна та пĕлме хăтланса пăхăр: хăш фельетонĕшĕн хăш урана, хăш алла çапса хуçнă, миçе шăла ӳкернĕ, миçе çĕвĕ, миçе суран тунă, малашне миçе тăваççĕ.

Чунри сурансене те шута илме ыйтатăп. Халĕ эпĕ çирĕм пĕррере. Тата миçе çултан пуçĕпех çапса пăрахаççĕ? Вулăр, шухăшлăр...

## 1. Сумел Иванĕ.

Ивансем пур ялта та пур. Кашни ялăн хăйĕн Иванĕсем — Иван Иванĕ, Мăкăль Иванĕ, Кутăн Иван, Хуплу Иванĕ — тĕрлĕ-тĕрлĕ Иван. Пирĕн ялта вара Сумел Иванĕ пурăнать. Пĕлместĕр-и ăна? Вăл ытти Ивансем пек мар, «паттăр», «пултаруллă» Иван. Акă, итлĕр-ха эппин пирĕн калаçăва:

— Иван, миçе авлантăн ĕнтĕ эс?

— Саккăр.

— Епле апла?

— Сумел.

— Арăмусене çарата-çарата кăларса янăшăн епле-ха пĕрре те ответ тытмасăр юлтăн?

— Сумел.

— Колхозра ĕçлеместĕн, çапах та сан яланах кĕлет тулли тырă. Мĕнле апла?

— Сумел.

— Кĕлет хуралçине вĕлерес пек хĕнесе хăварнăшăн та...

— Сумел... Ара мĕн эс? Сан та ĕнсӳ кĕçĕтет-и-мĕн, пакша! Ну, ман ялпо правленине хăвăртрах çитмелле-ха...

— Мĕн тата унта?

— Пакшах çав эс. Эпĕ унта председатель заместителĕ иккенне халь те пĕлместĕн-и?

— Çу-ук! Епле апла?

— Сумел. Сумел, ăнланатăн-и?!

Çакнашкал Сумел Иванĕсем тĕл пулкалаççĕ çавха. Вĕсем — общество суранĕсем, харампыр-эрешменсем. Çав иртĕхнĕ «сумелсене» пĕтĕм халăхпа татăклă отпор паман пирки, тепĕр чухне вĕсем выртăна та кĕрсе ӳкеççĕ. Вĕсен, «Сумел Иванĕсем» вырăнне, «Капут Иванĕсем» пулма вăхăт ĕнтĕ. Ыран-паянах тумалла çав ĕçе.

## 2. Намăса пĕлмесен...

— Гавриил! Гаврюха!

Кашни кун янăра-янăра каять Аксу ветлечебницин картишĕнче çапла кăшкăрнă сасă.

Кам вăл Гаврюха? Кам кăшкăрать-ха çапла кулленех?

Гаврюха — Гавриил Тимофеевич Оспенников — Аксу ветлечебницин главнăй врачĕ. Ăна куллен çапла ачашласа кăшкăраканĕ — унăн арăмĕ.

Сисетĕп, капла каланипе çеç вулакан ăнланас çук. Кашниех: «Мĕншĕн главврач арăмĕ главврача куллен пĕтĕм Аксăва янратса чĕнет-ха?» — тесе ыйтма пултарать.

Ĕç акă мĕнре иккен.

Ветлечебница ем-ешĕл курăклă пы-ысăк картиш варринче капăрланса ларать. Паллă ĕнтĕ, ача-пăча тени курăка юрататъ. Аксу ветлечебници çывăхĕнче пурăнакансен ачисем те тепĕр чухне çак ешĕл курăклă картишĕн пĕр кĕтесне кĕрсе вылякалаççĕ пулас. Анчах главврач арăмĕ çакна чăтма пултараймасть вара. Ачасем, картишне кĕме мар, картиш патнелле çывхарсанах, главврач арăмĕ çухăрма та тытăнать:

— Гаври-ил! Гавр-юха!

Вара арăмĕн чун-чĕрине парăннă упăшки Гаврил Тимофеевич главврач çил пек вĕçтерсе тухать те арăмĕ курайми ачасене чăл-пар! хăваласа салатать.

Анчах ĕç кунпа пĕтмест.

Упăшки «атакăран» таврăнсан, унăн арăмĕ ачасен ашшĕ-амăшĕсене «атакăлама» тытăнать: килĕрен килле çӳресе, вĕсене темĕн-тепĕр каласа хăртать:

— Ыйткалакансем, ачăрсене тăрантараймастăр. Вĕсем пирĕн картишне вăрлама пыраççĕ. Пурăнатăр тĕнче çĕртсе...

Çак вăхăтра вăл хăйĕн Гаврюхне мухтаса илме те манмасть:

— Ак ман Гаврюха пурне те пултарать. Иртнĕ çул ĕне, тына пăру, вăкăр, виçĕ сысна, икĕ качака, аллă штук чăх-чĕп хĕл каçартăмăр. Кăçал выльăх йышĕ, тавтапуç турра, татах та ӳсрĕ. Вĕсем валли Гаврюха хĕл каçмалăх курм хатĕрлерĕ те ĕнтĕ. Эсир мĕн!.. Тьфу!

Лач сурать те урайне — тухса каять.

Ĕç кунпа çеç те пĕтмест.

Килне таврăнса, главврач арăмĕ лечебница работницисене хăшне — йăвари çăмартасене, теприсене — пахча çимĕçсене тĕрĕслесе килме пăсăрлантарса ярать. Мĕн тăвăн, хуçа арăмĕ хушнинчен пăрăнма çук. Ветлечебница сотрудници Нюра инке главврач арăмĕ хушакан ĕçрен нихçан та пушанаймасть.

— Гаври-ил! Гаврю-юха! Нюра-а! — куллен янрать Аксура главврач арăмĕн уçă сасси.

### 3. Инкек çăлкуçĕ.

Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, çĕр айĕнчен тĕрлĕ çăлкуç тапса тăрать. Кавказра, Камчаткăра тĕрлĕ сиплĕ тата

вĕри шывлă çăлкуç нумай. Мĕншĕн инçене каяс-ха, Иж шывĕ хĕрринче те минераллă шыв иксĕлмиех тухать. Çук, Иж хĕррине çити те каймăпăр, тата та çывăхарах «сиплĕ» çăлкуçсем пур иккен. Вĕсенчен пĕри — Аксура.

— Чăнах-и? Ак телей! Ăçта вăл унта? — тĕлĕнĕç минераллă шывăн санаторийĕсенче «сывалма» юратакан çынсем.

Аксура пурăнакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ, унта пулса курманнисем пырсан пĕлме пултарĕç. Аксу ялĕн хĕрринче промкомбинат пур. Çав «сиплĕ» çăлкуç, урăх çĕрте ниçта та мар, шăп та лăп çав промкомбинат картишĕнче вырнаçнă. Анчах курортсене çӳреме юратакан çынсене малтанах, вĕсем Аксăва «тӳрленме» пырса капланиччен, асăрхаттарса хăварар. Кавказри, Камчаткăри, Иж шывĕ хĕрринчи минераллă шывсен çăлкуçĕсемпе Аксури «сиплĕ» шывăн çăлкуçĕ хушшинче уйрăмлăх питĕ пысăк çав. Кавказа е Иж хĕррине каякансем — ырă сывлăхпа килĕсене таврăнаççĕ. Аксури «çăлкуçĕ» патне пырса каякансем — тĕрлĕ инкек тураççĕ, тепĕр чухне... тĕрмене те лекеççĕ. Çав «çăлкуç» пирки кунта, пуринчен ытла, промкомбинат рабочийĕсемпе вĕсен арăмĕсем хĕн-хур тӳсеççĕ. Акă Якур Мартынĕ çав «çăлкуç» патне пырса каять те, вара виç-тăват кун ĕçе тухмасть, промкомбинат общежитийĕн чӳречисене çĕмĕрсе пĕтерет, арăмне чĕпчĕр юн пуличчен хĕнет. Çав «сиплĕ çăлкуç» патĕнчен таврăнсан, Хура Сантăр механик — автомашинăна вата-вата тăкать, Чечек Петти — пилорамăна çĕмĕрет, унтан хăма «сутма» тытăнать. Пĕрре çапла хăма «сутса», тĕрмене те кĕрсе ларчĕ. Э, вулаканăм, çав «çăлкуç» пирки инкек курнă рабочисем сахал-и, ара, кунта!

Ахальтен мар ĕнтĕ ку «çăлкуçне» — «инкек çăлкуçĕ» теççĕ промкомбинат рабочийĕсен арăмĕсем. Рабочисен арăмĕсене асăннă май, çакна та каласа хăварар. Вĕсем промкомбинат бухгалтерĕн тĕнкине кăларнă ĕнтĕ. Шалу укçи парас умĕн вĕсем, сăмахран, Илтирек Тули конюхăн, Шăл Ваçли тимĕрçĕн, Хăмăш Куçми начальникĕн арăмĕсем, бухгалтерие пыраççĕ те: «Шалу укçине, пушалăстă, вĕсен аллине ан парăр-ха... «Инкек çăлкуçĕ» патне çӳресе, пĕр татăк çăкăрлăх хăвармаççĕ вĕт!» — тесе йĕреççĕ. Чăнах та, «инкек çăлкуçĕ» патĕнче мĕн кăна пулса иртмест-ши? Кунта çапăçаççĕ, пĕр-пĕрне улталаççĕ, тăнне çухатнисен кĕсйисене пушатаççĕ... Çавăн пиркиех темелле райпромкомбинат хăйĕн производство программине нихçан та аллă-утмăл процентран ытла тултараймасть. Ун вырăнне... райсоюзăн суту-илӳ планĕ кӳпчет: ăна çак «инкек çăлкуçĕ» — эрехпе сăра сутакан ларек çеç мĕн чухлĕ тупăш парать!

Çак эрех ларекне хупас пирки промкомбинатри тăнлăрах çынсем комбинат директорĕ Ишутов тата райсоюз председателĕ Камалетдинов юлташсен умĕнче темиçе хут та сăмах хускатнă.

— Водка сутма хушмаççĕ, винопа пиво сутма никам та чарма пултараймасть, — тет çакна хирĕç Ишутов.

Камалетдинов вара итлесшĕн те мар:

— Ăçта суту-илӳ тумаллине пире ан вĕрентĕр, эпир хамăрах аван пĕлетпĕр, — тет вăл.

...«Инкек çăлкуçĕ» çаплах хăватлăн тапса тăрать.

### 4. Пакунсăр милиционер.

— Кала, ватсупнă, ăçта пытартăн? — терĕ милиционер, тĕпсакайĕнчен ĕселенсе тухса.

Кинеми, хăранипе, сиксе чĕтрет. Милиционер пĕр сехете яхăн ĕнтĕ пӳрте-çурта ухтарать: кĕмен шăтăк-çурăк хăвармарĕ, çитмен кĕтес, ухтарман вырăн юлмарĕ.

— Ачам... Ах, турăçăм. Ĕнен, нихçан хăтланман эп...

Милиционер хăй умĕнче чĕтресе, куççульне çаннипе типĕтсе тăракан карчăк çине çисе ярасла пăхса илчĕ те намăс сăмахсемпе вăрçса тăкрĕ, аттипе тăрс! тапрĕ урайне.

— Пурĕпĕр тупатăп! — кăшкăрчĕ те вăл хаяррăн, кăмакана пилĕк таран кĕрсе те кайрĕ.

— Ах, ачам, тумна йăлтах хăрăмласа пĕтеретĕн вĕт... — тет кинеми, лешĕ вараланса пĕтесрен шеллесе...

Кӳршĕре те çакăн пек картинах пулса иртрĕ. Унта та пĕр тумлам ханша тупаймасăр, милиционер урама тухрĕ. Вăл мундир тăхăннă, пуçĕнче эмблемăллă кăвак карттус. Анчах хăйĕн темшĕн пакунĕсем çук вара, кобури те курăнмасть. Галифепе. Хром атти кунчисене, çитмĕл çичĕ хутлам туса, аялах антарса лартнă.

Милиционера хирĕç урампа виçĕ арçын утаççĕ. Пĕри Василий Муравьев лесник, иккĕшĕ — кӳршĕ ял çыннисем. Вĕсемпе танлашсан:

— Лесник Муравьев вы? — тесе ыйтрĕ милиционер, Муравьев çине шĕвĕр пӳрнипе тĕллесе.

— Эпĕ, эпĕ, — терĕ лесник тăпах чарăнса тăрса.

— Вы арестованы. Я вас сегодня заберу в Аксубаевскую милицию.

Çакна илтсен Муравьевăн куçĕсем чарăлса кайрĕç.

— Мĕнле айăп пур-ши вара?

— Незаконно утă тăватăн.

— Епле «незаконно»?

— Çапла хушнă, значит, забрать. Кайрăмăр килне. Хатĕрлен...

Лесник килӗ еннелле утнӑ чухне кӳршӗ ял ҫыннин, Авандеевӑн, пуҫӗнче темле иккӗленӳ пӑтранма пуҫларӗ. Вӑл, ҫарта аслӑ лейтенант пулнӑскер, милиционер хӑйӗн чысне, хӑйӗн формине пӗртте хакламаннинчен тӗлӗнчӗ. «Мӗнле-ха апла? — шухӑшларӗ вӑл. — Пакунсем ҫук, кобури те ҫук. Тата, ҫитменнине, ҫӑварӗнчен эрех шӑрши перет...»

— Милиционер юлташ! Эпӗ ҫарта офицер пулнӑ ҫын, ҫавӑнпа пӗлес килет: мӗншӗн пакунсӑр ҫӳретӗр? Мӗншӗн кобура ҫук?

Ку ыйту милиционершӑн кӑвар ҫине пуснӑ пекех пулчӗ.

— Мӗскер? Пакун? — хыпӑнса ӳкрӗ вӑл. — Арӑм илнӗ те арчине чиксе хунӑ... Прошу молчать!

Шӑп ҫак вӑхӑтра поселока арҫынпа хӗрарӑм велосипедпа вӗҫтерсе кӗчӗҫ те, урамри пӗр ҫынтан темӗн ыйтса пӗлсе, тӳрех Муравьев ҫурчӗ патне пырса чарӑнчӗҫ. Хапха ярах уҫӑлса кайрӗ те, арҫынни — Чӑваш Шупашкар ялӗн ҫынни Гусляров — картишне сирпӗнсе кӗчӗ.

— Йытӑ! Кукку ятне ярса ҫӳретӗн. Хыв халех!

Пурте хытӑ тӗлӗнчӗҫ. Милиционер хӑппӑл-хаппӑл милиционер тумне хывма тытӑнчӗ.

— Шӑлаварне те хыв! — тулхӑрчӗ Гусляров. — Шуйттан кӗлетки! Ы-ы, йытӑ, ҫын ятне ҫӗртсе ҫӳретӗн!

Улталаннӑ тата намӑсланнӑ Муравьев та чышкине чӑмӑртаса «милиционер» патне вирхӗнсе пычӗ. Пӗр самантрах пӗтӗм картиш айӗн-ҫийӗн ҫаврӑнма пуҫларӗ. «Милиционер», аран-аран карта урлӑ каҫса, урама тарса тухрӗ те ҫывӑхри вӑрмана аҫа-ҫиҫӗммӗн вӗҫтерчӗ. Ялта шӑв-шав ҫӗкленчӗ.

...Вулакан ĕç мĕнрине тавçăрса илчĕ пулас ĕнтĕ. Çапах та тĕплĕнрех каласа парас пулать. Ку вăл нумаях пулмасть пулса иртрĕ. Аксу районĕнчи Савкаç ялĕн çынни Кахал Хветĕрĕ, пĕлтĕр кăна тĕрмерен таврăннăскер, «пырне чӳхес» шутпа Чистай районĕнчи Чăваш Шупашкар ялĕнчи Гусляров куккăш патне хăнана кайнă. Куккăшĕн килĕнче пĕчченех юлсан, кукăр алăллă Хветĕр арча уçать те Гуслярова милицинче ĕçлекен ывăлĕ ярса панă кивĕ обмундировани курах каять.

— Ăхă, пулчĕ! — тенĕ вăл. — Ку формăпа пурăнма пулать. Паян ĕçетĕп!.. Тăраничченех ĕçетĕп!

Пысăк ялта çӳреме шикленсе, «милиционер» виç çухрăмра ларакан поселока çул тытать. Вара унта маларах çырса кăтартнă япала пулса иртет. Ку мыскара Кахал Хветĕрĕн малтанхи ирсĕр ĕçĕ мар. Çак çын Савкаç урамĕсем тăрăх пăру пысăкăш йыттипе çĕрĕçĕрĕпе «тĕттĕм ĕçсем» туса çӳрени, кăшкăрашни, магазинта час-часах харкашни, килĕнче ашшĕпе амăшне, тата арăмĕнчен юлнă ачисене вĕлерессле хĕнени тата темĕн-темĕн туни вĕçсĕрех.

— Я — бывший тюремщик! — кăкрине çапать Кахал. — Маншăн тĕнче тикĕс. Ман пата пырса çулăхнă ан пултăр! — çухăрать вăл, кам та пулин чарма хăтлансан.

Савкаç ялĕпе Тельман ячĕпе хисепленекен поселок, Çирĕклĕпе Саврăшпуç тата ытти ял çыннисем çакна пĕлесшĕн: хăçанччен тарăхтарĕ-ши вĕсене Кахал Хветĕрĕ харампыр?

...Кашни фельетона çырмассеренех эпĕ, юлашки предложени хыççăн тивĕçлĕ паллă лартса, шухăша

каятăп: «Кирлехчĕ-ши çав йĕксĕксемпе çыхланма? — тетĕп. — Калăпăр, çыру редакцине çитет, ăна тимлĕн вулаççĕ, факчĕсене тĕрĕслеме шанчăклă çынна хушаççĕ. Факчĕсем тĕрĕс, материалĕ çивĕч, фельетон çапăнса тухать. Иртĕхсе кайнă намăссăрсем умĕнче унччен çăвар уçма та хăранă нумай-нумай çын хавасланса ӳкет, хăюлланать, çумĕнчи юлташĕ те пуçтахсем пирки хăй пекех шутланине пĕлсе, вăл обществăна сиен кӳрекен çав элементсене тӳррĕн питлеме те хатĕр. Часчасах питлеççĕ те: иртĕхсе кайнă пĕр-пĕр «маттура» тытаççĕ те милицие парса яраççĕ, халăх судне пани те пулать. Кайран çав ĕç çинчен пичетре те çырса кăлараççĕ. Халăх вăйĕ — пысăк вăй. Халăхпа пĕр пулса общество кĕсен-çăпанне вăхăтра тасата-тасата пăраххсан, пурăнма та çăмăлрах, ĕçлеме те хаваслăрах...» Çапла шутлатăп та, ручкăма тата çирĕпрех ярса тытатăп, тин пиçсе тухнă фельетона ăшăллах пĕр иккĕленмесĕр редакцине ăсататăп. «Пултаратăн çав эс, Мĕкĕте, — тетĕп хама, — нимрен те шикленсе-туса тăмастăн — пĕр сăмахпа каласан, маттур...»

*1957 çул,*
*Саврăшпуç.*

# Тупмалли

*Иван Егоров.* Ир палăрнă талант ................................ *5*

**Чăнах-ши вăл, ача чухне...**

Пĕччен хурăн ................................ *11*
Тантăшсем ................................ *12*
Качака ................................ *13*
Çырма ................................ *14*
Каç пулчĕ ................................ *15*
Хытă чирлесен ................................ *16*
Хĕлле ................................ *17*
Юр çусан ................................ *18*
Ир пулсан ................................ *19*
Шăллăма ................................ *20*
Тăвайккине! ................................ *21*
Мулкач ................................ *22*
Çуркунне ................................ *23*
Шывармань ................................ *24*
Çуркунне çитрĕ ................................ *25*
Тăван çĕршыв ................................ *26*
Эп вилсен ................................ *27*
Çулла ................................ *28*
«Эп калатăп çаплалла...» ................................ *29*
Ирхине ................................ *30*
Çăлкуçĕ ................................ *31*
Туляпа Çина ................................ *32*
Ăсату ................................ *33*
Уйрăлу ................................ *34*
Учитель ................................ *35*
Манăн ĕмĕт ................................ *36*
Тăрăшса вĕрен ................................ *37*
Уйăх пытаннă... ................................ *38*
Пирĕн асанне ................................ *39*
Кашкăрсем тапăнни ................................ *40*

Çĕрле ........................................................................................ *41*
Вĕçленет... ................................................................................... *42*
Çу кунĕсем ................................................................................... *43*
Авăр ........................................................................................... *44*
Çумăр çăвать ................................................................................ *45*
Тулли уйăх ................................................................................... *46*
Пляж .......................................................................................... *47*
Чее ырашпăтри .............................................................................. *48*
Кушак аçи .................................................................................... *49*
Паттăр ......................................................................................... *50*
Çавра çил .................................................................................... *51*
Куккук сассиллĕ вăхăтсем ................................................................ *52*
Хурăн .......................................................................................... *53*
Пĕлĕтсем ..................................................................................... *54*
Çурхи каç вăрманта ........................................................................ *55*
Каçхине ....................................................................................... *56*
Шухăшласа кăларнă тинĕс ................................................................ *57*
«Кӳлĕ хĕрринче хăвалăх...» ............................................................. *58*
Юрату юрри ................................................................................. *59*
«Ан шавла, вăрман...» .................................................................... *60*
Тăвăл .......................................................................................... *61*
Пирĕн çĕршывра ............................................................................. *62*
Каçхи пуçтахсем ............................................................................ *63*
«Эс камччĕ çак...» ......................................................................... *64*
«Мана макăртма шухăшларăн...» ...................................................... *65*
«Эсĕ вĕçĕмсĕр хурлăхраччĕ» ........................................................... *66*
Экзаменсем .................................................................................. *67*
Этюд ........................................................................................... *68*
Пĕччен йăмра ................................................................................ *69*
Ĕне çитерме .................................................................................. *70*
Тĕтре .......................................................................................... *71*
Хур чĕппи .................................................................................... *72*
Икĕ селĕп .................................................................................... *73*
Йăмăк ......................................................................................... *74*
Каçхи марш .................................................................................. *75*
Шикли ........................................................................................ *76*

Ĕнесем ........................................................................ *77*
Йĕтем çинче ................................................................ *78*
Çул çинче .................................................................... *79*
Çул çинчен ................................................................... *80*
Аслă ялăн, пирĕн Саврăшпуçĕн ..................................... *81*
Анне юрри .................................................................... *83*
Малтанхи юр ................................................................ *84*
Хаваслă перемена ......................................................... *85*
«Колхоза чипер хĕр килчĕ...» ........................................ *86*
Ашкăнчăксен юрри ....................................................... *87*
Çурхи фантази .............................................................. *88*
Каçхи кĕвĕ ................................................................... *89*
Каччăсем ...................................................................... *90*
Çур каçĕн ыр тĕттĕмлĕхĕ .............................................. *91*
Урамра ......................................................................... *92*
Ан васка ....................................................................... *93*
Асăнмалăх ................................................................... *95*
Эсĕ пур чух .................................................................. *96*
Мал енче ...................................................................... *97*
Савнă тус ..................................................................... *98*
Куçсем ......................................................................... *99*
Вăрттăн çыру ............................................................... *100*
Çывăр, шăллăм ............................................................ *101*
Тăвăлсем ..................................................................... *102*
Вĕçевçĕ Голландец ...................................................... *103*
Шух çил улать .............................................................. *104*
Керия ........................................................................... *105*
Пулăç ........................................................................... *107*
Ыраш пусси ................................................................. *108*
Çумăр ........................................................................... *109*
Тамара ......................................................................... *110*
Хĕр ташăç .................................................................... *111*
Юмореска .................................................................... *112*
Бригадир ...................................................................... *113*
Бригадир калаçăвĕ ....................................................... *114*
Эх, Энтри, сухаçă... ...................................................... *115*

Çĕрлехи хирте ........................................ *116*
Чирлĕскер ........................................ *117*
Наçтапа Наття ........................................ *118*
Авланас тесе çӳрет ........................................ *119*
Вăрманта ........................................ *120*
Аксу шкулне ........................................ *121*
Кинора ........................................ *122*
Вăл çеç... ........................................ *123*
Историн пĕр татăкĕ ........................................ *124*
Шухăш ........................................ *126*
Ни унта, ни кунта ........................................ *127*
Пудихин Петĕр ........................................ *128*
Шурккана ........................................ *129*
Лена ........................................ *130*
Альфия ........................................ *131*
Яш вăхăтра ........................................ *132*
Юлхавçă ........................................ *133*
Сахар та Хĕлип ........................................ *134*
Маяковские асăнса ........................................ *135*
Ыйтрĕ сăвă ........................................ *136*
Парта айĕнче çуралнă сăвă ........................................ *137*
Каçхи кĕлĕ ........................................ *138*
Шарада ........................................ *139*
О, полонез, Огинский полонезĕ... ........................................ *140*
Тупмалли юмах ........................................ *141*
Пароди ........................................ *142*
«Чăнах-ши вăл, ача чухне...» ........................................ *143*
Туртаççĕ ........................................ *144*
Вăрман ........................................ *145*
Манăн тымар ........................................ *146*

**Шкул вальсĕ**

Ача чунĕ ........................................ *149*
Идеал шыраса ........................................ *150*
Кăмăл ........................................ *151*

Шкул ачин ĕмĕчĕ ........................................................ *152*
Анне патне ........................................................ *153*
Виçĕ сăвă ........................................................ *154*
Кĕтет е кĕтмест? ........................................................ *155*
Алăкăртан пăхрăм ........................................................ *156*
Амур хумĕсем ........................................................ *157*
Урçа-каччă ........................................................ *158*
Кĕмĕл серенада ........................................................ *159*
Тамарăна ........................................................ *160*
Çурхи çил ........................................................ *161*
Март ........................................................ *163*
Ильич тунă çар ........................................................ *164*
Çил ачи ........................................................ *165*
«Чĕреçĕм, канăçсăр чĕре...» ........................................................ *166*
Шкул вальсĕ ........................................................ *167*
Кружокра ........................................................ *168*
Мартри хĕвеллĕ хир ........................................................ *169*
Уйрăмлăх ........................................................ *170*
Тусăм, тусăм ........................................................ *171*
Кармен ........................................................ *172*
Çупкă ........................................................ *173*
Хăнара ........................................................ *174*
Турă чури ........................................................ *175*
Сумел Йăванĕ ........................................................ *176*
Поэт мар сăвăç ........................................................ *177*
Пĕр хăйшĕн çеç ........................................................ *178*
Пĕр редактора ........................................................ *179*
Туйра ........................................................ *180*
Тĕрлĕ çĕрти çырусем ........................................................ *181*
Урамсенче ........................................................ *183*
«Мана асра эс тытас çук» ........................................................ *184*
«Çусам, çусам, ăш çумăр...» ........................................................ *185*
Юлташăм ........................................................ *186*
Тымарсăр йывăç ........................................................ *187*
Ят хуни ........................................................ *188*

Мăнук ........................................................................ *189*
Ильич ........................................................................ *190*
«Ирсерен шкулалла...» ........................................ *191*
«Каç пулсассăн, уйăх...» ....................................... *192*
Юрă ........................................................................ *193*
Пусрăнчăк Толя .................................................... *194*
Юлташ йăмăкĕ ....................................................... *196*
Поэтсем ................................................................. *197*
Ултă эпитафи ......................................................... *198*
«Каç пулсассăнах кĕретĕп...» ............................. *199*
«Сан йăл куллун пайăркисем...» ......................... *200*
Çурхи каç ................................................................ *201*
Çурхи серенада ....................................................... *202*
Серенада ................................................................. *203*
Танго ........................................................................ *204*
Пике ĕмĕчĕ ............................................................. *205*
«Уйăхлă çурхи вырсарникаçчĕ» .......................... *206*
«Итлесемччĕ шăпчăк сассине» ............................ *207*
Тунсăх пур ............................................................... *208*
Сăмахсăр юрă ......................................................... *209*
Чечек, хирти чечекĕм ........................................... *210*
Ырă юрă ................................................................... *211*
Сарă хĕрĕ юрă юрлать ........................................... *212*
Хĕр юрри ................................................................. *213*
Йĕкĕт юрри ............................................................. *214*
Уйрăлу юрри ............................................................ *215*
Ăсату юрри ............................................................... *216*
Ирхи юрă .................................................................. *217*
Мунчара .................................................................... *218*
Çырма хĕрринче ...................................................... *219*
Шыв çинчи уйăх çути ............................................. *220*
Пĕчĕк акăшсен ташши ........................................... *221*
Куинджи ................................................................... *222*
Художник ................................................................. *223*
Моцартпа Сальери .................................................. *224*

Ывăннă карап ........................................................................ 225
Есенин ............................................................................................ 226
Эп Байрон мар .................................................................................. 227
Тĕллев патне ...................................................................................... 228
Терцинсем ........................................................................................ 229
Çурхи уйăхлă сад .............................................................................. 230
Сăвă çурални ...................................................................................... 231
Çамрăк коммунар .............................................................................. 232
Сирень турачĕ .................................................................................... 233
Юлашки шăнкăрав ............................................................................ 234
Калас тени ........................................................................................ 236
Шухăшсем аптратсан ........................................................................ 237
Шӳтле сăвă ........................................................................................ 238
Шкул пĕтеспе .................................................................................... 239
Аскăнчăк ............................................................................................ 240
Улахра .............................................................................................. 241
Юлашки каç ...................................................................................... 242
Çуса çакнă кĕпе-йĕм .......................................................................... 244
Элеги ................................................................................................ 245
Сивĕ улăх .......................................................................................... 246
Çыру .................................................................................................. 247
Сӳрĕк кăмăл ...................................................................................... 248
Палламан хĕрача .............................................................................. 249
Вăрçă .................................................................................................. 250
Ашшĕсĕр юлнисем ............................................................................ 251
Пурнăç улми ...................................................................................... 252
Фронтовик сăмахĕ ............................................................................ 253
Хĕвел ................................................................................................ 254
Пушар ................................................................................................ 255
Пыл хурчĕсем .................................................................................... 256
Август каçĕсем .................................................................................. 257
Шкул умĕпе ........................................................................................ 258
Çуралнă кун ........................................................................................ 259
Кĕркунне ............................................................................................ 260
Чистай паркĕнче ................................................................................ 261

Юратнӑ юлташа ........................................................... *262*
Икӗ хурӑн ........................................................... *263*
Килтен каяс умӗн ........................................................... *264*
Новелла ........................................................... *265*
Манмӑп сана ........................................................... *266*
Ӑнланаймастӑп ........................................................... *267*
Инҫетрен ........................................................... *268*
Шанчӑклӑх ........................................................... *269*
Ҫӗнӗ ҫул юрри ........................................................... *270*
Уйӑх ........................................................... *271*
«Кантӑкран курӑнать анлӑ Атӑл...» ........................................................... *272*

**Хӗр уйӑрни**

Йӑван салтак ........................................................... *275*
Паттӑр ҫинчен ........................................................... *280*
Хӗр уйӑрни ........................................................... *286*
Пирвайхи тӑвӑлсем ........................................................... *303*

**Саврӑшпуҫӗн, ай-хай, савӑк тӗнчи**

Аслатиллӗ ҫумӑр хыҫҫӑн ........................................................... *319*
Саврӑшпуҫӗн, ай-хай, савӑк тӗнчи ........................................................... *322*
Урокра ........................................................... *332*
Билет сутнӑ чух... ........................................................... *334*
Ял ачисем ........................................................... *336*
Хӗллехи каникулта ........................................................... *433*
Вырсарни каҫ ........................................................... *436*
Эпир кунпа килӗшместпӗр ........................................................... *441*
Туйӑмлӑ чӗреллӗ ҫын ........................................................... *444*
Фельетонист суранӗсем ........................................................... *448*

**Михаил СЕНИЭЛЬ**
**(Михаил Павлович Егоров)**

# ÇЫРНИСЕН ПУХХИ
# СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ

**Том первый**

Поэзия и проза,
написанные в школьные годы.

*На чувашском языке*

Редактор *И.П. Турган*
Художественный редактор *А.А. Трофимов*
Корректор *М.П. Егоров*
Оригинал-макет *Э.В. Кирилловой*

Подписано в печать 15.05.2012
Формат 70x108 1/32
Бумага офсетная
Учётно-изд. л. 12,06
Тираж 300 экз.

Печать оперативная
Гарнитура Times
Физ. печ. л. 29,25
Заказ № 15

Отпечатано в РИО Чувашского государственного
института гуманитарных наук

428015, г. Чебоксары, Московский пр. 29, корп. 1